К76.12
Л25
Ч-49087

Николай ЛАРИОНОВ

# Чĕлхе пулсан пĕтместпĕр ĕмĕрте!

Национальная библиотека ЧР
4-049087

Николай ЛАРИОНОВ

# Чӗлхе пулсан пӗтместпӗр ӗмӗрте!

(Çул çинче çырса пынисенчен)

Ульяновск, 2017

ББК (Чув)
Л 25

Ларионов Н.
Л 25 “Чĕлхе пулсан пĕтместпĕр ĕмĕрте!” – Ульяновск, 2017. – 268 с.

*Журналист профессийĕ час-часах çула тухма хистет: çĕнĕ материал шырамалла, çĕнĕ çынсемпе паллашмалла, халиччен пулман вырăнсенче пулмалла… Çавăнпа таçта та çитме тӳрĕ килет: алăра ручка та блокнот, хулпуççирен фотоаппарат çакнă. Паян пулса иртекен саманта вулакана каласа памалла, çитес ăрусем валли çырса-ӳкерсе хăвармалла.*

*Ку кĕнекене те авторăн çул çинче çырса пынă тĕрлĕ статйисем кĕнĕ. Вĕсем урлă юлашки 20 çулта Чĕмпĕр чăвашĕсем ăçта çитсе мĕнле мероприятие хутшăннине, ентешсен культура пурнăçĕ еплерех аталанса пынине йĕрлеме май пур.*

Ч-49087
Национальная библиотека Чувашской Республики

© Н.Ларионов, Ульяновск-2017
© Составление – В.А.Ефимова, 2017

Проверено 09 ОКТ 2017

# Мăн асаттесен çĕршывне çулçӳреве

Юлашки çулсенче чăваш халăхĕн историйĕпе кăсăкланакансем аваллăх хулисене çулçӳреве кайса çӳресси йăлана кĕчĕ. Кăçал та чăваш çамрăксен союзĕ, Чăваш наци конгресĕ, Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен ассамблейи йĕркеленипе утă уйăхĕн 14-18-мĕшĕсенче чăваш çамрăкĕсем Пӳлерте, Сăварта, Пăлхарта пулса килчĕç.

Çулçӳрев Шупашкартан пуçланнă. Çулçӳревçĕсем Чĕмпĕрти чăваш шкулне сĕм çĕрле килсе çитрĕç. Вĕсен çумне Ульяновск, Самар тăрăхĕнчи чăваш çамрăкĕсем хутшăнчĕç. Автомашинăсен караванĕ Атăл урлă каçса пирĕн мăн асаттесем пурăннă авалхи хулана – Пӳлере çул тытрĕç.

## ПӲЛЕРТЕ

Халĕ Пӳлер ялĕ (Билярск) Тутарстан Республикине кĕрекен Алексеевски районĕнче вырнаçнă. Унта икĕ пин çын пурăнать. Вырăна çитсенех эпир ял айккинче вырнаçнă авалхи хула ишĕлчĕкĕсене курса çӳрерĕмĕр, çак вырăнтан чавса тупнă экспонатсенчен тăракан музейре пултăмăр.

Хăй вăхăтĕнче Пӳлер хули Европăри чи илемлĕ хуласенчен пĕри пулнă, икĕ хутчен те Аслă Пăлхар çĕршывĕн тĕп хули пулса тăнă. XIII ĕмĕрте ку хулана Пату хан вăрçăпа килсе çĕмĕрсе тăкать. Çуртсен ишĕлчĕкĕсемпе юнашарах 1654 çулта вырăссем ял туса лартаççĕ.

Авалхи пăлхарсем язычество тĕнĕпе пурăннă. Юман йывăççи вĕсемшĕн турă вырăнĕнче пулнă, ăна пуççапнă, çут çанталăкран, тăшмансенчен сыхлама вăй-хăват ыйтнă. Йывăç çине тĕрлĕ çимĕçсем çака-çака хăварнă,

парнесем панӑ. Виҫӗ йӗкел мӗлкинчен тунӑ шӑрҫа ҫакса ҫӳренӗ. Пӳлер ҫывӑхӗнчи вӑрманта Балынгус ятлӑ (унта Балын ятлӑ хуҫана пытарнӑ) сӑрт пур. Паянхи кунччен те унта тӗне ӗненекенсем пуҫҫапма пухӑнаҫҫӗ. Киремет юманӗ ҫумӗнче ӗлӗкхи тӗне асӑнса Шупашкартан килнӗ мӑчавӑр (Чӑваш халӑх художникӗ Енилин Н.А.) така пусрӗ.

Сӑрт ҫинчен аяларах ансан ҫӗр айӗнчен вӑйлӑ тапса тӑракан ҫӑлкуҫ пур. Ӗлӗк-авал ҫак вырӑнсенче ҫӑра вӑрман ӳснӗ. Пӗррехинче ҫак вырӑнта пӗр хӗр аташса каять. Нумайччен ҫул шыраса ҫӳрет вӑл, анчах тупаймасть. Юлашкинчен, халӗ пӗтнипе, йӑванса каять. Хӗрупраҫ Турӑран ҫӑлӑнӑҫ ыйтать. Ҫак самантрах ун умне Турӑ амӑшӗ тухса тӑрать. Хӗре сукмак хывса вӑрмантан илсе тухать. Каярахпа ҫак вырӑнта ҫӑлкуҫ тапса тухать. Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче ӑна темиҫе хутчен те хуплама тӑрӑшнӑ, анчах ҫӑлкуҫ ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен вӑй илсе ҫӗр айӗнчен тапса тухнӑ. Сӑваплӑ вырӑнта часовня та пулнӑ, ӑна 1938 ҫулта тустарса, ватса пӗтернӗ.

Акӑ хуранта яшка та пиҫрӗ. Пурте пӗрле ларса апатлантӑмӑр. Каҫхине чӑваш эстрада тӳпинче ҫуралнӑ ҫӗнӗ ҫӑлтӑр Олег Антонов (Самана) концерт пачӗ. Светлана Асамат чуна тыткӑнлакан юрӑсем шӑрантарчӗ. Ҫамрӑксем вӑйӑсем вылярӗҫ, ташларӗҫ. Ҫур ҫӗр иртнӗ пулин те ҫамрӑксем ҫывӑрма васкамарӗҫ-ха. Пурте туслӑх кӑвайчӗ умне пухӑнчӗҫ. Олег Мустаев купӑспа, Юрий Спиридонов, Владимир Афанасьев гитарӑпа каласа савӑнтарчӗҫ. Шурӑмпуҫ киличченех юрӑ-кӗвӗ янӑрарӗ. Ирпе ҫулҫӳревҫӗсем авалхи Сӑвар хулине ҫул тытрӗҫ.

## СӐВАРТА

Ку хулана монгол ҫарӗсем тӗпӗ-йӗрӗпе ҫӗмӗрнӗ, ишӗлчӗкӗсем те юлман. Йӗри-тавра тӑшмансенчен

сыхланма тунă крепость валĕсем кăна тăсăлса выртаççĕ. Историксем хальхи чăвашсем шăп çак вырăнтан тухнă тесе ĕнентереççĕ. Сăварсене ирĕксĕрлесе ислам тĕнне кĕртме тытăнсан нумайăшĕ çак тĕне йышăнасшăн мар пулса çĕнĕ вырăнсене тарса каяççĕ. Авалхи Сăвар хули ларнă çак вырăн чăвашсемшĕн Мекка пекех хаклă.

Кунта нумаях чарăнса тăмарăмăр, аслă Пăлхар çĕршывĕн тĕп хулине – Пăлхара çул тытрăмăр.

## ПĂЛХАРТА

Пăлхар IX-XV ĕмĕрсенче тĕнчипе паллă суту-илӳ центрĕ пулнă...

1781 çулта Спасск ятлă хула пулса тăрать: 1930 çулсенче Спасск-Татарский ят илет тата пилĕк çултан – Куйбышев. 1991 çулта халăх хушшинче референдум ирттернĕ хыççăн хула ячĕ улшăнать. Ĕлĕкхи хулана Пăлхар (Болгар) ят параççĕ, район ячĕ – Спасск пулса тăрать. Хальхи вăхăтра район центрĕнче 9 пин çын пурăнать. Вĕсенчен 70 проценчĕ вырăс, ыттисем – тĕрлĕ наци халăхĕсем.

Пăлхарсен пурнăçĕ, хулан шăпи çинчен музей-заповедникăн наука сотрудникĕ Ф.Г. Сайгаев каласа пачĕ. Археологи музейне, картинăсен галерейине кĕрсе куртăмăр. Тĕлĕнмелли кумай кунта. Ку хулана тăшмансем тĕпĕ-йĕрĕпех тустарайман. Çак вырăнта тепĕр кун мăчавăр чӳк турĕ. Çĕр хапхине ĕлĕкхи йăласене пăхăнса хамăрах ăсталарăмăр, вăл хĕвелтухăçнелле пăхса тăрать. Икĕ айккипе кăвайт чĕртсе ячĕç. Варринче çĕр çине чавса лартнă авалхи чăвашсен «Х» саспалли евĕр хĕрес тăрать – «Хĕрес символĕ – Хĕвел». Мăчавăр сăмах калать (çак вăхăтра арçынсем аллисене кăвапа çинче хĕресле тытса тăмалла). Çакăн хыççăн пурте хапхаран тухса усалсенчен «тасалаççĕ». Мăчавăр ятсем парать. Мĕнле кăна ят çук кунта: Валем (В.Елагин), Тăхтаман

(Ю.Спиридонов), Коар (О.Мустаев), Айтар (Н.Ларионов, Р.Иванов), Ахтупай (Н.Патшеев), Микихвер (Н.Казаков), Шерккей (С.Краснов), Ультияр (О.Цыпленков), Атнер (А.Иванов), Сентиер (А.Магарин), Ларпи (А.Табакова), Савпи (Е.Мустаева). Ҫамрӑксем юрӑ картине тӑрса «Асран кайми аки-сухи» юрра пуҫласа ячӗҫ.

Тепӗр кун ҫак вырӑнтах мӗнпур чӑваш ҫамрӑкӗсен II съезчӗ пулчӗ. Союз председателӗ О.Цыпленков сӑмах каларӗ. Вӑл пухӑннисене Союз Уставӗн ҫӗнӗ пункчӗсемпе, малашнехи ӗҫ планӗпе паллаштарчӗ. Съездра организацилле ыйтусем те пӑхса тухрӗҫ. Кӗҫӗн пухӑва кашни регионтан ятарлӑ ҫынсем суйларӗҫ (Ульяновскран – Н.Ларионов). Чӑваш ҫамрӑксен енӗпе ӗҫлекен пай пуҫлӑхӗнче вӑй хурать. Самартан килнӗ Н.Парфенова радижурналистка тепӗр ҫул пурне те Жигули тӑвӗсем ҫине (унта та пирӗн несӗлсем пурӑннӑ) пырса курма чӗнчӗ. Пухӑннисем хаваспах килӗшрӗҫ ку пуҫарупа.

Каҫхи апат хыҫҫӑн кӑвайт умӗнче каллех калаҫу пуҫланса кайрӗ, юрӑсем шӑранчӗҫ.

Хӗвел тухаспа мӑн асаттесен йӑли-йӗркине аса илсе ҫӳллӗ вырӑна чӳк тумалли юпа лартса хӑвартӑмӑр. Ӑна Шупашкартан килнӗ Дмитрий Мадуров туса хатӗрленӗ. Вӑлах пире авалхи пӑлхар халӑхӗн историйӗпе те тӗплӗн паллаштарчӗ.

Юлашкинчен Чӑваш ҫамрӑкӗсен пӗрлешӗвне ҫак ҫулҫӳреве йӗркелеме пулӑшнӑшӑн Шупашкарти агрегат завочӗн пуҫлӑхӗсене, Чӑваш культура министерствине, Шупашкарти вырӑс драма театрӗн пуҫлӑхӗсене, Елчӗкри типографи дирекцине, Шупашкар телестудине, Ульяновскри «Еткер» ыркӑмӑллӑх фончӗн президентне О. Мустаева тата ыттисене те тав тӑвас килет.

"Канаш", 32 №, 1994 ҫ.

# Сăваплă вырăна пуç тайма

Юпа уйăхĕн юлашки кунĕнче чăваш чиркĕвĕ умĕнче халăх ирех йышлă пуçтарăнчĕ. Вĕсем çак кун Чулхула облаçĕнчи Дивеево ялне кайма шут тытнă-мĕн. Ку ялти Троица соборĕнче Серафим Саровскийĕн çĕрмен ӳчĕ упранать.

Серафим Саровский 1759 çулта июлĕн 19-мĕшĕнче Курск хулинче çуралнă. Ача чухне ăна Прохор тесе чĕннĕ. 13 çул тултарсан Иисус Христоса тата унăн Амăшне чăтма çук юратнипе вăрттăн килĕнчен тухса каять. Сароври мăнастире çитет. Часах ăна амăшĕ шыраса тупать, анчах вăл каялла кайма шутламасть те. Ирĕксĕрех вара амăшĕ ăна пехиллесе хăварать. 1786 çулта хăйĕн ятне улăштарать. 1794 çулта пĕчченлĕхе тата шăплăха юратнипе настоятельтен пехил ыйтса çын пурăнман келие тухса каять. Унăн пурнăçĕ мĕнпур сăпайлă çынсем валли тĕслĕх пулса тăрать. Унăн типĕ тытни, чăтăмлăхĕ, йăвашлăхĕ, туйăмне пусарма пĕлни, пуринпе те ырă кăмăллă пулни, пĕр чарăнмасăр кĕлĕ вулани калама çук паттăр ĕç шутланать. Хăйĕн пурнăçĕнче вăл питĕ нумай çынна пулăшнă, чиртен чĕртнĕ, Дивеевăра мăнастир уçассишĕн нумай тăрăшнă. Серафим Саровский 1833 çулта вилнĕ. Ăна Саровра мăнастир çумне пытараççĕ. Çакăн хыççăн нумай çын Серафим аттерен кĕлтуса сывалма ыйтаççĕ, чи тĕлĕнмелли вара – вĕсем, чăнах та, чир-чĕртен тасалаççĕ. Çавăнпа 1903 çулта сăваплă Серафимăн тупăкне уçаççĕ – унта унăн çĕрмен ӳтне тупаççĕ. Ăна уçнă çĕре Иккĕмĕш Микулай патша пырать. Çĕрмен ӳте Успени соборĕнче упраççĕ. Революци хыççăн, чиркӳсене хупнă вăхăтра, вăл йĕрсĕр çухалать. 1991 çулта тин ăна Ленинградри Хусан соборĕнче вырнаçнă религи тата атеизм историйĕн музейĕнче тупаççĕ,

Мускаври Богоявлени соборне куçараççĕ. 1991 çулта çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче сăваплă Серафим Саровский асамçăн çĕрмен ӳтне Дивеево ялне хăй тăрăшса уçтарнă хĕрарăмсен мăнастирне илсе килеççĕ...

Çула тухас умĕн паломниксене чăваш чиркĕвĕн настоятелĕ Илия атте молебен туса пехиллерĕ. Ун хыççăн автобус Чулхула облаçне çул тытрĕ. Автобус водителĕсем чăвашсемех – Петр Моисеев, Анатолий Федоров. Вĕсем Дивеевăна виççĕмĕш хут каяççĕ ĕнтĕ. Кунти çулсене, паллă вырăнсене лайăх пĕлеççĕ. Ĕмĕтленнĕ çĕре çĕрле кăна пырса çитрĕмĕр, çакăнтах хăна çуртĕнче çĕр каçрăмăр. Тепĕр кун ирех чиркӳре кĕлĕ тытăнчĕ. Ăçтан кăна килмеççĕ иккен Серафим святоя пуççапма! Эпир пур чухне кунта Кострома, Тюмень, Мускав, Красноярск, Иркутск, Ровно, Черновцы хулисенчен килнĕ çулçӳревçĕсем пурччĕ. Кăнтăрла хыççăн вăрманта вырнаçнă чир-чĕртен сыватакан çăл патне кайрăмăр. Çакăнтан инçех мар Серафим отшельник (пĕччен пурăнакан çын) пурăннă. Çак çăлтан пурте хăйсемпе пĕрле илсе кайма савăтсене таса шыв тултарчĕç, чăтăмлăраххисем çăл çумĕнчи пĕчĕк кӳлĕре шыва та кĕрсе чăмрĕç. Çăл çумне Серафима чыс туса часовня ăсталаса хунă. Унтан таврăнсан паломниксене мăнастирпе паллаштарма пĕчĕк экскурси пулчĕ.

Тепĕр каç выртнă хыççăн, ирхине, паломниксем игуменран пил илчĕç те киле килме çула тухрĕç.

Паломниксем çулçӳревпе питĕ кăмăллă юлчĕç, чăваш чиркĕвĕн настоятельне Илия аттене тата кунта ĕçлекенсене сăваплă вырăна пуççапма кайма çак çулçӳреве йĕркеленĕшĕн тав тăваççĕ.

"Канаш", 49 №, 1994 ç.

# Петĕр Хусанкай лартнă улмуççи

Кивĕ Улхашри вăтам шкулти краеведени музейĕнче 500 ытла экспонат упранать. Мĕн кăна çук кунта: ĕлĕкхи пир станĕ тата ытти ĕç хатĕрĕсем, 2 метра яхăн вăрăмăш мамонт шăлĕ, çăмлă носорогăн пуç шăмми тата ытти нумай интереслĕ япаласем. Вĕсене пурне те ял çывăхĕнчен тупнă. Паллах, мĕн те пулин тупни сахал-ха. Вĕсене тирпейлесе, пуçтарса çынсене кăтартма хурас пулать. Ку ĕç аяккинчен çынсене курăнсах каймасть. Çак «курăнман» ĕçпе кунта Н.К. Кадебин учитель 28 çул ĕçлет ĕнтĕ. Ку музее вăл пуçарса янă. Хăех паян кунччен ертсе пырать.

- Тăван çĕршыв çуралнă ялтан, килтен пуçланать, - тет Николай Константинович. – Çавăнпа ачасене пĕчĕккеллех тавралăхпа паллаштармалла, ăна ăнланма тата юратма вĕрентмелле. Краеведени музейĕ шăп çак ĕçе пурнăçлать.

Тĕрлĕ енĕпе пултаруллă çын вăл – Н.К. Кадебин. Шупашкарти пединститутран вĕренсе тухнă хыççăн 30 çул ачасене воспитани парас ĕçре вăй хурать. Тĕрлĕ предметсемпе вĕрентме тӳр килнĕ: физкультура, черчени, истори, чăваш чĕлхи, икĕ çул хушши Пухтелĕнчи шкулта директор пулнă, сакăр çул Кивĕ Улхашри вăтам шкула ертсе пынă. Кăштах пушансан (хăçан пулать-ши ял çыннин пушă вăхăчĕ?) ял хĕррине тухса тавралăх илемлĕхне картинăсем çине ӳкерет. Ятарлă выставка уçмалăх та пухăннă ĕнтĕ вĕсем. Анчах вĕсен авторĕ пурĕпĕр кăмăлсăртарах.

- Сисетĕп, çулсем питĕ хăвăрт иртеççĕ – çиçĕм пекех. Ним туса та ĕлкĕрме çук. Картинăсем ӳкерме малашне çине тăрсах ĕçлес пулать. Шавах «вăхăт çитмест» тесе сăлтав тупнипе кăна мар. Ху хыççăн ырă

йĕр хăвармасан пурăннин усси сахал, - каласа парать Н.К. Кадебин, халăх вĕрентĕвĕн отличникĕ.

Ырă ĕçĕ унăн сахал мар-ха, анчах çын яланах ĕмĕтпе пурăнать. Николай Константинович Кивĕ Улхаш ялĕн историне çырса хатĕрлет. Темиçе темăпа çырнисене хулăн папкăсем çине уйăрса хунă. Малашне автор вĕсене пĕрлештерсе уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларма ĕмĕтленет. Ачасене чăваш тĕррин пĕлтерĕшĕсене, тĕрĕ шухăшĕсене, ячĕсене вĕрентме тăрăшать вăл. Çак ĕçе тĕплĕнрех вĕренес тесе Н.К. Кадебин 3 çул Мускаври специалистсем патне кайса çӳренĕ. Рисовани предметне хăй хатĕрлесе тунă экспериментлă программăпа вĕрентет. Ăна ытти специалистсем те алла илекенсем пур – Николай Константинович хыççăн пыраççĕ.

Музейĕн пĕр пайне Кивĕ Улхаш çыннине Совет Союзĕн Геройне Николай Григорьевич Князькина асăнса хатĕрленĕ.

Н.К. Князькин 1943 çулта нимĕç фашисчĕсемпе çапăçнă вăхăтра паттăрлăх кăтартнă, танк ăшĕнче çунса кайнă. Унăн çапăçури паттăрлăхĕсем çинчен тĕплĕнрех пĕлме, музей валли материал пуçтарма Н.К. Кадебин темиçе хутчен те Украина çĕрĕ çинче тата Мускавра экспедицире пулнă, унтан хаклă экспонатсем илсе килнĕ.

Кивĕ Улхашри краеведени музейĕ облаçра чи лайăххисенчен пĕри. Вăл яланах смотрсенче хутшăнать. 1987 çулхи смотрта виççĕмĕш вырăн йышăннă. Ытти çулсенче те яланах малтисен шутĕнче.

Çынна ырă тăвас, обществăшăн пурăнас шалти туртăм Николай Константиновича яланах ĕçлеме, тăрăшма хистет. Ăна ним тумасăр, пушă ларнине курма çук. Тăрмăшать,васкать – хăйĕн ĕçне тăватех вăл.

Çак кунсенче Кивĕ Улхашри шкулăн юбилей, вăл 100 çул тултарать. Н.К. Кадебин çак уява хатĕрленет. Каласа памалли нумай унăн – ахальтен мар пулĕ ял çинчен çавăн чухлĕ материал пуçтарнă.

... Кивĕ Улхашра чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай лартса хăварнă улмуççи ӳсет. Ăна паллă поэт 1968 çулта Культура эрнине ирттернĕ вăхăтра лартнă пулнă. Халĕ Николай Константинович ăна ачасемпе пĕрле пăхса усрать. Ăрусен çыхăнăвне татмасăр, малалла тăсма пулăшать. Апла пулсан П. Хусанкай ку ялта улмуççипе пĕрле чăвашлăх вăрлăхне те акса хăварнă. Халĕ вара вăл Н.К. Кадебин йышши вĕри чунлă çынсем тăрăшнипе çирĕп хунавсем янă. Н.К. Кадебинăн мĕнпур пурнăçĕ те ăрусен çыхăнăвне анлăлатас тата çирĕплетес тĕллевпе иртнĕ. Тумалли тата мĕн чухлĕ-ха!

Чăнлă районĕ.

“Канаш”, 20 №, 1996 ç.

# «Канаш» хаçат ĕçченĕсем – Салмановкăра

Ульяновск районĕнчи Салмановка ялĕнче çурри чăваш пурăнать. Вăтам шкулта вĕренекенсенчен вара çитмĕл проценчĕ чăваш. Анчах та пирĕн хаçата кунта çичĕ çемье çеç çырăнса илет. Çак ĕç ăнăçлăрах пытăр тесе хаçат ĕçченĕсем иртнĕ эрнере культура çуртĕнче вулакансемпе тĕлпулу ирттерчĕç. Унта кӳршĕ ялсенче пурăнакансем те пынăччĕ.

Тĕлпулу каçне хаçатра ятарлă корреспондент пулса ĕçлекен А.М. Богатов уçрĕ. Вăл хаçат историне каласа пачĕ, унта вăй хуракансемпе паллаштарчĕ. Вулакансем Александр Михайлович вăйĕпе хатĕрленĕ стендпа паллашрĕç. Н. Ларионовпа Л. Данилов поэтсем хăйсен сăввисене вуласа пачĕç, облаçри чăваш хаçатне çырăнса илмелли çинче чарăнса тăчĕç.

Çакăнтах Салмановкăри «Çăлкуç» чăваш ансамблĕ (ертӳçи Н. Малышев) куракансене çепĕç юрăсемпе, такмаксемпе савăнтарчĕ.

Тĕлпулăва хутшăнакансем пурте çак каç усăллă иртнине пĕлтерчĕç. Хăнасене вырăнти чăвашсен ятĕнчен Максимовкăри ача çуртĕнче завуч пулса ĕçлекен С.Л. Тарасов тав сăмахĕ каларĕ, малашне çырăнтару ĕçне активлăрах илсе пыма шантарчĕ.

Эпир, «Канаш» хаçатра ĕçлекенсем, вулакансемпе тĕл пулма май туса панăшăн Культура çурчĕн директорне Г.Ф. Абитована тав тăватпăр.

Малашне хаçат ĕçченĕсем вулакансем патне кашни уйăхра тухса çӳрĕç.

“Канаш”, 16 №, 1997 ç., ака, 12.

# Ку ялӑн ячӗ ҫухалнӑ. Халӗ чӗлхи пӗтсе пырать

Ирҫе Шмалак ялӗ Пенза облаҫӗн чиккинче вырнаҫнӑ. 170 килӗре 450 ҫын пурӑнать. 60 процентӗ ирҫе, ытти чӑваш.

Яла ҫырма икӗ пая уйӑрать. Кунта Илим шывӗ пуҫланать, пӗрремӗш ҫӑл ҫакӑнтан тухать. 46 ҫул каялла ҫырман икӗ енӗпе икӗ ял пулнӑ, Ирҫӗ Шмалак тата Чуллӑ Ҫӑл (Каменный Ключ). Анчах ҫӳлти пуҫлӑхсен йышӑнӑвӗпе 1951 ҫулта чӑваш ялӗ ятне ҫухатнӑ, вӑл тепӗр ял территорийӗ пулса тӑнӑ.

Халӗ ял «Мордшмалакский» ялхуҫалӑх производство кооперативне кӗрет. Кунта пурӑнакансем каланӑ тӑрӑх, ҫур ял хутӑш ҫемьесем: чӑваш каччисем ирҫе хӗрӗсене качча илеҫҫӗ, ирҫе каччисем те парӑмра юлмаҫҫӗ.

Шкулта вырӑсла ҫеҫ вӗренеҫҫӗ, урамра та вырӑсла калаҫаҫҫӗ. Ашшӗ-амӑшӗсем те килте ачисене тӑван чӗлхепе калаҫтармаҫҫӗ. Ачасем тӑван чӗлхене ашшӗ-амӑшӗсем хӑйсем хушшинче (иккӗшӗ те пӗр наци ҫынни пулсан) калаҫнӑ чухне ҫеҫ илтме пултараҫҫӗ.

- Вӗсем чӑвашла ӑнланаҫҫӗ, - теҫҫӗ ашшӗ-амӑшӗсем ачисем ҫинчен.

Тавлашмастӑп, ӗненетӗп. Ӑнланаҫҫӗ пулӗ. Анчах та ку ачасем кайран хӑйсен ачисене чӑвашла вӗрентейӗҫши? Темӗн, иккӗленмелле. Ҫын хӑй пӗлмен япалана ыттисене вӗрентеймӗ.

Ялти Культура ҫуртӗнче художество пултарулӑх ушкӑнӗ пур, унта тулли мар вӑтам шкулти учительсем хутшӑнаҫҫӗ. Чӑвашла юрлакансем Н.Ф. Волковапа В.Г. Васильева ҫеҫ. Темиҫе ҫул каялла «Канаш» хаҫата 13 ҫын ҫырӑнса илнӗ. Халӗ пирӗн хаҫата кам вуласа тӑнине никам та калаймарӗ. И.А. Тихонов ҫеҫ Шупашкарта тухса тӑракан

пĕр журнала илсе тăрать. Ялти библиотекăра кăштах чăвашла кĕнекесем пур. Çакăнпа чăваш культурине аталантарас ĕç пĕтрĕ те.

Ирçе Шмалакра пулнă хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пулать: тепĕр 40-50 çултан кунта чăвашла калаçакан çын юлмасса та пултарать. Сăлтавĕ халĕ ачасене тăван чĕлхене вĕрентменни. Çаплах куç умĕнче пĕлсе тăрсах чылай чăваш ялĕ çухалĕ-ши? Ялтан тухса кайнă чух çак ыйту пуçа пăраларĕ, мана канăç памарĕ. Пуçа тĕксĕм шухăшсем карса илчĕç. Мĕскер-тĕр хаклă япала çухатнă пек туйрăм.

Павловка районĕ.

“Канаш”, 12 №, 1997 ç.

## Пăлхар Авраамĕ – чăвашсен пĕрремĕш çветтуй сынни

Атăлçи Пăлхар чăвашĕсен тĕп хулинче – Пăлхарта çветтуй Авраам чиркĕвĕ пуррине илтнĕччĕ-ха, анчах ку храмра пулса курманччĕ. Çак тĕллевпе Чĕмпĕр чăваш чиркĕвĕнчи ревизи комиссийĕн председателĕпе П.М. Сидоровпа çула тухрăмăр.

Çанталăк тĕксĕмрех, хĕвел вăхăт-вăхăт çеç пăхса илет. Атăл çинче вăйлă çил, шыв тĕксĕм, хумханать. Метр ытла кăпăклă хумсем метеор сăмси çине шаплатса çапăнаççĕ те шыв пĕрчисем пулса ун тăрринчен те çÿллĕрех вĕçсе хăпараççĕ. Хĕвел пăхнă вăхăтра метеор йĕри-тавра, кăвак ăйăр çинчи илемлĕ пĕкĕ пек, асамат кĕперĕ курăнса илет. Хăш чух хумсем татах вăйланаççĕ, хирĕç килсе çапса метеор хăвăртлăхне пĕр самантрах сисĕнмелле чакарса хураççĕ...

Пăлхар çĕрĕ çине пуссанах чиркÿ енне çул тытрăмăр. Храм хула хĕрринчи масар çумĕнче ларать. Ку масара 1952 çулта Атăл çинче ГЭС тунă хыççăн уçнă, мĕншĕн тесен киввине шыв илнĕ.

Чиркÿ историйĕ çакăн пек. Пăлхартан инçе мар вырнаçнă Порфировка ятлă ялта иртнĕ ĕмĕрте чиркÿ пулман, Турра ĕненекенсем Сергей атте патне пĕчĕкçĕ çурта кĕлтума çÿренĕ. Сергей атте ялта чиркÿ тăвас тесе ĕмĕрех укçа пуçтарнă. Хăй вилес умĕн укçине кĕрÿшне панă, ял халăхĕ валли лайăх чиркÿ хăпартса лартма хушнă. 1893 çулта çак укçапа храм туса хураççĕ, Сергей ятне параççĕ. Анчах 30-мĕш çулсенче ăна большевиксем хупаççĕ, тырă хумалли кĕлет тăваççĕ. Кунти турăшне вара ĕненекенсем килĕсене усрама илсе каяççĕ. 1988 çул тĕлне Порфировкăра пĕр ватă çын çеç юлать. Чиркÿ çуртне Пăлхар хулине куçарма шутлаççĕ.

Шăп çак вăхăталла ку тăрăха Владимир атте (Головин

Владимир Валентинович) килет. Сăмах май каласан, вăл пирĕн облаçра çуралса ӳснĕ. Унăн ашшĕ – Валентин атте – Карлински чиркӳ настоятелĕ. Владимир атте каланă тăрăх, вĕсен йăхĕнче амăшĕ енчен виççĕмĕш сыпăкра чăваш та пулнă.

- Самана çемçелнĕ пулин те вырăнти чиновниксем чиркĕве уçма хирĕç пулчĕç. Мускавран ирĕк илнĕччĕ ĕнтĕ, çапах та кунти пуçлăхсем пирĕн умра кирпĕчрен тунă хӳме пек тăчĕç. Вĕсен умĕнче чĕркуçленсе пуççапнă пекех йăлăнма тӳрĕ килчĕ. Çапах тĕллеве пурнăçларăмăр, - тет Владимир атте.

Çĕнĕ вырăна куçарнă чиркĕве Пăлхар Авраамĕ ятне пама шутлаççĕ. Кам-ха вăл Авраам?

Историре çакă паллă. Вăл пăлхар – чăваш йăхĕнчен, çак тăрăхри пĕр хулара пурăннă. Кунти халăха 10-мĕш ĕмĕртен пуçласа ирĕксĕр ислам тĕнне йышăнтарнă. 12-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче çуралнă Авраама та çаплах тунă. Вăл суту-илӳпе ĕçленĕ, темиçе чĕлхе пĕлнĕ, таçта та çитнĕ, нумай çынпа паллашнă. Владимир хулинчен килнĕ княççенчен Христос тĕнĕ çинчен пĕлет, ăна кăмăллать. Пĕррехинче Владимир хулинче пулнă вăхăтра Христос тĕнне илет. Пăлхара килсен урăх тĕн йышăннине пытармасть, çĕнĕ тĕне çынсем хушшинче сарма тăрăшать. Ку вăхăтра Атăлçи Пăлхарта тĕнчипе паллă Ака пасар иртнĕ. Унта халăх питĕ нумай пуçтарăннă, таçтан та килнĕ: Скандинавирен, Тибетрен, Китайран... Авраам шавах Атăл хĕрринчи пĕр çăл çумне тăрса халăха Христос тĕнне куçма ӳкĕтленĕ, кĕлĕсем вуланă. Ислам тĕнĕпе пурăнакан пăлхар-чăвашсем ăна хирĕçленĕ, хăйсен тĕнне ырланă. Юлашкинчен çапăçу пуçланса каять. Пĕрисем каланă тăрăх, Авраама çакăнтах вĕлереççĕ. Теприсем каланă тăрăх, тĕрмене илсе каяççĕ, çавăнта вĕлереççĕ. (1236 çулта Пату хан çарĕсем Атăлçи Пăлхара çĕмĕрсе тăксан документсем çунса каяççĕ, çавăнпа икĕ тĕрлĕ сăмах çӳрет – хăшĕ тĕрĕссине калама йывăр.)

Çак ĕç 1229 çулта пулса иртет. Тепĕр çулхи пуш уйăхĕн 9-мĕшĕнче Авраамăн çĕрмен ўтне Юрий Всеволодович княç тăрăшнипе Атăл тăрăх Владимир хулине илсе каяççĕ. Успени хĕрарăмсен мăнастирне вырнаçтараççĕ. Çанталăк ăшă пулин те ўт çул çинче пăсăлмасть.

Çĕрмен ўт патне чирлĕ çынсем сывалма çўреççĕ. Çапла вара Атăлçи тăрăхĕнчи Христос тĕнне саракан пĕрремĕш çын – Авраам çветтуй пулса тăрать.

1896 çулта Турра ĕненекенсем ыйтнипе Авраам ўчĕн пайне (пĕр аллин чавсаран аяларах шăммисене) Пăлхара илсе килеççĕ, Успени чиркĕвне хураççĕ. 1938 çулта, чиркўсене тустарнă вăхăтра, ку шăмăсене çынсем пĕрерĕн-пĕрерĕн килĕсене илсе каяççĕ.

Çĕнĕ чиркў уçнă хыççăн пўрнен пĕр пайĕ çеç тупăнать. Ыттисем хыпарсăр-йĕрсĕр çухалаççĕ. Халĕ пўрне шăмми Пăлхар Авраамĕ чиркĕвĕнче сыхланать. Чăвашсенчен тухнă пĕрремĕш çветтуй çынна асăнса Атăл хĕрринчи çăл çумне (Авраам çакăнта кĕлĕсем вуланă) часавай туса лартаççĕ. Çынсем ку çăл патне чир-чĕртен сывалма çўреççĕ. Анчах Брежнев çĕршыв пуçлăхĕ пулнă çулсенче ăна тустараççĕ. Юлашки вăхăтра халăх тăрăшнипе çăла тепĕр хут çĕнетеççĕ, кирпĕчрен часавай туса лартаççĕ. Кунта хальхи вăхăтра питĕ тирпейлĕ: асфальт сарнă, хўме пўлнĕ. Çакăнтах чусран шыва кĕмелли хўшĕ туса хунă.

Кашни çул Мункун иртсен тăваттăмĕш вырсарникун (çак кун Авраам аллине Владимиртан илсе килнĕ) Пăлхар тăрăх турăшсемпе, хĕрессемпе çўреççĕ, чи малтан пўрне шăммине йăтса пыраççĕ. Унта нумай çын хутшăнать, аякран килекенсем те сахал мар пулаççĕ.

- Турă пулăшнипе хăçан та пулин Авраамăн ўтне чылайăшĕпех Пăлхара илсе килме шутлатпăр, - тет Владимир атте, - кун пек шанчăк пур.

“Канаш”, 14 №, 1997 ç., ака, 5.



4-49087
Национальная библиотека
Чувашской Республики

# Патуел – вырӑсланакан чӑваш ялӗ

Патуел чӑваш ялӗ, анчах кунта чӑвашла калаçнине илтме çӑмӑл мар. Ку ял çыннисем «вырӑсланаççӗ». Вӑтам шкулта та ачасем пӗр-пӗринпе вырӑсла калаçаççӗ. Чӑвашла уроксем те, факультативсем те çук.

- Шкулта 229 ача вӗренет. Çурри ытла Патуелӗнчен. Унсӑр пуçне Молвинӑран – 72, Мочилки ятлӑ çар çыннисен поселокӗнчен 23 ачана кашни кун автобус турттарать. Чӑвашла вӗрентмешкӗн специалист çук. Ачасен ашшӗ-амӑшӗсем ку ӗçе ырласах каймаççӗ. Мӗншӗн тесен хӑйсем те тӑван чӗлхене япӑх пӗлеççӗ. Ман шутпа, ку ӗçе пӗр ӑру маларах тытӑннӑ пулсан... Халӗ чӑваш чӗлхи никама та интереслентермест. Ял та тӗрлӗ наци çыннисемпе ӳссе пырать. Ачасем пӗчӗкренех вырӑсла калаçма хӑнӑхаççӗ,- каласа парать шкул директорӗ Нина Николаевна Чернова.

Юрӗ тейӗпӗр. Анчах кунта ӑнланмалли марри те чылай. Нивушлӗ ялти чӑвашсем пурте пӗр саслӑ пулса тӑван чӗлхене вӗрентес ӗçе хирӗç тӑраççӗ-ши? Специалист тупма та питех йывӑр-ши? Ку шкул пуçлӑхӗсем хӑйсем ытлашши тиев лавне туртас килменни çеç мар-и? РОНО умне ку ыйтӑва çирӗп лартсан ӗç вырӑнтан тапранмалла пек туйӑнать.

Ачасем чӑвашла пӗлмеççӗ тени те шута илмелли сӑлтавах мар пулӗ. Вӗсем акӑлчанла та пӗлмеççӗ вӗт, пӗрремӗш класран тытӑнсах факультативсем пур. Апла пулсан ӗç пирӗн кӑмӑл-туйӑмсенчен, ӗмӗтсенчен, тӗллевсенчен çеç килет.

Патуел шкулӗнче ачасене чӑвашла вӗрентме тӗллев лартасси паянхи кунччен те паллӑ мар.

Тереньга районӗ.

“Канаш”, 8 №, 1997 ç., нарӑс, 22.

# Кăнна Кушкинче – халăх уявĕ

Кăçал чăваш çырулăхне пуçарса яраканĕ, халăха çутта кăлараканĕ - И.Я. Яковлев çуралнăранпа 150 çул çитрĕ. Юбилее ЮНЕСКО шайĕнче анлăн ирттерчĕç: Мускавра, Шупашкарта, Чĕмпĕр Енре тата ытти çĕрте те. Халь вăл Кăнна Кушкине çитрĕ.

Кăнна Кушки – историе кĕрсе юлнă ял. И.Я. Яковлев 1848 çулта шăпах çакăнта çуралнă. Каярах вăл тăван ялĕнче пĕрремĕш наци шкулĕ, ача сачĕ, ял библиотеки, столяр мастерскойĕ уçнă. 19-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче ку ял Атăлçи халăхĕсен культура центрĕ пулнă тесен те юрать. Паллах, Иван Яковлевич тăрăшнипе. Мĕншĕн тесен вăл чăвашсенчен чи малтан çакна ăнланнă: халăх пуласлăхĕ пăлхав тăвассинче мар, сенĕкпе, пуртăпа çапăçăва тухнинче мар – вĕренсе çутта тухнинче. Чăваш халăхне çутта кăларас ĕçе чăвашран тухнă çынсем çеç малалла илсе пыма пултарнине те патриархăмăр лайăх туйнă. Çавăнпа хăйĕн ĕмĕрне чăвашсене вĕрентес ĕçре ирттернĕ.

Паян Кăнна Кушкинче 120 çурта яхăн, асфальтлă çул, икĕ хутлă вăтам шкул (унта 57 вĕренекен), Культура çурчĕ тата ытти. Иртенпе машинăсем пĕр еннелле çеç чупаççĕ – Кăнна Кушки ялнелле.

... Сăртран асфальт тăрăх васкамасăр утса тăван ялне И.Я. Яковлев (Раççей тава тивĕçлĕ артисчĕ Г.Т. Терентьев) анать. Ун хыççăн тĕрлĕ çĕртен килнĕ хăнасем утаççĕ. Ял халăхĕ вĕсене чăвашсен авалхи йăлипе – çăкăр-тăварпа, сăрапа, пылпа, чăкăтпа кĕтсе илет, чăвашла, тутарла, мăкшăлла, вырăсла саламлать, пуç таять. Çакăнтах юрă-ташă пуçланать, таврана кĕвĕ-çĕмĕ сарăлать.

Пысăк уява шкула хирĕç ларакан И.Я. Яковлев ячĕллĕ

музей умӗнче Теччӗ район администраци пуҫлӑхӗ М.Г. Фазлеев уҫрӗ. Вӑл пухӑннисене саламларӗ, малашне те Иван Яковлевич хывнӑ ҫулпа ҫирӗп утма сунчӗ. Ентешӗмӗр Атӑлҫи тӑрӑхӗнчи халӑхсене ҫутта кӑларас ӗҫре паллӑ вырӑн йышӑннине палӑртрӗ.

Унтан халӑх умне «И.Я. Яковлев» тухрӗ, хӑйӗн Халалне вуласа пачӗ. Ҫакна та палӑртмалла: вӑл ӗлӗкхилле тумланнӑ – вӑрӑм шурӑ кӗпепе, ҫӑпатапа – ачана аллинчен тытса тӑчӗ. Мӗн кӑтартасшӑн пулнине пурте каламасӑрах ӑнланчӗҫ.

Микрофон умне хӑнасем тухса калаҫрӗҫ: Тутарстан Республикин Президенчӗн администрацийӗнчи наци хутшӑнӑвӗсен пайӗн пуҫлӑхӗ А.В. Фокин, Чӑваш Республикин культура министрӗн ҫумӗ В.А. Боговарова, Тутарстан Республикин культура министрӗ М.М. Таишев, Тутарстан патшалӑх музейӗн тӗп директорӗ Г.С. Муханов, Тутарстан Республикинчи чӑвашсен П.Хусанкай ячӗллӗ обществӑпа культура центрӗн пуҫлӑхӗ Н.С. Степанцев, 1943 ҫулта Кӑнна Кушки шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ (кайран Хусанти техника университетӗнче доцент пулнӑ) В.Г. Борисов тата ыттисем те. Вӗсем ӑшӑ сӑмахсемпе саламсӑр пуҫне кӑннакушкисем валли нумай парне илсе килнӗ: альбомсем, картинӑсем, хаклӑ документсем...

Акӑ хумхануллӑ самант ҫитрӗ: музей директорне А.А. Пыркина музее юсаса ҫӗнетекенсем пысӑк ҫӑраҫҫи тыттараҫҫӗ. Ҫапла Кӑнна Кушкинче И.Я. Яковлев ячӗллӗ музей уҫӑлчӗ. Ӑна хута ярас ӗҫре икӗ уйӑх хушши Чӑваш тата Тутарстан Республикисенчен килнӗ специалистсем нумай вӑй хунӑ. Хӑнасем кавир тӑрӑх музее утса кӗреҫҫӗ. Калаҫу шалта та малалла пырать. Чӑваш йӑли-йӗрки тӑрӑх хӑнана пушӑ алӑпа каймаҫҫӗ, ҫавӑнпа пынисем нумай парне пачӗҫ. «Канаш» хаҫат тӗп редакторӗ В.Ф. Ромашкин музей валли чӑвашла

кĕнекесен пуххине парнелесе хăварчĕ. Сăмах май каласа хăварсан, Ульяновск облаçĕнчен ку уявра пирĕн хаçатра ĕçлекенсем кăначчĕ...

Вырăнти администраци юбилее хатĕрленес ĕçре тăрăшнине те палăртмалла. Теччĕ районĕнче Чăваш культура уйăхлăхĕ ирттернĕ, фестивальсем, конкурссем пулнă. Ялсене илем кĕртес пирки те манса кайман.

Халăх шкула кĕрет. Унта районти кашни чăваш шкулĕнчен килнĕ ачасем хăнасене юрă-ташăпа кĕтсе илчĕç, алă ăстисен выставкипе паллаштарчĕç.

Кĕрлесе-сĕрлесе тăракан шкултан тухса халăх урам тăрăх сăваплă вырăна – Патриархăмăр çуралнă çурт тĕлне утать.

Пухăннисем историллĕ пулăма курма пултарчĕç. Теччĕри Троица соборĕн настоятелĕ Валентин атте шурă кирпĕчрен тунă часавая таса шывпа сăваплатрĕ. Часавай умне чĕрĕ чечексем хучĕç. Священник кĕлĕ ирттерчĕ. Пуçтарнă халăх аллисенче çуртасем тытса тăчĕç. Кассăн-кассăн вăйлах мар çил вĕрет, çынсем çуртасем сӳнесрен аллисемпе хупласа, хӳтĕлесе тăраççĕ. Çакă кăтартуллă пек туйăнчĕ: хамăр культура вучахĕ сӳнесрен сыхланă евĕр пулчĕ. Çапла кашни хăйĕн çуртине сӳнтермесĕр Малашлăха утсан, тĕп тымарсене татмасан, И.Я. Яковлев каласа хăварнисене пурнăçа кĕртсе пырсан çеç эпир вăйлă халăх пулăпăр...

Сăваплă вырăна хирĕç Культура çурчĕ вырнаçнă. Хăнасене унта илсе кĕчĕç. Творчество ушкăнĕсем пысăках мар концерт кăтартрĕç.

Уява килнĕ халăх ял тăрăх малалла утать. Купăс, юрă сасси инçете каять. Кăннакушкисем иртсе каякансене хăна тăваççĕ. Н.Г. Ивашкова крыльцине тĕрленĕ алшăллисемпе илемлетнĕ. Хăнасене ăшă çăкăрпа, тутлă хăмла сăрипе сăйлать. Ялтан тухас умĕн вара сăра

савӑчӗсене ҫул айккинех лартса хунӑ. Иртсе каякансем еннелле куркасем тӑсаҫҫӗ.

Халӑх Кӑнна шывӗ хӗрринче вырнаҫнӑ ҫереме – Турӑлӑха ҫитет. Уявӑн кульминацийӗ. Ҫӗршер ҫын аллааллӑн тытӑнса (кунта тутарӗ те, мӑкши те, вырӑсӗ те пур) ваййа картине тӑраҫҫӗ. Утнӑ май ретсем хушӑнса пыраҫҫӗ, ватти-вӗтти ваййа хутшӑнать. Динамиксенчен сӑвӑ калани илтӗнет. Чӑннипе калатӑп, нумай уявра пулма тӳрӗ килнӗччӗ, анчах ҫакӑн пек чуна касакан, ӗмӗрлӗхе асра юлакан самантсем яланах пулмаҫҫӗ. Ваййари ҫынсен кашни ҫаврӑмӗнче тӗнче илемӗ, сӑввӑн кашни йӗркинче аваллӑх сасси, несӗлсен йывӑр кун-ҫулӗ, ӗмӗчӗ. Хӗвел, вӑрмансем, уйсем, чӑваш ваййа тухнине тӗлӗнсе пӑхса тӑраҫҫӗ пек туйӑнать. Мӗн каласан та ку халӑх пурӑнма ҫуралнӑ, сапаланса пӗтме пултараймасть...

Хӗрарӑмсем патнелле ҫывхаратӑп. Ай, мӗнле киленсе пӑхса тӑраҫҫӗ вӗсем карта йӗри-тавра ҫаврӑнакансем ҫине! Ҫамрӑклӑх аса килет пулӗ. Паллашатпӑр: М.И. Малышева тата С.Г. Матвеева.

– Ӗлӗкхи пекех вӗт!.. Эх, илемлӗ те ӗнтӗ! Эпир ҫапла савӑнаттӑмӑр вара. Выҫӑ пулсан та ваййа тухмасӑр юлман. Ют ялсене вӑйӑ калама ҫӳренӗ. Купӑс каланӑ, юрланӑ сасӑ ют ялсенченех илтӗнетчӗ. Микулара пуҫлаттӑмӑр та Питравчченех ҫӳреттӗмӗр, – аса илеҫҫӗ вӗсем.

Ҫеремри сцена ҫинче пысӑк концертра тӗрлӗ районсенчен, ялсенчен килнӗ артистсем, ушкӑнсем хутшӑнчӗҫ. Шупашкартан ятарласа килсе ҫитнӗ П.Романов хавасла юрӑсем шӑрантарчӗ, халӑха чӗнсе ташша кӑларчӗ. Ял хӗрарӑмӗсем виҫӗ пысӑк хуранпа яшка пӗҫерчӗҫ, хӑнасене апатлантарчӗҫ. Ҫакӑнтах пасар – камӑн мӗн туянасси килет, тархасшӑн...

Тухса калаҫакансем ҫакна палӑртрӗҫ: Кӑнна Кушки

чăвашсемшĕн пуç тайма çӳремелли вырăн пулмалла, кунта кашни çын çитсе курмалла. Малашне ку тăрăхра фестивальсем, уявсем ирттерессине йăлана кĕртмелле.

Учителĕмĕрĕн юбилейне чыслăн ирттерчĕç. Вăл чăннипех чăваш халăх уявĕ пулчĕ. Çакăн хыççăн кашни чăваша кăштах та пулин хамăр халăхшăн мăнаçлăх туйăмĕ кĕрессине шанас килет.

«Эпĕ туса пĕтерейменнине ĕçсене эсир туса пĕтерĕр», – тенĕ И.Я. Яковлев хăйĕн Халалĕнче. Иртнĕ уяв çакна кăтартса пачĕ: чăваш малалла пăхать, ĕмĕтленет, ĕçлет, тăрăшать, савăнать, пурăнать.

Теччĕ районĕ,
Кăнна Кушки ялĕ.

"Канаш", 28 №, 1998 ç.

# Чăваш ятне çĕклекенни – тăван чĕлхе...

1956 çулта Чĕмпĕрти И.Я. Яковлев шкулне хупнă хыççăн облаçри нумай ялсенче тăван чĕлхепе вĕрентме пăрахнă. Ку хум Чӳрекелне те пырса çапнă. Ĕмĕртенпех чăвашсем пурăнакан вырăнта çакăн пек хăтланни халăх чысне таптанипе пĕрех. 33 çул шкулта ачасем тăван чĕлхепе вĕренеймен, унран ютшăнма пуçланă.

1989 çулта ку ĕçе Чӳрекелĕнче тепĕр хут чĕртсе яма май килнĕ. Пуçлаканнисенчен пĕри Л.Ф. Ярославская пулнă. Халĕ ун ячĕ облаçра анлă сарăлнă.Шкулта вăл 34 çул вăй хурать ĕнтĕ. 14 çул математика вĕрентнĕ. Халĕ 2-мĕш классене пĕлӳ тĕнчине кĕме пулăшать. Лидия Федоровна – Раççей Федерацин тава тивĕçлĕ учителĕ.

Нумаях пулмасть вăл чăваш чĕлхипе уçă урок ирттерчĕ. Унта облаçри халăха вĕрентес ĕç управленийĕнчи чăваш шкулĕсен специалисчĕ Ф.Т. Улендеева, учительсен квалификацине ӳстерекен институтри В.А. Архипова методист, Майнăри роно специалисчĕсем хутшăнчĕç.

Стенд çинче чăваш литература классикĕсен сăнӳкерчĕкĕсем: Çеçпĕл, Иванов... Ачасем чăваш тумĕпе: кĕпе, саппун, тухья, тевет, пуç хыçĕ. Лидия Федоровна ачасенчен: «Канаш» хаçат ăçта тухать? – тесе ыйтать. Лешсем тăстарса: «Чĕмпĕрте», - тесе хуравлаççĕ. «Камсем ĕçлеççĕ унта, мĕнле журналистсене пĕлетĕр эсир?» - тĕпчет учитель. «Степанова, Мустаева, Дмитриев...» - шутлаççĕ лешсем.

Малалла Лидия Федоровна А.Ф. Юман 65 çул тултарнине халалласа кăларнă «Канаш» номерне аллине тытса çыравçăн кун-çулĕпе паллаштарчĕ. Доска çине те Анатолий Федоровичăн «Кăвак йĕр» кĕнекинчен илнĕ

тăван чĕлхене хаклакан йĕркесене çырса хунă. Ачасем ăна пурте харăс, васкамасăр вулаççĕ.

- Ачасем, ăçта кайсан та çакна ан манăр: чăваш ятне çĕклекенни - тăван чĕлхе. Ăна пурин те пĕлмелле. Ют чĕлхе вĕренес умĕн пирĕн чи малтан хамăрăнне ăша илмелле, - уççăн янрать учитель сасси.

Ачасем доска умне тухса «Кайăк пулăттăм» юрра çепĕççĕн юрлаççĕ. Ку вĕсемшĕн кăштах кану пулчĕ.

Вĕренекенсем лайăх пĕлӳ кăтартрĕç – учитель панă никĕс çирĕппи курăнать.

Сисмесĕрех вăхăт иртсе кайрĕ – шăнкăрав.

Учителĕн ĕçне хаклама специалистсем сăмах илчĕç. Вĕсем пĕр саслăн пулса лайăххине çеç каларĕç – ырă ĕçе ырăпа кăна хаклама пулать.

- Эпĕ ку шкултан вĕренсе тухни 30 çул иртрĕ. Манăн пĕрремĕш учитель те Лидия Федоровна пулнă. Эпир ăна питĕ юрататтăмăр, хисеплеттĕмĕр. Вăл паян та çамрăк ăрăва пĕлӳ пани мана савăнтарать, унăн ырă кăмăлĕ, пуян опычĕ ачасене кирлĕ-ха. Шкул пĕтерсен мана юлташпа пĕрле института кайса кĕме тӳрĕ килчĕ. Унччен Чӳрекелĕнчен аслă шкула кĕрекенсем пулман. Ман шăпа çапла пулса тухнишĕн Лидия Федоровнăн тӳпи пысăк тесе шутлатăп. Тĕрĕссипе, нихçан та юратнă учитель патне инспектор пулса унăн ĕçне тĕрĕслеме килесси çинчен шутламан. Ун ĕçне çапла хаклас килет: çамрăк учительсемшĕн вăл тĕслĕх пулса тăрать. Унран вĕренмелли нумай, - терĕ Ф.Т. Улендеева юлашкинчен.

Майна районĕ.

“Канаш”, 4 №, 1998 ç., кăрлач, 24.

# Çинкĕл тăрăхĕнче чăваш культури чĕрĕлет

Юлашки вăхăтра облаçри нумай шкулта чăваш чĕлхине, культурине (факультатив, кружок тата урок формисемпе) вĕрентме тытăнчĕç. Пурĕ ун пек шкулсен шучĕ – 108. Паллах, кунта вĕрентӳ управлени пуçлăхĕн А.В. Букинăн тăрăшулăхне палăртса иртмесĕр май çук.

Чăнах та, хăш-пĕр çĕрте ку ĕç йывăррăн пырать. Çав шутра Çинкĕл районĕнче те. Çапах та «пăр тапраннă». Лару-тăрăва тĕпчеме района специалистсем ятарласа тухса кайрĕç. Ушкăна çаксем кĕчĕç: вĕрентӳ управленийĕнчи тĕп специалист Ф.Т. Улендеева, Ульяновскри чăвашсен наципе культура автономийĕн председателĕ П.Я. Уфимкин, унăн çумĕ А.А. Еграшкин, учительсен квалификацине ӳстерекен институтăн методисчĕ В.А. Архипова, И.Я. Яковлев ячĕллĕ общество председателĕ В.Б. Бельский, «Канаш» хаçат корреспонденчĕ Н.Н. Ларионов.

Çинкĕлте пире роно заведующийĕ И.Г. Григорьев тата унăн çумĕсем кĕтсе илчĕç, вĕрентӳ ĕçĕнчи лару-тăрупа паллаштарчĕç, тăван чĕлхепе вĕренме ирĕк паракан саккуна мĕнлерех пурнăçласа пынине каласа пачĕç. Паллах, ку йывăр ыйту, 1950-мĕш çулсенче ку тăрăхра чăваш чĕлхине пăрахăçланă. Çур ĕмĕр иртнĕ хыççăн ăна чĕртме чылай вăй кирлĕ пулĕ.

Çапах та шанчăк пур. Эпир çакна район администраци пуçлăхĕпе Н.А. Емельяновапа тĕл пулнă хыççăн туйрăмăр. Кĕске калаçура Николай Алексеевич çак ĕçре пур енчен те пулăшма шантарчĕ. “Манран мĕнле пулăшу кирлĕ – парăп. Вĕрентӳпе культура çинче экономи тумалла мар. Малашне пĕрле ĕçлĕпĕр”, - терĕ вăл.

Çакăн пек «пил» панă хыççăн Уличе ялне тухса

кайрӑмӑр. Ушкӑн çумне роно заведующийӗ И.Г. Григорьев, унӑн çумӗ Л.А. Самчелкина, методика кабинечӗн заведующийӗ Н.Е. Проворова хутшӑнчӗç.

Темиçе цифра. Районта чӑвашсем, шучӗпе илсен, иккӗмӗш вырӑн йышӑнаççӗ – 5 пине яхӑн. 4 пин ытларах шкул ачи, вӗсенчен чӑвашсем – 721, (тутарсем – 289). Уличе, Анатьял, Ялавӑр ялӗсенче ӗлӗкренех чӑвашсем çеç пурӑннӑ. Халӗ кӑштах ытти наци çыннисем те пур. Уличере пире вырӑнти администраци пуçлӑхӗ Н.М. Жегалин, вӑтам шкул директорӗ Н.В. Жегалина тата ыттисем ӑшшӑн кӗтсе илчӗç, ялпа, шкулпа, çынсемпе паллаштарчӗç. Вырӑнти администраци территорине Уличе (313 çурт, 793 çын), Анатьял (190 çурт, пуçламӑш шкул пур) тата Малаперек (18 çурт, шкул çук, ачасем Анатьяла çӳреççӗ) ялӗсем кӗреççӗ. Уличере халӗ халӑхӑн 70 процентӗ чӑвашла калаçать. Шкулта 187 ача вӗренет, 21 учитель.

7-8 çул каялла кунти чӑвашсем тӑван чӗлхене шкулта вӗрентессине хирӗç пулнӑ – ку факт. Унтанпа шыв-шур чылай юхнӑ, шухӑш-кӑмӑл улшӑннӑ. Шкул директорӗ Надежда Викторовна пӗлтӗр «Чӑваш чӗлхине вӗрентес ыйтусем» ятлӑ семинарта пулнӑ. Нумай çӗрте çак ыйтӑва тимлӗх уйӑрнине курсан вӑл çапла пӗтӗмлетӳ тунӑ. Уличере те тӑван чӗлхе вӗрентӳ процесӗнче тивӗçлӗ вырӑн йышӑнмалла. Çавӑнпа халӗ ун çине пачах урӑхла пӑхаççӗ.

Пиртен кашни уçӑ уроксенче пулса курчӗ. Е.В. Краснова пӗрремӗш класпа факультативлӑ заняти-çулçӳрев ирттерчӗ. Пӗчӗккисене тӑван чӗлхе вӗрентесси – çӗнӗ ӗç, çавӑнпа учителе çӑмӑл мар. Елена Владимировна ӑна пытармасть. «Литература чӗлхине хамӑн та çӗнӗрен аса илме тӳр килет. Словарьсем çитмеççӗ, вӗсемсӗр питӗ кансӗр», - тет вӑл. Çапах та заняти интереслӗ

иртрĕ. «Колобок» юмах тăрăх ачасем тĕрлĕ ыйтусене хуравларĕç, кашни чĕрчун ятне чăвашла куçарчĕç. Занятие вăйă теме те пулать. Сăмахран, йăва тилле тĕл пулать. «Эпĕ сана çисе яратăп», - тет кăпăшка хўре хуçи пирĕн героя. Учитель хăвăрт кăна доска çине пулă ўкерчĕкĕсене çакса хурать те ыйтать: «Ачасем, çакăнти пулăсене чăвашла калăр-ха, унсăрăн тилĕ йăвана çисе яма пултарать». Лешсем аллисене йăтса йăвана пулăшма васкаççĕ, хуравлама тăрăшаççĕ. Пĕтĕм заняти çакăн евĕрлĕ иртрĕ, çавăнпа вăхăт шуни те сисĕнмерĕ. Физкультура тăхтавĕсем, юмахри юрăсем ачасене хавхалантарма пулăшрĕç, ывăнма памарĕç.

«Хăвăн халăх культурине пĕл тата вĕрен» кружок занятине 4-мĕш класра Нина Алексеевна Куракова ертсе пычĕ. Класра 16 ача, пурте наци костюмĕсемпе. Учителĕ хăй те чăваш кĕпипе. Ку, паллах, вĕренекенсемшĕн ырă тĕслĕх. Тăваттăмăшсем А.С. Пушкинăн пулăçăпа пулă çинчен çырнă юмахне инсценировка турĕç. Пурĕ чăваш чĕлхи кружокне 50 ачана яхăн çўрет, вĕсен хушшинче ытти халăх ачисем те пур. Ку пархатарлă ĕçе Н.А. Куракова илсе пырать.

9-мĕш класра географи урокĕнче те чăвашлăх туйăмĕ палăрчĕ. Надежда Борисовна Ильдейкина класа икĕ пая уйăрчĕ. «Этнографи чемпионачĕ» пуçланчĕ. Чăваш халăх историйĕпе çыхăннă ыйтусене ачасем хăюллăн хуравларĕç. Облаçри чăвашсем çинчен те ыйтусем нумай пулчĕç. «Çĕнтерўçĕсене» чемпион лентисем çакса чысларĕç.

Ку ялсенче çынсем 1930-мĕш çулсенче чăвашла тăхăнма пăрахнă, хĕрарăмсем майралла çўреççĕ. Çавăнпа çамрăксене Светлана Васильевна Киселева «Чăваш тумĕн илемĕ» темăпа рисовани урокĕнче паллаштарчĕ.

Уроксем хыççăн хăнасене 7-мĕш класра вĕренекен Таня Краснова ял историпе паллаштарчĕ, пĕчĕк экскурси ирттерчĕ. Вăл уйрăмах çак тăрăхри чăвашсен калаçăвĕ литература чĕлхинчен чылай уйрăлса тăнине палăртрĕ. Чăваш кил-çурчĕн кĕтесĕнчи хресчен ĕç хатĕрĕсем çинчен 8-мĕш класс хĕрачи Ирина Фролова интереслĕ каласа пачĕ, кашни экспонат умĕнче кăштах чарăнса тăчĕ. Ку кĕтесе йĕркелекенĕ – истори учителĕ Л.В. Краснова, вырăс хĕрарăмĕ.

Каярах вĕренекенсен вăйĕпе хатĕрленĕ концерт пулчĕ. Уличе ачисем чăннипех те пултаруллине курса тĕлĕнтĕмĕр. Инçетре пурăнакан тăвансем халăх юррисене нумай пĕлеççĕ. Ку, паллах, пире савăнтарчĕ.

Юлашкинчен çавра сĕтел хушшинче мĕн курни-илтнине пĕтĕмлетӳ турăмăр. Вĕрентӳ управленийĕ, наципе культура автономийĕ тата «Канаш» хаçат ячĕсенчен уличесене кĕнекесем парнелесе хăвартăмăр: 1-мĕш классем валли учебниксем, илемлĕ литература...

Мĕн калама пулать-ха Уличере пулнă хыççăн? Ачасем чăвашла вĕренесшĕн мар тени тĕрĕсех мар (хăш-пĕр çĕрте çакăн çине «йăвантарма» пăхаççĕ). Ачасем мĕнле япалана та, ăна интереслĕ вĕрентсен, тӳрех алла илме тăрăшаççĕ. Çавăнпа та кунта нумайăшĕ çитĕннисенчен килет: ашшĕ-амăшĕнчен, учительсенчен. Чи пахи – ĕç вырăнтан тапранни. Кружока ачасем кăмăлласа çӳреççĕ. Çитĕннисем вара вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерме тăрăшаççĕ.

Апла пулсан Çинкĕл тăрăхĕнче чăваш чĕлхи чĕрĕлессе шанма пулать.

“Канаш”, 13 №, 1999 ç., пуш, 26.

# Чĕлхе пулсан пĕтместпĕр ĕмĕрте!

Çинкĕл районĕнчи çулçуревĕн иккĕмĕш кунне пирĕн ушкăн район центрĕнче вырнаçнă педучилищĕрен пуçларĕ. Пире унăн директорĕ С.П. Сахарцев йышăнчĕ, ĕç-пуç çинчен каласа пачĕ.

Малалла пирĕн маршрут Ялавăр ялнелле выртрĕ. Кăштах паллашар-ха унпа. Яла 1672 çулта никĕсленĕ, авалтанпа чăвашсем çеç пурăннă. Халĕ кунта 630 çурт, пурĕ 1189 çын пурăнать, вĕсенчен 1075 чăваш, 107 вырăс. 142 çул каялла пĕр пĕчĕк пӳртре шкул уçнă, унăн никĕсĕ çинче 60 çул каялла вăтам шкул ĕçлеме пуçланă. Паян кунта 191 ача пĕлӳ илет, вĕсенчен чăвашсем – 171, 27 учительтен 23-шĕ чăваш.

Хамăрăн ĕçе каллех уçă уроксенчен пуçларăмăр. Мана 7-мĕш «б» класа кайма тӳрĕ килчĕ. Рисовани урокне В.Н. Севастьянов илсе пырать. Учителĕ опытлă ĕнтĕ, ĕç стажĕ 18 çул, çавăнпа вăл хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет. Çакна класра вырнаçтарнă ачасен ĕçĕсем ĕнентереççĕ. Йывăç тымарĕсене чун кĕртсе тунă скульптурăсем, касса илемлетнĕ йывăçсем, токарь станокĕ çинче хырса хатĕрленĕ йĕтĕрсем, çурта лартмаллисем – пурте ачасем ку ĕçе лайăх пĕлнине палăртаççĕ. Малтан Виктор Николаевич чăваш тĕррин историйĕ çинче чарăнса тăчĕ, унта хĕрлĕпе шурă тĕссем ытларах пулнине каласа пачĕ. Каярах сĕтелсем хушшине пĕрерĕн ларса тухнă вĕренекенсем хăйсем тĕллĕн ĕçлерĕç. Веçех лайăх пек туйăнчĕ, çапах та пĕр çитменлĕх пурччĕ урокра: учитель пĕр чăваш сăмахĕ те кăлармарĕ. Ман шутпа, япала ячĕсене (тĕслĕхрен, ывсă, йĕтĕр) тăван чĕлхене куçарса ăнлантармаллаччĕ. Унсăрăн тăван чĕлхе патнелле туртăнмĕç çамрăксем.

Тăхтав вăхăтĕнче Чĕмпĕр Енри паллă художник П.П.

Ургалкин (вăл çак ялта çуралса ӳснĕ) çамрăк ăрăва хăйĕн выставкипе паллаштарчĕ. Ачасем Петр Павлович хыççăн ушкăнпа çӳрерĕç, ентешĕн кашни сăмахне ăша илме тăрăшрĕç. Ăçта интереслĕ, ачасем çавăнта туртăнаççĕ.

Ĕç мухтавĕн музейĕпе паллашма та кăмăллă пулчĕ. Ăна 1973 çулта Каракинов учитель йĕркелесе янă. Халĕ ку пархатарлă ĕçе Н.Н. Артемкина (вырăс) илсе пырать. Экспонатсемпе пуян музейпе вĕрентӳ класĕ пек те усă кураççĕ, кунта уроксем ирттереççĕ. Ялти ватăсене чĕнсе тĕлпулусем ирттересси те йăлана кĕнĕ. Экспонатсене 7 пая уйăрнă, чăваш халăх искусстви çинчен те манса кайман, çапах та ăна пуян теме çук-ха. Ку енĕпе учительсен те, вĕренекенсен те тăрăшмалли чылай. Çине тăрсан чăваш культурин уйрăмĕ те пуян пулĕ.

Ялти культура çуртĕнче вара тепĕр интереслĕ мероприяти иртрĕ. Унта пĕр пӳлĕме музей валли уйăрнă, пуçарăва хуллен малалла илсе пыраççĕ. Унта ман пĕлтĕр те пулма тӳрĕ килнĕччĕ, ун чухне ĕç тытăнса çеç пыратчĕ-ха, экспонатсен шучĕ те вăтăртан иртместчĕ. Халĕ вара сакăрвунна яхăн. Паян кунта ялти ватăсене чĕннĕ. Тĕлпулăвăн тĕллевĕ – çамрăксене аслашшĕсен пурнăçĕпе паллаштарасси. Вера Алексеевна Рыскалкина чĕнтĕр çыхнине, тĕрленине, Мария Васильевна Ертулова çăпата хуçнине, Клавдия Николаевна Фролова сӳс авăрланине шкул ачисем хăйсен куçĕпе курма пултарчĕç. Паллах, нумайăшĕ пĕрремĕш хут. Çакăн пек тусан çеç ачасенче чăвашлăх туйăмĕ çуралма пултарĕ. Тĕлпулăва йĕркелекенсем инçете пăхни сисĕнет. Çитменнине, алă ĕç тăвакансем çав вăхăтрах ĕлĕкхи юрăсем юрларĕç. 9-мĕш класра вĕренекен Алена Стручкова вара гид пулса юлташĕсене тата хăнасене пухнă экспонатсем çинчен

каласа пачĕ. Ку урока пурте нумайччен манмĕç.

Аслисем пурнăçа юратни, йывăрлăхсене парăнма хăнăхманни М.В. Ертулова сăмахĕсенче палăрчĕ. Енчен-енне çаврăнса, ура тапса юрланă хыççăн вăл çапла каларĕ: «Эпĕ 11 çултах аттесĕр юлнă, çавăнпа мĕнпур ĕçе çамрăкла вĕреннĕ, çав шутра çăпата хуçма та. Мĕнле йывăр пулсан та хамăра тăрантартăмăр, выçă вилмерĕмĕр. Халĕ эпĕ 85 çулта кăна-ха. Маншăн тăхăрвуннă та ним те мар пек туйăнать. Çĕр çула çитесчĕ-ха!» Çамрăксен пурăнма акă камран вĕренмелле.

Программа тăрăх малалла – концерт. Музыка учителĕ Н.Е. Куруськин ертсе пыракан хĕрачасен хорĕ, учительсен, арçын ачасен халăх инструменчĕсемпе калакан ушкăнĕсем пухăннисене илемлĕ кĕвĕ-юрăпа савăнтарчĕç. Ташă номерĕсем, инсценировкăсем те пурччĕ. Мана вара Саша Сидоров вулană сăвăри йĕркесем вирлĕн кĕрсе вырнаçрĕç: «Чĕлхе пулсан пĕтместпĕр ĕмĕрте!»

Çавра сĕтел хушшинче шăпах çакăн çинчен калаçу пычĕ. Тӳрех каламалла: хальлĕхе Ялавăр çыннисем Чăваш çĕршывĕпе, чăваш культурипе сахалтарах çыхăннă. Кунта вĕренме е ĕçлеме Самарпа Саратов тăрăхне нумайрах каяççĕ. Çавăнпа тăван чĕлхене, культурăна сарас тесен ĕçлемелли нумай-ха. Чи кирли вара – тытăнасси. Малашне шкулта «Чăваш культурин никĕсĕ» ятлă факультатив уçас шухăш пур. Вăл кирлине шкул директорĕ Е.И. Марашка тата учительсем лайăх ăнланаç-çĕ. Вырăнти администраци пуçлăхĕ В.Н. Вахтуров та ку ĕçе пур енчен пулăшма сăмах пачĕ. Чăнах та, ку шухăша хирĕçлекенсем те пур, çапах та ăнланнисем нумайрах пулчĕç. Кунта пĕр япала çинчен манса каймалла мар: ку факультатива никама та ирĕкĕрлесе çӳретмеççĕ,

кăмăл тăрăх çеç. Вĕренме кăмăл тунисене вара чарас марччĕ, пулăшасчĕ. Тытăнма, паллах, çăмăл пулмасть, анчах мĕнле вăрăм çул та пĕрремĕш утăмран пуçланать. Çавăнпа та ярса пусма хăрамалла мар. Ун чух ытти çĕртен те пулăшу пулĕ.

Шкул – çамрăк ăрăва воспитани парас ĕçĕн центрĕ. Тăван халăх тĕнчине, культурине сыхласа хăварас ĕçе учительсем те илсе пымасан – тата кам?

Тĕлпулура вĕрентӳ управленийĕнчи тĕп специалист Ф.Т. Улендеева, наципе культура автономийĕн пуçлăхĕ П.Я. Уфимкин, унăн çумĕ А.А. Еграшкин, учительсен квалификацине ӳстерекен институтри методист В.А. Архипова йăлтах çакна палăртма тăрăшрĕç. Ĕçе пуçăнма çăмăлтарах пултăр тесе шкула чăвашла кĕнекесен пуххисене парнелесе хăварчĕç.

Кунта П.П. Ургалкин тĕлпулу вăхăтĕнче каланă сăмахсене аса илсен вырăнлă. Вăл çапла каларĕ: «Чăваш чĕлхине вĕреннипе, ăна лайăх пĕлнипе эпĕ нимĕн чухлĕ те чухăнланмарăм. Пачах урăхла, вăл мана ыттине пĕлме пулăшрĕ, пысăк ĕçсем, çитĕнӳсем тума хавхалантарчĕ».

"Канаш", 14 №, 1999 ç., ака, 2.

# Ырă ĕç сынна çĕклет

Чăваш Кăлаткă – область центрĕнчен чи аякра вырнаçнă ялсенчен пĕри. Лерелле – Саратов çĕрĕ. Çакна палăртма кăмăллă: вăтам шкулта чăваш чĕлхине пĕрремĕшĕнчен пуçласа вунпĕрмĕш класс таранах вĕрентеççĕ. Апла пулсан кунта тăван культура вучахĕ хĕмленсе ялкăшас шанчăк пур. Халĕ те çитĕнӳсем çук мар: Чăваш Кăлаткă ачисем область олимпиадисенче те, «Канаш» хаçат ирттерекен викторинăсенче те малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Ĕç-пуç çинчен шкул директорĕпе М.В. Николаевапа калаçрăмăр. Марина Васильевна 1979 çулта çакăнтанах вĕренсе тухнă, Ульяновск пединститутне пĕтернĕ. Пĕр вăхăт Ульяновскра ĕçленĕ, 1990 çулта вара тăван яла таврăннă, шкулта математика вĕрентме пуçланă. Директор пуканĕ çинче Марина Васильевна пĕрремĕш çул çеç-ха.

- Шкулта тĕрлĕ халăх ачисем пур: чăвашсем, тутарсем, вырăссем, узбексем... Учительсен коллективĕ те, вĕренекенсем те туслă пурăнаççĕ. Уроксем хыççăн 12 кружок ĕçлет, ачасем каçсерен спортзала секцисене çӳреççĕ.

Чăваш чĕлхине тулли программăпа 1991 çулта вĕрентме пуçланă кунта. Çак вăхăтра çĕнĕ специалист Е.В. Васильева килсе çитрĕ. Унччен кружок çеçчĕ. Елена Всеволодовна ку ĕçе чăннипех те çĕнĕлле çавăрса ячĕ, çынсен ăс-тăнĕнче тăван чĕлхе çине сӳрĕккĕн пăхнине улăштарчĕ. Ун хыççăн çынсем туртăнчĕç. Халĕ эпир чăваш чĕлхине çакăн пек вĕренетпĕр. 1-2-мĕш классенче Ирина Николаевна Владимирова, 3-4-мĕш классенче Валентина Васильевна Черкасова ĕçлеççĕ. Çиччĕмĕшĕнчен тытăнса вара вĕсене Елена

Всеволодовна аллине параççĕ. Вăл питĕ тăрăшуллă çын, вăхăтне, вăйне шеллемесĕр ĕçлет, - тет вăл.

Шкул директорĕн сăмахĕсене эпĕ те çирĕплетме пултаратăп. Чăваш Кăлаткăра пулнă хыççăн Е.В. Васильева тăрăшулăхне курмасса суккăр çын çеç пултарать. Шкул коридорĕнче – «Канаш» хаçатăн стенчĕ, кашни çĕнĕ номере ачасем пухăнса пĕрле вулаççĕ. Ялти Культура çуртĕнче чăваш фольклор ушкăнĕ пур, ăна та Елена Всеволодовна ертсе пырать. Çакăнтах фойере чăваш культурин кĕтесĕ, кунта та пултаруллă учителĕн алли сисĕнет.

Марина Васильевна чăвашла кĕнекесем çитменни пирки те каларĕ – укçа-тенкĕ енчен хĕсĕкрех. Анчах та ку йывăрлăх вăхăтлăха çеç. Чи пахи – пултаруллă специалистсем пурри, вĕсем хăйсен ĕçне тивĕçлипе пурнăçлани, пĕр шухăшлă пулни.

Ун пек пулсан йывăр лава сĕтĕрме те çăмăл...

“Канаш”, 21 №, 1999 ç., çу, 21.

# ЧОКЦ – наци юхăмĕн йĕркелӳçи

Чăвашсен обществăпа культура центрĕ (ЧОКЦ) – çĕнĕ саманара наци юхăмĕн ыйтăвĕсемпе ĕçлеме тытăннă пĕрремĕш обществăлла организаци. Иртнĕ çул вăл 10 çул тултарчĕ.

Чăваш патшалăх филармони çуртĕнче çак датăна халалласа уяв иртрĕ. Унта тĕрлĕ çĕртен килнĕ хăнасем хутшăнчĕç: Хусантан, Анат Камăран, Ĕренпуртан (Оренбург), Ульяновскран, Азербайджанран, Турцирен... Хисеплĕ президиума аякран килнĕ хăнасемпе пĕрле Ульяновскри И.Я. Яковлев ячĕллĕ общество ертӳçине В.М. Бельские суйларĕç.

Чи малтан сăмах ЧОКЦ йĕркелӳçи, ертӳçи, чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши илчĕ. Вăл кăштах истори çинче чарăнса тăчĕ.

- Чăваш юхăмĕ 1917 çулта Чĕмпĕрте пуçланнă. Пуху, калаçу 7 кун пынă. Çак съездра Чăваш наци обществине (ЧНО) туса хураççĕ, чăваш çĕрĕсен карттине йĕркелеççĕ. Анчах республика туса ĕлкĕреймеççĕ. Пысăк тăхтав хыççăн çĕнйĕркелӳ самани çитрĕ. 1987 çулта çак ĕçе тепĕр хут тапратрăмăр, наци ĕçĕсен ушкăнне йĕркелерĕмĕр. 1989 çулта çĕршыври чăвашсен иккĕмĕш съездне ирттертĕмĕр, ЧОКЦ туса хутăмăр. Пирĕн виçĕ тĕп çул: аякри чăвашсене çĕклесси, Чăваш Республикинчи ытти халăхсене пулăшасси, ниçта та хирĕçтăру ан пултăр тесе тăрăшасси. Каярах наци юхăмне аталантаракан организацисем татах та хутшăнчĕç. ЧОКЦ вĕсене çуратса тĕнчене кăлараканĕ пулчĕ. Вĕсемшĕн савăнатăп. Пурте пĕр ĕç тăватпăр эпир. Ĕмĕр сывă пултăр ытти халăхсемпе пĕрле чăваш! – терĕ Михаил Николаевич.

Уявра нумай хăна сцена çинчен тав сăмахĕсем каларĕ. Вĕсен хушшинче: культурăпа наци ĕçĕсен

министрĕ О.Г. Денисова, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Г.А. Васильев, ЧР наукăсен тата искусствăсен Наци Академийĕн президенчĕ Л.Н. Иванов, В.Д. Дмитриев академик, А. Никитинпа Г.Н. Тафаев профессорсем, Турцирен, Азербайджанран килнĕ хăнасем тата ыттисем.

Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăвашсен ятĕнчен эпир ЧОКЦа «Ульяновск» ятлă пысăк фотоальбом парнелерĕмĕр, Юхма Мишшине «И.Я. Яковлев ячĕллĕ обществăн хасеплĕ членĕ» ятлă диплом патăмăр.

Юбилей ячĕпе тĕрлĕ çĕртен нумай телеграмма килнĕ. Сцена çине шкул ачи, «Европа шанăçĕсем» конкурс лауреачĕ Олеся Жувакова, Л.Степанова, Л.Афанасьева, В.Гордеев, С.Хардова, В.Адюков, И.Христофоров, В.Христофоров, Г.Козырь, В.Семенов, Г.Смирнова, М.Гурьева юрăçсем, «Тарават» ушкăн (ертӳçи Л. Никифорова), юрăпа ташă академи ансамблĕн артисчĕсем тата ыттисем тухрĕç. Хăйсен пултарулăхне Г.С. Лебедев ячĕллĕ пултаруллă ачасен лицейĕн, 133-мĕш номерлĕ «Почемучка» ача сачĕн воспитанникĕсем те кăтартрĕç.

Наци культурине аталантарнă çĕрте хастар хутшăнакансем усламçăсене те манса каймарĕç, Н.Тувалкина, Н.Столярова тата ыттисене тав сăмахĕ каларĕç, ЧОКЦ премисене пачĕç.

Шупашкар хули.

«Канаш», № 1, 2000 ç.

# Виçĕ кун – Мелекесс районĕнче

## ПĔРРЕМĔШ КУН

Пирĕн тăван çĕршыв историйĕ тикĕс аталанса пынă теме çук. Мĕнле кăна асар-писер хуçаланман-ши Расçейре! Несĕлсен культурине, чĕлхине вăйпах мантарнă, ăрусен çыхăнăвĕсен хушшине пысăк шалçасем çапа-çапа кĕртнĕ. Халăхăн авалтан килекен йăли-йĕркинчен кулнă, мăшкăлланă, тĕн уявĕсене палăртма чарнă. Халăх ăс-тăнне «тымарĕпех» лăскаса кăларма тăрăшнă. Каялла тавăрма вара ăна питĕ хĕн. Ку ĕçе ачаранах тытăнмалла, çамрăк ăрăва хăйĕн халăхне, чĕлхине культурине хисеплеме, юратма вĕрентмелле. Ку ĕç юлашки çулсенче тапранчĕ. Паллах, вăл тăкаксăр пулмасть. Çапах та область пуçлăхĕсем çак ĕçпе кăсăкланнине, май пур таран пулăшма тăрăшнине палăртмалла. Облаçра чăваш чĕлхине тĕрлĕ майпа вĕрентекен шкулсен шучĕ çулсерен ӳссе пырать. Специалистсем, чăваш юхăмĕн пуçлăхĕсем ялсене тухса çӳреме пуçларĕç. Вĕсем вырăнти лару-тăрупа паллашаççĕ, çынсен шухăшĕсене пĕлеççĕ.

Çак тĕллевпе пуш уйăхĕн 1-3-мĕшĕсенче Мелекесс районĕнче Ульяновскран кайнă ятарлă делегаци ĕçлерĕ. Унта çак çынсем кĕчĕç: вĕрентӳ управленийĕн тĕп специалисчĕ Ф.Т. Улендеева, чăваш наципе культура автономин пуçлăхĕ П.Я. Уфимкин, унăн çумĕ, çав вăхăтрах Ульяновскри Чăваш культура центрĕн пуçлăхĕ А.А. Еграшкин, Аслă Нагаткинра ĕçлесе пурăнакан поэт, Раççей культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ А.Ф. Юман тата эпĕ, «Канаш» хаçат журналисчĕ. Тӳрех каламалла: çӳревĕн тĕллевĕ йăнăшсем тупса кама та пулин наказани парасси мар, çитменлĕхсем тупса кама

та пулин мĕскĕнлетесси, хăратасси мар. Çук! Пирĕн тĕллев – выранти наци ыйтăвĕсемпе мĕнле ĕçленине, тăван чĕлхене вĕрентнине курса тĕпчесси, тишкерӳ тăвасси тата – ку чи пахи – çак ĕçре тăрăшакансене тĕрĕс çул çине тăратасси, пулăшасси. Мĕншĕн тесен çакăн пек пысăк та кăткăс ыйтăва уйрăммăн никам та татса параймасть. Кунта тĕрлĕ шайри, тĕрлĕ выранти специалистсен, пуçлăхсен килĕшĕвĕ, пĕтĕçĕвĕ, тăрăшулăхĕ, пуçарулăхĕ кирлĕ.

**Димитровград**

Ирхине 9 сехет тĕлне Димитровграда çитрĕмĕр, Мелекесс район администраци вĕрентӳ пуçлăхĕн çумĕ Л.С. Малышева, вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Л.Н. Ермакова, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ учителĕ Г.Г. Хисмятуллов методист тата ыттисем хутшăнчĕç. Пай пуçлăхĕ кăштах районти вĕрентӳ ĕçĕ çинче чарăнса тăчĕ. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тата вăтам шкулсен шучĕ 26, вĕсенчен пиллĕкĕшĕнче чăвашла вĕрентеççĕ. Пуçлăхсем наци вĕренĕвĕн никĕсне гражданла тата патриотла воспитание хумаллине палăртрĕç. Çав вăхăтрах выранти ĕç-пуça, лару-тăрăва шута илмелле. Унсăр сиен кӳме те пулать: çамрăк ăру тăван чĕлхене вĕренес ĕçрен писме пултарать. Çавăнпа та чухласа, шутласа, виççе малалла каймалла. Ку хушупа, вăйпа хистесе тумалли япала мар. Ачасен кăмăлĕ-туйăмĕ, учительсен коллективĕ тăван чĕлхене ытти предметсемпе пĕр тан хурса йышăнни, ашшĕ-амăшĕ пулăшăвĕ – пурте кирлĕ. Кадрсем хатĕрлемелле, ятарлă анкетировани ирттермелле. Пуян опытлă вĕрентӳçĕсен программине ыттисем патне çитермелле. Тăван чĕлхепе тухакан хаçат-журнала çырăнса илесси те чи кайри ыйту мар. Сăмахран, «Канаша» 6 шкулта çырăнса тăраççĕ. Куншăн район администрацине ырă сăмахсем каламалла. Ун

пуçлăхĕ çак ыйтăва пăхса тĕрĕслесе тăрать, укçа-тенкĕ уйăрать.

А.Ф. Юман сĕнĕвĕ вара çапларах пулчĕ: ялсенче, шкулсенче творчество çыннисемпе тĕлпулусем ирттерессине йăлана кĕртес. Анатолий Федорович шучĕпе, ку питĕ витĕмлĕ, кăтартуллă меслет. Тĕрĕсех, хирĕçлеме май çук. Çакна пурнăçа кĕртни ырă ĕç пулĕччĕ.

Паллашнă, пĕтĕмĕшле калаçнă, тĕллевсене палăртнă хыççăн пурте маршрутра палăртнă пĕрремĕш яла тухса кайрăмăр.

**Сапаккел**

Çапла калаççĕ ăна чăвашсем. Вырăсла вара - Сабакаево.

Пĕчĕк справка. Ял XVII ĕмĕрте никĕсленнĕ. Пурĕ 630 çурт, 1200 çын. Вырăссен, тутарсен, чăвашсен шутĕнче пысăк уйрăмлăх çук. Кашни халăхăн шучĕ, пĕтĕмĕшле илсен, пĕрре виççĕмĕш пайĕ. Шкул 1898 çулта уçăлнă. Халĕ унта (1971 çултанпа – вăтам) 333 вĕренекен. Вырăссем – 104, чăвашсем – 103, тутарсем – 124. 22 учительтен пиллĕкĕшĕ чăваш.

Кирпĕчрен купаланă икĕ хутлă шкул коридорĕнче пире наци тумне тăхăннă хĕрачасем çăкăр-тăварпа, виçĕ чĕлхепе саламласа кĕтсе илчĕç. Шкул директорĕ Г.А. Булычева кунти ĕç-пуçпа паллаштарать.

Çак вăхăтра район администраци пуçлăхĕ В.И. Чигаков çитсе кĕчĕ, пĕтĕмĕшле ĕçе хутшăнчĕ. Ку ахальтен мар. Владимир Ильич шкулсенче тăван чĕлхене вĕрентессине (чăвашла çеç мар!) пысăк тимлĕх уйăрать, тĕрлĕ майсем тупса пулăшса пырать. Хальхинче те вăхăчĕ сахал пулин те пирĕнпе пулма май тупрĕ.

Шкулта чăваш фольклорне факультатив майĕпе Н.А. Тойгильдина пĕрремĕш çул вĕрентет. 6-мĕш класра вара чăваш грамматикине вĕрентеççĕ.

- Хальлĕхе питĕ йывăр. Чăваш чĕлхине хам та лайăх пĕлместĕп, мĕншĕн тесен вырăсла калаҫса ӳснĕ. Тăван чĕлхене ҫĕнĕрен вĕренетĕп. Кĕнекесем ҫитмеҫҫĕ. «Чуваши Симбирского Поволжья» кĕнеке тăрăх хам программа ҫырса хатĕрлерĕм. Ҫавна ачасем патне ҫитерме тăрăшатăп, - каласа парать Надежда Алексеевна.

Ачасен концерчĕ вара хăйнеевĕрлĕ отчет пулчĕ. Юрларĕҫ, сăвăсем вуларĕҫ, инсценировка лартрĕҫ. Паллах, йывăр-ха вĕренекенсене. Ҫавăнпа учителĕ вĕсемпе пĕрле хутшăнать ҫак мероприятие. Нумай сăмах акцентпа тухать-ха. Ăнланмалла: ку япалана пĕр-ик кун хушшинче вĕренейместĕн. Темиҫе ҫул кирлĕ. Ҫапах та чи пахи – пуҫламăшĕ пур. Ачасем хапăл туса, интересленсе ҫӳреҫҫĕ уроксене, учителĕ ҫамрăк та тăрăшуллă. Ҫитменнине, Самарти педуниверситетра кĕретсĕр майпа вĕренет (1-мĕш курсра).

Ҫакна та палăртмалла. Тĕрлĕ наци ачисем, хăйсен культурине вĕреннĕ май, пĕр-пĕринчен уйрăлса каймаҫҫĕ, пĕр пысăк та туслă ҫемьере пурăнаҫҫĕ. Вырăс ачисем пире хăйсен йăли-йĕркипе (сăмахран, улах) кăтартрĕҫ. Тутар ачисен пултарулăхне те куртăмăр.

Ырă хыпар пĕлтерчĕҫ. Ку шкулта 1-9-мĕш классенче чăваш чĕлхи предметне вĕрентме программа хатĕрлеҫҫĕ. Паллах, малтан анкетировани ирттернĕ.

Чăваш чĕлхине маларах ăҫта «хăвса» кĕртнине Сергейпе Валерий Беспаловсем (вырăнти фермерсем) витĕмлĕн ăнлантарчĕҫ.

- Пире шкулта тăван чĕлхепе калаҫма чаратчĕҫ. Чăваш сăмахĕ илтсен наказани пулатчĕ: Ленин пӳлĕмне илсе кĕрсе урай ҫутаратчĕҫ, - терĕҫ пĕртăвансем.

Ҫавăнпа та паянхи ĕҫсене путвал алăкне яри! уҫнипех танлаштарма пулать.

Малалла шкулти краеведени музейĕпе паллашрăмăр. Унта виçĕ уйрăм, хуçалăх историйĕ, Тăван çĕршыв вăрçине хутшăнакансем çинчен (çак ялта çуралса ӳснĕ Совет Союзĕн Геройĕ В.И. Ерменеев çинчен ятарлă стенд пур) тата авалхи тумсен, ĕç хатĕрĕсен кĕтесĕ. Пурĕ 600 экспонат. Музей мăнаçлăхĕ – авалхи чăваш хĕрарăмĕн кĕпи. Ăна кĕленче ăшнех хунă. Экскурсоводсем ачасем пулчĕç.

Шкул библиотекинче 30 чăвашла кĕнеке терĕç пире. Чăнах та, çӳлĕк çинче иккĕшĕ çеçчĕ. Ыттисем алăра. Паллах, çӳлĕк çинче тусанланса выртманни аван.

Эпир тата икĕ кĕнеке парнелесе хăвартăмăр. Пĕрне – А.Ф. Юман. Вăл çаплах ачасем умĕнче тухса калаçрĕ, хăйĕн сăввине вырăсла тата чăвашла вуласа пачĕ. Ачасем ятлă-сумлă чăваш поэтне чăн пурнăçра курни, ман шутпа, нумайлăха асра юлĕ. Акă вăл ăрусен çыхăнăвĕ.

Курни-илтнине пĕтĕмлетсе çавра сĕтел хушшине лартăмăр. Кунта учительсемпе пĕрле ачасем ашшĕ-амăшĕ. Çакăнтах вырăнти администраци пуçлăхĕ В.А. Тойгильдин. Проблема çине тĕрлĕ куçпа пăхни, тĕрлĕ сĕнӳсем пани, ыйту ăшне шаларах кĕме тăрăшни кăмăла кайрĕ. Апла пулсан шанчăк пур: чăваш чĕлхине çамрăк ăру та ăша хывĕ.

Калаçу хыççăн учительсем тата ашшĕ-амăшĕ пире Мелекесс тăрăхĕнчи юрăсене шăрантарса савăнтарчĕç.

## ИККĔМĔШ КУН

Димитровград çывăхĕнчи вăрманта вырнаçнă сывлăха лайăхлатакан «Юность» лагерьте çĕр каçнă хыççăн пирĕн делегаци Турикасси ялне (е ăна Тури Мелекесс теççĕ) çитрĕ. Комиссире кăштах улшăнусем пулчĕç. Тĕп

ĕçĕнче ыйтусем нумай пирки чăваш наципе культура автономи пуçлăхĕн П.Я. Уфимкинăн (вăл Чăнлă район администраци пуçлăхĕн çумĕ) пĕрремĕш кун хыççăн килне тухса кайма тиврĕ. Унпа пĕрле А.Ф. Юман та кайрĕ. Мелекесс район администрацинчен вара тепĕр çын хутшăнчĕ: библиотека фончĕн пуçлăхĕ В.Н. Лысова.

**Турикасси**

Унта 500 çын пурăнать. Ку чăваш ялĕ. Анчах иртнĕ саманари тĕрлĕ шайри пуçлăхсем чăваш чĕлхине тĕп тăвас енĕпе «ăнăçлă» ĕçленĕ хыççăн вăл вырăсланнă. Урамра чăваш ачисем хăйсен хушшинче те вырăсла калаçаççĕ. Тăван чĕлхене вара ют чĕлхене алла илнĕ евĕр вĕренмелле. Шкул 9 çуллă. Кунта 95 ача, вĕсенчен 78-ĕшĕ чăваш. Пурĕ 11 учитель (7-шĕ чăваш).

Турикассисем пире питĕ ăшшăн кĕтсе илчĕç: çăкăр-тăварпа, кăпăклă сăрапа, янăравлă юрăпа. Кунта ачасем те, çитĕннисем те хутшăнаççĕ. Шкул директорĕ С.А. Гурьянов пире шкулпа паллаштарать, планĕсене уçса парать.

Чăваш чĕлхине кунта предмет вырăнне хурса 1998 çултанпа вĕрентеççĕ, кружок вара 1987 çултанпа ĕçлет. Ăна Ю.В. Еграшкина илсе пырать. Юлия Васильевна çав вăхăтрах районти чăваш чĕлхи учителĕсен методика пĕрлешĕвĕн пуçлăхĕ. Ĕç стажĕ унăн – 32 çул. Тата тепĕр çынна асăнмалла. Вăл Чĕмпĕр чăваш шкулне пĕтерсе тухнă О.В. Сарбахтина. Паллах, вăл тивĕçлĕ канура. Çапах та чăваш культурин кружокне ертсе пырать. Унăн ĕç стажне пĕлнĕ хыççăн куççем хăйсемех пысăкланаççĕ – 52 çул! Чыс та мухтав çакăн пек ĕçченсене! Çак тăрăшуллă ĕçченсене пула педагогсен тата вĕренекенсен ушкăнĕсем районта чăваш культурине аталантарас

енĕпе хастаррăн хутшăнаççĕ. Чи малтан эпир 3-мĕш класа уçă урок кайрăмăр. Тӳрех асăрхарăмăр: класс плакатсемпе, схемăсемпе, таблицăсемпе пуян. И.Я. Яковлев, К.В. Иванов çинчен материалсем пур. Чăваш писателĕсен, композиторĕсен сăнӳкерчĕкĕсем. Çеçпĕл, Шелепи тата Хусанкай сăмахĕсем. Уйăх, эрне ячĕсем, вулав правили тата ытти те. Урокра ачасем кăмăлтан ĕçлерĕç, тăрăшрĕç. Сăмах çумне аффикс хушса çĕнĕ сăмах тăвасси те вĕсемшĕн нимĕн те мар. Апла пулсан тăван чĕлхене ăша хываççĕ хуллен.

Урока Ю.В. Еграшкина çапла каласа вĕçлерĕ: «Паян эсир, ачасем, пурте тăрăшулăх кăтартрăр. Маттур. Çавăнпа та никама отметка лартмастăп. Пĕррелĕхе сирĕн ĕçĕр хăнасемшĕн пултăр».

Ĕçĕ хăнасемшĕн пулсан та пĕлĕвĕ хăйсенех юлĕ, малашне кирлĕ пулĕ, хăйсене усă парĕ.

Малалла – класс тулашĕнчи мероприяти. Унта 9-мĕш класра вĕренекенсем хутшăнаççĕ. Чăваш поэзин классикĕ К.В. Иванов çурални 110 çул çитнине паллă тума хатĕрленсе ачасем «Тĕрĕслĕхпе ирĕклĕх йыхравçи» темăпа уçă мероприяти ирттерчĕç. Çакăнтах ашшĕ-амăшĕ.

Ачасем наци тумĕпе. Кун çинчен кăштах асăнса хăвармалла. Ку ялта 12 çул Улендеевсем пурăннă. Борис Александрович вырăнти хуçалăха ертсе пынă, Федосия Тимофеевна шкул директорĕ пулнă. Çак пуçарулла çынсем тăрăшнипе ялта виçĕ пултарулăх ушкăнĕ ĕçленĕ (пурĕ 78 çын). Пурин валли те сцена çине тухма тум çĕлеттернĕ. Вĕсемпе паян та усă кураççĕ-ха.

Ю.В. Еграшкина чи малтан «Канаш» хаçата тытса унăн юлашки номерĕпе паллаштарчĕ. Пĕрремĕш страницăра Мелекесс район администраци пуçлăхĕн

В.И. Чигаковăн сăнӳкерчĕкĕ. Вĕрентӳçĕ ачасене çак статьян шухăшĕпе паллаштарчĕ. Уйрăмах заголовокне тимлĕн вулама сĕнчĕ. Унта «Историе, йăла-йĕркесене пĕлмесĕр чăваш хăй камне хаклаймĕ» тесе çырнă. Мероприятие аслă ăрури çынсене чĕнни вара тĕлĕнтерчĕ. О.В. Эврюкова, А.П. Гурьянова, З.П. Чернова (юлашки иккĕшĕ пĕртăвансем) тăван чĕлхепе калаçса ӳснĕ, ăна шкулта вĕреннĕ. Çавăнпа та асанне-кукамай пулнă пулин те чăваш çыравçисен произведенисене пĕлеççĕ. Ольга Васильевна «Нарспи» поэмăран пĕр пысăк сыпăк вуласа пачĕ. Тĕрĕссипе, ку кĕтмен çĕртен пулчĕ. Çур ĕмĕр ытла иртсен те манмастăн иккен çамрăкла вĕреннине. Ку ачасемшĕн ырă тĕслĕх.

Ачасем «Нарспи» сыпăкĕсене икĕ чĕлхепе пăхмасăр каларĕç, унăн авторĕн кун-çулĕпе паллаштарчĕç. Турикассисен тепĕр пуçарăвне вара ырламалла çеç: вĕсем районта К.В. Иванов 110 çул тултарнине халалласа пысăк уяв ирттересшĕн. Питĕ лайăх шухăш. Увăн виççĕмĕш пайĕ - концерт. Ачасем тăван чĕлхепе юрларĕç те, сăвă та каларĕç, ташларĕç. Асăннă аслă ăрури хĕрарăмсем те хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Баянпа Е.П. Эврюков каларĕ. О.В. Сарбахтина вара хăй Чĕмпĕр чăваш шкулне пĕрремĕш хут кайса кĕнине тĕплĕн каласа пачĕ. Ачасем (вĕсем кăна та мар) сывламасăр тенĕ пек итлесе ларчĕç.

Ман шутпа, пĕрлехи мероприятие ачасем нумай вăхăт хушши асра тытĕç. Вĕсемшĕн ку чăн-чăн уяв пулчĕ: пултарулăхне кăтартрĕç, тăван чĕлхе çинчен ырă каланине çитĕннисенчен илтрĕç.

**Тутиел**

Кăнтăрлахи апат хыççăн çак яла куçрăмăр. Вырăсла вăл – Филипповка. Яла 1596 çулта Хĕлип ятлă чăваш

хресченĕ никĕсленĕ теççĕ. Каярах вара кунта тутарсем куçса килнĕ. Халĕ 300 килĕре 837 çын пурăнать: 596 тутар, 241 чăваш. Шкул 1901 çулта уçăлнă. Пĕрремĕш учитель – Евдокия Андреевна (хушаматне астумаççĕ). 1970 çултанпа кунта вăтам пĕлӳ параççĕ. Шкулта 116 ача, вĕсенчен 40-шĕ чăваш (32 %). 16 учительтен виççĕшĕ чăваш.

Тăван чĕлхене вĕрентес ыйту кунта йывăрпа тытăннă. Ашшĕ-амăшĕ хирĕç пулнă. Çапах та «пăр тапраннă». Кăçал тăххăрмĕш çул тăван чĕлхене вĕрентеççĕ ĕнтĕ. Вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче 9-мĕш класс унпа пĕрремĕш хут экзамен парать. Çакна та палăртса хăвармалла. Тăван чĕлхене вĕренме уйăрнă пĕтĕмĕшле сехетсем çумне район администрацийĕ тепĕр сехет хушса пама май тупнă. Учительсем çапла каларĕç: виççĕмĕш класра вĕренекенсем аслăраххисенчен чăвашла авантарах вулаççĕ. Сăлтавĕ шăпах хушса панă сехетре иккен. Виççĕмĕшсем пĕрремĕш çултанах çак программăпа пыраççĕ.

Чăваш чĕлхи урокне 2-мĕш класра Л.И. Куликова илсе пычĕ. Парта хушшинче 5 ача (ку вăхăтра тутарсем хăйсен чĕлхине вĕренеççĕ). Тема – «Пирĕн çемье». Вĕрентӳçĕ ачасемпе тĕлĕнмелле çепĕç сасăпа калаçать. Лешсем ыйтăва хуравласшăн аллисене çĕклесе çеç лараççĕ. Задани – анне çинчен темиçе предложени çырмалла. Ачасем пуçĕсене пĕксе ĕçе тытăнаççĕ. Учитель вара артиста çаврăнать: аллине пукане тытать те партăсем хушшипе утса çӳрет. Хăй хуллен кăна калаçать. «Ачасем, сирĕн патăра паян Улине хăнана килнĕ, вăл эсир мĕнле çырнине курасшăн. Тирпейлĕ çырăр, йăнăшсем ан тăвăр». Улине кашни ача патне пырса вăл мĕнле çырнине «сăнать». Лешсем тата тăрăшарах параççĕ. Çапла вăйă евĕрлĕрех

иртрĕ урок. Хальлĕхе ачасене икĕ чĕлхепе ăнлантарма тивет: чăвашла тата вырăсла. Мĕншĕн тесен лешсем, çемйисенче тăван чĕлхепе калаçманскерсем, тӳрех веçех ăнланмаççĕ-ха.

Каярах 1-9-мĕш классем «Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе» ятлă класс тулашĕнчи мероприяти ирттерчĕç. Ăна ертсе пыракан Г.Д. Беспалова учитель тĕлĕнмелле сăмахсем каларĕ: «Чăваш чĕлхи – яланах уяв. Вăл вăрман пек пуян, хир пек уçăмлă». Ачасем çакна тӳрре кăларма тăрăшрĕç, хăйсем те савăнчĕç, куракансене те савăнтарчĕç. Баян калакансем те хăйсемех: Олеся Татаркинапа Настя Четкасова. Облаçри чăваш авторĕн – В. Тараватăн юррине те шăрантарчĕç («Аххаяссăм»). 1-мĕш класра çӳрекен Иринапа Таня Татаркинасем «Юратнă анне» юрă юрланине пурте хыттăн алă çупса йышăнчĕç. Лешсен куçĕсенче мĕн чухлĕ савăнăç! Пичĕсем кулăпа çиçеççĕ. Ман шутпа, наци туйăмлăхĕ çак вăхăтра ларса юлать чунра.

Çакна палăртма та кăмăллă. Кунта кадрсем хатĕрлессине тимлĕх уйăраççĕ. Г.Д. Беспалован хĕрĕ Елена тата Оксана Эврюкова Ульяновск патшалăх университечĕн наци уйрăмĕнче пĕлӳ пухаççĕ. Кăшт вăхăт иртсен вĕсем тăван яла специалистсем пулса таврăнĕç.

Ĕç кунĕ вĕçленсен пирĕн культура программи малалла тăсăлчĕ. Димитровградра пурăнакан И.Н. Иванюкова («Чăваш шăпчăкĕ-98» конкурсăн лауреачĕ) хăйĕн пуçарăвĕпе ăшă тĕлпулу йĕркелерĕ. Ун хваттерĕнче эпир вăл ертсе пыракан «Савăнăç» ушкăн артисткисемпе çывăх паллашрăмăр, калаçрăмăр. Вĕсем пире тĕрлĕ юрăсемпе савăнтарчĕç. Çакăншăн Ирина Николаевнана чĕререн тав тăватпăр.

## ВИҪҪЁМЁШ КУН

**Ҫӗнӗ Майна**

Паян эпир Ҫӗнӗ Майна рабочи поселокӗпе паллашатпӑр. Вӑл 1770-1780 ҫулсенче никӗсленнӗ. Эврел юхан шывӗн сулахай енче яланах чӑвашсем пурӑннӑ. Халӗ кунта 6700 ҫын пурӑнать, вӗсенчен 30 проценчӗ - чӑваш. Ирхине 1-мӗш шкула пырса кӗтӗмӗр. Йӑлана кӗнӗ тӑрӑх, ҫӑкӑр-тӑварпа тата куннехинче 4 чӗлхепе саламласа кӗтсе илчӗҫ (кунта мӑкшӑ-ирҫесем те пур).

Самар область патшалӑх архивӗнчен. 1852 ҫулта Ҫӗнӗ Майнӑра земствӑпа обществӑлла училище уҫӑлать, унта 95 ача вӗренет. 1917 ҫулта ун никӗсӗ ҫинче пуҫламӑш шкул ӗҫлеме тытӑнать. 1965 ҫултанпа кунта вӑтам пӗлӳ параҫҫӗ. 5 ҫул каялла поселокра ҫӗнӗ шкул тӑваҫҫӗ. Ҫавӑнтанпа ку вӗренӳ заведенийӗ 1-мӗш шкул шутланать. Вӗренекенсен шучӗ, наци енчен илсен, ҫапларах: 177 вырӑс, 100 чӑваш, 17 тутар, 18 мӑкшӑ-ирҫе. Тата 4 ача – урӑх нацисем. 30 учительтен ҫиччӗшӗ чӑваш.

З.В. Ерофеева ҫинчен те ырӑ сӑмах каламалла. Зоя Васильевна чӑваш историйӗ, культури пирки район хаҫатне материалсем ҫырса тӑрать, вӗсене пропагандӑлать.

Унтан ял историйӗн музейне куҫрӑмӑр. Кунта пире 9-мӗш классем поселокри халӑхсен наци уйрӑмлӑхӗсемпе тата йӑли-йӗркипе паллаштарчӗҫ. Чӑваш туйӗ пирки Культура ҫурчӗн директорӗ Г.И. Осипова тӗплӗн каласа пачӗ, хӗр вӑрлани ҫинче чарӑнса тӑчӗ. Ку хутлӑхри тӗне кӗмен чӑвашсем вилнӗ ҫынна пытарни ҫинчен каланине те итлеме кӑсӑк пулчӗ. Юлашки хут ҫак йӑла-йӗркепе Труженик ятлӑ

ялта 1989 çулта пытарнă иккен.

Музей заведующийĕ А.А. Кохно (тивĕçлĕ канури вĕрентӳçĕ, нумай çул директорта ĕçленĕскер) экспонатсемпе паллаштарчĕ. Вĕсене, куна палăртма кăмăллă, пурне те тенĕ пекех чăвашсенчен илнĕ. Ытти халăхсен авалхи тумтирĕсемпе ĕç хатĕрĕсемпе сыхланса юлманпа пĕрех.

1931 çулччен кунта вырăссемпе чăвашсем пĕр-пĕрне качча илмен, пĕрлешмен. Çак çул вара Якку Тимирзин вырăс хĕрне вăрласа каять – хутăш çемье пулса тăрать. Вăрçă хыççăн кун пек тĕслĕхсем нумайланаççĕ.

Кăнтăр хыççăн пире 2-мĕш шкулта кĕтсе илчĕç. Каларăмăр ĕнтĕ, ăна 1995 çулта хута янă. Вăл микрорайонта вырнаçнă. Пурĕ кунта 829 ача. Вĕсенчен 493 вырăс, 189 чăваш, 79 тутар, 35 мăкшă-ирçе. Тата 17-шĕ ытти нацисене кĕреççĕ. 61 учительтен вуннăшĕ чăваш.

Ку шкулта «Атăлçи халăхĕсен культури» факультатив ĕçлет. Библиотекăри чăвашла кĕнекесен шучĕ – 50. Шкул директорĕ Г.Е. Ичетовкина ачасене пĕчĕккĕллех тăван чĕлхепе вĕрентес, халăх йăли-йĕркисене сыхласа хăварас шухăшпа килĕшет. Малашне çак ыйтусене тимлĕх нумайрах уйăрма шантарать. Çав вăхăтрах йывăрлăхсене асăнса хăварать: вĕрентӳçĕсем çук, кĕнекесем çитмеççĕ... Чи кирли кунта - ĕçе пуçăнни, умри йывăрлăхсенчен хăраманни. Ĕçе пуçарса ярсан хуллен пурте йĕркеленет.

Поселок администрацин пуçлăхĕ те – В.В. Вараксин çав шухăшлă: тăван культура ачасене тĕрĕс воспитани пама пулăшать. Ку ахальтен мар. Поселок криминал енчен илсен районта «малта» пырать. Виçĕ пысăк предприяти (кавир фабрики, чăх-чĕп фабрики тата ялхуçалăх предприятийĕ), тĕрлĕ çĕртен килнĕ çынсем,

нумай çамрăк - лару-тăрăва йĕркеллĕ те лăпкă теме май çук. Апла пултăр тесен нумай ĕçлемелле-ха. Чи малтан – çамрăк ăрупа. Унсăрăн ачасем наркотик танатине çакланĕç, ырă мар шухăшлă çынсемпе çыхланĕç, преступлени çулĕ çине тăрĕç. Кун пек тĕслĕхсем поселокра çителĕклĕ.

Тен, çавăнпа та пулĕ кунта ача-пăча ӳнер (искусство) шкулĕ уçнă. Унта ачасем тепĕр шкултан çӳреççĕ. Вĕсемпе калаçса пăхрăмăр. 7 çулхисем те, 14 çулхисем те питĕ кăмăллă унпа. Пурĕ 5 уйрăм: изостуди, хореографи, хор, баян, фортепьяно.

Çак кун эпир шăпах ӳнер шкулĕнче вĕренекенсен концертне лекрĕмĕр. Ачасем Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Тӳрех сисĕнет: ачасемпе лайăх специалистсем ĕçлеççĕ. Пултарулăх шайĕ çӳллĕ. Çакна ачасем ташланинчен те чухлама пулать: вĕсем хăйсене сцена çинче мăнаçлăн, тивĕçлĕ тытаççĕ. Кунта каллех район администраци çинчен сăмах хускатмасăр иртме çук. Ӳнер шкулĕ вăл пулăшнипе тытăнса тăрать. Ашшĕ-амăшсем те, ачасем те уншăн савăнаççĕ.

Район пуçлăхĕ В.И.Чигаков виçĕ кунхи çӳреве пĕтĕмлетнĕ ларăва хутшăнма та вăхăт тупрĕ, пире пăшăрхантаракан ыйтупа çине тăрсах ĕçлеме шантарчĕ. Кашни пуçлăх Владимир Ильич пек тăрăшсан, паллах, ĕç хăвăртрах кайĕ.

Çакăнпа пирĕн комиссийĕн ĕçĕ вĕçленчĕ теме юрать. Çĕнĕ ялсемпе, шкулсемпе паллашрăмăр, нумай çынпа курса калаçрăмăр. Кăштах пĕтĕмлетӳсем те тума май пур.

Пĕрремĕшĕ – çав вăхăтрах чи пахи – чăваш чĕлхи, культури асар-писер саманан идеологи тусанĕ айĕнчен тухма тытăнни палăрать, унăн ĕлки, сăн-сăпачĕ курăнма пуçланать. Вырăнти чăвашсем культура, йăла-йĕрке

çăлкуçĕсем патне таврăнма пуçлаççĕ. Хăш-пĕр çĕрте чăн-чăн энтузиастсем пур. Çакă лайăх. Çав вăхăтрах çитменлĕхсене уççăн куртăмăр. Кашни çĕртех чăваш чĕлхине вĕрентекен ятарлă специалистсем çук. Чĕлхене ытларах ытти предметсене вĕрентекенсем вĕрентеççĕ (чăнах та, ятарлă курссем пĕтернĕ-ха вĕсем). Чăннипех те çӳллĕ шайра ĕçлеме вара чĕлхеçĕсем, культурологсем кирлĕ. Çакна тимлĕх уйăрмалла, шкултан вĕренсе тухакансемпе калаçусем ирттермелле, специалистсем хатĕрлемелле. Кĕнекесем çитменни – пуçа ыраттаракан тепĕр ыйту. Çапах та уçăмлăх пур. Область администраци пуçлăхĕ Ю.Ф. Горячев малашне Ульяновскра учебниксем пичетлесе кăларма йышăну кăларнă. Çакă йывăрлăхсене самай çăмăллатĕ.

Кăçалхи вĕрентӳ çулĕнче облаçри 117 шкулта чăваш чĕлхине тĕрлĕ майпа вĕренеççĕ (пĕлтĕр – 78). Çакă та вĕрентӳ управленийĕн (пуçлăхĕ А.В. Букин) наци ыйтăвĕсене татса парас ĕçĕнчи тăрăшулăхне кăтартать.

Мĕнле пулсан та çак ĕçре чарăнма юрамасть. Белинский каланине аса илер-ха: «Пĕр вырăнта тăма май çук. Кам малалла каймасть, çавă хыçала юлать». Апла пулсан нумайăшĕ хамăртан килет. Тăван чĕлхе, культура çине ларнă тусан сийне хăвăртрах тасатасчĕ, çăлкуççем патне таврăнасчĕ. Мĕншĕн тесен чăваш çыннишĕн чăваш чĕлхи – яланах уяв.

Мелекесс районĕ.

“Канаш”, 11, 12, 13 №№, 2000 ç.

# Сăмах ирĕклĕхĕн хуралĕнче

- Журналистсем – сăмах ирĕклĕхне халăх патне çитерекенсем, вĕсене «хуçма» питĕ йывăр. Политиксене «хуçма» чылай çăмăлтарах. Ирĕклĕх çукки хака ларать, ирĕклĕхсĕр çын хăйне тивĕçлипе хаклаймасть. Журналистсем цензурăна хирĕç кĕрешеççĕ, çавăнпа эпĕ вĕсен умĕнче пуçа таятăп, - терĕ Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров Шупашкар çывăхĕнчи «Волжанка» канупа туризм комплексĕнче иртнĕ Журналистсен союзĕн 15-мĕш съездĕнче.

Чăваш журналисчĕсен съездне тĕрлĕ регионсенчен килнĕ хăнасем хутшăнчĕç: Марий Эл, Тутурстан, Пушкăртстан, Чĕмпĕр...

Н.Федоров вара шухăшне тăсса çапла каларĕ:

- Демократиллĕ çĕршывра пурăнатпăр пулин те хальлĕхе пирĕн цензура пур-ха. Çакă пăшăрхантарать. Кивĕ йĕркене таврăнас хăрушлăх палăрма тытăнчĕ. Мускаври хăш-пĕр пуçлăхсем Конституцие улăштармасăрах патшалăх тытăмне улăштарма пикĕнеççĕ. Çакна хирĕç çирĕп тăмалла, кун валли вара чăн-чăн профессионалсем кирлĕ. Хальлĕхе вара журналистсен ĕçĕн шайĕ чакрĕ тесен те юрать. Принципсăр хаçатсем йышланчĕç. Çынсен 53 проценчĕ хаçатсен ĕçĕпе кăмăлсăр, 16 проценчĕ вара вĕсене шанмасть. Радиопа кăмăлсăррисем – 55 процент, телевиденипе – 5. Тĕрĕссине çырасси – гражданлă тивĕç.

Çак шухăша Раççей Журналистсен союзĕн ертӳçи И.Яковенко тăсрĕ:

- Пирĕн 150 пинлĕ йыш сапаланса каймарĕ, çакă пирĕн вăя кăтартать. Çапах та çăмăл мар журналистсене. Хĕсĕрлени ӳссе пырать, массăллă информаци хатĕрĕсене патшалăх «çăварлăхласшăн» хăтланать. «Медиа-Моста» хĕстерни – ăна кăтартуллăн пĕтерес тени. Калашников автомачĕн «цензури» вара пĕлтĕр профессионаллă тивĕçĕсене тунă вăхăтра 18 журналистăн пурнăçне татрĕ. Пире чиновниксем йăпăлтатма вĕрентеççĕ.

Мĕнле пулсан та пирĕн парăнмалла мар. Çапла тусан çеç пире çынсем шанма пуçлаççĕ.

Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн ертӳçи В. Комиссаров хальхи лару-тăру çинче чарăнса тăчĕ. Ăна хаçатпа вулакан хушшинчи çыхăну вăйсăрланни пăшăрхантарать. Пресса патшалăхпа халăх хушшинчи чĕрĕ нерв пулмалла. Обществăри сийсен хирĕçтăрăвĕ – йĕркеллĕ пулăм. Критикăна тивĕçлипе йышăнмалла, кирлĕ пĕтĕмлетӳсем тума тăрăшмалла. Журналистсем маччаран илнĕ фактсемпе усă курмалла мар, ун пек хăтланни сиен кӳрет.

Ытти çивĕч ыйтусем те хускатрĕç тухса калаçакансем. Тĕрлĕ шайри пуçлăхсем журналистсене вырăна хурсах каймаççĕ, вĕсен ыйтăвĕсене хуравсăр хăвараççĕ. Ку вара халăхпа калаçа пĕлменни, унпа пĕр чĕлхе тупайманнине пĕлтерет. Ун пек пуçлăхсем пирки Н.Федоров Президент çапла каларĕ: «Халăхпа калаçа пĕлни – пуçлăх пуканне йышăннă чухне çине тăрса ыйтмалли виçе. Çакă пулмасан – ĕçрен кăлармалла. Эпĕ халăхпа калаçа пĕлмесен – мана та кăларăр. Ют вырăнта ларни усăсăр». Реклама ĕçĕ çине пусăм тумалла. Ку укçа ĕçлесе илмелли лайăх меслет.

«Калем фронтĕнче» нумай çул чыслă ĕçленĕшĕн темиçе çынна хисеплĕ ятсем, грамотăсем пачĕç. Н. Федоров вара И. Яковенко аллинчен «Раççей сăмахлăхĕшĕн çунакана» медаль илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ăна вырăс поэчĕн А. Пушкинăн 200 çулхи юбилейĕ ячĕпе кăларнă.

- Чăваш Енре влаçпа пресса хушшинчи çыхăну чиперех. Çакăн пек Президентпа, Н. Федоровпа, ĕçлетĕр те – сире ăмсанма пулать, - тере Мускавран килнĕ хăна Чăваш Республикин Президенчĕн кăкăрĕ çине медаль çакса ярса.

Шупашкар хули.

“Канаш”, 8 №, 2001 ç.

# Тăван чĕлхене хам тĕллĕн вĕрентĕм

Паллă ĕнтĕ, культурăна, чĕлхене халăх хушшинче сарас тесен вырăнта нумай ĕçлемелле. Ун пек тума вара хăй ĕçне лайăх пĕлекен, ăна чунтан юратакан çынсем кирлĕ. Сăмах май, эпир тĕрлĕ ялти активистсене лайăх пĕлетпĕр, паллатпăр. Çулсерен йышланса пыраççĕ вĕсем.

Паян сире юлашки вăхăтра çавсен ретне тăнă çынпа паллаштарасшăн. Темиçе çул каялла пирĕн пата Андриян Григорьев сăвăсем ярса панăччĕ. Хăшĕ-пĕри пичете те кайрĕ. Çыхăнăва татмарĕ вăл, çырсах тăчĕ.

Пĕррехинче вара хăйпе паллашма та тӳрĕ килчĕ. Пире, журналистсене, Çĕнĕ Малăклана чĕнчĕç. Унта Ваççа Аниççи поэтесса вилни 25 çул çитнине асăнса литература каçĕ ирттерчĕç. Йĕркелекенĕ шăпах А.Григорьев пулнă иккен. Андриян Александрович пире кăмăллăн кĕтсе илчĕ. Эпир ăна тӳрех ăнлантăмăр: кун пек мероприяти ирттерме хуть ăçта та çăмăлах мар-ха. Кунта вара, чăваш чĕлхине кăкланă вырăнта, пушшех те йывăр. Йăлтах çĕнĕрен, ним çукран пуçламалла. Çапах та хăраса ӳкмен вăл, çĕнĕ ĕçе пуçăннă. Профессипе вăл учитель те, культура ĕçченĕ те, литературовед та мар – тухтăр.

Паллашар-ха, эппин, унпа. А.А. Григорьев-Ирхи (çапла псевдоним илнĕ вăл) Тутарстан Республикине кĕрекен Нурлат (Октябрь) районĕнчи Хуралту ялĕнче 1963 çулта çуралнă. Хусан медицина институтне пĕтернĕ хыççăн ăна направленипе Чĕмпĕр тăрăхĕнчи Çĕнĕ Малăкла поселокне яраççĕ. Çамрăк специалист район пульницинче психоневролог пулса ĕçleme тытăнать. Халĕ те çав вырăнтах.

Литература туртăмĕ вара – çутçанталăкран. Чун кӳтнĕ вăхăтра çырнă сăввисене пухса сборник кăларма та пултарчĕ ĕнтĕ çамрăк автор. «Ступени» ятлă вăл. Хальлĕхе вырăсла-ха. Сăввисене юрра хывать, вĕсене гитара каласа юрлать.

- Чăвашла вĕрентмен пире шкулта. Калаçу чĕлхине кăна унтан-кунтан пĕлкелеттĕм. Кунта килсен вара тăван чĕлхене хам тĕллĕн çине тăрсах вĕренме пуçăнтăм. Хуллен чăвашла сăвăсем тухма тытăнчĕç. Ваçça Аниççи Çĕнĕ Малăклара пурăннине пĕлтĕм. Вилтăпри те çакăнтах иккен. Вара ăна чысласа çак каçа ирттерес шухăш çуралчĕ. Пуçлăхсемпе, специалистсемпе нумай калаçма тиврĕ. Поэтессăн тăхăмĕсене пиллĕкмĕш сыпăк таран тупрăмăр, йыхăртăмăр. Вырăнти хаçатра Ваçça Аниççи çинчен материал çырса кăлартăм, – каласа парать Андриян Александрович.

Вăт çапла. Куç хăрать те – ал тăвать.Кăмăл, чун ăнтăлăвĕ çеç пултăр. Ку вара унăн çук мар. Ача чухне тăван чĕлхерен уйăрнăшăн вăл пысăкрах вăйпа ĕçлеме хатĕр. Вăй-хăвачĕ ан иксĕлтĕрччĕ.

Çĕнĕ Малăкла поселокĕ.

“Канаш”, 13 №, 2001 ç.

# Чечня вăрçин геройне асăнса

Нарăс уйăхĕн 9-10-мĕшĕсенче Çĕнĕ Йĕлмелĕнче Чечня çĕрĕ çинче паттăрăн пуçне хунă А. Шуркина асăнса ирттернĕ ирĕклĕ кĕрешӳ турнирне Ульяновск облаçĕнчен темиçе команда кайрĕ. Унта Аслă Нагаткин, Орловка, Ирçел, Каша, Чăнлă поселокĕ (пурте Чăнлă районĕ) тата Теччĕ, Елшанка (Ульяновск районĕ) кĕрешӳçисем хутшăнчĕç.

Александр Шуркин Çĕнĕ Йĕлмелĕнче 1978 çулта çуралнă. Теччĕри совхоз-техникумран вĕренсе тухса техник-механик специальноçне алла илнĕ. Салтак шăпи ăна Чечня вăрçин çулăмĕ ăшне илсе çитернĕ. Саша 1999 çулхи раштавăн 17-мĕшĕнче разведка ротипе пĕрле хăрушă задание кайнă. Командирĕ вилсен ун тивĕçĕсене хăй çине илнĕ. Анчах ун пурнăçне те снайпер пульли тататъ. А. Шуркина «Паттăрлăхшăн» орден параççĕ.

Пĕлтĕр çак ăмăртăва район шайĕнче ирттернĕ пулсан кăçал Атăлçи тăрăхĕ шайĕнче теме пулать. Пурĕ кунта 12 команда (160 ытла спортсмен) хутшăнчĕ. Çав шутра Тутарстан тата Чăваш Республикисенчен килнисем те. Раççей чемпионĕ ятне илнĕ ачасем те пурччĕ унта.

Командăсен хушшинче Теччĕ (Тутарстан Республики, тренерĕ П. Карсаков) çĕнтерчĕ. Иккĕмĕш вырăна пирĕн облаçри Теччĕ кĕрешӳçисем (тренерĕ С. Клочков) йышăнчĕç. Кавир хуçисем виççĕмĕшне тухрĕç (тренерĕ Д. Ефимов). Çакă та интереслĕ. Кĕрешӳçĕсен хушшинче виçĕ хĕр ăмăртрĕ. Пĕри – пирĕн облаçри Теччĕрен пынă Екатерина Вьюнова – хăйĕн виçĕ категоринче иккĕмĕш вырăна тухрĕ.

Турнир программине тин çеç хĕсметрен таврăннă десантниксен (С. Патшеев, В. Патшеев, С. Афиногентов, А. Карсаков) кăтартуллă çапăçăвĕсем, музыка вĕрентӳçи

Н.Мулеев ертсе пыракан «Йĕлме» фольклор ушкăнĕн тата ачасен юрри-ташши илемлетрĕç.

Спортсменсем тата куракансем вăрçă хирĕнче пуçне хунă паттăрсене пуç тайса ял варринчи Мухтав обелискĕ умне хыр турачĕсенчен явнă пысăк кăшăл хучĕç, автоматпа виçĕ хутчен персе чыс турĕç.

Тутарстан Республики,
Çĕпрел районĕ.

“Канаш”, 9 №, 2002 ç.

## Раççей шăпи – вĕрентӳçĕ аллинче

Çакăн пек ятпа Николаевкăра учительсен августри канашлăвĕ иртрĕ. Унта облаçри кăнтăр районĕсенчен вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕсем, шкул директорĕсем, методика пĕрлешĕвĕсен ертӳçисем пухăннăччĕ. Çаплах облаçри вĕрентӳ управленийĕн пуçлăхĕ В.Н. Миронов, çакăнти тĕп специалист Ф.Т. Улендеева, вĕрентӳçĕсен пĕлĕвне ӳстерекен институтри управлени кафедрин доценчĕ В.В. Елисеев, наци кабинечĕн методисчĕ В.А. Архипова тата ыттисем килсе çитнĕччĕ.

Николаевка районĕ çинчен пĕр-икĕ сăмах. Кунта 33 пин ытла çын пурăнать: вырăссем 43 процент, ирçе-мăкшă – 31, тутарсем – 23, чăвашсем – 3.

Паянхи тĕп тĕллев – вĕрентӳçĕ ятне-сумне ӳстересси. Юлашки вăхăтра вăл, шел, самана улшăннине кура чакнăччĕ. Çавна пула пĕр ăру çухалчĕ теме пулать, вĕсем урăхла лару-тăрура çитĕнчĕç. Чăнах та, юлашки вăхăтра вĕрентӳ системи юхăнма чарăннă. Çакă шанчăк паракан пулăм. Малалла – тăвалла хăпармалла, лайăххи патне таврăнмалла. Вĕрентӳ пахалăхĕ çине те урăхла пăхмалла, дневникри паллăсене çеç шута илмелле мар. Çакăнтах ачан сывлăхне, воспитанине, хăй тĕллĕн ĕçлеме пултарнине, çемьери тата обществăри çыхăнăвĕсене кĕртмелле. Ачан пултарулăхне шута илмелле, унпа май пур таран нумайрах усă курмалла.

Облаçра 676 кăнтăрлахи шкул. Пурте йĕркеллĕ тесе калама çук-ха кунта. 18 шкул ишĕлсе анас пек ларать. Çак сăлтава пула иккĕшне хупнă ĕнтĕ. Ачасене шкула илсе çитересси те – çивĕч ыйту. Кĕпĕрнаттăр сакăр автобус панă-ха. Çак ыйтăва хупас тесен тата 61 автобус кирлĕ. Сĕтел-пукан юсас ĕçе çуллахи каникул вăхăтĕнче 15 пин ачана явăçтарнă. Кунта икĕ енлĕ

усă: сĕтел-пукан та тĕрĕс-тĕкел, ачасем те ĕçлеме хăнăхаççĕ.

1290 спорт сооруженине, 501 спортзала, 8 бассейна тытса тăма, йĕркене кĕртме чылай вăй хумалла. Вĕсемпе ачасен сывлăхне çирĕплетес ĕçре туллин усă курмалла. Компьютерпа тивĕçтересси те тивĕçлĕ шайра мар-ха. Шкул çулне çитеймен ачасен учрежденийĕсен шучĕ кăçал 4 процент чакнă. Çакă шухăшлаттарать. Ачасен сывлăхне сиплекен садикре чирсен 30 процентне чакарма пулать. Çакăн пек садиксем ытларах кирлĕ.

Ачасене тĕрлĕ юхăма явăçтарасси çине тимлĕрех пăхмалла. Хальлĕхе унта 50 пин ача çеç хутшăнать – 57 процент. Ыттисене урам воспитани парать. Ку йĕркеллĕ пулăм мар.

Вĕрентӳçĕсен пĕлĕвне ӳстерекен институтран нумай пулăшу кĕтетпĕр, унти специалистсем хăйсен ĕçĕсене тивĕçлипе тăваççĕ-ха. Анчах патшалăхран пулăшу ытларах кирлĕ. Шел пулин те юлашки ултă çулта ку заведение укçа хывман.

Тĕпчев çакна кăтартса парать: пуçламăш классенче ачасене вĕрентес ĕçре нумай çухататпăр. Кайран вара ниепле те хуса çитме çук. Тепĕр енчен ачасене çакна ăнлантармалла: шкул – пурнăç ĕнтĕ, вĕренӳ çеç мар. Шкултан хăй тĕллĕн пурăнма хатĕр çын тухмалла.

Лайăххи те çук мар. Çулталăкра 14 олимпиада ирттернĕ, унта 358 ача хутшăннă. Пĕтĕм Раççейри олимпиадăсенче те пирĕн область ачисем çичĕ диплом илме пултарнă. Çаплах 300 пултаруллă ача тĕнчери халăхсен хушшинчи форумсене хутшăннă. Çак ачасем валли малашне аталанма услови туса памалла. Вĕсем - пирĕн элита. Çав вăхăтрах палăртмалла: аслă вĕрентӳ заведенийĕсенче олимпиадăсем ирттермеççĕ. Шел...

Вĕрентӳ пахалăхне ӳстерес тесен чи малтан вĕрентӳçĕ пахалăхне ӳстермелле. Вĕрентӳçĕ – вĕçĕмсĕр вĕренекен.

Пĕрлехи лару хыççăн пухăннисем секцисенче ĕçлерĕç. Эпир наци чĕлхисен секцине кайрăмăр.

Кунта çакна пĕлме интереслĕ пулчĕ: тăван чĕлхене лайăх пĕлни вырăс чĕлхине лайăхрах алла илме пулăшать, мĕншĕн тесен ачасем чĕлхесене танлаштарса пăхса вĕренеççĕ. Тĕслĕх: Кăлаткăпуç район ачисем (кунта 96 процент тутар) Хусанта тутар чĕлхи олимпиадинче çĕнтернĕ, облаçри вырăс чĕлхи олимпиадинче те малта пыраççĕ. Чăнлă районĕ вырăс чĕлхине пĕлессипе 3-4-мĕш вырăн йышăнать, çав вăхăтрах кунта пурăнакан ачасем Шупашкарти олимпиадăсенче çĕнтереççĕ. Ачисене тăван чĕлхене вĕрентесшĕн мар чăвашсене (икĕ чĕлхе харăс вĕренсен ачасен пуçĕ тусать имĕш) ку - вăйлă хурав, вĕсем тĕрĕс мар шутланине çирĕплетекен тĕслĕх! Секцире тухса калаçнă Е.В. Васильева вĕрентӳçĕ те (Кăлаткăпуç районĕ, Бахтеевка вăтам шкулĕ) çавăн пирки каларĕ. Вăл Чăваш Кăлатка 12 çул каялла ЧПУри чăваш филологи факультетне пĕтерсен килнĕ. Чăваш ялĕнче халиччен тăван чĕлхе вĕрентмен. Çамрăк специалист çак ĕçе пуçăннă, ачасене интереслентерме пултарнă (малтан кунта та ашшĕ-амăшĕ хытă хирĕç тăнă). Халĕ ачасем «Канаш» хаçатпа çыхăну тытаççĕ, конкурссемпе викторинăсенче çĕнтереççĕ. Аслă вĕренӳ заведенийĕсене тĕрлĕ факультета вĕренме кĕреççĕ. Кăçал Чăваш Кăлаткă хĕрĕ С. Васильева Ульяновск педагогика университечĕн чăваш уйрăмне пĕтерсе тăван ялне таврăнчĕ. Апла пулсан ырă ĕç малалла тăсăлас шанчăк пур.

“Канаш”, 36 №, 2002 ç.

# Сан ăшă кăмăлу туссен чунне тиверттĕр-и?

Порфирий Афанасьев поэт – чăваш тĕнчинче паллă ят. Çарăмсан районĕнчи (Тутарстан) Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралса ÿснĕскер хăйĕн пултарулăхне кура тăван литературăра тивĕçлĕ вырăн йышăннă. Чăваш халăх поэчĕ, Чăваш Республикин патшалăх премийĕн тата Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ... Çапла хакланă Порфирий Васильевичăн пархатарлă ĕçне тăван халăх.

Кăçал П. Афанасьев 60 çул тултарчĕ. Çавна халалласа Çарăмсанти Культура çуртĕнче юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче уяв иртрĕ. Ентешне саламлама районти кашни ялтан тенĕ пек килнĕччĕ. Пурте – парнепе, концерт номерĕсемпе. Инçетрен килнисем те чылайччĕ. Шупашкартан Профессионал çыравçăсен союзĕн ертÿçи Валери Туркай, «Чувашметалл» предприяти пуçлăхĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Н.Григорьев, Хусантан Писательсен союзĕн ертÿçи Ф.Гамиуллин, Тутарстан Патшалăх Канашĕн депутачĕ Ренат Харис поэт (вăл П. Афанасьевпа Хусанти педагогика институтĕнче пĕрле вĕреннĕ) тата «Сувар» хаçат редакторĕ А. Иванов килсе çитнĕ. Тутарстанти ытти хуласенчен килнисем те пурччĕ.

Малтан Порфирий Васильевича Çарăмсан район администраци пуçлăхĕ М. Шакиров саламларĕ, ентешĕпе пĕтĕм район çыннисем мăнаçланнине пĕлтерчĕ. Чĕмпĕрти «Еткер» фонд пуçлăхĕ О. Мустаев вара П. Афанасьева чăваш халăх аталанăвĕн ыйтăвĕсемпе çине тăрса ĕçленĕшĕн тата поэзипе журналистикăри пысăк çитĕнÿсемшĕн И.Я. Яковлев ячĕллĕ преми

панине пĕлтерчĕ, ăна Диплом тата 5 пин тенкĕ укçа тыттарчĕ.

Уяв вĕçĕнче Порфирий Васильевич çапла каларĕ:

- 35 çул каялла эпĕ Шупашкара тухса кайрăм. Ялта начар пулнипе мар, пултарулăхăма ӳстерес килчĕ. Сумлă çыравçăсем хушшинче пурăнса пысăкрах пĕлтерĕшлĕ хайлавсем çырас терĕм. Хама ӳстернĕ Çарăмсан çĕрне тав тăватăп. Çакăнти ырă çынсен ăшши, çăлкуçсем, улăхсем вăй парса тăман пулсан эпĕ ку шая çĕкленес çукчĕ.

П. Афанасьев пултарулăхĕн никĕсĕ çынлăх, чунлăх çинче тăрать. Çак пахалăхсене темле йывăрлăхра та çухатас марччĕ – акă унăн хайлавĕсен тĕп шухăшĕ. Тăван халăх çинчен çырнă йĕркисем вара чунра мăнаçлăх та ăшă туйăм çуратаççĕ:

*Хăш халăх ывăлĕ тесен –*
*Чăвашăн теччĕр-и?*
*Сан ăшă кăмăлу туссен*
*Чунне тиверттĕр-и?*

Поэтăмăрăн вăй-халĕ пур-ха, ĕмĕчĕсем пысăк. Юлашки вăхăтра йывăр çухатусем (мăшăрĕпе ывăлĕ вăхăтсăр çĕре кĕнĕ) тӳснĕ пулин те вăл обществăри пĕр ĕçрен те пăрăнмасть, пуçне усса ларма шутламасть. Пурнăç тупсăмне, телее вăл çапла ăнланать: çын яланах кама-тăр кирлĕ пулмалла. Юратнă геройĕ те унăн – Çеçпĕл Мишши. Çавăн пек пулма тăрăшать пурнăçра, пире те çапла вĕрентет.

Тутарстан,
Çарăмсан ялĕ.

“Канаш”, 46 №, 2002 ç.

# Йăхăмăра упрама ăнтăлар

Шупашкарти Чăваш патшалăх оперăпа балет тетарĕнче авăнăн 26-27-мĕшĕсенче Чăваш наци конгресĕн V Аслă Пухăвĕ иртрĕ. Унта пилĕк çĕршывран тата Раççейĕн 25 регионĕнчен килнĕ 700 ытла делегат хутшăнчĕ.

Президиумра – ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров, ЧР Патшалăх Канашĕн пуçлăхĕ М.А. Михайловский, ЧР Министрсен Кабинечĕн пуçлăхĕ Н.Ю. Партасова, Г.Н. Волков академик, ЧНК президенчĕ Г.Н. Архипов, Патшалăх Думин депутачĕ, Раççейри чăвашсен наципе культура автономи пуçлăхĕ А.Г. Аксаков, Ульяновск область администраци пуçлăхĕн çумĕ В.В. Марусин тата ытти сумлă çынсем.

ЧНК Ваттисен Канашĕн ертӳçи А.И. Кипеч, Н.Е. Наумов элмен тата СССР Халăх артистки В.К. Кузьмина пухăва пуçтарăннисене пил сăмахĕсем каларĕç.

Аслă Пухура ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров сăмах илчĕ. Сцена çинчен ăна халăх тăвăллăн аллă çупса ăсатрĕ. Малалла М.А. Михайловский калаçрĕ. Саламласа килнĕ телеграммăсене Аслă Пухăвăн ертӳçи В.П. Станьял вуласа пачĕ. РФ Патшалăх Думин ертӳçин Г.Н. Селезневăн саламĕпе А.Г. Аксаков паллаштарчĕ.

Ун хыççăн трибуна умне отчетлă докладпа ЧНК президенчĕ Г.Н. Архипов тухрĕ. Ун сăмахĕнче конгресс ĕçĕ-хĕлĕ, малашнехи тĕллевсем палăрчĕç. Чĕмпĕрсене ырă сăмахпа асăнчĕ докладчик. Çитĕнекен ăрăва чăвашлатасси, чăваш чĕлхине вырăс чĕлхипе пĕр тан тăвассии – çакă пĕрремĕш тĕллев пулмалла.

Федерацин Атăлçи округĕн Чăваш Енри инспекторĕ Д.М. Донсков Раççей Президенчĕн представителĕн С.В. Кириенкăн саламне вуларĕ. Интереслĕ шухăш каларĕ вăл: «Раççей пуласлăхĕ Чăваш Енре пуçланать». Вăл кунти лăпкă пурнăçа тата тăрăшуллă çынсене çапла

палăртрĕ. Тепĕр çул Шупашкар Атăлçи культура тĕп хули пулнине те пĕлтерчĕ вăл.

Мускавран килнĕ Г.Н. Волков академик сăмахĕсем вара – ылтăн çӳпçерен. Кашни сăмахĕ – хăйнеевĕрлĕ пил: ачăр-пăчăра усала ан парăр, вĕсем пирĕшти пекех пулччăр, алăк сире çупăрлатăр, алăк урати урăра чуптутăр, килте телей пулмасан – телей пулас çук... Арсене вара çапла чĕнсе каларĕ: «Арăмăрсене Турă ырăнне хурăр, хăвăр патша пулсан та çитĕ». Тăван чĕлхепе калаçма пуçламаллине те пусса палăртрĕ Геннадий Никандрович. Çакă çеç йăхăмăра упраса хăварма май парĕ.

Çав вăхăталла тĕрлĕ регионтан килнĕ делегатсем чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсен – И.Я. Яковлев, К.В. Иванов, Çеçпĕл Мишши – палăкĕсен умне чĕрĕ чечексем хума тухса кайрĕç. Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен наципе культура автономи ертӳçине П.Я. Уфимкина И.Я. Яковлев палăкĕ патне каякан ушкăна кĕртрĕç.

Тулайран пынă делегатсенчен чи малтан чĕмпĕрсене сăмах пачĕç. Делегаци ертӳçи О.Н. Мустаев Чĕмпĕр облаçĕнчи чăвашсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕн те йĕркипе каласа пачĕ. Вăл çаплах саккунсене вăхăтра улăштарса пымаллине, право енчен Европа халăхĕсен шайĕнче пурăнмаллине палăртрĕ.

Кун хыççăн пухăннисене область администраци пуçлăхĕн çумĕ В.В. Марусин саламларĕ.

Чĕмпĕр делегацийĕ ЧНКна Л.П. Нюркина тĕрленĕ И.Я. Яковлев портретне парнелерĕ.

Калаçакансем трибуна çинчен кайсан конгресăн çĕнĕ уставĕ пирки сăмах тапранчĕ. Тавлашусăр, хĕрӳ калаçусăр пулмасть кун пек чух. Çапах та юлашкинчен килĕшӳ патне пырса тухрĕç курăнать.

ЧНК президентне суйласси вара лăпкă иртрĕ. Г.Н. Архипова делегатсем шанаççĕ – тепĕр срока

суйларӗҫ.

Аслӑ Пуху программи вӗҫленсен ӳнер ӑстисен концерчӗ тытӑнчӗ.

Тепӗр кун Пуканесен театрӗнче ҫӗнӗ Мӑн Канашӑн пӗрремӗш ларӑвӗ иртрӗ. Ӗҫе пуҫӑниччен ЧР пичет тата информаци политикин министрӗ Н.И. Володина тулайри массӑллӑ информаци хатӗрӗсен хастар ӗҫченӗсене министерствӑн Хисеп грамотисене пачӗ. Ҫак чыса «Канаш» хаҫатӑн тӗп редакторӗ В.Ф. Ромашкин тата «Еткер» телекӑларӑмӑн редакторӗ О.Н. Мустаев та тивӗҫрӗҫ. ЧР культураӑпа национальноҫсен ӗҫӗсен министрӗ О.Г. Денисова нумаях пулмасть Шупашкарта иртнӗ тулайри чӑваш ҫамрӑкӗсен фестивалӗ ҫинчен каларӗ, чи хастаррисене министерствӑн Тав хучӗсене пачӗ. Ӑна илме О.Н. Мустаев, Ҫинкӗл педколледж директорӗ С.П. Сахарцев, Ульяновск патшалӑх педуниверситечӗн ректорӗ Ю.А. Грушевский тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Наука конференцине хутшӑнса пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ (доклад ҫырса) И.А. Мостякована Мухтав грамоти пачӗҫ. Ҫак ӗҫрех пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑ А.А.Степанова тата С.Д. Кудрявцева ячӗсемпе те Грамота пачӗҫ. Пултарулӑх конкурсӗнче ҫӗнтернӗ Ульяновск патшалӑх педуниверситечӗн чӑваш уйрӑмӗнчи хӗрсен юрӑ ушкӑнӗ тата Ульяновск педколледжӗнчи О.Н. Павлова вара Диплома тивӗҫрӗҫ.

Мӑн Канаш ларӑвӗ хыҫҫӑн гуманитари наукин институтӗнче «Н.Я. Бичурин еткерлӗхӗ тата паянхи ӑсталӑхпа культура аталанӑвӗн ыйтӑвӗсем» ятлӑ ӑслӑлӑх конференцине васкарӗҫ ҫынсем. Кайран делегатсене Шуршӑлти (Сӗнтӗрвӑрри районӗ) Космонавтика музейне илсе кайса кӑтартрӗҫ.

Шупашкар хули.

“Канаш”, 41 №, 2002 ҫ.

# 15 çул — вĕçев йĕркеллĕ

Пушкăрт çĕршывĕ – Раççейри чăвашсем йышлă пурăнакан регион. Паян кунта 118 пин чăваш пурăнать (республикăри халăхăн 3 проценчĕ). Вĕсем 12 районта йышлă сарăлнă. Уйрăмах Авăркас, Пишпӳлек, Пелепей тăрăхĕнче нумай.

Çĕнĕ самана çитсен кунта чăвашла хаçат кăларас пирки хĕрӳ ĕç пуçланать. 1989 çулхи юпа уйăхĕн 19-мĕшĕнче Толбазă ялĕнче – Авăркас район центрĕнче – «Урал сасси» хаçатăн 1-мĕш номерĕ пичетленсе тухать. Ун хысçăн – тата иккĕ. Пысăк вырăнти пуçлăхсене ку пуçару килĕшсех каймăн-тăр: вĕсем хаçата çырăнтарса халăх хушшинче сарма ирĕк памаççĕ. Вăй илсе ĕлкĕреймесĕрех хаçат тухас ĕç путланса ларать.

Тепĕр çулталăкран хастар чăвашсем çине тăнипе пăр тапранса каять. 1990 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче Пушкăртстан Республикин Аслă Канашĕ тĕрлĕ шайри хаçатсем кăларасси çинчен постановлени кăларать. Унта «Урал сассине» те кĕртеççĕ. Çапла вара вăл Пелепейре 1991 çулхи кăрлач уйăхĕнче çĕнĕрен тухма пуçлать.

Çак вăхăтра вăл хăйĕн тĕп тĕллевне пурнăçларĕ: Урал тăрăхĕнчи чăвашсене чăмăртарĕ, пултаруллă çыравçăсене, сăвăçсене, журналистсене палăртрĕ. Хаçат урлă ытти талантлă чăвашсем те тупăнчĕç.

Çак кунсенче Пелепей хулинче (унта 70 пине яхăн çын пурăнать) «Урал сасси» тухма тытăннăранпа 15 çул çитнине халалласа уяв ирттерчĕç. К. Ивановпа Ухсай Яккăвĕ çуралнă тăрăха хăнасем тĕрлĕ хуларан килсе çитрĕç: Шупашкартан, Чĕмпĕртен, Ĕпхӳрен, Çтерлĕрен... «Урал Батор» ятлă наци культурисен центрĕ лăк тулличчĕ.

Хаçатăн тĕп редакторĕ Ю. Михайлов ун кун-çулĕ,

ĕçĕ-хĕлĕ, тĕллевĕ, малашлăхĕ пирки каласа пачĕ. Çаплах Юрий Николаевич чи хастар обществăлла корреспондентсене Хисеп грамоти тата парне парса чысларĕ, çав шутра шкул ачисене те. Пушкăртстан Республикин пичет управлени пуçлăхĕн çумĕ Ф. Кудакаев редакцие çăмăл автомобиль уйăрса панине пĕлтерчĕ. Парне-тĕк – парне! Тĕрлĕ шайри пуçлăхсем, хăнасем те пуш алăпа пыман: телевизор, видеомагнитофон, факс тата ытти кирлĕ япаласем. «Канаш» хаçат ятĕнчен – редакцире кăларнă кĕнекесен пуххи. Халĕ Урал чăвашĕсем Чĕмпĕрти тăванĕсем пирки нумайрах пĕлме пултарĕç ĕнтĕ.

ЧНК пуçлăхĕ Г. Архипов тата «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕн çумĕ Г. Максимов инçетри Чăваш Енрен килсе çитни те халăха савăнтарчĕ: апла пулсан Пушкăрт чăвашĕсен пурнăçĕ пĕтĕм чăваш тĕнчине интереслентерет.

Уяв концертне Пелепейри чăваш ушкăнĕсем – «Илем», «Чарлан», чăваш гимназинче вĕренекенсем, Ермекей районĕнчи Чăваш Хурамалтан пынă Валентина Павлова (вăл сцена çине хăй çырнă юрăпа тухрĕ) хутшăнчĕç. Çаплах пĕрле пурăнакан тусĕсене саламлама пушкăрт артисчĕсем те килнĕччĕ.

Тухса калаçакансенчен пĕри çаплах каларĕ: «Çак тапхăрта хаçатăмăр питĕ пысăк утăм турĕ. Малтанхи номерсемпе паянхисене танлаштарсан – çĕрпе пĕлĕт хушши пек. Пушкăрт чăвашĕсен хаçачĕ тухма тытăннине тĕнче уçлăхне вĕçсе тухнипе танлаштарма пулать. 15 çул иртрĕ – вĕçев йĕркеллĕ-ха».

Малашне те çапла пултăр. Хаçат тусĕсем йышланччăр, пулăшакансем тупăнсах тăччăр. Хаçата пулăшни – хамăра пулăшни. Ун пек пурте çӳллĕрех çĕкленĕпĕр.

Пушкăртстан Республики, Пелепей хули.

“Канаш”, 51 №, 2004 ç., раштавăн 16-мĕшĕ.

# Каргин – авалхи чăваш ялĕ

Каргин (Каркиел) – Вешкайма районĕнче чăвашсем нумай пурăнакан пĕртен-пĕр ял. 1000 çынран 230-шĕ таса чăваш. Нумайăшĕ вара ытти халăх çыннисемпе хутăшса çемье çавăрнă, вĕсен ачисене шутласан 500 çынран та иртсе каять.

Ку яла 1672 çулта чăвашсем йĕркеленĕ. Ун ячĕ Вăта Туварма пулнă, унтан Туарма тенĕ. Каярах кунта вырăссем, ирçесем пурăнма тытăннă, хутăш çемьесем нумайланнă. Чăваш чĕлхине вара манма пуçланă. Хальхи çамрăксем унпа усă курмаççĕ ĕнтĕ. Лару-тăру малашне те çапларах пулсан ку ялта чăвашсем пурăннине те манса кайĕç. Çакна «Канаш» хаçата пĕр çын та çырăнса илменни çирĕплетет.

Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен наципе культура автономийĕн ĕçтавкомĕ ку шухăшпа килĕшмест. Çавăнпа та ун делегацийĕ пушăн 11-мĕшĕнче Каргина çитсе курчĕ. Ун тĕллевĕ – районта автономи филиалне йĕркелесси. Вешкаймăсем хăнасене питĕ тараватлă кĕтсе илчĕç. Район администраци пуçлăхĕ А.Ф. Волчков та хутшăнчĕ мероприятие. Вăл трибуна çинчен чăвашсенчен тĕрлĕ енĕпе тĕслĕх илме май пуррине палăртрĕ, çав вăхăтрах ытла вăтанма кирлĕ мар, çак наци çынни пулнишĕн мăнаçланма вĕренмелле терĕ. Çаплах Анатолий Федорович мĕнле пуçарăва та пулăшма шантарчĕ. Вырăнти администраци пуçлăхĕ П.А. Кряжев ялти ĕç-пуçпа паллаштарчĕ. Киров ячĕллĕ ял хуçалăх пуçлăхĕ Н.Т. Тубакин пĕлтĕр производство кооперативĕ тупăш курнине пĕлтерчĕ. Апла пулсан кунта ĕçле пĕлеççĕ. Сăмах май çакна каласа хăвармалла: кунта 20-25 çул каялла Чăваш Енрен куçса килнисем те чылай. Уйрăмах – Елчĕк районĕнчен. Çаплах патăрьелсем, комсомольскисем те пур.

УОЧНКА пуçлăхĕ В.И. Сваев пухăннисене облаçри наци юхăмĕ çинчен каласа пачĕ, вырăнти чăвашсене хавхалантарма филиал кирлĕ терĕ. Çаплах вăл Вешкайма

тăрăхĕнче кăçал Акатуй ирттерес шухăша пĕлтерчĕ. «Тăван чĕлхене, йăла-йĕркене килес ăрусем те пĕлччĕр тесен питĕ нумай тăрăшмалла-ха, тĕрлĕ çĕре çитсе чăвашсене вăратмалла, вĕсен хушшинче хастарсем шырамалла. Паян та эпир кунта çак шухăшпах килтĕмĕр», - терĕ Владимир Ильич.

Тĕп вĕрентӳ управленийĕн тĕп специалисчĕ Ф.Т. Улендеева, «Еткер» телекăларăмăн аслă редакторĕ О.Н. Мустаев, учительсен пĕлĕвне ӳстерекен институтри методист В.А.Архипова та тăван чĕлхерен уйрăлни пысăк инкек патне – халăх пĕтесси патне – илсе пыма пултарни çинчен пăшăрханса калаçрĕç. Капла та 1956 çул хыççăн чылай ăру çухатрăмăр. Йывăç тымарне кăклама юрамасть. Вăл хăрма пултарать. Чăнах та, кунти шкулта иккĕмĕш çул чăваш культура кружокĕ ĕçлет. Анчах ятарлă кĕнекесем, программăсем, методика пособийĕсем çитмеççĕ. Ульяновск хăнисем шкула шăпах çаксене парнелесе хăварĕç. Кун хыççăн ĕç-пуç лайăхланас шанчăк çуралчĕ.

УОЧНКАн Вешкайма районĕнчи уйрăмĕн Канашне 9 çынран суйларĕç. Пуçлăх пулма Николай Андреевич Салюкова шанчĕç (вăл районти капиталлă строительство пайне ертсе пырать, инженер-строитель). Ун çумĕ – Людвиг Николаевич Яковлев. Секретарĕ – Людмила Егоровна Бутылкина.

Малашнехи ĕç çак йыш çине тиенет ĕнтĕ, мĕншĕн тесен Ульяновскран пĕрре пырса пĕтĕм ыйтăва татса пама май çук. Эпир вара хăш вăхăтра та вĕсене пулăшма хатĕр.

Конференци концертпа вĕçленчĕ. Сцена çине вырăнти чăвашсенчен йĕркеленĕ ушкăн, шкул ачисем – Лена Степанова, Юля Денисова тухса юрларĕç. Юлашкинчен вара пухăннисене «Эревет» ушкăн (ертӳçи Раççей культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Н.Ф. Косырев) чăваш юрри-кĕввипе савăнтарчĕ.

"Канаш", 12 №, 2004 ç., пуш, 18.

# Кашни ялах поэт ятне памаççĕ

*- Кашни ялтах çуралмасть поэт,*
*Кашни ялах поэт ятне памаççĕ, -*
тесе çырнă пĕр сăввинче чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев. Ку йĕркесене Çеçпĕл Мишшине халалланă.

Çапла, нумай çыравçă псевдоним валли хăй çуралса ӳснĕ ял ятне илет пулсан - Çеçпĕл Мишшин йăлтах урăхла. Касаккасси хăйĕн мухтавлă ывăлне пула Çеçпĕл пулса тăнă.

Кăçал чăваш сăвă тытăмне хываканĕ – Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 105 çул çитрĕ. Çакна паллă тума поэтăн тăван ялне Шупашкартан сумлă ушкăн килсе çитрĕ.

Ăна ял хĕрринче вырнаçнă Çеçпĕл музейĕ умĕнче çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç. Унтан уява пухăннисем кăвар чĕреллĕ поэтăн бюсчĕ умне пуçтарăнса митинг ирттерчĕç. Пурте Михаил Кузьмин (Çеспĕл Мишши) çуралнă çурт вырăнне çитрĕс. Унта халĕ хĕрлĕ кирпĕчрен асăну çурчĕ туса лартнă. Ачасем ентешĕн хĕрӳллĕ сăввисене вуларĕç.

Çапла пуçланчĕ регионсен хушшинчи «Çеçпĕл чĕнĕвĕ» фестиваль.

Ун хыççăн халăх Культура çуртне кĕрсе вырнаçрĕ.

Уява чăваш халăх поэчĕ, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ фондăн пуçлăхĕ Валерии Туркай уçрĕ. Вăл Çеçпĕл Мишши чăваш халăхĕшĕн ирĕклĕх символĕ пулнине палăртрĕ. «Вăл паян та чĕрĕ, хăйĕн ĕçне тăвать. Ун вĕри чĕри ăшши пире ăшăтса, хавхалантарса тăрать», - терĕ вăл. Çав вăхăтрах пăшăрханнине те пĕлтерчĕ: юлашки çырав тăрăх, Раççейре 13 пин ытла чăваш чакнă. «Çакна курсан Çеçпĕлĕмĕр мĕн каланă пулĕччĕ-ши? Ун пирки шутламан вăл, чăваш халăхĕ йышланасса, аталанасса шаннă», - терĕ В. Туркай.

Пухăннисем умĕнче Канаш район администраци пуçлăхĕн çумĕ В. Степанов, районти культура пайĕн пуçлăхĕ О. Егорова, ЧР культура министерствин тĕп специалисчĕ В. Афанаьсева, Раиса Сарпи сăвăç, ЧР

культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ А. Кибеч, чăваш халăх поэчĕсем Ю. Сементер тата П. Афанасьев, вырăнти администраци пуçлăхĕ Р. Иванова тата ытти сем тухса калаçрĕç. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăвашсенчен çак йĕркесен авторĕ тухса саламларĕ, ялти библиотека валли «Канаш» хаçат редакцийĕнче кăларнă кĕнекесене парнелерĕ. Çаплах Çеçпĕл Мишши ашшĕпе пĕртăванĕн – Петрăн ывăлĕ К. Кузьмин сăмах илчĕ.

- Самана улшăнсан та Çеçпĕл ятне пăрахăçламарĕç, вăл çĕнĕ тĕссемпе çуталчĕ. Çакă лайăх. Анчах та пăшăрханмалли те пур паян. Ачасене чăвашла вĕрентесси тивĕçлĕ шайра мар. Чăваш ялĕнчи чăваш ачисемех урамра хăйсем хушшинче вырăсла перкелешеççĕ. Ку хамăра пĕтерекен çул. Пуçламăш класранах ачасене тăван чĕлхене вĕрентмелле, - тӳррĕн калаçрĕ вăл.

1996 çултанпа Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми параççĕ. Кăçал вĕсен шутне В. Гордеев строитель тата Н.Ишентей сăвăç хутшăнчĕç. Пĕрремĕшĕ Шупашкарти Çеçпĕл Мишши пурăннă çурта тĕпрен юсаса çĕнетнĕ, унта халĕ музей уçнă. Иккĕмĕшĕ ялта пурăнсах хĕрӳллĕ сăвăсен темиçе кĕнекине пичетлесе кăларма пултарнă.

Красноармейски районĕн историпе таврапĕлӳ музейĕн ертӳçи В. Серафимов пухăннисене Алманчă ялĕнчи чиркĕвĕн 1878-1884 çулхи метрика кĕнекине кăтартрĕ. Унта Çеçпĕл Мишшин амăшне – Агафья Николаевнăна – нарăс уйăхĕн 11-мĕшĕнче Павел Чебоксаров пачăшкă шыва кĕртнине çырса хунă. Çураласса вара вăл нарăсăн 5-мĕшĕнче Шывпуç Чуракасси ялĕнче çуралнă (ашшĕ – Николай Никифоров, амăшĕ – Мария Петрова).

Юлашкинчен сцена çине вырăнти артистсем тата «Уяв» ансамбль тухрĕç.

Чăваш Республики,

Канаш районĕ,

Çеçпĕл ялĕ.

“Канаш”, 48 №, 2004 ç., чӳк, 25.

# Кирова – хоккей курма

Пăр çинче мечĕкпе хоккейла вылясси Ульяновскра анлă сарăлнă. Совет Союзĕн чемпионатĕнчех «Волга» команда кĕмĕл тата бронза медальсем илме пултарнă.

Раççей чемпионатĕнче те Ульяновск хоккеисчĕсен бронза медаль пур, ăна вĕсем 1996-1997 сезонра çĕнсе илчĕç. Сезон вĕçĕ çапларах пулчĕ.

Нарăс варри. «Волгăн» тата икĕ вăйă irттермелле: Кировра – «Родинăпа» тата Сыктывкарта – «Строительпе». «Родина» «Волгăран» виçĕ очко малта пырать, анчах унăн пĕр вăйă çеç юлнă – Ульяновск хоккеисчĕсемпе. Киров çĕнтерсен – пире медаль лекмест, никам та çĕнтереймесен е эпир парăнтарсан бронза медальшĕн тупăшса пăхма май пур.

Çакна шута илсе «Волга» спорт клубĕ хоккея юратакансене Кироври вăййа курма илсе кайрĕ. 55 çул-çӳревçĕ шутне эпĕ те лекрĕм.Ульяновскра пĕр вăйă та сиктермен – ют хулана та кайса курам-ха терĕм.

Каçпа 10 сехетре «Скания» автобуса лартăмăр та инçе çула тухрăмăр – 700 çухрăм. Çанталăк темиçе кун çил-тăманлă тăрать, 20 градус ытла сивĕ. Икĕ сехет пыратпăр ĕнтĕ: хăшĕсем кировсемпе мĕнлерех вылямаллине сӳтсе яваççĕ, теприсем кĕленче туртса кăларчĕç те черккесене пулас çĕнтерӳшĕн пушатма тытăнчĕç, виç-çĕмĕшĕсем тĕлĕрме пуçларĕç... Унччен те пулмасть – автобус сылтăмалла тайăлса кайрĕ, урапа айĕнче юр шăтăртатрĕ. Нумай та каяймарăмăр – автобус тарăн юр ăшне чикĕнчĕ, сылтăм енне çурма выртрĕ.

Çур алăк юрпа хупланнă. Кăшкăру пуçланчĕ:

- Хыçалалла пар, хăвăртрах тух, хоккея кая юлатпăр!..

- Час чышса кăларатпăр!

Темиçе минут аппалансан алăка хире-хире уçрăмăр. Çул варрине тухрăмăр çеç – «Жигули» пырса чарăнчĕ. Машинăран ГАИ çыннисем тухрĕç. Эпир Тутарстанра иккен, Апас ялĕнче. Çанталăк начаррипе милиционерсем дежурствăна тухнă. Вĕсем трактор шырама кайрĕç. Пĕрне тупма йывăр пулман: хуçи К-700 улăп тракторне урама хăварнă та пĕлĕшĕсем патĕнче эрех ĕçсе ларать. Тепĕрне, бульдозеристне, килĕнчен вăратса килчĕç. Çапла икĕ тракторпа пирĕн автобуса кĕрт ăшĕнчен туртса кăларчĕç: пĕри çул уçса пырать, тепри сĕтĕрет. Çапла сехет çурă çухатрăмăр.

Кирова тайга тăрăх каймалла: вăрман, вăрман... Йывăçсем пирĕн тăрăхринчен чылай çӳллĕрех.

... Вăйă пуçланма тăватă сехет юлсан стадиона çитрĕмĕр. Машинăсем пăр тасатаççĕ, пĕр çын та çук – эпир вара пĕтĕм ушкăнпа: «Волга!», «Волга!» - тесе кăшкăратпăр.

Вăйă вăхăтĕнче вара эпир, Ульяновскран пынисем, çичĕ пин çынран хытăрах кăшкăртăмăр. Кунта хоккей курнă чух шăпăрт тăма килĕштереççĕ пулмалла. Çумра тăракан вырăнти виçĕ хĕр пĕрремĕш таймра пире хирĕçлесе: «Родина!», «Родина!» - тесе кăшкăрчĕ. Тăхтав вăхăтĕнче вĕсене пирĕн çамрăксем пиво ĕçтерчĕç, шăкăл-шăкăл калаçрĕç. Хайхисем: «Волга!», «Волга!» - кăшкăраççĕ. Тĕлĕнмелле!..

Ульяновск хоккеисчĕсем лайăх вылярĕç, вăйă 2:2 шутпа вĕçленчĕ. Пире çакă кирлĕччĕ те! Хоккеистсем хăйсене пулăшнăшăн пире чун-чĕререн тав турĕç. Пиртен хăшĕ-пĕрин сасси çĕтнĕччĕ ĕнтĕ – пĕтĕм вăйне (сассине темелле ĕнтĕ) хоккея панă.

Каялла таврăннă чухне çывăракан сахал пулчĕ – çул тăршшĕпе бронза медаль çинчен калаçрĕç.

Чăнах та, «Волга» юлашки вăйăра «Строителе» 4:2 шутпа çĕнтерчĕ те анăç ушкăнĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Виççĕмĕш вырăншăн тупăшса – «Сибсельмаш» командăна парăнтарчĕ. Медаль – кĕсьере!

“Канаш”, 9 №, 2004 ç.

# Пуррине пĕтерме çăмăл

Тереньга районĕнче виçĕ пине яхăн чăваш, вĕсем йышĕпе иккĕмĕш вырăн йышăнаççĕ (вырăссем хыççăн). Паян тăватă шкулта (Патуел, Хĕветĕрьел, Зеленец, Красноборск) чăваш фольклор кружокĕсем пур. Маларах ку йыша Тури Кукка (Сосновка) та кĕретчĕ, Н.Д. Мартынова вĕрентӳçĕ тата тарапĕлӳçĕ ачасене чăваш культурипе паллаштаратчĕ. Юлашки темиçе çулта (Н.Д. Мартынова шкултан кайнă хыççăн) чăваш культура вучахĕ кунта сӳннĕ.

Вырăнти лару-тăрăва тишкерме тĕп вĕрентӳ управленийĕн специалисчĕпе Ф.Т. Улендеевапа пĕрле Тереньгана çитрĕмĕр. Вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ А.Э. Конгро районта этно-наци вĕрентĕвĕ мĕнле шайра пынипе паллаштарчĕ. Л.К. Захарова методист пире Тури Куккана илсе кайрĕ. Ирçе кружокне çӳрекенсен пултарулăхне кăтартса пачĕç. Чăваш сасси илтĕнменни вара кулянтарчĕ. Чăвашсемпе ирçесем йышĕпе тан пурăнакан ялта ĕç пĕр енне чалăшса кайни лайăхах мар.

Çакăн çинчен шкул директорĕпе В.Н. Писчанкинпа, унăн çумĕсемпе уçă калаçу иртрĕ. Федосия Тимофеевна ĕç-пуç çапла килсе тухнин сăлтавне ним пытармасăр пĕлтерчĕ: шкул пуçлăхĕсен кăмăл-туртăмĕ çукки. Хăвна хӳтĕлесе сăлтавсем шырама пăхни вара – вăйсăрлăха кăтартни çеç.

Телее, шкул директорĕ ăнланакан, ĕçлеме пултаракан çын пулчĕ. Вăл Ф.Т. Улендеева асăрхаттарнине шута илсе çитес вĕренӳ çулĕнче чăваш кружокĕ уçма шантарчĕ. Шкул библиотеки «Канаш» хаçат çырăнса тăни те чуна кăштах ăшăтрĕ. Апла пулсан Тури Куккара малашне ачасем чăвашла юрлама-ташлама, вулама-çырма вĕренес шанчăк пур. Пĕрлехи вăйпа çак лава вырăнтан хăвăртрах тапратасчĕ.

“Канаш”, 17 №, 2004 ç., ака, 22.

# «Сувар» тусăмăр вуннă тултарчĕ

«Канаш» хаçатăн тусĕ, ĕçтешĕ – Тутарстан чăвашĕсен «Сувар» хаçачĕ нумаях пулмасть 10 çул тултарчĕ. Çакна халалласа «Ак Барс ятлă çамрăксен культурăпа спорт центрĕнче анлă уяв иртрĕ.

Залра хаçатăн чи çывăх тусĕсем, ăна чунтан юратакансем. Уява республика пуçлăхĕсем – Министрсен Кабинечĕн председателĕ çумĕ З.Р. Валеева, Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ Р.А. Ратникова, Тутарстан Республикин «Татмедиа» массăллă коммуникаци агентствин тĕп редакторĕ М.Я. Муратов пынă. Чăваш Республикинчен Министрсен Кабинечĕн председателĕн çумĕ, пичет тата информаци политикин министрĕ В.В. Андреев ертсе пыракан ушкăн пырса çитнĕ. Юратнă хаçатне чыс тума Тутарстанри вунсакăр район çыннисем кăмăл тунă.

Уява Д. Нестеров (телевидени дикторĕ) тата «Сувар» хаçат журналисчĕ С. Чаркина ертсе пычĕç.

«Суварăн» паянхи ĕç-пуçĕ, малашнехи тĕллевĕсем пирки ун тĕп редакторĕ К.А. Малышев каласа пачĕ, унчченхи редакторсене – В.И. Данилова, Н.М. Сорокина, А.К. Иванова – хаçат çак шая çиттĕр тесе тăрăшнăшăн тав турĕ.

- «Суварта» йывăр вăхăтсем нумай пулчĕç, малашне редакцире веçех йĕркеллĕ пултăр, - тесе вĕçлерĕ сăмахне Константин Анатольевич. Паллах, уявра парнесĕр пулмасть. Кўршĕ республикăра тухса тăракан хаçат редакцине чĕмпĕрсенчен «Канаш» хаçатра калăпласа кăларнă 10 ытла кĕнеке патăмăр. Халĕ суварçăсем Чĕмпĕр Енри чăвашлăх юхăмĕ пирки чылай пĕлеççĕ ĕнтĕ.

Уяв программине артистсем илемлетрĕç. Аташне

саламлама Шупашкартан «Сувар» ташă ансамблĕ (ертӳçи А. Музыкантов, Çĕпрел районĕнчи Турхан Упире çуралса ӳснĕскер) килнĕ. Ялсенче мĕн чухлĕ пултаруллă юрăçă тата! Нурлат районĕнче пурăнакан И. Сафандеева, сăмахран, пĕлтĕр Шупашкарта иртнĕ «Кĕмĕл сасă» конкурсра гран-при çĕнсе илнĕччĕ. Нимĕç хĕрарăмĕ Эльвира та вĕсенчен юласшăн пулмарĕ, чăвашла юрă шăрантарчĕ.

Тутарстанра чăваш халăх культурине аталантарас ĕçре «Сувар» хаçатăн тӳпи пысăк. Çавăнпа та ку – хаçатăн кăна мар, пĕтĕм чăваш халăхĕн уявĕ пулчĕ.

Хусан.

“Канаш”, 18 №, 2004 ç., ака, 29.

# Çын хуйхи пĕлĕтрен курăнмасть

1988 çулхи раштав уйăхĕнче Арменире çĕр чĕтренсе пысăк хуйхă кӳчĕ. Вилекенсен шучĕ кăна 25 пине çитрĕ. Аманнисем, çывăх çыннисемсĕр тăрса юлнисем, тăлăх ачасем, ишĕлнĕ ял-хуласем... Калама çук пысăк инкек! Пĕтĕм çĕршыв (ун чухне СССР саланса кайманччĕ-ха) эрменсене пулăшма васкарĕ.

Ишĕлчĕксене чакаласа тухсан, чул-хăйăра çӳп-çап вырăнне кайса тăксан строительсен черечĕ çитрĕ. Эпĕ ун чухне Ульяновскри пĕр строительство организацинче маçтăрта ĕçлеттĕмччĕ. Армение ĕçлеме каймалли çинчен калаçу тапрансан пуçлăхсене тӳрех хам унта çитесси пирки пĕлтертĕм.

Икĕ автобуспа (40 ытла çын) пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче çула тухрăмăр. Тăвата талăк кайрăмăр Спитак районне. Кам-тăр шанмасса та пултарать – çул çинче пĕрре те çывăрман. КАВЗ автобус – «Икарус» мар. Мĕнле çывăрас килсен те иккĕ-виççĕ ялт-ялт сиктерет те – ыйхă вĕçсе каять. Пуçа чӳрече çумне таянтаратăн çеç – танк-танк! тутарать... Пăхса пыратăн вара чӳречерен. Шоферсем вара икшерĕн, улшăнса пыраççĕ. Чăнах та, пĕррехинче виçĕ сехет Сухуми хулинче ларма тиврĕ. Эпир унта ир енне виçĕ сехете çитрĕмĕр. Заправка 6 сехетре çеç уçать. Çав вăхăтра пуçа чӳрече çумне хурса кăштах тĕлĕрсе илнĕ. Унта та пулин кашни çур сехетре алăри сехет çине пăха-пăха илетĕн – хăçан 6 çитет?

Пире Спитакран 9 çухрăмра вырнаçнă Гегасар ялне илсе çитерчĕç. Ирхине 5 сехет. Пысăк палаткăра вырнаçнă столовăя илсе кĕрсе апатлантарчĕç. «Ну халь çывăратпăр ĕнтĕ!» – тетпĕр эпир, ывăннăскерсем. Пулмарĕ. Колонна пуçлăхĕ пычĕ те: «Эпĕ сире лайăх ăнланатăп, инçе çул килсе ывăннă эсир... Çапах та паян

ĕçлемелле пулать, планран юлса пыратпăр» , – тет.

Мĕн тăвăн – кунта курорта килмен-çке. Щитран тунă çуртсене ăшă паракан пăрăхсем кĕртме, котелсем вырнаçтарма тытăнтăмăр. Кунта çакна каламалла: çыннисем те, техники те, стройматериалĕ те – пурте Ульяновск облаçĕнчен. Пирĕн облаçăн çак яла тепĕр хут çĕклемелле. Ял пулнă вырăна бульдозерпа хырса тикĕсленĕ, варринче пĕр вакун ларать. Çырма хĕрринче икĕ чул çурт ишĕлчĕкĕсем пур. Çакă Гегасар ялĕ. Çĕнĕ çуртсене урăх вырăна çерем çине лартнă.

Эпир тинĕс шайĕнчен икĕ çухрăм çӳлерех вырнаçнă çĕрте ĕçлетпĕр. Çуркунне çанталăк капла та вылянчăклă та – ту çинче пушшех. Кунне мĕн тĕрлĕ кăна улшăнмасть вăл: çумăр çăвать, вăйлă çил ӳхĕрет, хĕвел çутатса ярать, лапка-лапка юр ӳкет, каллех çумăр çăвать...

Пĕр япалана вара нихçан та манма çук. Каçпа 8 сехетре ĕçе вĕçлерĕмĕр те (кашни кун 12 сехет ĕçлеттĕмĕрччĕ, канмалли кунсăр) вакуна кĕтĕмĕр. Эпĕ иккĕмĕш яруса койка çине улăхса выртрăм. Çутă вăйсăр пулсан та хаçат пăхкаласа выртатăп. Хăшĕсем картла выляççĕ, теприсем – доминолла... Унччен те пулмасть – инçетрен трактор нушаланса тем сĕтĕрнĕ пек сасă илтĕнсе кайрĕ. Авантарах итлетĕп те – К-700 уласа килнĕ пек. «Тĕттĕмре ту çинче мĕн сĕтĕреççĕ-ши трактора çавăн пек нуша кăтартса?» – тесе шухăшлатăп. Сасă çывхарса килет, вăйланса пырать. Часах К-700 вакун çине кĕрсе кайса тустарма пултарнăн туйăнать. Улакан, кĕрлекен сасă вакун айнех кĕрсе кайрĕ... Унччен те пулмасть – пирĕн вакун енчен енне силленме, шатăртатма тытăнчĕ. Вăйлă çил айне пулнă карап çинчи пек, пурте силленеççĕ: сĕтел, тенкел, витре... Ман пружиналлă койка, ача сăпки евĕр, лаш-лаш сикет. Çапла пĕр 10-15 çеккунт (е ытларах-и – тĕрĕс калама йывăр) сиккеленĕ хыççăн йăлтах иртсе

кайрĕ. Сасă хальхинчен тепĕр енчен илтĕнме пуçларĕ, инçетелле кайса пычĕ.

Çак вăхăтра вакунта никам та пĕр сасă кăлармарĕ. Калăн, чĕлхисене çăтса янă. Сасă йăлтах шăплансан тин пĕр çамрăк тĕлĕнсе: «Мĕскер пулчĕ ку?» – тесе ыйтрĕ. Аслăраххи: «Эсĕ мĕн, ху ăçта килнине манса кайнă-и элле? Ку Армени вĕт...» – терĕ.

Пуçа тин пырса çапрĕ: вара халĕ çĕр чĕтренсе илчĕ вĕт! Эпир, çеçенхирте çуралса ӳснĕскерсем, ту çинчи пурнăçа пĕлместпĕр çав.

Тепĕр кун кӳршĕ вакунтисем каласа парса култараççĕ. Виççĕн эрех ĕçсе ларнă. Сĕтелĕ силленсе илнĕ те - кĕленчи урайне ӳксе çĕмĕрĕлнĕ. Тытса ĕлкĕреймен...

Çĕр 5,5 балпа чĕтреннĕ иккен. Икĕ çухрăмра вырнаçнă ялта ферма ишĕлсе аннă, 200 пуç шултра мăйракаллă выльăх вилнĕ. Малтанхи хут чĕтреннĕ чух хум ку яла тивмен пулнă...

Пĕр уйăхран киле кайма вăхăт çитрĕ. Пире Ленинакана самолет çине илсе кайрĕç. Çул тăршшĕпе çĕнĕ масарсем... Мĕн чухлĕ хуйхă!Ку хула çине бомба пăрахса тухнă пекех. Чылай çурт çук. Е çурри ишĕлнĕ, е варри анса кайнă. Кравaтьсем таçтан урипе çакланнă та сывлăшра çакăнса тăраççĕ. Чун сӳ тăвать.

Самолет Кавказ тăвĕсем çийĕн вĕçсе иртнĕ чух вара – тĕлĕнмелле илемлĕ! Çĕр çинчи улăп тусем, шурă калпак тăхăннă хĕрсем евĕр, питĕ илĕртӳллĕ курăнаççĕ. В.Высоцкий ахальтен: «Тусенчен авантараххи – тусем çеç!» – темен иккен. Çӳлтен çын хуйхи-суйхи те палăрмасть, ишĕлнĕ ял-хуласем те курăнмаççĕ...

“Канаш”, 15 №, 2004 ç., ака, 8.

## Ыранхи вулакана паян шырамалла

Хаҫатӑн тӗллевӗ – кулленхи хыпарсене халӑх патне вӑхӑтра илсе ҫитересси, ҫынсенче ӑнлавсем йӗркелесси, халӑх ӑнланулӑхне ӳстересси, ҫынсене пӗр-пӗринпе хутшӑнма пулӑшасси. Журналистӑн хальхи пурнӑҫпа тан пырас тесен питӗ нумай пӗлмелле, пӗлнипе те виҫелесе усӑ курмалла. Ҫав вӑхӑтрах вӑл темиҫе утӑм маларах шутласа хумалла, пурнӑҫ таппи журналист чӗрин таппине пӗр харӑс тапмалла.

Паллах, пӗр-пӗрин опычӗпе те паллашмалла – сехете тӗрӗслесе яни нихӑҫан та пӑсмасть. «Сувар» хаҫатӑн 10 ҫулхи уявне пынӑ журналистсем вӑхӑта сая ямарӗҫ. Суварҫӑсем Раҫҫейри чӑваш хаҫачӗсенче ӗҫлекен журналистсене пуҫтарса тӗлпулу ирттерчӗҫ. Ҫавра сӗтел хушшине «Хыпар» хаҫат (Чӑваш Республики) тӗп редакторӗн ҫумӗ Г.Максимов, «Урал сасси» (Пушкӑрт Республики), «Канаш» (Чӗмпӗр Ен), «Сувар» (Тутарстан) хаҫатсен тӗп редакторӗсем – Ю. Михайлов, Н. Ларионов, К. Малышев тата ытти районсенчен пынӑ журналистсем ларчӗҫ. Калаҫу теми – «Чӑваш хаҫачӗн хальхи журналистикӑри вырӑнӗпе пӗлтерӗшӗ». Пурне те ҫырӑнакансен шутне ӳстерес, ҫамрӑксене хаҫатпа интереслентерес, хаҫата илемлӗрех, илӗртӳллӗрех, тарӑн содержаниллӗ тӑвас ыйтусем пӑшӑрхантарчӗҫ. Шкулпа ҫыхӑну тытасси пирки те чылаях сӑмах вакларӗҫ. Ҫак ҫыхӑнӑва вӑйлатмасӑр хаҫат вулакансен шутне ӳстерессине шансах кайма ҫук. Ыранхи вулакана пирӗн паян шырамалла. Паян вӑл шкулта вӗренет те-ха, унпа калаҫма пулать. Ыран вара кая юлма та пултаратпӑр.

Хаҫат содержанийӗ анлӑ та тишкерӳллӗ, информаци енчен пуян пулмалла. Ӗҫсене ҫырса панипе кӑна мар,

вĕсене тишкерме, тĕпчеме, хак пама та вĕренмелле. Çивĕч ыйтусем тупмалла, тарăнрах чавма хăнăхмалла. Çав вăхăтрах хаçата тĕрĕс критика та кирлĕ, вăл аталанма пулăшать.

Çаплах саманапа тан утса рекламăпа ĕçлеме хăнăхмаллине те ятарласа палăртрĕс. Пурнăçĕ çапла ыйтать – нимĕн те тăваймăн.

Интернет мĕнле вăйлă аталансан та хаçат нихăçан та пĕтмест. Хут çине çырни ĕмĕрлĕхе юлать. Ăна кирек хăçан та тепĕр хут тытса вулама, танлаштарма, тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем тума пулать.

Калаçăва çаплах Мари Эл, Хусанти вырăсла тухакан хаçатсен журналисчĕсем тата районсенчен килнĕ наципе культура центрĕсен пуçлăхĕсем, таврапĕлӳçĕсем хутшăнчĕç.

Çавра сĕтеле «Сувар» журналисчĕ И.Гордеева ертсе пычĕ.

“Канаш”, 19 №, 2004 ç., ака, 29.

# Эсĕ халăх чĕринче пурăнăн, пирĕн Андриян

Андриян Григорьевич Николаев пурнăçĕ – хăюлăхпа паттăрлăх тĕслĕхĕ.

Çу уйăхĕн вĕçĕнче кăна чăваш халăхĕн улăп ывăлĕпе А.Г.Николаев космонавт-лётчикпа Мускавра Акатуйра курнăçнăччĕ. Вăл сцена çинчен чăвашла калаçрĕ, тăван халăх çыннисемпе çакăн пек анлă уява çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килнишĕн савăннине пĕлтерчĕ. Халăх хушшине ансан алă тыта-тыта саламларĕ.

Чăваш халăхĕн çакăн пек паттăр арĕ пурришĕн эпир хĕпĕртерĕмĕр, мĕнле мăнаçлантăмăр!

Унтанта хĕрĕх кун иртрĕ те – тĕнче тăрăх хурлăхлă хыпар сарăлчĕ: Çĕр чăмăрĕ çинчи виççĕмĕш космонавт ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Чăтма çук пысăк çухату...

Мухтавлă ентешĕмĕре юлашки çула ăсатма Чĕмпĕртен делегаци кайрĕ: «Еткер» телекăларăмăн аслă редакторĕ О.Н.Мустаев (вăл маларах облаçри чăвашсен ячĕпе Шупашкара хурлăхлă телеграмма янă), «Ульяновсккерамзит» заводăн директорĕ В.А.Федоров, «Стройцентр» фирма пуçлăхĕ П.Н.Исли тата çак йĕркесен авторĕ. Сăмах май, Андриян Григорьевич чĕмпĕрсемпе лайăх çыхăну тытнă, хăйĕн юбилейĕсенче вĕсене хăнана чĕннĕ. О.Н.Мустаев килĕнче вăл 1998 çулта парнеленĕ кинжал та упранать.

...Утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче Шупашкарта пурăнакансем пурте К.В. Иванов ячĕллĕ академи драма театрĕ умне пухăннă тейĕн. Ентешĕмĕрпе ĕмĕрлĕхе сывпуллашма Раççейĕн пĕрремĕш Президенчĕ Борис Ельцин тата унăн мăшăрĕ Наина Иосифовна килсе çитнĕ. Космонавтсен отрядĕнчен пысăк ушкăн килнĕ – 21 космонавт. Вĕсен хушшинче В.Севостьянов, Б.Волынов, В.Горбатко, П.Попович...

Халăх тупăк çумĕнчен утса иртсе сывпуллашнă хыççăн хурлăхлă митинг пулчĕ. Андриян Григорьевич хăйне тăван ялĕнче пытарма хушса хăварнă, çавăнпа та процесси Çĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялнелле хускалчĕ. Воробьев композитор урамĕнчи Чăваш наци конгресĕ çурчĕ патне тупăка катафалк çине хурса пычĕç. Чечек кăшăлĕсем – вуншар-вуншар. Асфальт тăршшĕпех кĕлчечексем йăм-йăм хĕрлĕн курăнса выртаççĕ. Малалла кайма тупăка ятарлă автомобиле вырнаçтарчĕç. Машинасен колонни икĕ пуйăсран та вăрăм: автобуссем, çăмăл машинăсем...

Раççейре икĕ Космонавтика музейĕ. Вĕсенчен пĕри А.Г.Николаев çĕршывĕнче – Шуршăл ялĕнче. Паттăр ентешĕмĕр çакăнта çуралнă, çакăнтах çăлтăрсем патне вĕçме ĕмĕтленнĕ, çакăнтах хресчен ĕçĕпе ачаран пиçĕхсе ӳснĕ. Çакăнтах тăван çĕрĕ хăйĕн çăлтăр ҫыннине мамăк пулса йышăнĕ, çакăнтах А.Г. Николаев ĕмĕрлĕхе канăç тупĕ.

Хурлăхлă митингра Чăваш Республикин Президенчĕ куççульне аран-аран тытса тăчĕ.

– Паян чăваш халăх историнче калама çук пысăк хурлăхлă кун. Тăван халăхăн, пĕтĕм этемлĕхĕн тивĕçлĕ ывăлĕ юлашки вĕçĕве тухрĕ. Тĕлĕнмелле ĕçчен çынччĕ вăл. Халăх ăна юратса: «Пирĕн Андриян!» – тетчĕ. Çакăн пек çӳллĕ шая çитсен те вăл хăйне пуринпе те пĕр тан тытатчĕ: ырă кăмăллă, ăшă кулăллă, сăпайлă. Халĕ «пирĕн Андрияна» ĕмĕрлĕхех çухатрăмăр ĕнтĕ. Эс тунă ĕçсене манмастпăр эпир, Андриян Григорьевич. Эсĕ яланлăхах халăх чĕринче пурăнăн. Сан патна çамрăксем çӳрĕç, сан ĕçне малалла тăсĕç, – терĕ Николай Васильевич.

Çаплах ЧР Патшалăх Канашĕн пуçлăхĕ М.А.Михайловский, икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕсем Б.Волынов, В.Севостьянов, чăваш космонавчĕн

Шуршăлта пурăнакан тăванĕ Н.П.Николаев тата ыттисем сăмах каларĕç.

Варнава митрополит кĕлĕ вуланă хыççăн А.Г.Николаев ўтне музей пахчинче чавнă шăтăка антарчĕç. Генерал-майора çар çыннисем виçĕ хутчен автоматпа персе чысларĕç. Раççей Гимнĕ янăрарĕ...

Вăл 15 çулта кивĕ тумпа, кутамккана темиçе чĕлĕ çăкăр чиксе тăван килĕнчен тухса кайнă, анлă пурнăç çулĕ çинче пĕрремĕш утăмсем тунă. 20 çул та иртмен – вăл тĕнче уçлăхне вĕçсе хăпарса Çĕр чăмăрĕ çине çăлтăрсем хушшинчен пăхма пултарнă. Çакăн хыççăн чăваш ячĕ пĕтĕм планетăна сарăлчĕ.

Халĕ хăюллă кăйкăр тăван ялне таврăнчĕ ĕнтĕ. Ĕмĕрлĕхех...

Эпир сана нихăçан та манмастпăр, пирĕн Андриян!

Шупашкар-Шуршăл.

“Канаш”, 29 №, 2004 ç., утă, 15.

# Раççей пресси – юплă çул умĕнче

2006 çулхи кăрлачăн (январь) 1-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăйтытăмлăх (самоуправлени) çинчен калакан саккун пурнăçа кĕрет. Ун тăрăх, регионсенчи массăллă информаци хатĕрĕсем, çав шутра наци хаçачĕсем те, патшалăх пулăшăвĕсĕр юлаççĕ. Урăхла каласан, хупăнма пултараççĕ. Раççей – нумай нациллĕ патшалăх, çавăнпа та ку ыйту нумай çынна пăшăрхантарать.

**Хусан**

Тутарстан Республикин тĕп хулинче çĕртме (июнь) уйăхĕн 16-мĕшĕнче çак ыйтусене пăхса тухма регионсенчи тата массăллă информаци хатĕрĕсен (МИХ) конгресĕ пуçланчĕ. Ун тĕллевĕ – Раççейри МИХра лару-тăрăва сӳтсе явасси, ун пуласлăхĕ тата пĕр-пĕрин опычĕпе паллашасси. Анлă пуху «Пирамида» культура комплексĕнче иртрĕ. Ăна уçнă чух Тутарстан Республикин МИХ «Татмедиа» агентствин пуçлăхĕ Марат Муратов çакна пĕлтерчĕ: «Пухăва Раççейĕн 39 регионĕнчен килнĕ, çаплах Украина, Азербайджан хăнисем пур. Çакăнтах «Культура в эфире-2005» телефестивале хутшăнакансем те лараççĕ».

Пухăвăн ячĕ-сумĕ пысăк, мĕншĕн тесен ăна «Татмедиа» агентствăсăр пуçне Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин виçĕ комитечĕ (информаци политикин, национальность ĕçĕсен, вырăнти хăйтытăмлăх ыйтăвĕсемпе ĕçлекен), Раççей тата Тутарстан Журналистсен союзĕсем йĕркеленĕ.

Анлă пухура Раççейри çын прависен уполномоченнăйĕ Владимир Лукин, Раççей Патшалăх Думинчи информаци политикин комитечĕн пуçлăхĕ Валерий Комиссаров

(ăна эпир «Моя семья» телекăларăм тăрăх пĕлетпĕр), Патшалăх Думинчи националльноçсен ĕçĕсен комитечĕн пуçлăхĕн çумĕ Галина Дорошенко, Тутарстан премьер-министрĕн çумĕ – культура министрĕ Зиля Валеева, «Журналист» журналăн тĕп редакторĕ Геннадий Мальцев, Раççей Журналистсен союзĕн генеральнăй секретарĕ Игорь Яковенко тата ыттисем тухса калаçрĕç. Тĕп шухăшĕ çакă: регионти прессăна халăхăн 80-90 проценчĕ шанать (федераци шайĕнчисене 9-15 процент çеç), вăл вырăнти пĕтĕм улшăнăва çутатса тăрать, унран Мускаври хаçатсем хыпарсем илсе тăраççĕ. Апла пулсан регионсенчи прессăна сыхласа хăвармаллах. Кашни хăйĕн меслетне сĕнчĕ, çĕнĕ çулсем шырамаллине палăртрĕ.

Раççей Конституцинче тĕрлĕ халăхсене аталанма май туса памалла тесе çырнă. Наци хаçачĕсене кăкласан хăш енне пырса тухăпăр? Хăш енчен пырса çапĕ ку бумеранг Раççее? Тĕрĕссипе, çак хаçатсене тытса тăма нумай укçа та кирлĕ мар. Çав вăхăтрах наци хаçачĕсем регионти лăпкă политикăна тытса тăма пулăшаççĕ. Кам-тăр тĕрлĕ нацисене хирĕçтерекен саккунсем кăларса Раççее сапаласа ярасшăн пулмалла. Пирĕн вĕсем хыççăн каймалла мар. Пĕрле ларса канашламалла, хаçатсене сыхласа хăвармалли меслетсем шырамалла. Пирĕн тĕллевсем ырă...

Çак пуху Хусанта иртни те ахальтен мар. Тутарстан çырăнса илмелли изданисемпе Раççейре чи малтисен ретĕнче. Кунта 680 издани пичетленет, çав шутра 84 хаçат тата 21 журнал – тутар чĕлхипе. Республика шайĕнче чăвашла «Сувар» хаçать тухать, тăватă районта (Аксу, Çĕпрел, Нурлат, Пăва) хаçатăн чăвашла дубляжĕ пур. Республика бюджетĕнчен тăхăр хаçат тата 11 журнал валли укçа уйăраççĕ.

Шел пулин те Раççейри наци политикине хальччен те хатĕрлесе йĕркене кĕртмен. Çавăнпа та наципе культура автономисем çинчен калакан саккун та йĕркеллĕ ĕçлемест – çакна чи малтан федераци шайĕнче татса памалла. Раççейĕн паянхи пек çĕршыв пулса юласлăхĕ те çак ĕçсемпе тачă çыхăннă. Пысăк вырăн йышăнакансем çакна яланах асра тытмалла. Тĕрлĕ нацисене пĕр картана хăваласа кĕртсе пĕр сăнлă, пĕр чĕлхеллĕ тума хăтланнине СССР вăхăтĕнче куртăмăр ĕнтĕ. Совет Союзĕ вара пăрça пек сапаланса кайрĕ.

Г. Дорошенко депутатăн сăмахĕсем пурин шухăшне те пĕрлештереççĕ: «Раççейри наци политики валли бюджетран пĕр пус та уйăрмаççĕ. Нацисене аталанма пĕтĕм майсем туса памалла. Регионти МИХа пулăшмалла, мĕншĕн тесен обществăри мĕнпур ыйтăва вĕсем урлă çеç татса пама пулать».

П. Яковенко та реформăра çитменлĕхсем курать: «Çынна яланах канашçă кирлĕ – вырăнти тата тăван чĕлхепе çырнă хаçат. Çав вăхăтрах ун пахалăхне реклама витĕм кӳрет – çынсем унран ывăннă. Мĕнпур реклама укçинчен область, хула, район хаçачĕсене 20 процент çеç лекет, сакăрвуннăшĕ – Мускавра тухса тăракан хаçат редакцийĕсенче. Редактор хуçалăх çыннине тухса пыни те йĕркеллĕ пулăм мар, чи малтан вăл – творчество çынни. Реклама парса укçа тăвас тĕллевпе «Татмедиа» агентствăра менеджер ĕçлет. Çак çулпа ĕçлесе пăхас пулать. Мĕн каласан та патшалăх МИХа пăрахмалла мар, вĕсем пĕр çыхăнура пулмалла. Регионсенчи МИХа пулăшмалли федераллă саккун кирлĕ».

Залрах Тутарстанри телевиденире ĕçлекенсем «Против насилия и жестокости» харти йышăнчĕç. Унта телерадиокомпани пуçлăхĕсем обществăна сипетлĕх енчен сиен кӳмĕпĕр, ирсĕр хыпарсем, кӳрентерекен

материалсем кăтартмăпăр, хаярлăха тата ирĕксерленине экран çинчен сармăпăр тесе алă пусрĕç.

Çакăн хыççăн конгреса тата телефестивале хутшăнакансем тăватă палубăллă «Семен Буденный» теплоход çине куçрĕç. Кунта секцисене пайланнă хыççăн ĕç малалла тăсăлчĕ.

Шурă теплоход вара каçа хирĕç Атăл тăрăх Пăлхар хули еннлелле шурĕ.

**Пăлхар**

Ку хулана пирĕн несĕлсем 1000 çул ытла каялла никĕсленĕ. 13-мĕш ĕмĕрте вăл пысăк суту-илӳ тата ремесла центрĕ пулса тăрать. Ака пасара суту-илӳ тума темиçе пин çухрăмран та килкеленĕ. 1361 çулта хулана Ылтăн Урта ханĕ Ухсах Тимĕр çунтарнă.

Халĕ кунта 14-мĕш ĕмĕрте туса лартнă мавзолейсем, палатăсем, мичĕт, мунча ишĕлчĕкĕсем пур. Истори музейĕ ĕçлет.

Ирхине ĕç секцисем тăрăх малалла пычĕ. Патшалăх Думин депутачĕсем Юрий Барзыкин, Анбяр Кармеев (информаци политикин комитечĕн членĕ, регионсенчи тата наци хаçачĕсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен подкомитетăн пуçлăхĕ) тĕнчери халăхсен картти улшăнса пыни çинчен каларĕç. Глобализаци пурне те «çисе ярать». Çапах та регионсенчи наци политики наци хаçачĕсене тытса пыма пулăшать-çке. Çавăнпа та çӳлтен чармалла мар. Кунта пĕр интереслĕ факт илсе кăтартрĕç. Самар облаçĕнче Раççейĕпе чи пысăк ял пур – Кинель Черкассы, унта 19 пин çын пурăнать. Кунта тăхăр журнал пичетленсе тухать. Якутире вара МИХ валли çулталăкра 300 миллион тенкĕ уйăраççĕ, Дагестанра – 90. Кавказра вырнаçнă республикăра хаçат-журнал 15 чĕлхепе тухать.

Регионсенчи хаçат-журнал вырăнти туризма

аталантарма та май парать. Туризм вăйлансан вара 30 отрасле пырса тивет, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем тупăнаççĕ. Сăмахран, этноял йĕркелеме пулать, ăна курма нумай турист килĕ.

Кăнтăр тĕлне теплоход çинчен анса Пăлхар тăрăх экскурсире çÿрерĕмĕр. Кунта ишĕлнĕ мичĕт варринчи «Ĕмĕт юпи» çумне нумайăшĕ перĕнсе пăхас терĕ. Кайран ăшă тĕлпулура Спасск районĕн администраци пуçлăхĕ С. Тенев саламларĕ, артистсем концерт кăтартрĕç.

Каç енне сулăнсан Атăлтан пăрăнса ун юппине – Чулман Атăла (Кама) кĕтĕмĕр. Пирĕн Анат Камăна çитмелле. Çулĕ вăрăм, çавăнпа та тĕрлĕ тĕлпулусем, çавра çĕтелсем малалла тăсăлчĕç. Телефестивале хутшăнакансем хушшинче «Ну, погоди!» мультфильм режиссерĕ А.Котеночкин та пур. Вăл пресс-конференци ирттерчĕ. Ун сăмахĕсенчен çакă паллă пулчĕ: мультфильма малалла ÿкерме тытăннă, Çĕнĕ çул тĕлне 19-20-мĕш серисем хатĕр пулаççĕ. Мультфильм валли кĕвĕ çыракан А.Державин та ыйтусене хуравларĕ.

**Анат Кама**

Пысăкăшĕпе Тутарстанри виççĕмĕш хула, унта 270 пин çын пурăнать. Хула çамрăк-ха – 1961 çулта çеç никĕсленнĕ. Промышленность вăйлă аталаннă. 2002 çулта, сăмахран, 37,1 миллиард тенкелĕх продукци кăларнă. Ульяновск облаçĕ, Чăваш Республики, Мари Эл, Мордови кăларнă продукцие пĕрле хушсан та ун чухлĕ пулаймасть. Раççей нефтехими отраслĕн продукцийĕн 25 проценчĕ Анат Камăра тухать. Кунта вырăссем (46,1 процент), тутарсем (49,2) ытларах пурăнаççĕ, çаплах чăвашсем, украинецсем, пушкăртсем, мари, мордва, удмуртсем пур. Ку хулара «Раççейĕн чи лайăх мэрĕ-2002» пурăнать – Ильсур Метшин. «Нефтехимик» хоккей

команди – çĕршывра чи вăйлисенчен пĕри. Теплоходпа килнисене тутарсен çурхи уявне – Сабантуя курма илсе кайрĕç. Калăпăшĕ, чăнах та тĕлĕнтерет. Хула хĕрринчи ятарлă вырăна (ăна Майдан теççĕ) 110 пин çын пуçтаранна. Артистсем пысăк представлени кăтартрĕç. Юпа çине хăпаракан Назировсем – ашшĕпе ывăлĕ – тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕç. Иккĕшĕ умлăн-хыçлăн улăхрĕç, ашшĕ пуçхĕрлĕ хăпарчĕ. Чи çӳлте (20 метра яхăн) хăтланкаларăшсемпе савăнтарчĕç. Ун пеккине циркра та  кураймăн.

Маншăн чи савăнăçли вара чăваш артисчĕсене ятарлă площадка уйăрса пани пулчĕ. Ăна чăваш гимназинче ĕçлекен Галина Спиридонова ертсе пычĕ. Кунта вырăнти «Шăнкăрав» фольклор ушкăнĕн юррисем инçете сарăлчĕç. Эпир Етĕрне район хаçачĕн  редакторĕпе Евгений Ивановпа пухăннисене Чăваш Ен тата Чĕмпĕр Ен чăвашĕсенчен салам сăмахĕ каласа хавхалантартăмăр. Çаплах кунта кĕрешĕн (православи тĕнне кĕнисем) тутарсем те юрларĕç-ташларĕç. Вĕсен тумĕ интереслĕ вара: икĕ аркăллă кĕпе, саппун пуçĕ çинче тутар тĕрриллĕ кăшăл – темиçе культура пĕрлешнĕ.

Каç енне «Джалиль» кинотеатрта «Культура в эфире-2005» телефестиваль (вăл çак хулара тăваттăмĕш хут иртет) çĕнтерӳçисене чыс турĕç. Телекомпанисем 60 хуларан хутшăннă унта. Чĕмпĕрсен сасси, шел, илтĕнмерĕ.

### Хусан

Тăваттăмĕш кун ирхине каллех 1000 çулхи Хусана пырса чарăнтăмăр. Уйрăлма вăхăт çитрĕ.

Конгреса хутшăнакансем çĕкленĕ ыйтусем питĕ кăткăс, çивĕч. Вĕсене туххăмрах татса пама май çук, çавăнпа та ĕç малалла пырать. Кĕркунне Дагомыс хулинче тепĕр

пуху ирттерĕç Патшалăх Думин депутачĕсем. Раççей пресси паян юпăллă çул умĕнче – хăшне суйласа илмелле? Ку чух саккун кăларакан органсем тивĕçлипе ĕçлемелле. Саккунсен йышĕ сахалтарах пултăр (Англире çулталăкра 14 саккун çеç кăлараççĕ) – вĕсен усси обществăшăн ытларах пултăр.

Конгреса хутшăнакансем юлашкинчен регионсенчи прессăна сыхласа хăварас тесе резолюци йышăнчĕç.

“Канаш”, 26 №, 2005 ç., çĕртме, 30.

## Сумлă çыннăмăр вилтăпри çинче

Юпа уйăхĕн 15-мĕшĕнче Вениамин Афанасьев вилнĕренпе пилĕк çул çитрĕ.

1992 çулта Ульяновск облаçĕн чăвашĕсем Кивĕ Улхашра иртнĕ пĕрремĕш конференцире обществăлла канаш суйларĕç, унăн ертӳçи пулма Вениамин Васильевич Афанасьева шанчĕç. Вăл çак канаша 1997 çулччен ертсе пычĕ (çак çул Ульяновскра чăвашсен наципе культура автономийĕ йĕркеленчĕ).

Вениамин Васильевича вилнĕ хыççăн «Ульяновск хулин Хисеплĕ гражданĕ» тата «Ульяновск облаçĕн Хисеплĕ гражданĕ» ятсем парса чысларĕç. Асăрхаттаратпăр: çак хисеплĕ ятсене ăна чăваш наци юхăмĕнче тунă сулмаклă ĕçсемшĕн панă. Ку Вениамин Афанасьева та, Чĕмпĕр чăвашĕсене те сума суни пулать.

В. Афанасьев Мелекесс районĕнчи Слава поселокĕнче 1930 çулта нарăсăн (февралĕн) 10-мĕшĕнче çуралнă. Халĕ ку ял çук ĕнтĕ, çапах та Вениамин Васильевича хăй ыйтнипе ун масарĕ çинче пытарнă. Вăл вилнĕ кун вилтăпри çине Ульяновскран ушкăн (мăшăрĕ – Галина Николаевна, тăванĕ – Василий Краснов, Ульяновскри И.Я. Яковлев обществин ертӳçи Владимир Бельский тата çак йĕркесен авторĕ) кайрĕ. Вĕсем вилтăпри çинчи палăк çумне «Почётный гражданин Ульяновской области» тесе çырнă мрамор плитине вырнаçтарчĕç. Ку ĕçе Новоселкире пурăнакан тăванĕсем – Нина, Вера, Фёдор Симуковсем, Елена Лавренчук – хутшăнчĕç.

Мелекесс районĕ.

“Канаш”, 42 №, 2005 ç., юпа, 20.

# Минтимер Шаймиев:
## *«Тăван чĕлхен пуласлăхĕ хамăртан килет»*

Кăçал пирĕн кӳршĕсен – тутарсен – пысăк уяв пулчĕ. Тутарстан Республикин тĕп хули – Хусан 1000 çул тултарчĕ. Уяв питĕ анлă иртрĕ, унта Раççей Президенчĕ Владимир Путин тата СНГна кĕрекен çĕршывсен пуçлăхĕсем пулчĕç. Хусан сăн-сăпачĕ куç умĕнчех улшăнчĕ: мĕн чухлĕ чаплă çурт ӳссе ларчĕ! «Ветхое жилье» программăпа ĕçлесе çынсене 30 пин çĕнĕ хваттер панă.

Çулталăк пĕтĕмлетĕвĕсене туса ТР Президенчĕ Минтимер Шаймиев Кремльти представительствинче пресс-конференци ирттерчĕ. Унта республикăри хаçатсен, Раççейри тутарла тухса тăракан хаçатсен редакторĕсене чĕннĕ. Вĕсен хушшинче чăваш хаçачĕсем те пур – «Хыпар», «Хресчен сасси» (Чăваш Республики), «Сувар» (Хусан), «Канаш» (Чĕмпĕр).

- Эпир çак пысăк ĕçе тума пултартăмăр! – терĕ чи малтан Минтимер Шарипович. – Апла пулсан пирте вăй хăват та, мăнаçлăх та пур. Эпир хамăра хамăр хисепленине пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса патăмăр. Пире вăрçăççĕ пулсан – апла эпир мĕн-тĕр аваннине тăватпăр. Çак лару-тăрура малалла хамăр çулпа утма хăюлăх та кирлĕ пулчĕ. Унсăрăн çĕнĕ условисенче ĕçлеме май çук.

Чăнах та, Тутарстан Республикинче нефть пур: вăл мĕнпур промышленноçăн 30 процентне йышăнать, республика бюджечĕн 40 процентне парать. Çулталăкра 30 миллион тонна нефть кăлараççĕ.

Кăçал 90 пин метр çĕре пăраласа чавнă. Çак никĕс

çинче нефтехими пысăк утăмсемпе аталанать. Анчах та аталану пĕр енлĕ çеç тени тĕрĕс мар. Машиностроени те хăй тӳпине хывать. КамАЗ автомобильсем туса кăларакан завод, тĕслĕхрен, 40 миллиард тенкелĕх продукци кăларнă (пĕтĕм республикипе пурĕ 500 миллиард). Халĕ 16 модификаци тухать. Пурте – заказпа. Промышленность Анат Кама, Çыр Чалли, Элмет, Алапука тăрăхĕсенче уйрăмах вăйлă аталаннă. Кунта ĕçлекенсем çитмен пирки вахта меслечĕпе вĕсене 150-200 çухрăмран турттараççĕ. «Красный восток» заводăн сумĕ те ӳснĕ, халĕ вăл сăра туса кăларассипе Раççейре 2-мĕш вырăн йышăнать.

Çак вăхăтрах кунта социаллă ыйтусем те чи малта. Социаллă ипотека меслечĕпе бюджетра ĕçлекенсем, çамрăксем, ял çыннисем валли çурт-йĕр тăвасси малалла пырать. Спорт питĕ вăйлă аталаннă, 10 ытла команда чи çӳллĕ шайра вылять, вĕсем Раççейре тата Европăра пысăк кăтартусем тăваççĕ.

- Пире хăш-пĕри спорт валли укçа нумай уйăратăр тесе ӳпкелеме пăхать. Уйăрма пăрахсан мĕн тейĕç-ши вĕсем? Паллах, тата хытăрах вăрçĕç. Эпир çамрăксемшĕн тăкаклатпăр-çке çак-укçа тенке, хамăр пуласлăхшăн. Ачасене ку питĕ кирлĕ. Спорт площадкине выляма тухнă ачасен куçĕнчен пăхăр-ха. Мĕнле ялкăшаççĕ вĕсем! Ку ачасем чунĕсемпе – тахçанах çĕнтерӳçĕсем ĕнтĕ. Вĕсен çак ĕмĕчĕсене пирĕн пурнăçа кĕртме пулăшмалла. Спорт патриотизм çуратать, спорт – пирĕн пуянлăх.

Укçа нихçан та çитмест. Укçана мĕн тума ĕçлесе илетпĕр эпир? Пурнăçа аталантарма, малашне пурăнма тăкакламашкăн. Апла пулсан эпир тĕрĕс тăватпăр, - тесе палăртрĕ М. Шаймиев.

Район центрĕнче – Çарăмсанта – балет шкулĕ уçăлнă. Çакă çитĕнӳ мар-и? Пĕрре аслă пĕлӳллĕ çынсем валли ĕç

вырăнĕ тупăннă, тепре ачасен пултарулăхне пĕчĕкĕллех уçма май пур, вĕсем усăллă ĕçе явăçнă. Тĕрĕссипе, çак пурнăçра мĕн чухлĕ çын хăйĕн чунĕ ыйтнă çулпа кайман! Мĕншĕн тесен вĕсен ачаллах хăйсен пултарулăхне уçма май пулман.

Журналистсем наци чĕлхисен пуласлăхĕ пирки те ыйту хускатрĕç.

- Тăван чĕлхене аталантарма никам та чăрмантармасть пире. Ку пиртен килет. Мĕн чухлĕ юхăм, çын çак енĕпе ĕçлеççĕ! Апла пулсан çителĕксĕр ĕçлетпĕр. Кашни ашшĕ-амăшĕнчен, ачаран та килет ку. Хулара тăван чĕлхене вĕренме йывăр тетпĕр. Акă пирĕн чаплă артисткăна Венера Ганеевана илер. Хулара ӳснĕ пулин те тутарла тап-таса калаçать. Ыттисене çапла пулма кам чарнă? Наци хаçачĕсем пирки те çакна каламалла. Вĕсем патшалăха, халăха кирлĕ пулсан тухчăрах. Хальхи саманара вĕсене йывăртарах килет. Çавăнпа тимлĕх те ытларах пулмалла. Мĕншĕн тесен çак хаçатсем общество ыйтăвĕсене хускатаççĕ, вĕсене татса пама пулăшаççĕ, чĕрĕлĕх çулне шыраççĕ. Наци хаçачĕсен ыйтăвĕсен айккинче юлмăпăр, вĕсене пулăшу парăпăр, - тесе хуравларĕ президент.

Вăл хăйĕн сăмахĕсене çирĕплетсе çакăн пек фактсем илсе кăтартрĕ. Удмурти Республикин парламентĕнче пурĕ те 3 удмурт çеç, Ижевск хулин Думинче вара – пĕрре те çук! Çак лару-тăрура тĕп халăхăн интересĕсене кам хӳтĕлĕ? Мĕншĕн тĕп халăх хăйĕн хастарлăхне кăтартмасть? Апла пулсан хăвăн интересӳшĕн çивĕчрех кĕрешмелле, сассуна янăравлăрах памалла, тĕрлĕ шайри влаçпа калаçу пуçармалла.

М. Шаймиев хăй те ырă пурнăç йĕркине илсе пырать. Хусанта иртекен спорт вăййисене (хоккей, футбол, баскетбол, ватерпол тата ытти те) май пур таран час

çӳрет. Шахматла аван вылять, бассейнра ишет. Кăçал, сăмахран, 410 çухрăма яхăн ишнĕ (кунне 1 çухрăм ытла).

- Çĕнĕ ĕç пуçлама шикленсе тăмалла мар, шавах малалла утмалла. Эпĕ, сăмахран, çур кун хушшинче йĕлтĕрпе ту çинчен ярăнма вĕрентĕм. Чăнах та, ӳксе аманас хăрушлăх пур. Анчах та кашкăртан хăрасан вăрмана та каймалла мар. Шутланă тĕллеве пурнăçласан вара чунра мĕн чухлĕ хавхалану! Çак туйăм малалла пурăнма, çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшать,- тесе вĕçлерĕ сăмахне М. Шаймиев.

Хусан.

“Канаш”, 52 №, 2005 ç., раштав, 29.

# Мускавра Раççейри чăвашсен съезчĕ иртрĕ

Чăваш Республикин Президенчĕн Мускаври представительстви çуртĕнче Раççей чăвашĕсен федераллă наципе культура автономийĕн 5-мĕш отчетпа суйлав съезчĕ иртрĕ. Унта ултă регионтан 19 делегат тата чĕннĕ хăнасем хутшăнчĕç. Ульяновск облаçĕнчен пилĕк делегат: В.Сваев, Ф.Улендеева, О.Мустаев, Н.Ларионов, В.Федоров. Çаплах «Эртел» ушкăн арĕсем: В.Крлыков, В.Софронов, А.Юманов, А.Альмяшкин.

Федераллă наципе культура автономи президенчĕ Анатолий Аксаков – Раççей Патшалăх Думин депутачĕ – пухăва уçнă май çакна палăртрĕ: автономи пысăк ĕç илсе пырать, анчах юлашки вăхăтра кăштах пăтăрмахсем пулчĕç. Çавна пула юхăм хăвăртлăхĕ чакрĕ. Ĕçе çĕнĕ вăй пама, автономи тытăмне улăштарма пухăнчĕç те ĕнтĕ делегатсем.

- Пирĕн çумра хастар çамрăксем ӳсеççĕ. Вĕсем тăван халăхран уйрăласшăн мар, унпа пĕрле пуласшăн. Çавсене хамăр йĕри-тавра явăçтармалла, - терĕ Анатолий Геннадьевич.

Мускаври официаллă майпа 50 пине яхăн чăваш пурăнать, шута илменнисем вара 100 пине те çитме те пултараççĕ. Студентсен йышĕ çеç – 1000 ытла. Вĕсене Чăваш Республикине тата чăвашсем нумай пурăнакан регионсене таврăнма, ĕçе вырнаçма пулăшмалла. Çакна автономи кирлĕ ĕç тесе шутлать, мĕншĕн тесен кун пек тăван халăха усси нумайрах пулать.

Пухура çĕнĕ автономие – Мурманск чăвашĕсене – федераллă тытăма кĕртрĕç. Ку регионта 2000 ытла чăваш çеç пулсан та вĕсем пĕр çĕре чăмăртанса ĕçлеме тăрăшаççĕ. Халĕ федераллă автономие ултă регион кĕрет.

Чăвашсен обществăлла организацийĕсем вара – Расçейĕпе 67. Вĕсем çинчен аванах пĕлсе каймаççĕ-ха Мускавра, информацие пĕр çĕре пуçтарман. Автономи çак ĕçе хăй çине илчĕ.

Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен наципе культура автономийĕн пуçлăхĕ Владимир Сваев хăйĕн сăмахĕнче Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен пурнăçĕпе паллаштарчĕ. Тутар, мордва, чăваш автономийĕсем пĕрлешсе ĕçленине, вĕсен шухăшĕсене, тĕллевĕсене пурнăçлама Саккунсем кăларакан Пуху укçа-тенкĕ уйăрма пулăшнине палăртрĕ. Наци политикине тĕрĕс тытса пыма С.Морозов кĕпĕрнаттăр чылай вăй хурать. Облаçри 161 шкулта тĕрлĕ майпа чăваш чĕлхине, культурине вĕренеççĕ (пурĕ 4 пин ытла ача). Кашни районта тенĕ пекех автономи филиалĕсем пур. Акатуй, И.Я. Яковлев кунĕсем тата ытти нумай мероприяти йăлана кĕнĕ, кашни çулах иртеççĕ.

- Халĕ эпир пысăк ĕç пуçарнă: И.Я. Яковлев палăкне лартасшăн. Çак ĕçре чăваш усламçисен «Эртел» ушкăнĕ палăрчĕ, вĕсем чылай укçа-тенкĕ уйăрчĕç. Пирĕн кăçал çак сăваплă ĕçе пĕрлехи вăйпа вĕçлемеллех, - терĕ Владимир Ильич.

Вăл çаплах Ульяновскри ГТРКра наци телекăларăмĕсене чарса лартни пирки пăшăрханса калаçрĕ, пулăшу ыйтрĕ.

А. Аксаков çак ыйтупа Михаил Фрадков премьер-министр патне çитме шантарчĕ.

В. Сваев Мускав чăвашĕсене «Канаш» хаçат редакцинче кăларнă кĕнекесен пуххине парнелерĕ. Чĕмпĕр Ен делегацинчен çаплах вĕрентӳ департаменчĕн тĕп специалисчĕ Федосия Улендеева тата Олег Мустаев тележурналист тухса калаçрĕç.

Тутарстанри чăвашсен наципе культура автономин

пуçлăхĕ Константин Яковлев хăйсен опытĕнчен нумай çĕннине каларĕ. Кунти чăвашсем тĕрлĕ пĕрлешӳсене сапаланса кайман, пурте – автономи тытăмĕнче. Малашлăха çирĕппĕн утма укçа-тенкĕ кирлĕ, ăна тума ятарлă тытăм пулмалла. Акатуйсем кăна ирттерни çителĕксĕр, чăваш шкулĕсем, класĕсем уçмалла. Литература кăлармалла. ЧНК ĕçĕнчи чылай çитменлĕхсене те палăртрĕ Константин Яковлев. Пухусем умĕн пăтрашу тытăнать. Регионсенчен делегатсен темиçе списокĕ пырать. Çак япалана пĕтермелле, Чăваш наци конгресĕ чăвашсене пĕрлештерекенни пулмалла.

Мускавра чăваш çамрăкĕсен пĕрлĕхĕ йĕркеленни те савăнтарать. Вĕсен ятĕнчен Ольга Борисова студентка калаçрĕ. Вĕсем малашне федераллă автономин сайтне йĕркелесе яма шантарчĕç.

Нумай ыйту хускатрĕç кунта: Мускаври чăваш ачисем валли тăван чĕлхене вĕрентме шкул уçасси, телевиденире Раççей халăхĕсем çинчен каласа паракан кăларăмсем йĕркелесси, Мускаври «Ентешсем» хаçата эрнере пĕрре кăларасси, кашни регионта чăвашсене шута илесси, чăваш ачисем валли кану лагерĕсем тăвасси, олимпиадăсем ирттересси, фольклор фестивалĕ йĕркелесси, çамрăксен пухăвне ирттересси (вăл тепĕр çулхи пуш уйăхĕнче пулмалла), чăваш ачисене аслă шкула вĕренме кĕме пулăшасси, усламçăсен пĕрлĕхĕсене йĕркелесси, МГУра чăваш чĕлхи кафедрине уçасси, «Раççейри чи лайăх чăваш вĕрентӳçи» конкурс тăвасси, тава тивĕçлĕ çынсен списокне пухасси тата ытти те.

Делегатсем малашне наципе культура автономисем валли бюджетран укçа уйăрма ыйтса çыру хатĕрлеме пулчĕç.

Юлашкинчен федераллă наципе культура автономи

тытӑмне ҫӗнӗлӗхсем кӗртрӗҫ. Президент пулма тепӗр срока Анатолий Аксакова шанчӗҫ. Вице-президента Мускаври представительствин пуҫлӑхӗн пӗрремӗш ҫумне, Раҫҫейри «Ылтӑн шайба» ача-пӑча хоккей федераци президентне Анатолий Иванович Григорьева суйларӗҫ. Пурнӑҫлав директорӗ – Владимир Вячеславович Селивестров (ҫар ҫынни пулнӑскер, финансист). Ҫаплах федераллӑ автономи канашне те 27 ҫынран суйларӗҫ, унта Чӗмпӗр Енрен В. Сваев кӗчӗ.

Малашне ҫакӑн пек пухусем тӗрлӗ регионсенче куҫса ҫӳресе ирттерӗҫ. Ҫитессине Тутарстан чӑвашӗсем йышӑнма кӑмӑл турӗҫ.

“Канаш”, 22 №, 2006 ҫ., ҫӗртме, 1.

# Никам та выляса ямарĕ

Юханшыв е кӳлĕ патне кайнă чухне эпир анаталла анма хăнăхнă. Николаевка районĕнчи Шуркӳль (Белое Озеро) çитес тесен вара... тăвалла хăпармалла. Райцентртан кăнтăралла пăрăнатăн та – автобус 20 çухрăма яхăн мĕкĕрленсе пырать. Хăпарса çитетĕн те – вăрман ăшĕнче Шуркӳль тĕкĕр пек çутатса выртать.

Питĕ илемлĕ вырăн ку, çутçанталăк палăкĕ. Ун çинчен область тулашĕнче те лайăх пĕлеççĕ, кунта таçтан çити канма килеççĕ. Ахальтен мар. Кӳлĕ тинĕс шайĕнчен 360 метр çӳллĕшĕнче вырнаçнă (Чăнлă районĕ, сăмахран, - 230), ун лаптăкĕ 90 гектар. Вăрăмăшĕ 2 çухрăм, сарлакăшĕ 900 метр, тарăнăшĕ 6 метр. Шуркӳль 250 пин çул каялла пулса кайнă. Кунта çулла шăрăх пулмасть. Çĕпĕр çутçанталăкне çывăхрах. Лиственница ӳсет, кĕтмел (брусника), шур çырли (клюква) татма пулать. 1926 çулта Б. Келлер академик кунта тундрăри ӳсентăрана курсан: «Финлянди кĕтесĕ», - тенĕ.

Çакăн пек хитре тавралăхра «Кĕпĕрнаттăр ăмăртăвĕсем» иртрĕç. Унта облаçри тӳре-шара (чиновниксем) хутшăнчĕ, урăхла каласан – патшалăх тата муниципаллă служащисем. Вĕсем палаткăра пурăнчĕç, апат кăвайт çинче хатĕрлерĕç.

Ăмăртăва 34 команда тухрĕ. Винтовкăпа пересси, турник çинче çакăнса тăрасси, тăршшĕне сикесси, волейбол, вĕрен туртасси тата ытти пулчĕç программăра. Чи интересли вара шывра иртрĕ. Шыври гандбол – ватерпол – пурне те килĕшрĕ. Чи вăйлă шăв-шав çакăнтаччĕ. Командăра виçĕ арçын тата пĕр хĕрарăм. Паллах, ӳт-пӳпе паттăртараххисене выляма çăмăлтарах. Анчах çакăн пек факт: правительство командинче боксла выляссипе йывăр виçери тĕнче чемпионĕ Алексей Лёзин

вылярĕ пулсан та Чартаклă районне парăнчĕ.

Район тата хула пуçлăхĕсем те нумай килнĕ – вунтăххăрăн. Çакăншăн командăсене хушма очко пачĕç.

Ăмăрту çĕнтерӳçи – Чартаклă районĕ, иккĕмĕшĕ – Николаевка районĕ, виççĕмĕшĕ – Вешкайма. Выляса яракансем вара пулмарĕç. Пурте лайăх канчĕç, вылярĕç-кулчĕç, пĕр-пĕрринпе паллашрĕç, киле лайăх кăмăлпа таврăнчĕç.

Николаевка районĕ.

"Канаш", 27 №, 2006 ç., утă, 6.

# Тимĕрçен тăрăхĕ пĕттĕр теççĕ-и...

Çак кунсенче «Молодежная газета» хаçатра Анат Тимĕрçен çывăхĕнчи промышленность каяшĕ упрамалли вырăн çинчен çырнă статья тухрĕ. Унта çапларах ăнлантарнă: Чăнлă район пуçлăхĕ Х.В. Рамазанов промышленность каяшĕсене çакăнта пытарма ирĕк панă.

Мĕнле-ха капла? Пĕр уйăх каялла районти пуçлăхсемпе ирттернĕ пухура Ханяфи Валиевич çакна хирĕçлесе, пăшăрханса калаçрĕ, халăха çак ĕçе хирĕç тăма чĕнчĕ. Вăл çак вăхăтра хăйĕн шухăшне нивушлĕ тĕпрен улăштарнă-ши? Ĕç-пуçа уçса пама ыйтса Х.В. Рамазанов патне шăнкăравларăмăр.

Ханяфи Валиевич пире çапла ăнлантарса пачĕ:

- Ку материала ăçтан илнине пĕлместĕп, манпа никам та калаçман. Кунта ман çинчен çырни тĕрĕс мар. Эпĕ шухăша улăштарман. Çынсен сывлăхĕшĕн сиенлĕ япаласене пирĕн района килсе пытарма хăтланнине эпĕ яланах хирĕç. Халăх та хăйĕн сăмахне çирĕп калать: çук! Эпир 20 çул каялла ку ыйтупа тĕл пулнăччĕ ĕнтĕ, ун чухне район çыннисен лăпкă пурнăçне хӳтĕлесе хăварма пултартăмăр. Халĕ пирĕн тӳре-шарапа (чиновниксем) мар, «çĕнĕ вырăссемпе», услам çыннисемпе кĕрешме тивет. Вĕсем ним умĕнче те чарăнса тăмаççĕ, пысăк укçа шăрши вĕсен ăс-тăнне сĕрĕмлетет. Пирĕн тĕллев: пĕтĕм халăха чĕнсе, пĕр шухăшлă пулса çак çынсене хирĕç тăмалла! Тимĕрçен халăхĕ тĕлĕрмест: çак кунсенче 1000 çын ытла ял хĕррине тухса çула хупласа хучĕ, хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ. Каласа хăвармалла: промышленность каяшĕсен масарĕ – хуллен çурăлакан бомба. Ăна хута ярсан çывăхри ялсен çыннисем малашне хăрушă чирсемпе чирлеме пуçлĕç, вăхăтсăр

вилсе пĕтĕç. Сывă юлнисем тухса кайĕç, чăваш ялĕсем пушанса юлĕç.

Чăнлă районĕн çыннисем лăпкă, шанчăклă purăнма ирĕк пур. Çак ирĕке туртса илме тăрăшакансене пирĕн парăнмалла мар. Пĕтĕм халăх шухăшне çул çине тухнă 90 çулхи карчăк каларĕ: «Манăн тата пурăнас килет-ха!»

Ман шутпа, эпир пурте пĕрле хирĕç тăрсан çеç хамăр ирĕке хўтĕлеме пултаратпăр.

“Канаш”, 27 №, 2006 ç., утă, 6.

# Барăш чăвашĕсем патĕнче – виçĕ кун

## Ку тăрăхри ентешсем тăван чĕлхене çухатса пыраççĕ

Районта паян 2144 чăваш пурăнать. 1989 çулта вара 4200 ытла пулнă. Тӳрех курăнать: вĕсен йышĕ пысăк хăвăртлăхпа чакса пырать. Ку тăрăхри ентешсем область центрĕнчен 150 яхăн çухрăмра вырнаçнă, Шупашкара çитме – 400. Çавăнпа та вĕсем чăваш тĕнчинчи культура пурнăçĕнчен аяккарах тăраççĕ.

Раштав уйăхĕн варринче эпир Çĕнĕ хулари сĕтел-пукан ателйин директорĕпе Д.В. Кузьминпа виçĕ кун Барăш районĕнче пултăмăр. Пирĕн тĕллев – çакăнти чăвашсен пурнăçĕпе паллашасси, «Канаш» хаçат çырăнтарасси тата «Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен кĕске энциклопедийĕ» валли материалсем пуçтарасси.

## ПĔРРЕМĔШ КУН

Чи малтан район администрацине кĕрсе хамăр мĕн тума килнине пĕлтертĕмĕр. Пире культура пайĕн пуçлăхĕ Н.В. Каштанова ăшшăн йышăнчĕ, кăштах чăвашсем çинчен каласа пачĕ. Унтан «Барышские вести» хаçат редакцине кĕтĕмĕр, Т.Н. Радионова редакторпа тата журналистсемпе калаçрăмăр.

Чăвашсем ку тăрăха епле килсе лекни пирки çакăн пек сăмах çӳрет. 17-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче айăпа кĕнĕ çынсене решеткеллĕ читлĕхсемпе Çĕпĕре каторгăна ăсатнă. Çак тĕле çитсен лешсем пăлхав çĕклеççĕ. Виçĕ пĕртăван чăваш читлĕхрен тухса вăрманалла тарать. Кайран вĕсем çакăнта виçĕ чăваш ялĕ никĕслеççĕ: Алим ятли – Аслă ял

е Асьял (вырӑсла Алинкино), Емелей яла хӑй ятне парать (вырӑсла Малая Хомутерь), Иван – Чӑваш Решетке (ӑна Эршке, Эшке тесе те калаҫҫӗ) – Чувашская Решётка.

1930 ҫулта колхоза кӗрес теменнисем ҫак ялсенчен уйрӑлса ҫӗнӗ ялсем, посёлоксем никӗсленӗ. Паян Степановка посёлокӗнче 86 ҫын (40-ӗшӗ пенсионер) пурӑнать, Хӗрлӗ Барӑшра – 80, Садовый посёлокра – 47, Орлово посёлокра – 1.

Чӑваш Решетке ялӗнче клуб директорӗпе Людмила Михайловна Ильинапа (вӑл УОЧНКАн районти уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ) тата Маргарита Николаевна Бабынькина администраторпа тӗл пултӑмӑр. Кунта 750 ҫын пурӑнать (90 проценчӗ чӑваш), клуб, библиотека, медпункт, шкул пур. Танлаштарма: ялта 1996 ҫулта 865 ҫын пурӑннӑ. Вунӑ ҫулта 115 ҫын чакнӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех чӑвашла пӗлекенсем сахалланса пыраҫҫӗ, мӗншӗн тесен 20 ҫултан кӗҫӗннисем вырӑсла калаҫмаҫҫӗ ӗнтӗ. Сӑлтавӗ – шкулта тӑван чӗлхене вӗрентменни.

Клуб директорӗ пӗр-пӗр мероприяти ирттернӗ чух ҫакӑн пек шӳтлӗ япала тӑвать: ҫамрӑксенчен хӑшӗ чӑвашла нумайрах сӑмах тупса калать – ҫавна тӳлевсӗрех кӗртсе ярать. Людмила Михайловна 26 ҫул ӗнтӗ фольклор ушкӑнне ертсе пырать, вӑл ялти тата районти уявсене тӑтӑшах хутшӑнать. Чи хастар юрӑҫӑсем – Матрена Ясницкая, Нина Кафидова, Мария Алёнина, Маргарита Бабынькина...

Ял администраторӗ уҫӑ саспа юрланине ҫеҫ мар, хӑйӗн ӗҫне тивӗҫлӗ тума тӑрӑшнипе те палӑрнӑ. Ӗҫе пуҫансанах (ял тӑрӑхӗсем йӗркеленсен) Асьялта ҫынсене килӗрен йыхӑрса ҫӳресе кӗпер тума пуҫтарнӑ. Пӗр кун хушшинче нимене пынӑ ҫынсем яла икӗ пая уйӑракан ҫырма урлӑ кӗпер хывнӑ. Килсенчен илсе килнӗ апат-ҫимӗҫрен яшка пӗҫернӗ, ҫумӑр айӗнче ӗҫленӗ пулин те

никам та пăрахса кайман. Çавăн пекех Хĕрлĕ Барăшра та кĕпер хывнă. «2007 çулта пусăсене йăлтах юсăпăр», - тет М. Бабынькина.

Чăваш Решеткери вăтам шкулта – 96 ача. Тăван чĕлхене предмет шучĕпе вĕрентмеççĕ. Пуçламăш класс вĕрентӳçи Светлана Викторовна Кузнецова кашни çул 6-мĕш класрисем валли эрнере 1 сехет «Чăваш культури» факультатив (вырăсла) илсе пырать. Кăçал кунта 10 ача çӳрет. Çак ĕç-пуçпа, паллах, мухтанмаллиех çук, çапах та вăл ырă енне улшăнас шанчăк пур. Шкулта ĕçлекен Татьяна Валерьевна Рупасова Чăваш патшалăх университетĕнчен чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче куçăмсăр (заочно) майпа 3-мĕш курса вĕренет. Калаçнă тăрăх, унăн чăваш чĕлхи предметне вĕрентес кăмăлĕ пысăк. Кунта вĕрентӳ департаменчĕн, районти вĕрентӳ пайĕн, директорăн пулăшăвĕ те кирлĕ пулать.

Ку ялта 2006 çулта иккĕмĕш хут район Акатуйне йĕркеленине те палăртмалла (пĕрремĕшĕ Асьялта иртнĕччĕ). Çынсем чăваш концерчĕшĕн тунсăхлаççĕ, артистсене курасшăн. «Канаш» хаçата çырăнса илме васкамаççĕ: вула пĕлместпĕр теççĕ. Хăйсем вара чăвашла шăкăртатса калаçассĕ. Ун пек калакансене çакăн пек тĕслĕх илсе кăтартма пулать.

Мускавра ĕçлесе пурăнакан чăваш академикĕ Геннадий Волков пĕр вăхăта Германие кайнă, университетра вĕрентнĕ. Вăл нимĕç профессорĕпе туслашса каять. Лешĕ Геннадий Никандровича хисепленипе çур çулта чăваш чĕлхине вĕренет! Эпир вара, чăвашсем, чăваш чĕлхинче 4 саспалли ытлашши пулни çине йăвантарасшăн. Ним йывăрри те çук унта – вĕренес килни, пĕлес килни çеç кирлĕ! Тăтăш вуласан веçех пĕлсе çитетĕн.

Вырăнти «Луговой» хуçалăх юхăннă, çынсем ĕççĕр тăрса юлнă. Директорĕ (тутар çынни) Николаевка

районĕнчен 70 çухрăмран кашни кун килсе çӳрени тĕлĕнтерчĕ вара! Çĕрсем акăнмаççĕ, пуçлăхсем вăрман касса сутаççĕ – çапларах хуçалăхри лару-тăру.

Юлашкинчен çанталăкĕ те тĕлĕнтерчĕ. Ирхине – кĕркунне пекчĕ: ăшă, юр çук... Каç енне урăм-сурăм çил тухрĕ, пĕтĕм тусана йăтрĕ. Ун хыççăн лапка-лапка юр çурĕ, тăман вĕçтерчĕ, çĕре шап-шурă туса хучĕ. Температура та 3-4 градус сивĕ.

Пирĕн çул – район центрĕнчи хăна çуртне (гостиницăна). Паянхи тĕлпулусене пĕтĕмлетмелле, ыран валли план тумалла.

## ИККĔМĔШ КУН

Ирех Барăшра пурăнакан Лев Павлович Медяков патне кĕтĕмĕр. Вăл сакăрвуннăра, пĕччен пурăнать. Самар тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Аслă вăрçăран таврăннă хыççăн кунта направленипе килнĕ, ĕмĕрĕпех çакăнта пурăннă. Нумай интереслĕ япала çинчен каласа пачĕ Лев Павлович, юлашкинчен нихçан та çисе курман пулăпа – белугăпа – хăналарĕ. Ун хыççăн Асьяла çитрĕмĕр.

### Асьял (Алинкино)

Авăн (сентябрь) уйăхĕн 1-мĕшĕнче ку ялта икĕ хурлăхлă хыпар пулнă. Пĕрремĕшĕ – вырăнти тулли мар шкула (вăл пĕлтĕр 100 çулхи юбилейне паллă турĕ) хупса хунă. Халĕ ачасене (вĕсем вунçиччĕн) Чăваш Решеткене автобуспа турттараççĕ. Иккĕмĕшĕ – районĕпе тата облаçĕпе паллă вĕрентӳçĕ Елена Павловна Беспалова вилсе кайнă. Вăл çур ĕмĕре яхăн шкулта ĕçленĕ, обществăлла ĕçсене ертсе пынă, таврапĕлӳ енĕпе нумай материал пухнă.

Унччен шăв-шавпа кĕрлесе тăнă шкул халĕ вăрман

хĕрринчи сăртра тăлăххăн курăнса ларать, вĕренмешкĕн ир-ирех никама та йыхăрмасть. Библиотекăри кĕнекесене хăшне Чăваш Решеткене илсе кайнă, хăшне ял библиотекине куçарнă. Шкул музейĕ вырăнĕнчех-ха, Çĕнĕ çул иртсен вара унта хурал пулмасть терĕç. Мĕнле шăпа кĕтет-ши музее?

Асьялта 300 çын пурăнать (95 проценчĕ чăваш). Кунта халĕ медпункт, клуб, ял библиотеки юлнă. Библиотека заведующийĕ Тамара Николаевна Убина пире хăйĕн хуçалăхне кăтартать. Пурĕ 10 пин кĕнеке, вĕсенчен чăвашлисем 90 кăна. Юлашки чăвашла кĕнекесене 15 çул каялла Юхма Мишши парса хăварнă (халĕ эпир те темиçе кĕнеке патăмăр). «Канаш» хаçат подшивки пурри савăнтарчĕ – вулама çӳрекенсем те пур. Вĕренекенсем пирĕн хаçатпа усă курса рефератсем çыраççĕ.

Тамара Николаевна ача чухнехине аса илчĕ. Шкулта чăвашла вĕрентме пăрахсан (1956 çул хыççăн) ачасене тăван чĕлхепе калаçма чарнă. «Саккуна пăсакансене» «1» паллă лартнă. Вĕрентӳçĕсене – çӳлтен хĕснĕ. Пуйăс çинчи ачасем чăвашла калаçнине районти пуçлăхсем илтсен вĕсем вĕрентӳçĕсене çапла пĕлтернĕ: «Сирĕн ĕçĕре «нуль» лартмалла – ачасем каллех чăвашла калаçаççĕ!» Ак çапларах пистернĕ кунта тăван чĕлхерен!

Хуçалăх юхăнни пирки иртнĕ номерте çырнăччĕ ĕнтĕ (Асьялпа Чăваш Решетке пĕр хуçалăха кĕреççĕ). Çынсен ĕç çук. Вăрман хĕрринче пурăнакансем аптраса ӳкмен. Кăмпа, çырла пуçтараççĕ, милĕк çыхаççĕ те – Ульяновскран килекен усламçăсене сутаççĕ. Кун пек меслетпе пуяймăн – çапах та саплаштарма çитет. Чукун çул çинче 36 çул ĕçленĕ (кашни кун Барăша 10 çухрăма çуран кайса килнĕ) София Николаевна Илюйкина патне кĕрсе тухрăмăр. Унăн ывăлĕ Михаил, çар лётчикĕ,

1997 çулта Тверь облаçĕнчи Торжок хули çывăхĕнче вертолётпа ӳксе вилнĕ. Амăшĕ Мишшан ачалăхĕ çинчен каласа пачĕ.

Унтан килнĕ çĕре ял хĕрринчи çерем çине лартса хăварнă çăмăл машина – «Рено» - вырăнтан тапранаймасть. Çанталăк ăшă, нӳрлĕ – çурем путать. Чышса тапаланма тӳр килчĕ, вараланса пĕтрĕмĕр. Çапах та пирĕн план тăрăх Емелей ялне çитмелле.

**Емелей (Малая Хомутерь)**

Ку ялта тӳрех çакă куçа курăнчĕ: шатрун пӳртсем нумай. Чăнах та, вĕсем кивĕ, 30-40 е ытларах çул тунисем. Апла пулсан çак вăхăтрах çынсем лайăх çурт лартма вăй-хал çитернĕ. Яла кĕрсенех Пукрав ячĕллĕ илемлĕ чиркĕве асăрхатăн. Ăна кирпĕчрен классицизм вăхăтĕнче (1823 çулта) çĕкленĕ. 1970-мĕш çулсенче хупнă, 1983 çулта тепĕр хут уçнă.

Чи малтан вырăнти Ленин ячĕллĕ хуçалăх правленине çитрĕмĕр. Юрий Николаевич Фошин ертӳçĕ (вырăс) кăштах лару-тăрупа паллаштарчĕ. Чапли çук. Тăвата пин гектар çĕртен пинĕшĕ çеç сухаланать. Малтан 800 пуç шултра мăйракаллă выльăх пулнă – халĕ 42 ĕне. Вĕсене пĕр доярка сăвать. Ĕçлекенсен шучĕ – 28 çын (маларах 400 ытла пулнă).

- Çункăç хакĕпе тырă хакĕ шайлашаймаççĕ. Пĕр литр топливо туянма икĕ витре тырă сутмалла. Ун пек тĕрĕсмарлăха хресчен чăтаймасть. Ĕç-пуç кун пекех пырсан пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем саланса кайĕç, харпăр хуçалăхĕсем йĕркеленĕç. Анчах та ун хуçисем камсем пулĕç-ши? – пăшăрханать Юрий Николаевич.

Часах Емелей ял тăрăхĕн (унта 17 ял кĕрет) пуçлăхĕ Евгений Петрович Тихонов (çурма чăваш) çитсе кĕчĕ. Ун кантурĕ – çак çуртрах.

Ялта вăтам шкул, медпункт, Культура çурчĕ, библиотека, ача сачĕ, почта, телефон станцийĕ, лесничество пур. Кунта 760 çын пурăнать. Тӳрех каламалла: ку хутăш ял. Вырăссем, мордвасем, чăвашсем – шучĕпе пĕр танрах. Калаçма – вырăсла кăна. Хутăш мăшăрланусем нумай, ачисем, паллах, тăван чĕлхене пĕлмеççĕ. Ваттисем çеç калаçаççĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пирĕнпе тĕл пулма специалистсене пуçтарчĕ. Вĕсенчен пĕри кăна чăвашла пĕлет. Нина Геннадьевна Федорий, нимĕç чĕлхи вĕрентӳçи, шкулта «Асамат кĕперĕ» ятлă кружок вырăсла илсе пырать, унта ачасем чăваш культурине вĕренеççĕ. Кунта 5-9-мĕш классенчен 15 ача çӳрет. Виçĕ çул каялла музей йĕркеленнĕ, унта чăваш культурине сăнлакан япаласене пуçтарнă.

Емелейĕнче те халăх шучĕ чакса пырать. 2006 çулта тăватă ача çуралнă, 30 çын вилнĕ. Çапах пĕр ырă хыпар та илтрĕмĕр: Надежда Левашкина «Канаш» хаçат çырăнса илет. Тавах ăна.

Чуна ыраттарать пулин те тĕрĕслĕх çакăн пек: чăваш чĕлхин пуласлăхĕ çук кунта. Темиçе теçетке çултан Емелей çинчен: «Кунта хăçан-тăр чăвашсем пурăннă», - тесе çырĕç. Çапла çухатса пыратпăр чăваш ялĕсене...

Эпир Д.В. Кузьминпа икĕ кун çӳренĕ чăваш ялĕсем – Асьял, Чăваш Решетке, Емелей – район центрĕнчен çурçĕрелле вырнаçнă. Виççĕмĕш кун вара пирĕн маршрут – кăнтăралла: Хошширми (Кармалейка) тата Сантряпуç (Живайкино) ялĕсене çитмелле.

Çирĕм çухрăм ытла вăрман ăшĕпе пытăмăр. Тӳрех çакна асăрхатăн: йывăç турттаракан çурма прицеплă пысăк «Урал» автомобильсем çăмăл машинасенчен те нумайрах пек. Унталла та кунталла мĕкĕрленсе иртсе каяççĕ. Çапла пăхкаласа пырса пĕрремĕш яла çитрĕмĕр.

**Сантряпуç (Живайкино)**

Ялĕ пысăк, 900 çын пурăнать. Ăна 17-мĕш ĕмĕрте никĕсленĕ. Ятарлă урам пур – Чăваш касси, унта 50 çурт ытла. Çакăнта пурăнакан почтальонка патне кĕретпĕр. Ильичёвсем – хутăш çемье: Татьяна – мордва, Владимир – чăваш. Çемье пуçĕ ултă çул ниçта та ĕçлеместĕп тет. Вăл кăмака купалакан маçтăр иккен, çурлă-кĕрлĕ килти лашипе çынсен анкартисене акса-кăларса парать. Çапла икĕ ача çитĕнтереççĕ.

Татьяна почтальонка пире: «Кăшт маларах килнĕ пулсан çĕртен иртнĕ чăваш хĕрарăмне кураттăрччĕ», - терĕ. Пелагея Кузьминична Шикина çур çул каялла 105-ре вилнĕ иккен. Вăрçăра пулнă, ĕмĕрне вырăнти хуçалăхра вăй хунă.

«Канаш» çырăнакан пĕр çын та çук кунта. Çул çинче икĕ кинемее куртăмăр, хамăр хаçата, календаре парнелерĕмĕр. «Тепĕр çул валли «Канаш» çырăнатпăр», - терĕç. Кирлĕ мар теменшĕн те тав...

Ял библиотекинче Антонина Антоновна Смолькинапа калаçрăмăр. Кунта 13 пин кĕнеке, чăвашлисем пултăр терĕмĕр – парнелесе хăвартăмăр. Сантряпуçĕнче 35 процент чăваш терĕç, вырăссем те çавăн чухлех, ыттисем мордвасем. Садика 16 ача çӳрет.

Шкулти вырăс чĕлхи вĕрентӳçи Валентина Николаевна Вершилкина патĕнче пултăмăр. Вăл Асьялти Елена Павловна Беспалова хĕрĕ иккен, Емелей чăвашне качча кайнă. Кунта 13 çул пурăнаççĕ вĕсем.

Шкулта 130 ача, вĕсенчен 56-шĕн чăваш юнĕ пур: е ашшĕ, е амăшĕ чăваш. «Таса» чăваш ачисем темиçе çеç. Валентина Николаевна 1994 çултан тытăнса чăваш культури кружокне ертсе пынă. Малтан эрнене 4 сехет, кайран – 2. Унта вырăс ачисем те çӳренĕ. Анчах пилĕк çултан кружок хупăннă.

- Усси çук, нуши кăна. Чăвашла пĕлмен ачасене юрлаттарнипе тăван чĕлхене сыхласа хăварма çук. Чăваш чĕлхине малалла тăсакансем пулаймаççĕ вĕсем. Чĕлхене упраса хăварас тесен чăваш ялĕсенче тăван чĕлхене предмет майĕпе вĕрентмелле, - ăнлантарать В.Н. Вершилкина.

Мордва кружокĕ халĕ те пур, ăна физика вĕрентӳçи Валентина Семеновна Разумова ертсе пырать.

Яла Шупашкартан «Уяв» ансамбль килсе кайнине Валентина Николаевна ăшшăн аса илет. «Ун ертӳçи Зинаида Козлова мана аудиокассета парнелесе хăварчĕ», - тет.

Вырăнти «Живайкинский» хуçалăха Василий Николаевич Мясников чăваш ертсе пырать. Хуçалăх - вăтаммисен шутĕнче.

Тепĕр яла çитме пилĕк çухрăм, вак чул сарнă çулпа каймалла. Пырсан-пырсан автомашина урапи çурри таран шыва шампăртатса кĕрсе тухать.

**Хошширми (Кармалейка)**

Ку ял пирки сăмах хускалсан эпир тӳрех Николай Дмитриевич Карпов спортсмена тата тренера аса илетпĕр. Вăл çакăнта çуралса ӳснĕ. Ульяновскра пурăнать. Вăрăм дистанцисене чупассипе нумай чемпион хатĕрленĕ, ун вĕренекенĕсем тĕнчери чи пысăк ăмăртусенче пĕрре мар çĕнтернĕ.

Хошширми Сызранка юханшывĕ пуçланнă çĕртен инçех мар ларать. Ячĕ те мордвалла çакнах пĕлтерет: «кармало» – пуçламăш, «лей» – юхан шыв. Яла 17-мĕш ĕмĕрте никĕсленĕ. Халĕ кунта 156 кил, вĕсенче 300 ытларах çын пурăнать.

Çанталăк ăшăтса янипе пирĕн çăмăл машина яла кĕреймест – пылчăк. Багажникран атă илсе тăхăнса яма тӳрĕ килчĕ.

Чи катари çурт патне пытăм та пусма çине хăпартăм. Шалтан çулланнă хĕрарăмпа арçын вырăсла калаçни илтĕнет. Шаккасан – тухрĕç. Эпĕ хам камне, мĕн тума килнине, чăваш хаçачĕ пуррине ăнлантарма пикĕнетĕп. Итлесе пĕтерчĕç те чăвашла: «Эпир нимĕн те вуламастпăр, пире хаçат кирлĕ мар!» - терĕç. Кĕрсе кайрĕç.

Ял библиотекин ертӳçин пӳрчĕ патне пырса тухрăм. Вера Алексеевна Карпова кăмăллăн кĕтсе илчĕ, пӳртне чĕнчĕ.

Ял маларах пысăкрах пулнă иккен – 200 çурт. Хошширми 1930-мĕш çулсенче Сантряпуçĕнчен уйрăлса куçса ларнă. Сăлтавĕ – мордвасемпе килĕштерейменни. Çавăнпа Хошширми хĕрĕсем Сантряпуçне качча каймаççĕ. Ял масарĕ 1937 çулта уçăлни паллă. Ял библиотекинчи 8 пин кĕнекерен 40-ĕшĕ çеç чăвашла. Юлашкисене каллех парса хăварнă. «Канаш» хаçат çук – çырăнмаççĕ.

Хошширми «Живайкинский» хуçалăха кĕрет (1950 çултанпа). Витере 170 măйракаллă шултра вырьăх, унта çамрăксем ĕçлеççĕ. Çаплах çынсем Румянцев ячĕллĕ фабрикăна çӳреççĕ (ялтан темиçе çухрăмра).

Кунта пуçламăш шкул çеç. Пурĕ 12 ача вĕренет. 1-мĕш класра – 1 ача, 2-мĕш класра – 2. Чăвашла калаçмаççĕ вĕсем, нимĕнле кружок та, факультатив та çук. Вăтам пĕлӳ илме Сантряпуçне çӳреççĕ. 1956 çулччен Хошширминче чăваш чĕлхине предмет майĕпе вĕрентнĕ.

Çапла вара кунта та хурлăхлă картина: чăваш чĕлхин пуласлăхĕ хăрушлăхра.

Виçĕ кунхи çулçуреве пĕтĕмлетсе çапла калама пулать: аякра пурăнса Барăш чăвашĕсем тăван чĕлхене, культурăна манса пыраççĕ. Çак ĕç çывăх вăхăтра

пĕтĕмпех сӳнсе ан лартăр тесен вĕсемпе тачăрах çыхăнса ĕçлемелле: обществăлла организацисен, вĕрентӳ тата культура ĕçченĕсен, журналистсен. Кунталла тĕрлĕ тĕллевпе çӳреме пулать – чĕлхе уйрăмлăхĕсене, тумĕсене, çи-пуçне тĕпчеме, концерт кăтартма... Чăваш кĕрешĕвĕ çинчен те пĕлмеççĕ-ха кунта.

Уйрăмлăхсем пур кунта. Мордвасем, вырăссем хушшинче пурăнса тумĕсенче та вĕсен элеменчĕсем пур, хĕрарăм кĕписем те питĕ интереслĕ, хăйнееверлĕ. Калаçнă чух япала ячĕ çумне –у аффикс хушасси пур. Сăмахран, карчăк, ача сăмахсене Чăваш Решеткере карчăку, ачу теççĕ.

Чăваш тĕнчи çакăн пек чăваш кĕтесĕсенчен тăрать. Ун пуянлăхĕ çакăнта. Çавăнпа та пирĕн вĕсене сыхласа хăварасчĕ.

Юлашкинчен çак çулçӳреве кайма пуçаракана, йĕркелекене, хăй çине çул çинчи тăкаксене илекене Д.В. Кузьмина тав тăватăп. Унăн тĕп ĕçĕ чăваш культурипе çыхăнман пулсан та укçи-тенкине, вăхăтне шеллемесĕр вăл Барăш районĕ тăрăх виçĕ кун çӳрерĕ. Çакăн пек тума тăван халăха юратакан, ун пуласлăхĕшĕн пăшăрханакан, чĕрине ыраттаракан çын çеç пултарать. Дмитрий Васильевич чăннипех çакăн пек çын. Çынна паракана Турă парать тет. Çапла пултăр. Чăваш халăхĕшĕн тăрăшса ĕçлеме Турă сана сывлăх, вăй-хăват патăр, Дмитрий Васильевич.

Барăш районĕ.

“Канаш”, 2 №, 2007 ç.
“Канаш”, 3 №, 2007 ç.
“Канаш”, 4 №, 2007 ç.

## Чăваш ялĕсене упраса хăварайсан – халăх пĕтмест!

Шупашкарта пуш уйăхĕн 19-21-мĕшĕсенче Чăваш наци конгресĕн 7-мĕш съезчĕ иртрĕ. Унта Раççейри 26 регионтан 311 делегат, 210 хăна килнĕ. Çаплах Украинăран, Эстонирен, Молдавирен, Казахстанран, Беларуçран та ушкăнсем пурччĕ. Пурĕ Аслă Пуху ĕçне 650 çын хутшанчĕ.

Чĕмпĕр Ен делегацийĕ чи пысăккисен шутĕнчеччĕ. УОЧНКА пуçлăхĕ В.И.Сваев ертсе пыракан ушкăнра 6 делегат тата 5 чĕннĕ хăна пулчĕ.

Съезд ĕçне Раççей халăхĕсен ассамблейин ертӳçи Р.Г.Абдулатипов (Мускав), Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В.Фёдоров, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Раççей Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представителĕ, çĕршыври чăвашсен наципе культура автономийĕн ертӳçи Г.С.Фёдоров, ЧР Патшалăх Канашĕн ертӳçи М.А.Михайловский, ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕ Р.М.Лизакова, ЧР вĕрентӳ министрĕ Г.П.Чернова, Г.Н.Волков академик тата ытти паллă çынсем хутшăнчĕç, сăмах каларĕç.

Трибуна умне пысăк докладпа ЧНК президенчĕ Г.Н.Архипов тухрĕ, чăваш халăхĕ умĕнче тăракан чи çивĕч ыйтусене палăртрĕ.

Пуху пуçлансан Чĕмпĕр Ен делегацин пĕр ушкăнне И.Я.Яковлев палăкĕ умне чечек çыхxи хума илсе кайрĕç.

Тухса калаçакансем тĕп ыйту йĕри-тавра çаврăнчĕç – чăваш халăхне глобализаци саманинче сыхласа хăварма мĕнлерех майсем шырамалла? ЮНЕСКО кăçалхи нарăс уйăхĕнче аванах мар хыпар сарнă:коми, калмăк,

пушкăрт, удмурт, тыва, якут, чăваш тата ытти хăш-пĕр чĕлхе пĕтес çул çине тăнине пĕлтернĕ. Çавăнпа та наука пĕрлешĕвĕсене, патшалăх влаçĕсене, обществăлла организацисене, наципе культура автономисене çак чĕлхесене сыхласа хаварас тесе тĕплĕ ĕçсем тума, чĕлхесем çухалас хăрушлăха сирсе яма сĕннĕ. Пурĕ 136 чĕлхе – хăрушлăхра.

– Чăваш пулма çăмăл мар. Мана тăван чĕлхене хӳтĕленĕшĕн 1971 çулта Шупашкартан хăваласа ячĕç. Анчах та эпĕ тăван халăхран та, чĕлхерен те уйрăлман. Эпир вăйлă халăх. Тăван чĕлхерен айван та начар çынсем çеç вăтанаççĕ. Чăваш чĕлхи пĕтмест, эп малашлăха ĕненетĕп. ЮНЕСКО пире хăратать çеç. Çапах та пирĕн сыхă пулмалла, – терĕ Г.Н.Волков.

УОЧНКА пуçлăхĕ В.И.Сваев хăйĕн сăмахĕнче вырăнти влаçпа килĕштерсе ĕçлени пирки чарăнса тăчĕ.

– Кăçал Ульяновскра Атăлçи Федераллă округри чăваш наципе культура автономисен делегацийĕсем пирĕн облаçри автономи ĕçĕн опычĕпе паллашма пыраççĕ. Унта канашлу ирттеретпĕр.Ку пуриншĕн те усăллă пулмалла.Çаплах ака уйăхĕн вĕçĕнче облаçра Чăваш Республикин кунĕсем иртеççĕ. Халь çакăн валли хатĕрленетпĕр. 2005 çулта Чăваш Республикипе Ульяновск облаçĕ культура çыхăнăвĕсене аталантарас пирки ятарлă Килĕшӳ çырнăччĕ. Килĕшӳри пунктсене çĕнетесчĕ, пурнăçа ытларах кĕртесчĕ. Ял халăхĕ валли концертсем, спектакльсем, куравсем йĕркелесчĕ. Шупашкартан аякра пурăнакан ентешсем те тăван халăхăн пуян культурипе, искусствипе паллашма пултарччăр,- терĕ Владимир Ильич.

Вăл ЧР Президентне Н.В.Фёдорова тата ЧНК президентне Г.Н.Архипова И.Я.Яковлев çуралнăранпа 160 çул тултарнă ятпа УОЧНКА ятарласа хатĕрленĕ медаль парса чысларĕ.

Пирĕн халăхăн инкекĕсем: интеллигенци – халăхпа пĕрле мар, экономика – халăх чунне ăнланман чиновниксенче, вырăсла ухмах та пĕлет – чăвашла ăсли те пĕлесшĕн мар...

Тен, çавăнпа та пуль юлашки çыравра пирĕн халăх йышĕ 8 процент чакрĕ. Пĕр миллион та 637 пин чăвашран – 314 пинĕ тăван чĕлхене пĕлмест! Ку ĕç малалла «ăнăçлăн» пырать.

Паллах, чăваш чĕлхине сыхласа хăварас тесен чи малтан чăваш ялĕсем пирки шутласчĕ, вĕсене пĕтме парас марччĕ. Хулана куçнă ентешсем кăштă вăхăт иртсен пурпĕрех вырăссем хушшинче «ирĕлсе» каяççĕ. Вĕсем тăван чĕлхене аталантаракансем пулаймаççĕ. Пирĕн тымар – ялта! Чăваш сăпки – ялта!

Шел, наци республикисен хăйсен чĕлхипе культурине аталантармалли майсем сахалланса пыраççĕ. Федераци саккунĕ тăрăх, 2007 çулта вĕренӳ стандарчĕсенчен наципе регион компонентне кăларса пăрахнă. Çапла вара наци субъекчĕсем хăйсен чĕлхине, литературине, культурине, историне вĕрентес ирĕке çухатаççĕ. Ку халиччен тунă çитĕнӳсенчен каялла чакниех. Раççей Федерацийĕн «Вĕренӳ çинчен» тата «Раççей Федерацийĕнчи халăхсен чĕлхи çинчен» саккунĕсене пăсни пулать. Конгресс резолюцийĕнче Чăваш Республикин власть органĕсене çак саккуна йышăнмалла маррине ыйтса каланă, 11-мĕш класра чăваш чĕлхипе литературин экзаменне тавăрмаллине аса илтернĕ.

Пуласлăх – çамрăксенче. Нацие упраса хăварас ĕçе яш-кĕрĕме ытларах явăçтармалла. Çавăнпа та 2009 çулхи 4-мĕш кварталта Çамрăксен пухăвне ирттерме йышăннă. Тен, унта çĕнĕ ăру çĕнĕ шухăшсем калĕ, çĕнĕ çулсем шыраса тупĕ...

Наци радиовне кăçал эфира кăларас шанчăк пурри – ырă хыпар. Ун валли пилĕк миллион çурă тенкĕ уйăрнă.

Планра – наци телевиденине йĕркелесси.

Чăваш Республикин кунĕпе çыхăнтарса Шупашкарта пĕтĕм чăваш Акатуйне ирттересси пирки те сăмах пычĕ.

Съезд программи пуян пулчĕ. Ухсай Яккăвĕ ячĕллĕ Культура керменĕнче иккĕмĕш хут Чăваш тумĕн уявĕ иртрĕ.Унта республикăри чи паллă модельерсем хăйсен çĕнĕ ĕçĕсене халăх умне кăларчĕç. Эстрада çăлтăрĕсем илемлĕ юрă-кĕвĕпе савăнтарчĕç.

Чикĕ леш енчи тата Раççей Федерацийĕнчи чăвашсен аципе культура пĕрлешĕвĕсен делегаци ертӳçисем сĕтел хушшине пухăнса çивĕч ыйтусене сӳтсе яврĕç. Унта Чăваш Республикин министрĕсем хутшăнчĕç. Чăвашсем йышлă пурăнакан регионсенчи культура учрежденийĕсем валли кадрсем хатĕрлесси пирки делегаци пуçлăхĕсем Чăваш Республикинчи вĕренӳ заведенийĕсен ертӳçисемпе те тĕл пулса калаçрĕç.

ЧНК чăвашлăха аталантарас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн хастарсене Хисеп грамотипе чысларĕ. Çак чыса «Канаш» хаçат редакцийĕ те тивĕçлĕ пулнине палăртма кăмăллă. Тулай чăвашĕсен хаçачĕсем хушшинче эпир чи малтан пинмĕш номер кăларни – хăех пысăк çитĕнӳ.

Съезд делегачĕсем ЧНК президенчĕ пулма тепĕр срока та Геннадий Николаевич Архипова шанчĕç.

Çаплах Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашне 90 çынна яхăн çынна суйларĕç. Пирĕн облаçран унта УОЧНКА председателĕ В.И.Сваев кĕчĕ.

Шупашкар.

«Канаш», 2009 ç., 13 №.

## Иван Ильгачев – çĕршыв мăнаçлăхĕ

*«Вăрçăра пурте герой пулнă. Анчах та кашнин кăкăрĕ çине çăлтăр çакма май çук. Эпĕ хам валли пўрт хамах лартаятăп. Эсир тăлăха юлнă салтак арăмĕсене, ашшĕсĕр юлнă ачасене çуртсем туса парăр».*

Пирĕн облаçра халĕ «Увековечивание памяти лиц, внесших особый вклад в историю Ульяновской области на 2011-2013 годы» тĕллевлĕ программа ĕçлет. Ун валли 2011 çулта 16 миллион та 100 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Çав шутра область бюджетĕнчен 4 миллион та 900 пин тенкĕ, муниципаллă бюджетсенчен – 11 миллион та 200 пин.

Иван Васильевич Ильгачёв Чăваш Кăлаткă ялĕнче 1902 çулта çуралнă, вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче паттăрлăх кăтартса Совет Союзĕн Геройĕ ятне тивĕçнĕ, хăйсен ялне, районне, облаçа чапа кăларнă.

Хĕрлĕ çара ăна 1941 çулта илеççĕ, фронта ăсатаççĕ. Вăл Тĕп фронтăн 65-мĕш çарĕн стрелоксен 193-мĕш дивизине лекет. И.В.Ильгачёв сапёр 1943 çулхи октябрĕн 16-17-мĕшĕсенче Чернигов облаçĕнчи Каменка ялĕ çывăхĕнче Днепр урлă каçнă чухне паттăрлăх кăтартать. Тăшман вут-çулăмĕ айĕнче хастар чăваш юханшыв урлă хулăн вĕрен каçарать, паром ăсталать, унпа Днепр леш енне танксене хирĕç тăмалли 4 тупă, 5 миномёт батарейи тата çар хатĕрĕсем илсе каçать. Вăрçа сапёр пулса тытăнать, капитан званипе вĕçлет.

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн 1943 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнчи Указĕпе И.В.Ильгачёва командовани задание вăхăтлă тата тĕрĕс пурнăçланăшăн, паттăрлăх кăтартнăшăн Совет Союзĕн Геройĕн ятне

парса чысласçĕ, унпа пĕрлех «Ылтăн Çăлтăр» медаль тата Ленин орденĕ параççĕ.

1944 çулхи август уйăхĕнче И.В.Ильгачёв вăйлă суранланать, 1945 çулта 2-мĕш ушкăнри сусăр (инвалид) пулса тăван ялне таврăнать. 1962 çулччен «Пионер» колхозăн председателĕ пулнă, кайран пысăклатнă «Коммунар» колхоза ертсе пынă. Ял Совечĕн председателĕнче те, районти çул-йĕр тăвакан уйрăм заведующинче те вăй хунă вăл.

Иван Васильевич пурнăçра питĕ сăпайлă çын пулнă, хăй ячĕн таврашĕнчи шăв-шава килĕштермен. Ăна çакă та çирĕплетет. Фронтран килсен ун патне район пуçлăхĕсем пыраççĕ, райком йышăнăвĕпе Героя патшалăх шутĕнчен çĕнĕ çурт лартса парассине пĕлтереççĕ. Анчах вăл ку шухăша хирĕçлет. «Вăрçăра пурте герой пулнă. Анчах та кашнин кăкăрĕ çине çăлтăр çакма май çук. Эпĕ хам валли пӳрт хамах лартаятăп. Эсир тăлăха юлнă салтак арăмĕсене, ашшĕсĕр юлнă ачасене çуртсем туса парăр», - тет вăл.

Паттăр чăваш 1981 çулхи августăн 2-мĕшĕнче çĕре кĕнĕ, ăна ял масарĕнче пытарнă.

Пире Чăваш Кăлаткă ялĕн администрацийĕнче вара савăнтармарĕç. Ильгачёв палăкне е бюстне тăван ялĕнче лартас пирки район пуçлăхĕсем шутламаççĕ те иккен. Çынсем кун пирки пуçлăхсем умĕнче миçе хут калаçман-ши! Усси пулман. Районти ветерансен совечĕн ертӳçи Ханяфи Ахметжанович Насыров çеç пĕччен те пулин ку ыйтăва вырăнтан хускатасшăн çӳрет. Анчах пĕр ватă çын мĕн тутăр ĕнтĕ? Вăл укçа-тенкĕпе хуçаланмасть вĕт. Чăваш Кăлаткăра вара пĕр вăрçă ветеранĕ кăна юлнă – 89 çулхи Михаил Петрович Нукреев. Палăк валли халăхран укçа пуçтармалла тесе калаçкалакансем те пур. Çакна манмалла мар: Ильгачёв — Кăлаткăпуç районĕн

çар комиссариачĕ чĕннипе фронта кайнă икĕ Геройран пĕри. Çав вăхăтрах Кăлаткăпуç районĕнчен тухнă, анчах фронта урăх çĕртен кайнă паттăрсен ячĕсене ĕмĕрлĕхе хăварас ĕçсем пыраççĕ. Чăваш Кăлаткă çыннисемшĕн ку япала кӳренӳллĕ пулса тухать.

И.В.Ильгачёв ялпа районăн кăна мар, облаçăн, пĕтĕм чăваш тĕнчин, çĕршывăн мăнаçлăхĕ. Ун ятне мĕншĕн палăк лартса халăхра ĕмĕрлĕхе хăвармалла мар? Вăл камшăн юн тăкнă вара? Эпир çамрăксем умĕнче паттăрсен ячĕсене çапла манса пыратпăр пулсан вĕсене патриотла воспитани мĕнле майпа памалла, хамăр çуралнă тăрăха, тăван çĕршыва юратма мĕнле вĕрентмелле?

Ялта Ильгачёв урамĕ пур. Унти пĕр çурт çине вырнаçтарнă Асăну хăмине те тăванĕсен укçипе хатĕрленĕ. Масар çинчи палăкне те вĕсемех туса лартнă. Район влаçĕ, общественность ăçта вара? Пĕлес килет: район администраци пуçлăхĕсен планĕнче Совет Союзĕн Геройне Иван Васильевич Ильгачёва тăван ялĕнче палăк е бюст лартасси пур-ши?

Кăлаткăпуç районĕ.

«Канаш», 2012, 43 №.

## Чӗмпӗрпе Шупашкар çывăхланчӗç!

Ульяновск облаçӗн кӗпӗрнаттăрӗпе Чăваш Республикин Президенчӗ Килӗшӳ çине алă пусрӗç.

Юлашки çулсенчи Чăваш Ен çитӗнӗвӗсене Раççейӗпех пӗлеççӗ: çурт-йӗр тăвасси, ют çӗршывсемпе килӗштерсе ӗçлесси, ялсене компьютерпа тивӗçтересси... Лаптăкӗпе пысăк мар ку регион, çӗр айӗнчен чавса кăлармалли те темех çук – кăтартăвӗсем ăмсанмалăх пур. Сăлтавне çынсенче шырамалла. Ӗçчен, пултаруллă, малалла талпăнакан, хăйсен çӗршывне юратакан çынсенче. Тата ăслă президент пур чăвашсен – Николай Федоров. Вуникӗ çул ытла ертсе пырать вăл Чăваш Ене. Çак тапхăрта Шупашкар та палламалла мар илемленчӗ, чăвашсен ячӗ те чылай çӗкленчӗ.

### Вӗренме кая юлман-ха

Ульяновск облаçӗн кӗпӗрнаттăрӗ Сергей Морозов çакна лайăх пӗлсе тăрать, хамăр региона та çак шая çӗклессишӗн нумай тăрăшать: çӗнӗ ӗçсем пуçарать, çӗнӗ çулсем шырать. Çав вăхăтрах кӳршӗсем опычӗпе усă курма та хирӗç мар. Раштавăн 25-мӗшӗнче кӗпӗрнаттăр тата правительство министрӗсем шăпах çак тӗллевпе Чăваш çӗршывӗн тӗп хулинче пулса курчӗç. Делегацире çаплах облаçри «Единая Россия» политика парти уйрăмӗн ертӳçи А.Еленкин, Ульяновск Хула Думин председателӗн çумӗ П.Столяров, УОЧНКА ертӳçи В.Сваев пулчӗç.

Икӗ регион министрӗсен пӗрлехи ларăвне Чăваш Республикин Президенчӗ Н.Федоров уçрӗ.

– Чӗмпӗр Ен пирӗншӗн кӳршӗллӗ регион çеç мар, вăл тăван çӗршыв. Çакăнта пире çутта кăларакан И.Я. Яковлев хăйӗн чапа тухнă шкулне уçнă, çакăнта чăвашсен çӗнӗ çырулăхӗ çуралнă, культури аталаннă.

Пирĕн пĕр-пĕрне пулăшса, пĕр-пĕрин опычĕпе усă курса ĕçлемелле, – терĕ Николай Васильевич.

Чăваш Ен çитĕнĕвĕсенчен нумайăшĕ акă мĕнрен килет – вĕсем федераллă программăсене кĕме пултараççĕ. Вара укçи-тенки те Мускавран чылай килет. Халĕ Чăваш Енре 20 ытла федераллă программа ĕçлет. Сăмахран, кăçал районсенче 6 спорт кĕрменĕ хăпартса хунă (танлаштарма: Раççейĕпе кăçал 30 спорт кĕрменĕ тунă), 2007 çулта тата 5 пулĕ. Икĕ çулта ялсенче 500 модель библиотеки уçнă. Ялсене газ кĕртсе пĕтернĕ, кăçал пĕтĕм ялсем хушшине асфальт сарса пĕтереççĕ. Шупашкар 2002 çулта Раççейри чи хăтла пулса тăчĕ.

– Ялсене хăтарса хăварма культура центрĕсем кирлĕ. Эпир çак тĕллевпе ĕçлетпĕр, – палăртрĕ президент.

С.Морозов вара кӳршĕсенчен вĕренмелли пуррине пĕлтерчĕ, Ульяновск облаçне малтанхи шая хăпартас ĕмĕчĕ пысăккине пытармарĕ.

– Курăмлă ĕçсем пирĕн те пур. И.Я. Яковлев палăкне лартни облаçшăн та, мĕнпур чăвашсемшĕн те пысăк ĕç пулчĕ.

Икĕ çул каялла пирĕн область бюджечĕ 10 миллиона яхăнччĕ, 2007 çул валли вара 21 миллион палăртнă. 2009 çулта кĕпере уçатпăр, сире пурне те уява пыма халех йыхăратăп, – терĕ Сергей Иванович.

Лару вĕçĕнче С. Морозов кĕпĕрнаттăрпа Н. Федоров Президент Ульяновск облаçĕн Правительствипе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ суту-илӳпе экономикăра, наукăпа техникăра, культурăра тата социаллă ыйтусенче пĕрле ĕçлеме Килĕшӳ турĕç, ун çине алă пусрĕç.

Ун хыççăн хăнасем темиçе ушкăна пайланса Шупашкар тăрăх çӳрерĕç: заводсемпе, фабрикăсемпе, тĕрлĕ предприятисемпе, учреждениcемпе паллашрĕç.

Пирĕн регионти «Единая Россия» политика уйрăмĕн ертӳçи А. Еленкин Чăваш Енри ĕçтешĕпе Владимир Мидуковпа, парти ĕçтăвкомĕн ертӳçипе Галина Николаевапа тĕл пулнă. Вĕсем юпа (октябрь) уйăхĕнче Чăваш Республикинче иртнĕ суйлав пĕтĕмлĕтĕвĕсене сӳтсе явнă, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашнă. Сăмах май, «Единая Россия» ку суйлавра çĕнтернĕ. Çаплах Анатолий Георгиевич Правительство шайĕнчи çыхăнусене, наципе культура автономи тата ЧР культура учрежденисен çыхăнăвĕсене лайăхлатасси пирки калаçнă.

«Канаш», 2006 ç., 52 №.

# Вуннăрах хăр тăлăха юлнă

В.И.Мишкин Чăваш Паснапуç ялĕнче 1935 çулта апрелĕн 15-мĕшĕнче çуралнă. Ашшĕ Иван Романович 1941 çулхи август уйăхĕнче фронта тухса каять. Тепĕр çулхи октябрьте яла вăл хыпарсăр çухалнине пĕлтерекен хут килет. Тылрисем те ун чухне кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçленĕ. Пĕррехинче амăшĕ вăрман кассан килне тарласа-пиçĕхсе килет те сивĕ уйран ĕçет. Çакăнтан чире каять, 1946 çулхи февральте вилет.



- Эпĕ ун чухне 11 çул та тултарманччĕ. Çапла хăр тăлăха юлтăмăр. Малтан аттепе пĕртăван аппа пурччĕ-ха. Кайран вăл Аслă Аксăва качча кайсан килте йăмăкпа кăна юлтăмăр, иксĕмĕр пурăнтăмăр. Пахча пурччĕ пирĕн, унта пахча çимĕç туса илеттĕмĕр. Çимелли çук вăхăтсем те пулнă. Çуркунне çитсен кунне çичĕ хутчен вăрмана курăк çиме каяттăмăр, çапла Питравччен тăранкаласа пурăнаттăмăр. Ку вăхăта вара çырласем пиççе çитетчĕç. Çынсем выçăпа шыçса каятчĕç. Вăрçă вăхăтĕнче ялта 70 çын выçă вилчĕ, - йывăрпа аса илет ачалăхне Василий Иванович.

Вăл ашшĕне кăштă кăна астăвать, хăйне курăк çулма илсе кайнине аса илет. Тепрехинче ашшĕ Васьăна район центрне — Кивĕ Çĕпрелне илсе каять. Арçын ача унта халиччен курман электричество лампочкисене курать, тĕлĕннипе вăл яла килсен эпĕ Чĕмпĕрте пултăм тесе каласа парать.

Никама та шанмалли çук. Çиес килет. Çавăнпа та ĕçрен хăраман Вася салтака кайиччен вырăнти колхозра пилĕк çул конюхра ĕçлет. 1956 çулта вара çар хĕсметне лекет, Инçет Хĕвелтухăçĕнчи Совгавань хулине пуйăспа 21 талăк кайма тӳрĕ килет.

Унтан таврăнсан Василий Иванович пĕр урамри Евдокия Ивановна Кутюмована (вăл упăшкинчен пĕр çул кĕçĕнрех) качча илет, ултă çул туслă çӳренĕ хыççăн 1960 çулхи январĕн 17-мĕшĕнче туй пулать. Альтук (ялта ăна çапла чĕнеççĕ) ашшĕ те – Иван Федорович Кутюмов – фронтра вилнĕ. Вăл 1906 çулхи, финн вăрçине те хутшăннă. Ялта физрукра ĕçленĕ. Вăрçăра офицер пулнă.

Василий Иванович ĕмĕрне платникра вăй хурса ирттернĕ, ăна бригадăра яланах аслине суйланă. Алли ăста, эрех-сăрана сивлет, ыттисемпе пĕр чĕлхе тупма пултарать. Ытти ĕçсене те ӳркенсе тăмасть вăл, сăмахран, тимĕрçĕ ĕçĕсене лайăх пĕлет. Пӳрт лартнă чухне алăк тăпсисене веçех хăй аллипе хĕртсе-авса тунă.

-Мана прораба хурасшăнччĕ те – килĕшмерĕм. Ун оклачĕ 95 тенкĕ кăначчĕ, ман пысăк çемьене тăрантармалла вĕт. Бригадăра вара ĕçленĕ тăрăх тӳ-летчĕç, - тет вăл.

Çемйи вара, чăнах та, пысăк пулнă Мишкинсен. Василий Ивановичпа Евдокия Ивановна килĕштерсе пурăнса 11 ача çуратнă: ултă ывăл та пилĕк хĕр! Ун пек çемьесем вăл вăхăтра та сайра пулнă. Альтук аккан кăкăрне «Ача амăшĕ героиня» ылтăн орден илемлетет.

Пěр хěрě, шел, 26 çула çитсен чире пула вăхăтсăр çěре кěрет. Ыттисем паян хăйсен çемйисемпе тěрлě çěрте тěпленсе пурăнаççě. Пěр хěрě Белоруссиех çитнě, вăл юрист, майор звани илнě. Мěнле кăна професси алла илмен-ши Мишкинсен ачисем: филолог, юрист, строитель, культура ěçченě... Тăван килěнче вара Леонид ывăлě тěпленнě, вěсем Валентина Ивановна мăшăрěпе хăйсен ашшě-амăшě валли виçě мăнук çуратса панă – Игорь, Таня, Саша. Кинě Аслă Аксури шкулта истори вěрентет. Çамрăксем ытларах чухне ěçре пулнине шута илсен аслашшěпе асламăшěн пурнăç опычě мăнукěсене ăс панă çěрте питě кирлě тата ырăнлă. Ватти пур та – латти пур теççě халăхра.

Кӳршěрех вара тепěр ывăлě – Александр пӳрт лартнă, çемйипе пурăнать. Унăн икě мăнук, вěсем те кунне темиçе хут аслашшěпе асламăшне курма чупса килеççě, пěр килти пекех пурăнаççě.

-Выçă ачалăхăмăрпа танлаштарсан ырлăхра пурăнатпăр паян. Вăхăтěнче иксěмěр те тăвата класран ытла вěренеймерěмěр. Çапах та ěçлерěмěр, тăрăшрăмăр — çапла пурнăç турăмăр. Çаплах ватăлса та кайрăмăр, анчах ним чухлě те ӳпкелешместпěр. Çын çинче ялан чыслă курăнма тăрăшнă, ěçрен юлман. Ачасем тěрěс-тěкел пурнăçпа пурăнаççě, ěçкěпе те пирус-чěлěмпе туслашакансем пулмарěç. Çамрăк чухне те урамра шух çӳресе пире пăшăрхантарман, кулянтарман. Пуян эпир: 18 мăнук та пилěк кěçěн мăнук! Ачасем пулăшсах тăраççě. Тата мěн кирлě пире! Вěсемпе савăнса пурăнма сывлăх кăна пултăр, - теççě харăссăн Мишкинсем – иккěшě те «Ěç ветеранě» ят илнě скерсем.

Тутарстан,

Çěпрел районě,

«Сувар» (Хусан), 2015 ç., апрель.

## Ял пĕтет, чăваш чĕлхи сӳнет

Асьялта пурăнакан Р.М.Муракова 1975 çулта Çинкĕлте педучилище пĕтернĕ те 38 çул шкултa ĕçлесе кăçал тивĕçлĕ канăва кайнă. Сентябрь уйăхĕнчен вара вăл юлашки çичĕ çулта ирсерен хăнăхнă çулпа Ĕшке шкулне каймасть. Ун куçĕ умĕнче ялта нумай улшăну пулса иртнĕ. Чи хурлăхли — 2006 çулта тăван ялĕнче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкула хупни. Халĕ ял ачисене автобус Ĕшке шкулне илсе çурет.

-Шкулта 24 ача юлнăччĕ, пуçлăхсем ăна хупма шут тытрĕç. Анчах тепĕр çул шкулăн 100 çулхи юбилейĕ пулмаллаччĕ – хăяймарĕç. Уяв иртсе кайсан вара тӳрех РОНО хушнипе шкул çуртне хуллен тустарма тытăнчĕç: алăкĕсене, чӳречисене илсе кайрĕç, урай хăмисене таçта çухатрĕç. Çĕмĕрсе пĕтерсен Ульяновскран вĕренӳ министерствинчен пуçлăхсем килчĕç. «Ма пиртен ыйтмасăр тустарнă?» — теççĕ тĕлĕннĕ пек туса. Вăт çапларах пулчĕ ку ĕç – айăпли камĕ паллă мар. Мĕн тесен те РОНО область хушмасăр хăй тĕллĕн шкула хупаймасть ĕнтĕ, -тет Раиса Михайловна.

Ку чăваш ялĕнче тăван чĕлхене кăклама тахçанах пуçланă, 1948 çултах шкулта чăвашла вĕрентме пăрахнă. 1980-мĕш çулсенче Е.П.Беспалова вĕрентӳçĕ тăрăшнипе чăваш чĕлхине факультатив майĕпе вĕрентме тытăнаççĕ. 1998 çулта вара предмет шайĕнче тепĕр хут вĕрентме йĕркелесе яраççĕ. Елена Павловна ку пуçарура питĕ хастар пулать: пуçлăхсем патне çырусем çырать, Шупашкара каять, унти пуçлăхсемпе курса калаçать, кĕнекесем илсе килет.

1996 çулта шкула хупма калаçусем пуçлансан та Елена Павловна Чăваш наци конгресне çитет, ăна хăтарса хăварать.

1978-79 çулсенче ялти шкула Юхма Мишши, Раиса

Сарпи çыравçăсем пырса тĕлпулусем ирттернине, чăваш халăхĕн пуласлăхĕ пирки калаçнине, чăваш кĕнекисем парса хăварнине кунта халĕ те ăшă туйăмпа аса илеççĕ. Анчах Асьял хăй те, ун шкулĕ те вырăнти пуçлăхсем умĕнче ялан пĕр шухăш çеç çуратнă: пĕтермелле, хупмалла...

Шел, вĕсен планĕ пурнăçланса пырать – çавăн пек тăрăшсан та пурнăçланмасăр! Халĕ ялта 35-40 çулхисенчен çамрăкраххисем тăван чĕлхепе калаçмаççĕ. Пĕчĕккисем вара пачах пĕлмеççĕ тесен те юрать. Малашне мĕнле пулассине пĕлме юмăç патне кайма кирлĕ мар – ял пĕтет, чăваш чĕлхи сӳнет...

Ĕç енĕпе те йывăр ял халăхне – çук. Библиотекăра, клубра, апат-çимĕç сутакан киоскра пĕрер çын вăй хурать. Фельдшер пунктĕнче ĕçлекенни – кӳршĕ ял çынни. Çакăнпа пĕтрĕ те. Ял хуçалăхĕсем салансан кунти çĕрсене АСКО компани илнĕ, анчах юлашки çулсенче хирсенче ытларах çумкурăк ӳсет. Çынсем вăрмана кайса кăмпа-çырла пуçтараççĕ, милĕк касса хатĕрлеççĕ, çавсене сутаççĕ. Килти хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх усрама тăрăшаççĕ. Аш-какайне килсе пуçтарса каяканнисем пур-ха – йӳнĕ хакпа пулсан та. Çавăнпа та çамрăксем ялтан тĕрлĕ хуласене кайнинчен пĕртте тĕлĕнме кирлĕ мар. Кашни хăй пурнăçне йĕркелесе ярасшăн, ĕçлесе укçа илесшĕн.

Чăнах та, юлашки уйăхсенче кунта улшăнусем пулнă. Ял айлăмра, çырма хĕрринче вырнаçнипе йĕпе-сапара кунта кĕрсе тухма çăмăл мар. Суйлав умĕн вара пĕр кандидат çулсене грейдерпа хыртарнă, чул сартарнă, вăрмана каймалли çул çинчи кĕпере юсаттарнă. Ял халăхĕ куншăн питĕ савăннă. «Суйлав мĕншĕн кашни çул пулмасть-ши?» – шӳтлеççĕ çынсем.

Барăш районĕ.

«Канаш», 2013 ç., 44 №.

## Николай Розов:
## *«Çынсене пулăшсан ман кăмăл çĕкленет»*



Çак кунсенче хастар чăваш арĕ, «Канаш» хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕ, УОЧНКА ĕçтăвкомĕн членĕ, чăваш халăх ăсчахĕсен Ульяновск облаçĕнчи филиалĕн ертӳçи, чăваш тĕнчинчи паллă таврапĕлӳçĕ Н.Д.Розов 60 çул тултарать. Юбилей умĕн эпир хамăр çывăх юлташпа курса калаçрăмăр.

– **Николай Дмитриевич, кăштах ачалăха аса илер-ха.**

– Эпĕ Тутарстанри Теччĕ районĕнчи Çĕньялта çуралнă. Атте Дмитрий Пахомович вăрçăран вăйлă сусăрланса килнĕ, ун пĕр ури хуçланмастчĕ. Вăл йывăр аманнă хыççăн çулталăк çурă госпитальте выртнă. Анне Агапия Мироновна кӳршĕ ял хĕрĕ – Хупкĕпертен. Вĕсем пилĕк ывăл çуратса ӳстернĕ, эпĕ тăваттăмĕш. Атте правленире, ветеринари санитарĕнче ĕçлерĕ. Çемьешĕн питĕ тăрăшатчĕ, ял çыннисем те алли-урине сиктерсен ун патне пулăшу ыйтма пыратчĕç, вăл шăмăсене выранне лартатчĕ. Пирĕн çемье питĕ туслăччĕ, ялта чи малтан антеннăллă радиоприёмник туяннă, килте ултă вĕллеччĕ, атте пахчара груша йывăçĕ лартрĕ. Анчах ун çимĕçне хăй çисе кураймарĕ, суранĕсене пула 35 çултах çĕре кĕчĕ. Эп ун чухне улттăра кăначчĕ.

Анне пире пĕччен ӳстерчĕ, вăл вăрçă вăхăтĕнче Теччĕре колхоз председателĕсен курсне пĕтернĕ,

кайран председатель çумĕ пулса ĕçленĕ. Хăйĕн ĕнипе каçпа колхоз хирне сӳреленĕшĕн ăна икĕ центнер тырă панă. Вăл ăна сутса кĕпе çĕлемелли «Зингер» машина туяннă, ял çыннисем валли кĕрĕк, алса, пальто çĕлетчĕ. Çаплах хăяр ӳстерсе столовăя паратчĕ, укçа тăватчĕ. Пире кашни Мăнкуна çĕнĕ кĕпе, шăлавар çĕлесе паратчĕ. Çак савăнăçлă самантсене ĕмĕрне те манас çук. Вăл пĕччен 41 михĕпе çĕрулми сутма Сталинграда та (Волгоград) кайнă, ăна кунта хăех тиенĕ, лере пушатнă. Астăватăп, хăйĕн пилĕк ача пулсан та унран ялти 23 çын харăс кивçен укçа илсе парăма кĕнĕччĕ. Вăл ăна хут çине çырса пыман, веçех пуçĕнче тытнă. Лешсем, паллах, алă çавăрсан парăмне тавăрнă.

Эпĕ 4 класс ялта пĕтертĕм, вăтам пĕлӳ илме тăвата çухрăмри Ăнă ялне çӳрерĕм. Унтан Хусана кайса медицина институтне кĕтĕм. Яла таврăнса ун пирки аннене пĕлтерсен вăл йĕрсе ячĕ: «Ачам, эсĕ те килтен тухса кайсан пĕчченех тăрса юлатăп вĕт...»

– **Малалла вара çак çулпах кайнă-и?**

– Çапла, ĕмĕрĕпех шăл тухтăрĕнче ĕçлетĕп. Саранскра интернатура иртрĕм, унтан Чартаклă пульницине куçрăм. Икĕ çул БАМ тунă çĕрте пурăнма тӳрĕ килчĕ. 1981 çултанпа Ульяновскра пурăнатăп. Малтан Çĕнĕ хулари 3-мĕш поликлиникăна вырнаçрăм, 1983 çулта унта ортопеди кабинечĕ уçрăм. Унтан 5-мĕш поликлиникăна кайрăм. Кунта пилĕк çул стоматологи уйрăмĕн заведующийĕ пултăм. Эпĕ нихçан та ӳркенмен. Пĕр вăхăтрах виçĕ çĕрте ĕçлеттĕмччĕ. 2001 çулта 6-мĕш поликлиникăра хамăн кабинета уçрăм, хам тĕллĕн ĕçлеме пуçларăм. Каярахпа Тюленев урамĕнчи 29-мĕш çуртра вырнаçнă аптекăна куçрăм. Ман фирма «Астра-Дент» ятлă. Халĕ чирлисене çавăнта йышăнатăп. Анна хĕрĕмпе Фёдор кĕрӳ те шăл тухтăрĕсем, вĕсемпе пĕрле ĕçлеме пуçларăмăр. Вĕсен хăйсен хваттерĕ пурччĕ, анчах

пĕр килти пек пурăнаттăмăрччĕ, ачисем – Александра ятлă хĕр, Артём тата Алексей – яланах пирĕн патраччĕ. Хăйсем те кашни кун тенĕ пекех пырса çÿретчĕç. Шел, халь вĕсем Санкт-Петербурга куçса кайрĕç. Маншăн вĕсем калама çук çывăх çынсем, çавăнпа уйрăлма сĕре йывăр пулчĕ. Малтан питĕ кулянтăм, анчах вĕсем лайăх пырăна вырнаçнипе, хваттерĕ пуррипе лăплантăм ĕнтĕ. Халĕ Павел ывăлăмăрпа пĕрле пурăнатпăр. Вăл врач-уролог.

**– Чăваш наци юхăмне мĕнле кĕрсе кайнă эсир?**

–Пĕррехинче урампа иртсе пынă чух киоскра «Канаш» хаçат сутнине куртăм, тĕлĕнсех кайрăм. «Вара кунта чăвашла çырнă вĕт, тăван чĕлхепе çырнă! – тетĕп. Ун чухне вăл тухма çеç тытăннăччĕ. Туянтăм та – унтан вара пĕр номер сиктермесĕр вулатăп. Хаçат урлă ентешсен пурнăçĕпе паллашрăм. Пĕррехинче вара журналистсем чăн чăвашла калаçнине илтме редакцие ятарласа пырса кĕтĕм. Хам шухăшсене çырса редакцие ярса паркаларăм – пичетлерĕç. И.Я.Яковлев ячĕллĕ çутĕç обществин конференцине хутшăнтăм, хастар чăвашсемпе паллашрăм, ентешсен пурнăçĕпе интересленме тытăнтăм.

**– Николай Дмитриевич, çын 60 çул пурăннине мĕнле хаклама пулать?**

– Ултă теçетке вăл – сахал мар. Пурнăçра темлине те курнă, йывăр самантсем те пулнă. Характерпа анне пек эпĕ, яланах хама шанатăп, малалла ăнтăлатăп. Тăрăшса ĕçлемесен нимĕн те çÿлтен ÿкмест ку пурнăçра. Кашни япалашăн пăшăрханатăп, чĕрене çывăх илетĕп эпĕ – урăхла пурăнма пултараймастăп. Сывлăх пур чухне малалла тăрăшса ĕçлесчĕ–ха, кĕнекесем пичетлесе кăларасчĕ, çынсене пулăшасчĕ. Çынсене пулăшсан ман кăмăл çĕкленет, чун савăнать, çăмăлланса каять.

**– Николай Дмитриевич, пиртен хăш–пĕри мăшăр чăваш çынни мар, вăл вула пĕлмест тесе «Канаш» хаçата çырăнса илесшĕн мар. Сирĕн мăшăрăр та вырăс, эсир мĕнле пăхатăр ку ыйту çине?**

–Эпĕ чăваш чĕлхине ачаранах юратнă, ăна шкулта та кăмăлласа вĕренеттĕм. Çакă чи кирли пулĕ. Хаçата эпĕ чи малтан хам валли çырăнса илетĕп. Мăшăрпа эпир 1977 çулта пĕрлешнĕ. Наталия Павловна педагог, ăслă çын, вăл чăвашла вула пĕлмесен те ку ĕçре мана ăнланать, пулăшса пырать, ку енчен чăрмав çук. Ачасем те мăнаçланатпăр санпа теççĕ. Пĕррехинче эпĕ çулталăк хушши редакцие çыру çырманччĕ. Арăм мана: «Мĕн пулнă сана, Коля, мĕншĕн «Канаша» çырма пăрахрăн? – тет. Вара эпĕ тепĕр хут çырма пуçларăм, çĕнĕрен хавхаланса кайрăм.

**– Ку хавхалану сире çыравçă пулса тăма та пулăшрĕ пуль. Халь сирĕн сакăр кĕнеке пичетленсе тухнă ĕнтĕ. Сăмах май, таврапĕлӳ енĕпе облаçри чăвашсенчен пĕри те кун чухлĕ ĕç туман-ха. Мĕн хистет çине-çине кĕнекесем кăларма?**

– Тĕрлĕ çĕрте çӳресе çакна куртăм: чăваш ялĕсем пĕтсе пыраççĕ, çынсем сахалланаççĕ. Çитес ăрусем валли мĕн хăваратпăр? Асаилӳсем те юлмаççĕ вĕт вĕсем валли. Çакă чĕрене ыраттарать. Çавăнпа чи малтан материалсем пуçтарса хамăр ял çинчен кĕнеке кăлартăм, каярахпа чăваш халăх сăмахлăхĕпе интересленсе кайрăм, çавсене пухма шут тытрăм. Пирĕн халăхăн мĕн чухлĕ юрă-такмак, юмах-халап! Çавсене çамрăксен пĕлмеллех. Паллах, кĕнеке кăларма нумай вăй, вăхăт, укçа-тенкĕ кирлĕ, анчах ку ĕçе камăн-тăр тумаллах вĕт. Ку ĕçе чун хушнипе туса пыратăп. Эпĕ хамăн вăй, пĕлӳ çитнĕ таран ĕçлетĕп, ыттисем те çапла тумалла тесе шутлатăп. Халăх пуласлăхĕшĕн кашни ентешĕн тĕплĕн

шухăшламалла, халăхăмăр сыхланса юлтăр тесе куллен ырă ĕçсем тумалла.

**– Николай Дмитриевич, тавах калаçушăн. Эсир пирĕн редакцие те нумай пулăшу панă, ырă кăмăлăршăн сире чун-чĕререн тав тăватпăр. Сире сывлăх та телей сунатпăр, малашне те çапла пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлесчĕ.**

«Канаш», 2013 ç., 33 №.

# <u>Юрий Попов:</u>
# *«Ульяновск облаçӗнче наци политикине тӗрӗс илсе пыраççӗ»*

Ульяновскра çак кунсенче Атӑлçи федераллӑ округри субъектсен саккунсем кӑларакан орган пуçлӑхӗсен пӗрлешӗвӗн ларӑвӗ иртрӗ. Унта Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн председателӗ Ю.А.Попов та килнӗччӗ. Самантпа усӑ курса эпир унпа Ульяновск облаçӗнчи Саккунсем кӑларакан Пуху çуртӗнче тӗл пултӑмӑр.



**-Юрий Алексеевич, сире Чӗмпӗрте курма питӗ хавас. Пирӗн хулапа паллашса ӗлкӗртӗр-и?**

-Чӑваш халӑхне çутта кӑларакан И.Я. Яковлев палӑкне курни хавхалантарчӗ. Облаçри чӑвашсен наци культури автономийӗ хастар ӗçлени, «Канаш» хаçат йӗркеллӗ тухса тӑни, И.Я.Яковлев музейӗ пурри питӗ савӑнтарать. Маттурсем эсир! Чӑвашсем хӑйсен культурине манманни питӗ аван. Ытти регионсенче тӑван чӗлхепе хаçат-журнал кӑларни − питӗ кирлӗ япала. Наци хаçачӗсене, çав шутра чӑвашсен «Канашне» те, кӑларса тӑма çулсерен укçатенкӗ уйӑрнӑшӑн Ульяновск область правительствине, Саккунсем кӑларакан Пуху депутачӗсене тав сӑмахӗ калас килет. Вӗсем облаçри наци политикине тӗрӗс илсе

пыраççĕ. С.И. Морозов кĕпĕрнаттăра нумай çул пĕлетĕп ĕнтĕ, юлашки вăхăтра Ульяновск облаçĕнчи Саккунсем кăларакан Пуху председателĕпе А.А.Бакаевпа та курса калаçрăмăр, пĕр-пĕрне ăнлантăмăр. Пирĕн тĕллевсем пĕрешкел.

**-Эсир ЧР Патшалăх Канашне икĕ çул ертсе пыратăр. Çак тапхăрта чăваш культурине, чĕлхине аталантарас енĕпе мĕн туса иртternĕ?**

-Саккун енчен пăхсан Чăваш Республикинче чăваш чĕлхи вырăс чĕлхипе пĕрле – патшалăх чĕлхи. Официаллă ларусенче калаçма, власть тытăмне çырусем çырма кашни çыннăн ирĕк пур. Патшалăх Канашĕн ларăвĕсенче чăвашла калаçакансен сăмахĕсене ыттисем валли ятарлă çын вырăсла куçарса пырать, мĕншĕн тесен унта пурте чăваш мар. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.В.Игнатьев та, эпĕ те чăваш чĕлхине, культурине хисеплетпĕр, юрататпăр. Ку ыйтусене нумай тимлĕх уйăратпăр. Михаил Васильевич ентешсем нумай пурăнакан регионсене тăтăшах тухса çӳрет, вĕсене чăваш тĕнчипе çывăхлатасшăн тăрăшать.

Çак кунсенче Шупашкарта «Тăван Ен» ятлă радио ĕçлесе кайрĕ. Ăна Интернет урлă тата 100.3 FM хум çинче итлеме пулать. Малашне пирĕн, тутар туссем пек, спутник телевиденине те йĕркелемелле. Чăвашсем таçта та пурăнаççĕ, тăван чĕлхешĕн, культурăшăн тунсăхлаççĕ. Эпир çакна лайăх ăнланатпăр, туятпăр. Ман хамăн тете те Самарта пурăнать, ун патне хăнана кайсан вара хавхаланса каять, атя чăвашла калаçатпăр, атя чăвашла юрлатпăр тет.

Чĕлхепе культурăна аталантарассипе Чăваш наци конгресĕ ытти регионсемпе тачă çыхăнса, тăрăшса ĕçлемелле. Пирĕн инçетри ентешсем патне лайăх

кӗнекесем, хаҫат-хурнал, чӑваш сӑмахне ытларах илсе ҫитермелле.

Чӑваш чӗлхине аталантарасси, тӗрӗссипе, кашни ҫынран, ҫемьерен килет. Ачапа ҫемьере тӑван чӗлхепе калаҫмалла, шкулта 1-мӗш класранах чӑваш чӗлхипе литературине предмет шайӗнче вӗрентмелле. Ача вара тӑван чӗлхене юратма пуҫлать. Ҫак япаласене 5-мӗш класчен тумасан ӗҫ кая юлма пултарать, ку тапхӑр хыҫҫӑн вӗрентме питӗ йывӑр.

**-Юрий Алексеевич, Чӑваш патшалӑх университетӗнче чӑваш филологийӗпе культури факультетне вырӑс чӗлхи факультечӗпе пӗрлештерни ентешсене питӗ пӑшӑрхантарать. Мӗншӗн ун пек пулса тухнӑ-ши? Халь ӑна мӗнле тавӑрмалла?**

-Юлашки вӑхӑтра унта пысӑк улшӑнусем пулса иртрӗҫ, ректор та улшӑнчӗ. Ҫавӑнпа халь татса калаймастӑп-ха. Ку ыйтӑва малашне тимлӗх уйӑрса тӑрӑпӑр, ҫине тӑрса ӗҫлӗпӗр. Мӗнле пулсан та чӑваш чӗлхи факультетне хупма памӑпӑр.

**-Халӗ информаци ӗмӗрӗнче пурӑнатпӑр пулин те Раҫҫей регионӗсенче Чӑваш Республики сасси япӑх илтӗнет. Телевидени тата радио Интернет урлӑ курма-итлеме пулать-ха, анчах ун пеккисем нумаях мар пуль. Шупашкарта тухакан хаҫат-журнала ытти регионсенче ҫырӑнса илекенсен шучӗ те сахал. Ҫав вӑхӑтрах Ульяновск облаҫӗсӗр пуҫне Тутарстанра чӑвашла «Сувар», Пушкӑртстанра «Урал сасси», Самарта «Самар Ен», Тюменьте «Тӑван» хаҫатсем тухса тӑраҫҫӗ. Раҫҫейӗпе, тен, тата пур пуль. Ҫавсен ӑшне Шупашкарта республика хыпарӗсене хатӗрлесе вкладыш хума йӗркелесе яма май ҫук-ши? Инҫетре пурӑнакан ентешсем Чӑваш**

**Республикин хыпарĕсене пĕлсе тăрĕç, регионсенчи чăваш хаçачĕсен тиражĕ те ӳсме пултарĕ ун пек пулсан. Пирĕн облаçра ку енĕпе ырă тĕслĕх пур. Ульяновскра тухса тăракан «Ĕмĕт» ятлă тутар хаçатне Хусантан çапла вкладыш ярса тăраççĕ.**

-Ку питĕ вăйлă шухăш! Мана килĕшрĕ. Эсир ман пата çыру çырăр, эпир ЧР пичет министрĕпе пĕрле пăхса тухăпăр. Тутарсен опычĕпе паллашăпăр. Ку шухăша ĕçе кĕртсен питĕ аван пулĕччĕ.

-**Тавтапуç каласма вăхăт тупнăшăн, Юрий Алексеевич. Çапла пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлесчĕ малашне.**

«Канаш», 2013 ç., 51 №.

## «Сувар» хаçат çирĕм çул тултарчĕ

Тутарстан чăвашĕсен «Сувар» хаçачĕ нумаях пулмасть 20 çул тултарчĕ. Çакна палăртса мартăн 21-мĕшĕнче Хусанта темиçе мероприяти иртрĕ.




Чи малтан пухăннисене «Татмедиа» обществăн тĕп директорĕн çумĕ С.Н.Таишева саламларĕ, хăйсен тытăмĕнчи массăллă информаци хатĕрĕсемпе паллаштарчĕ. Малалла секцисем уйрăмшарăн ĕçлерĕç.

Тутарстанра чăвашла тухса тăракан район хаçачĕсен журналисчĕсем валли Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультечĕн преподавателĕ О.Р.Студенцов журналистикăра чăваш чĕлхипе тĕрĕс усă курас енĕпе семинар ирттерчĕ.

Çав вăхăтрах Раççей регионĕсенче чăвашла тухакан хаçатсен редакторĕсем çавра сĕтел хушшине ларчĕç. Ăна «Суварăн» тĕп редакторĕ К.А.Малышев илсе пычĕ.

Кунта çаплах «Урал сасси» (Пушкăртстан) хаçатăн тĕп редакторĕ Ю.Н. Михайлов, «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕн çумĕ М.М.Арланов, «Асамат» журналăн тĕп редакторĕ В.Д.Николаев (Чăваш Республики), Чăваш халăх сайчĕн редакторĕ Н.А.Плотников хутшăнчĕç. Калаçу малашне халăха чăвашла хаçатсене электрон мелĕпе çырăнтарасси, хальхи вăхăтра вулакансене тупасси, сайтсене аталантарасси пирки пычĕ. Çавра сĕтел хушшинчисем «Канаш» хаçатăн сакăр страници те тĕспе тухма пуçлани савăнтарни çинчен пĕлтерчĕç, ку пуçарăва ырларĕç, ыттисем те çак çулпах пымаллине палăртрĕç. Çаплах чăваш тĕнчине тачăрах çыхăнтарас шутпа Раççей регионĕсенчи чăваш хаçачĕсенче Шупашкарта хатĕрленĕ ятарлă страницăсем пулмаллине палăртрĕç, ун пирки калаçу чылай пычĕ. М.М.Арланов каланă тăрăх, ку ыйтупа Шупашкарта çине тăрса ĕçлеме пуçланă. Ку пирĕншĕн ырă хыпар пулчĕ.

«Татар-информ» издательство агентствин тĕп редакторĕн çумĕ – коммерци директорĕ Н.Г.Селиванов вара наци хаçачĕсен йĕри-тавра реклама паракансене явăçтарас пирки каласа пачĕ.

Ун хыççăн каллех пурте пĕрле пуçтарăнса пĕтĕмлетӳ турĕç, наци хаçачĕсен тĕп редакторĕсем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа пачĕç, ыйтусене хуравларĕç. Кунти ĕçе Чăваш наци телерадиокомпанийĕн тĕп директорĕ А.Н.Магарин та хутшăнчĕ, хăйĕн тытăмĕн чăваш тĕнчине тухмалли тĕллевĕсем пирки сăмах хускатрĕ.

Унтан Ар масарне çул тытрăмăр. Кунта чăваш журналистикине пуçарса яракан çын — истори наукисен докторĕ, Хусан университечĕн, Хĕвелтухăç педагогика институчĕн, Мари педагогика институчĕн профессорĕ Н.В.Никольский ĕмĕрлĕхех канлĕх тупнă. Ăна асăнса

вилтăпри çине чĕрĕ чечексем хутăмăр. Кунта пухăннисем Николай Васильевич тунă ĕçсен пысăк пĕлтерĕшĕ пирки калаçрĕç.

Уява килнисене кантарасси пирки те шутласа хунă кунта. Малалла – экскурси. Пире Универсиада валли ятарласа туса хунă «Казань-Арена» стадиона илсе кайрĕç. Кунта пĕр харăс 45 пин çын кĕрет. Раççей премьер-лигинче футболла вылякан «Рубин» команда малашне хăнасене çакăнта кĕтсе илĕ. Тепĕр çул кунта шывра ишессипе тĕнче чемпионачĕ иртмелле, ун валли футбол площадкинче ятарлă икĕ бассейн вырнаçтарĕç.

Уява вĕçлеме вара Çамрăксен «Ак Барс» центрне куçрăмăр.Фойере Раççейри чăваш хаçачĕсен куравĕ иртрĕ. Эпир те пухăннисене «Канаш» хаçатăн тĕслĕ номерĕсемпе, редакцире кăларнă «Атăл юрри» журналпа тата «Шевле» литпĕрлешӳ членĕсен кĕнекисемпе паллаштартăмăр.

Залра вара «Сувар» хаçат журналисчĕсене Тутарстанри информаци политикин тата массăллă коммуникаци хатĕрĕсен министрĕн çумĕ И.К.Сагдатшин, Чăваш Республикин информаци политикин тата массăллă коммуникаци хатĕрĕсен министерствин пай пуçлăхĕ Л.Ю.Леонтьева, республикăри ЧНКА пуçлăхĕ К.Г.Яковлев саламларĕç, Хисеп грамотисем пачĕç. «Сувар» редакцин Попечительсен канашĕн пуçлăхĕ А.Н.Саиткин уяв ирттерме 100 пин тенкĕ панине пĕлтерчĕ. Ку хыпара илтсен залра ларакансем тăвăллăн алă çупса ячĕç.

Юлашкинчен Шупашкартан килнĕ «Çавал» ушкăн пысăк концерт кăтартрĕ.

Хусан.

**А.НАУМОВ сăнӳкерчĕкĕ.**

«Канаш», 2014 ç., 12 №.

# Крыма çуран утса тухнă



Василий Вассиярова салтака 1980 çулхи кĕркунне илсе кайнă. Ун чухне вăл Ульяновскри механика заводĕнче ĕçленĕ.

-Пире пуйăспа Керчь хули урлă Крыма илсе кайрĕç, Саки хули çумĕнчи Прибрежное поселокне вырнаçтарчĕç. Пирĕн гарнизон ятарлă тĕллевлĕччĕ. Тупа тунă хыççăн Евпаторие куçарчĕç, техника сăнавĕн постне шанса пачĕç. Пирĕн çĕр çине те, тинĕсе те сăнаса тăмалаччĕ. Çапла эпир пограничник пулса тăтăмăр, - тет Василий Леонидович.

Нумай тĕрĕслев урлă тухнă хыççăн ăна Симферопольте вырнаçнă куçса çӳрекен ушкăна (маневренная группа) çирĕплетеççĕ. (Унта суйласа илнĕ 250 çын кăна пулнă.)

- Крым çутçанталăкĕ питĕ илемлĕ, хăйнееверлĕ, курсанах килĕштерсе пăрахатăн. Офицерсем пире çĕрле сăрт-ту çине, вăрмана, пĕр курман вырăнсене, хулана илсе каятчĕç. Кашни çамрăк çак лару-тăрура хăйне мĕнлерех тыткаланине, йывăрлăхран хăй тĕллĕн тухма пултарнине тĕрĕслерĕç. Унтан мана çак ушкăна ячĕç. Ун тĕллевĕ – Варшава Договорне кĕрекен çĕршыв пуçлăхĕсене сыхлассиччĕ. Кунта вĕсем яланах канатчĕç. Пĕрремĕш пост, паллах, Брежневăнччĕ. Вăл Крымра çулла питĕ нумай пурăнатчĕ. Ыттисем те – Хонеккер

(ГДР), Ярузельский (Польша), Чаушеску (Румыния), Цеденбал (Монголи)... час-часах килетчĕç. Андроповпа Черненко вара тĕрлĕ вăхăтра пĕр дачăрах канатчĕç — пĕри каятчĕ, тепри килетчĕ. Черненко катер хыçне тăрса шыв йĕлтĕрĕпе ярăнатчĕ. Ура çинчен ӳксен ăна хуралçисем кимĕ çине туртса хăпартатчĕç. Горбачевăн кану вырăнĕ Форосраччĕ, - аса илет вăл.

Кунти пограничниксенчен ытларахăшне Кăнтăр-Хĕвелтухăç Украинăран, Белоруссирен, Çĕпĕртен пуçтарнă. Çĕпĕр ачисем – лайăх снайперсем. Пурте пĕр çемьери пек пурăннă. Василий Леонидович пĕтĕм Крыма çуран тухнă тесен те юрать – служби çапларах пулнă: Алушта, Ливадия, Судак... Кирлĕ чухне автомашина рулĕ умне те ларнă. Çакăн пек тĕрлĕ ĕçсем тума пултаракан çамрăксем кирлĕ пулнă кунта. «Дедовщина» текен япала пограничниксен хушшинче пулман. В.Вассияров икĕ çул Киеври Крещатик лапамĕнче çар парадне хутшăнать, уншăн Калининченко генерал-лейтенант чăваш каччине Тав çырăвĕ парать. Сăмах май Василий Леонидовичăн КПСС Тĕп Комитечĕн Генеральнăй секретарĕ (урăхла каласан Совет Союзĕн пуçлăхĕ) Л.И.Брежнев алă пусса панă Тав çырăвĕ те пур.

-Мана Крым паян каялла хамăр çĕршыва таврăнни савăнтарать паллах, анчах Украинăри хальхи ĕçсем питĕ пăшăрхантараççĕ. Пирĕн хушăра Хĕвеланăç Украина ачисем те пурччĕ, эпир вĕсемпе ним те уйăрман, йĕркеллĕ пурăнаттăмăрччĕ пуринпе те. Славянскран виçĕ ачаччĕ: Сергей Захаров, Александр Польский, Александр Колесниченко. Эпĕ киле пĕрремĕш ушкăнпа кайрăм, пире заставăран пурте ăсатма тухрĕç. Уйрăлнă чух нумайăшĕ куççуль кăларчĕ, йĕчĕ. Çапла туслă та пĕр-пĕринпе çывăх пулнă эпир. Эпĕ юлташсем патне Славянска машинапа çӳренĕ чухне кĕрсе те тухнăччĕ

– килте çукчĕ, тĕл пулаймарăм. Мĕн тăваççĕ-ши ĕнтĕ вĕсем халĕ? Сывă-ши? Телевизор курса ларатăп та пăшăрханатăп, ман салтакри юлташсем тăван килне хӳтĕлесе çапăçакансем хушшинче мар-ши тетĕп. Майдансем, пăлхавсем, вăрçăсем ахаль халăха кирлĕ мар, вĕсене влаçшăн, мулшăн хыпса çунакан, пуç касакан пуçлăхсем кăна шутласа кăлараççĕ. Нуши-терчĕ вара халăха лекет, - кулянса калаçать В.Л.Вассияров.

Василий Леонидович 30 çула яхăн водительте вăй хунă (20 çул – КАМАЗпа), инçе çулсене çӳренĕ. Пĕтĕм Белоруссие (Брест таран), Украинăна урлă-пирлĕ тухнă. Раççейре хĕвелтухăç енче Красноярск, Кемерово таран çитнĕ. Çурçĕрте Петербургра та, кăнтăр енче Казахстанри Талды-Курганра та пулнă. Тăватă çул Тюмень облаçĕнчи Нефтеюганск районĕнчи Пойково поселокĕнче пурăннă. Паян Ульяновскра тĕпленнĕ.

Сăмах май Василий Леонидовичăн ашшĕ – Леонид Васильевич – Аслă вăрçăра та автомашинапа çӳренĕ, унтан таврăнсан та юратнă ĕçне пăрахман. Пурĕ 40 çул руль пăрнă. Ун пек нумай стажлă шофер сахал.

2009 çулхи кĕркунне – пограничник тумне хывнăранпа 27 çул иртсен — В.Л.Вассияров хăйĕн çăмăл автомашини çине ларса юлташĕпе пĕрле Крыма ятарласа курма кайса килнĕ.

-Эпир ялан куçса çӳреттĕмĕр, служба нумай хулара иртнĕ. Çав вырăнсене çитрĕм. Çакăнта службăра тăнă, курма килтĕм тесен урăх çĕршывран пулсан та чаçсене кĕме чармарĕç. Хам шаплаттарса утса çӳренĕ плацсене тепĕр хут куртăм. Заставăна кăна кĕме май пулмарĕ, командир вырăнта марччĕ. Унсăр ирĕк пама шикленчĕç.

Вăл вăхăтра Украина пуçлăхĕ В.Ющенко (вăл 2004-2010 çулсенче пуçлăх пулнă) Европа енне сулăнма,

Раççее сивлеме тытăннăччĕ. Раççее килекен çул хĕрринчи указательсене илсе пăрахнăччĕ (лерелле кайма кăтартакансем чиперех тăраççĕ). Çӳресе курман çынна питĕ йывăр. Эпĕ çынсен шухăшне пĕлессишĕн ятарласа чарăнса калаçкаларăм. Раççей çыннисене курсан Крымра пурăнакансем питĕ савăнчĕç, ăшшăн саламларĕç.

«Крым – Раççей йышĕнче! Эпир сирĕнпе! Ку указательсене эпир мар, бандеровецсем илсе пăрахнă», - терĕç вĕсем мана,- каласа парать Василий Леонидович.

Пурнăçра та çапла пулса тухрĕ: кăçал Киеври юнлă хунта пуçлăхĕсем Крыма Европăналла «ăсатасшăнччĕ» те, анчах кунта пурăнакан тĕрлĕ халăхсем ыйтăм (референдум) туса Раççейпе пĕрлех пулас терĕç.

Начар халăх çук, начар çынсем кăна пулаççĕ. Ку каларăша çирĕплетекенни – çак кунсенче Украинăри халăхсем хушшинчи (çав шутра Хĕвеланăç Украинăра пурăнакансем те) ыйтăм пĕтĕмлетĕвĕ. Америка тата Европăри хăш-пĕр патшалăх пуçлăхĕсем Раççейпе Украина хушшине пысăк «савăл» çапса кĕртес тесе мĕнле тăрăшсан та ыйтăма хутшăнакансен 70 проценчĕ: «Раççей — пирĕн тус»,- тесе хуравланă.

«Канаш», 2014 ç., 21 №, май, 29.

# Наци ыйтăвĕсем пире савăнтарччăр çеç

Каркел – облаçри чи ватă ялсенчен пĕри, ăна 1672 çултах чăвашсем пырса ларса никĕсленĕ. Халĕ вĕсем мордвасемпе пĕрле килĕштерсе пурăнаççĕ – пурĕ кунта 600 çынна яхăн.

Вырсарникун ку ялта пĕр харăс виçĕ уяв иртрĕ: Ял кунĕ, Акатуй тата УОЧНКА районти уйрăмне йĕркеленĕренпе 10 çул çитни. Культура çурчĕ умне пуçтарăннă çынсем ял ялавне тата Акатуй паллине – йывăçран касса кăларнă автан — йăтса ялти паллă вырăнсене çитсе пуç тайрĕç. Чиркӳ пулнă вырăнта каркелсем 2012 çулта часавай туса хунă, халăх унта пырса вилнисене асăнчĕ, чĕрĕ чечексем хучĕ. Унтан вăрçăра пуç хунисене асăнса лартнă палăк патĕнче митинг ирттерчĕç. Çаплах вырăнти хуçалăха 18 çул ертсе пынă РФ ялхуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Н.А.Никоноренко палăкĕ патне пырса вăл яла аталантарас ĕçре нумай вăй хунине палăртрĕç. Кунта район администраци пуçлăхĕн çумĕ П.А.Кряжев сăмах каларĕ. Петр Александрович 16 çул Каркел ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче вăй хунă, чăвашсен автономин уйрăмне йĕркеленĕ ĕçре ун тӳпи сахал мар. Вăл çĕнĕ вырăна пĕр уйăх каялла кăна куçнă-ха.

Ирхине çумăр çуса кайнипе уяв Культура çуртĕнче тытăнчĕ. Ăна ял тăрăхĕн пуçлăхĕ, вырăнти депутатсен канашĕн председателĕ В.Н.Головин уçрĕ. УОЧНКА районти уйрăмне 10 çула яхăн ертсе пыракан Л.Н.Яковлев Акатуй паллине ăна пачĕ. Ял администраци пуçлăхĕ С.А.Симурзина хастар та сумлă çынсене парнесемпе чысларĕ. Вĕсем хушшинче çур ĕмĕр пĕрле пурăнакан Бутылкинсен çемйи те пур. Кăçал ялта икĕ ача çуралнă – Минеевсен тата Пуговкинсен çемйисенче, вĕсем те

парнесĕр юлмарĕç. Салтака каякан икĕ йĕкĕте те пиллесе ăсатрĕç.

УОЧНКА пуçлăхĕ В.И.Сваев Вешкайма районĕнчи чăвашсем юлашки 10 çулта чăваш культурине аталантарас енĕпе пысăк утăм тунине палăртрĕ: Каркелĕнче кашни çул Акатуй ирттереççĕ, Культура çуртĕнче «Сарпике» конкурс, Кĕрхи сăра, ытти чăваш уявĕсене йĕркелеççĕ, ачасем облаçри конкурссене тата фестивальсене хутшăнаççĕ. Унччен кун пекки пулман. Çакă ĕнтĕ пĕрлехи ĕçĕн усси, çимĕçĕ. Владимир Ильич çак ĕçри хастарсене Тав çырăвĕсем парса чысларĕ, библиотека валли чăваш кĕнекисем парса хăварчĕ. Сăмах май «Канаш» хаçат редакцийĕ те унта хаçат-журнал парнелерĕ.

Сцена çинчен çаплах район администраци пуçлăхĕ Ю.Н.Степанов, культура пайĕн пуçлăхĕ Ю.Н.Ермохина тата ыттисем саламларĕç, мăн асаттесен йăли-йĕркине манмалла маррине палăртрĕç. Юрий Николаевич питĕ выранлă сăмахсем каларĕ: «Наци ыйтăвĕсем пирĕн ума йывăрлăхсем кăларса ан тăратчăр, паянхи пек савăнтарччăр çеç».

Пухăннă халăха «Çăлкуç», «Ĕмĕт», «Мозаика» ушкăнсем (вĕсене С.Ерофеева тата ун хĕрĕ В.Филатова ертсе пыраççĕ), Каркелĕнчи вырăс хорĕ тĕрлĕ халăхсен юрри-ташшипе савăнтарчĕç. Стемасс ялĕнчен килнĕ хăнасем те – А.Ядрова тата О.Тихонова сцена çине тухса юрларĕç.

Тӳпере çутă хĕвел ялкăшма тытăнсан халăх урама тухрĕ, уява малалла тăсрĕ. Ял библиотекин ертӳçи Л.Н.Кузина тĕрлĕ конкурссем, вăйăсем ирттерчĕ. Юпа çине хăпарса çĕнтерекенсем Б.Кокозов тата А.Щепцов пулчĕç. Хĕрарăмпа арçын иккĕн пĕр-пĕрне пилĕкрен ытамласа илсе чупни халăха чылай савăнтарчĕ. Чӳлмек çĕмĕрнине курасси те питĕ интереслĕ, анчах хулăн патак

тытса пыракан, çапма хатĕрленекен çынран пурин те асăрханмалла, çывăхра тăмалла мар – ун куçне çыхса янă вĕт. Тĕлĕнмелле пулин те вĕрен туртса вара хĕрарăмсем арçынсене çĕнтерчĕç! Халăх хырăмне тытсах кулчĕ ку япаларан! «Каркел хĕрарăмĕсем – тĕнчере чи вăйлисем!» - кăшкăрать пĕри.

Çакăнтах палатка ăшĕнче чăваш кил-çуртне кăтартнă, унта сăпка çакăнса тăрать, кăмрăкпа вĕрекен сăмавар ларать, ĕлĕк килте усă курнă хатĕрсем чылай. Аслисем çамрăккисене кашни япали мĕн тума кирлине ăнлантараççĕ. Çаплах пыракансене чăваш апат çимĕçĕпе сăйлаççĕ, палатка çумĕнче хуранпа пĕçернĕ пăтă çитереççĕ.

Уява вĕçлекенсем вара çамрăксем пулнă, вĕсем каçпа дискотекăра савăннă.

Вешкайма районĕ.

«Канаш», 2014 ç., 24 №.

# Ашшĕ патне — Луганск облаçне

1941-45 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи чарăннăранпа 69 çул çитрĕ. Ун вут-çулăмĕнче пирĕн çĕршыври 27 миллион çыннăн пурнăçĕ татăлнă. Мĕн чухлĕ салтак шăпи паллă мар-ха паян та! Вĕсем е тыткăна лексе çухалнă, е юханшывпа юхса кайнă, е вутра çунса кĕлленнĕ, е тăванла вилтăприсенче выртса юлнă...

Чăнлă районĕнчи Ирçел ялĕнче 1911 çулта çуралнă Николай Иванович Анчиковăн шăпи те юлашки çулсенче кăна уçăмланнă – унччен паллă пулман.

...Колхозсем йĕркеленĕ вăхăтра Иван Анчиков кил-çуртне пуянсем тесе тустараççĕ, нимсĕр хăвараççĕ. Унăн 25 çулхи ывăлĕ Николай вара 1936 çулта ялтан тухса каять – Якутири Алдан хулинче ылтăн кăларнă çĕрте ĕçлеме пуçлать. Ялта унăн мăшăрĕ – 1911 çулхи Дарья Ивановна икĕ ачапа юлать: Прасковья — пиллĕкре, Григорий — çулталăкра. Фронта Николай Иванович 1942 çулхи июль уйăхĕнче Якутиренех каять. Вĕсен дивизине Пушкăрт çĕрĕ çинче пуçтараççĕ. Декабрĕн 18-мĕшĕнче Дон юханшывĕ урлă каçас пысăк операци пуçланать. Николай Анчиков стрелоксен 195-мĕш дивизинчи 573-мĕш полкра çапăçнă, автоматчик пулнă. Вăл 1942 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче Бондаровка ялне ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçура паттăрла пуçне хунă. Ун чухне вăл 31 çулта кăна пулнă. Ун мăшăрĕ Дарья Ивановна вара ачисене пĕчченех ӳстернĕ, вăрăм ĕмĕр пурăннă, 1994 çулта вилнĕ.

Аслашшĕне мĕнле майпа тупнине унăн Ульяновскра пурăнакан мăнукĕ – Ю.Г.Анчиков каласа парать.

-Юлашки çулсенче патшалăх «Книга памяти» кăларни питĕ усăллă та вырăнлă пулчĕ. Асаттене пытарнă вырăна унăн 7-мĕш томĕнче вуласа пĕлтĕмĕр. Ун вилтăпри



**Ашшĕ хушаматне çырнă гранит плита умĕнче Григорий Николаевич Анчиков (варринче) тата унăн виçĕ ачи – Александр (сулахайран иккĕмĕш), Юрий (сулахайран тăваттăмĕш), Иван (сылтăмран иккĕмĕш) — Бондаровка çыннисемпе.**

Луганск облаçĕнче – Марковка районĕнчи Бондаровка ялĕнче. 2009 çулхи май уйăхĕн 7-мĕшĕнче Иван тата Александр ятлă пĕртăвансемпе пĕрле пуçтарăнса Украинăна çула тухрăмăр. Волгоградри пĕлĕшсем патĕнче каç выртрăмăр, тепĕр кун çитес çĕре çитрĕмĕр. Вилнĕ салтаксене асăнса лартнă палăк вырăнне шурлăхра путса ларнă танка кăларса вырнаçтарнă. Ял администрацине кайрăмăр, çак яла ирĕке кăларассишĕн çапăçса вилнĕ салтаксен списокне вуларăмăр – пурĕ 700 çын! Ку списока ялти пĕр вĕрентӳçĕ ятарласа Подольска (Мускав облаçĕ) кайса оборона министерствин архивĕнчен тупса килнĕ. Чăнах та, асатте хушамачĕ пур унта. Салтаксене асăнса лартнă плитасем çинче вара — çук.

Кунта пурин хушаматне те ҫырман – кашни саспаллипе темиҫе хушамат кӑна, 200 ҫын. Вилнӗ салтаксене ял ҫыннисем пӗр вӑкӑрпа тата пӗр лашапа турттарса пӗр ҫӗре пуҫтарнӑ, виҫӗ силос шӑтӑкне пытарнӑ. 1957 ҫулта вара вӗсене ҫӗнӗрен пӗр ҫӗре куҫарса пытарнӑ – тӑванла вилтӑприне. Ҫӗнтерӳ кунне паллӑ тунӑ ҫӗре те хутшӑнтӑмӑр ку ялта.

Тепӗр ҫул Ҫӗнтерӳ кунӗ умӗн вара Бондаровкӑна атте те – Григорий Николаевич — пычӗ. Асаттен тата ҫакӑнта вилнӗ темиҫе салтак хушамачӗсене ҫыртарса Ульяновскран хура гранитран тунӑ плита илсе кайрӑмӑр, ӑна ыттисем ҫумне ятарлӑ постамент ҫине ял ҫыннисем умӗнче вырнаҫтарса хутӑмӑр. Шкула кӗтӗмӗр, тӗлпулу ирттертӗмӗр, музейпа паллашрӑмӑр. Каҫпа ял клубӗнче концерт пулчӗ, ун умӗн пире сцена ҫине сӑмах калама чӗнсе хӑпартрӗҫ, аттене асатте ячӗпе юбилей медалӗ пачӗҫ. Атте ял администраци председательне хӑй аллипе йӑваласа тунӑ кӑҫатӑ парнелерӗ. Ҫаплах тӑванла вилтӑпри патне Ирҫелӗнчен икӗ хурӑн илсе кайса лартрӑмӑр, ял масарӗ ҫинчен тӑпра илсе кайса сапрӑмӑр. Яла та асаттене пытарнӑ вырӑнтан гильза ӑшӗнче тӑпра илсе килтӗмӗр,- тет Юрий Григорьевич.

Инҫе ҫултан таврӑнсан Анчиковсем Ирҫелӗнчи масар ҫине вӑрҫӑра вилнӗ аслашшӗне асӑнса пысӑк хӗрлӗ гранит татӑкӗсем хунӑ, гильза ӑшӗнче илсе килнӗ тӑпрана та ҫавӑнта сапнӑ.

Юрий Григорьевич каласа панӑ тӑрӑх, Бондаровка пысӑк ял, 300-400 килӗ те пур. Вӑл автотрасса ҫумӗнчех вырнаҫнӑ, уншӑн пирӗннисем фашистсемпе икӗ эрне ҫапӑҫнӑ. Кашни ҫуртшӑн хӗрӳ ҫапӑҫу пынӑ, нумай ҫын вилнӗ. Ялти виҫӗ арман ҫинче нимӗҫ пулемечӗсем вырнаҫнӑ пулнӑ, вӗсем пӗр чарӑнми вут тӑкнӑ. Ял темиҫе хут алӑран алла куҫнӑ. Кунтан инҫех мар Кабычевка

ялĕ пур, Кăнтăр-Хĕвелтухăç Украинăна тăшмансенчен тасатма пуçласанах кунта Украина правительстви тата Совет Çарĕн Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн штабĕ вырнаçнă пулнă. Ăна аса илтерекен Асăну хăми те пур унта. Анчиковсем кӳршĕ ялсене, çапăçусем пынă вырăнсене йăлтах курса çӳренĕ. Бондаровкăн тепĕр вĕçĕнче тата 52 салтака пытарнă тăванла вилтăпри пур.

-Çул хĕрринче çине-çине палăксем лараççĕ, вĕсем кунта хăрушă çапăçусем пулнине, çын нумай вилнине, Çĕнтерӳ мĕн хака ларнине аса илтереççĕ,- тет Юрий Григорьевич.

Тĕнче хĕсĕк теççĕ. Юрий Григорьевич 1984-86 çулсенче Воронеж облаçĕнчи Боброво районĕнчи Хреновое ятлă ялта лашапа чуптарма тренер-наездника вĕреннĕ пулнă, кунта килсен пĕрле вĕреннĕ икĕ юлташне тупнă. Иван Григорьевич вара ку ялта Германире пĕрле çар хĕсметĕнче тăнă юлташне тĕл пулнă.

Анчиковсем 2012 çулта аслашшĕ патне тепре кайса килеççĕ. Ку яла Çĕнтерӳ хыпарĕ майăн 9-мĕшĕнче ирхине тăвата сехетре çитнĕ. Çак ятпа йăла çуралнă: çынсем çак кун урамра тăватă сехетре пысăк хуранпа пăтă пĕçерсе çиеççĕ, купăс каласа ташлаççĕ, çӳлелле пăшал переççĕ, салют параççĕ. Хальхинче хăналакансем Юрийпа Николай Анчиковсем пулаççĕ. Вĕсем Бондаровка çыннисене салтаксен вилтăприне йĕркелесе-тирпейлесе тăнăшăн тав туса така туянса пусаççĕ – пысăк хуранпа шӳрпе пĕçерсе çитереççĕ, шашлăкпа сăйлаççĕ.

Халĕ Юрий Анчиков вăрçăра вилнĕ ентешĕсене çине тăрсах шырать: тĕрлĕ архивсене çырусем çырать, Интернетра нумай ларать. Вăл ялти нумай çыннăн шăпине пĕлнĕ ĕнтĕ.

-Тăванĕсен шăпине пĕлес текенсене хастартарах ĕçлеме сĕнетĕп. Шырасан-шырасан мĕн те пулин

тупӑнатех. Оборона министерствин сайчӗсемпе анлӑн усӑ курмалла – obd-memorial.ru тата podvignaroda.mil.ru. Унта ҫынна хушамачӗ тӑрӑх та, наградӑсем тӑрӑх та тупма пулать. Пирӗн асаттесем халӑх пуласлӑхӗшӗн, мирлӗ пурнӑҫшӑн ҫамрӑклах пуҫне хунӑ. Вӗсен ячӗсене тупса, шӑписене пӗлсе ҫитес ӑрусем валли хӑварасчӗ. Ҫӗршыва сыхласа пуҫне хунӑ салтаксем — пирӗн мӑнаҫлӑх, чӑн-чӑн паттӑрсем. Вӗсене манмалла мар, вӗсем халӑх хисепне тивӗҫлӗ, - тет Юрий Григорьевич.

«Канаш», 2014 ç., 28 №.

# Ёçле, ачам, çын пулăн!



Н.Шарайкин ача чухнех хастар, пурне те пĕлме юратнă. Кивĕ Улхаш шкулĕнче вĕреннĕ чухне таврапĕлӳ ĕçĕпе кăсăкланнă, йĕлтĕрпе чупса, тĕрлĕ вăйăсем выляса район шайĕнчи спортăмăртăвĕсене яланах хутшăннă. Çак ăнтăлу ăна паян усламçă пулса тăма пулăшнă.

-Шкулта таврапĕлӳ кружокне Н.К.Кадебин илсе пыратчĕ, питĕ интереслĕ япаласемпе паллаштаратчĕ. 1986 çулта пире Николай Константинович хамăр ял çыннин Совет Союзĕн Геройĕн Н.Г.Князькинăн вилтăпри çине Киева та илсе кайрĕ. Мĕнле савăннăччĕ ун чух эпир çакăн пек инçе çула кайса килнишĕн! Спорт секцине вара В.П.Сандркин ертсе пыратчĕ, вăл пире спортпа пиçĕхтересшĕн нумай тăрăшрĕ. Çак тата ытти вĕрентӳçĕсенчен пурнăçра кирлĕ пулакан япаласене нумай илтĕм. Чи кирли – тăрăшмалла, шав малалла утмалла!- ачалăхне аса илет Николай Витальевич.

Халĕ Н.В.Шарайкин Аслă Нагаткинта бензозаправка тытса тăрать. Мăшăрĕн – Ирина Николаевнан — кафе, парикмахерски пур. Паян Шарайкинсем — çителĕклĕ пурнăçпа пурăнакан çемье.

Пурлăхне Николай Витальевич хăй тăрăшулăхĕпе, хăй аллипе пуçтарнă. Пилĕк ачаллă çемьере ĕçпе пиçĕхсе ӳснĕ. Ашшĕпе амăшĕ – Виталий Серафимовичпа Мария

Николаевна – ачисене тăрăшса ĕçлесен кăна пурнăçра çӳлелле кайма пулнине лайăх ăнлантарнă.

-Атте пире питĕ çирĕп тытатчĕ, йĕрке пултăр тесе яланах ăнлантаратчĕ, вăй çитнĕ таран ĕçлеттерме тăрăшатчĕ. Вĕсем вăрçă ачисем, нуша та выçлăх мĕнне лайăх пĕлеççĕ. Атте: «Ĕçле, ачам, ĕçле, çын пулăн»,- тетчĕ. Хăй те ĕмĕрĕпех тăрмăшнă. Паян та ялта ĕне, вăкăр усраççĕ вĕсем. Хăйĕн тракторĕпе атте курăк çулать, аннепе иккĕшĕ хĕлле валли утă хатĕрлеççĕ. «Сире çитмĕлтен иртсен кун пек нушаланма кирлĕ-и?- ыйтатăп вĕсенчен хăш чух. «Сывлăх пур чух ĕçлемелле!» - теççĕ. «Канаш» хаçат та çырăнса илеççĕ, юратса вулаççĕ,- каласа парать Николай Витальевич.

1989 çулта шкултан вĕренсе тухсан салтакра пулать вăл, Мускаври Андропов ячĕллĕ Кантемиров дивизинче хĕсметре тăрать. Унта та пултаруллă чăваша тӳрех асăрхаççĕ: старшина звани параççĕ, взвод командирĕн çумĕ тăваççĕ. Çартан таврăнсан Николай вырăнти хуçалăхра комбайнпа тырă пуçтарать. Кайран вара строительсен бригадине пуçтарса Тольятти хулине тухса каять. Сакăр çул вăй хурать вăл ку хулара. Хăй каланă тăрăх, талăкĕпе ĕçлени те пулнă. Ялан пурнăç пуçтармалла, çемьене тăрантармалла.

-Пурнăçа йĕркелесе ярас тесе малтан 10 çул çынсем валли çурт турăм, халĕ 12 çула яхăн хам çурта йĕркене кĕртетĕп. Пӳрт лартнă чух тăвансем, юлташсем нумай пулăшрĕç. Çав кун кӳршĕ ирхине ĕçе тухса кайрĕ. Пирĕн пата вара ялтан 9 сехетре 40 çын килчĕ. Вĕсем 14 сехет валли пӳрте купаласа пĕтерчĕç, кайран ĕçсе-çисе савăнчĕç. Кӳршĕ килчĕ те куçне чарсах пăрахрĕ. «Ну вăйлă ĕçлетĕр те эсир, чăвашсем! Юмахри пекех – темиçе сехетре çурт хăпартса хунă»,- тет вăл тĕлĕнсе. Эпир çапла ĕçлеме хăнăхнă ĕнтĕ, авалхи йăла – ниме – пирĕн юнра.

Эпĕ хам та кама кăна пулăшман, ăçта кăна çитмен!

Хамăн ывăлăмсене те – 16 çулхи Женьăна тата тăватă çулхи Антона — ĕçе хăнăхтарма тăрăшатăп. Пĕчĕкки веçех ăнланса пĕтерейместь-ха, асли вара хамăра пулăшать ĕнтĕ, хушнине итлет. Çавсене ырă пурнăç çулĕ çине кăларас тесе тăрăшатпăр ĕнтĕ паян мăшăрăмпа. Вĕсене ку ахăрсаманара хăйсем тĕллĕн пурăнма вĕрентмелле. Вĕсем ăнланччăр: ĕçлесен, тăрăшсан ху лартнă тĕллеве пурнăçлама пулать. Пире те атте-анне çапла ăс паратчĕ, - вĕçлет калаçăва кил хуçи.

Чăнлă районĕ.

«Канаш», 2014 ç., 36 №.

# Тĕнче кĕрлевĕнче чăваш хаçачĕсен сасси ан çĕттĕрччĕ

Декабрĕн 5-мĕшĕнче Пушкăрт чăвашĕсен пысăк уяв пулчĕ, «Урал сасси» хаçатăн 1-мĕш номерĕ тухни 25 çул çитнине уявларĕç.

«Урал сасси» – демократи саманинче тулай чăвашĕсен хушшинче тухнă пĕрремĕш хаçат. Ун пĕрремĕш номерĕ Авăркас районĕнче 1989 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнче кун çути курнă. Черетлĕ номерĕсене Пишпӳлек районĕнче хатĕрленĕ. Унтан эстафетăна Пелепей илнĕ. Çакăнта вара хаçат редакци йышĕ çĕнĕрен тĕвĕленнĕ, тĕпленнĕ. Халĕ те кунта тухса тăрать.

Уяв каçĕ «Урал батор» Культура керменĕнче пулчĕ.

Малтан фойере çавра сĕтел иртрĕ. Унта журналистсен коллективĕ, обществăлла корреспондентсем, чăваш культура пĕрлĕхĕн районти пуçлăхĕсем хаçата малалла аталантарасси, хаçат чĕлхи тата тираж ӳстересси пирки калаçрĕç. Редакци коллективне 25 çул пĕр улшăнмасăр ертсе пыракан тĕп редактор Юрий Николаевич Михайлов кунта çамрăксем хушшинче ирттернĕ викторинăсен, конкурссен çĕнтерӳçисене Дипломсем тата парнесем парса чысларĕ.

Малалла çынсем пысăк зала куçрĕç. Салам сăмахĕсем калама тата редакцие парнесем пама сцена çине Пушкăртстан Республикин пичетпе массăллă информаци хатĕрĕсен агентствинчен ПР Журналистсен пĕрлĕхĕн ертӳçи А.Давлетбаков, Чăваш Республикин министрсен кабинечĕн Пушкăртстанри полномочиллĕ çынни В.Портнов, ПР чăвашĕсен Канашĕн ĕçтăвкомĕн пуçлăхĕн çумĕ Л.Мурманская, ПР Чăваш культура обществин председателĕ Ю.Михайлов, Ĕпхӳ хулинчи чăвашсен наципе культура автономийĕн ертӳçи В.Иванов,

Шупашкарти В.Енӗш ҫыравҫӑ, Ӗпхӳри П.Миронов ячӗллӗ чӑваш вырсарни шкулӗн директорӗ И.Тарасов, Тутарстанри «Сувар» хаҫатӑн тӗп редакторӗ К.Малышев, Чӗмпӗр Ен чӑвашӗсен «Канаш» хаҫачӗн тӗп редакторӗ Н.Ларионов, районсенчен килнӗ хастарсем тата ыттисем тухрӗҫ.

Уява «Илем» ушкӑн (Пелепей), чӑваш гимназийӗнчи ачасем, Ҫтерлӗ хулинчен килнӗ «Тавах» ансамбль тата ытти артистсем илемлетрӗҫ. Вырӑсла, чӑвашла, тутарла, пушкӑртла юрларӗҫ, кашни наци ташшине ташларӗҫ.

«Урал сасси — ҫемье хаҫачӗ, тӗнче кӗрлевӗнче ан ҫӗттӗрччӗ ячӗ!» шухӑшпа иртрӗ Пушкӑрт чӑвашӗсен уявӗ. Ҫак шухӑш чӑваш тӗнчинчи кашни хаҫата пырса лекет. Чӑваш сасси нихҫан ан сӳнтӗрччӗ ҫак тӗнчере.

Пушкӑртстан Республики,
Пелепей хули.

«Канаш», 2014 ç., 50 №.

## «Канаш» хаҫатăн 50 ҫулне те паллă тăвасчĕ-ха!



«Канаш» хаҫат юбилейĕ умĕн эпир ун пĕрремĕш редакторĕпе, Ульяновск облаҫĕн ĕҫ ветеранĕпе В.Ф.Ромашкинпа курса калаҫрăмăр, хаҫат мĕнле тухма пуҫланине аса илтĕмĕр.

**-Валериан Федорович, ҫĕнĕ ĕҫе мĕнлерех пикентĕр, мĕнрен пуҫларăр?**

-Ҫĕнĕ самана ҫитсен наци ыйтăвĕсене власть умне тăратма май пулчĕ. Кашни халăх культурине ҫĕклесси пирки нумай калаҫма пуҫларĕҫ. Калаҫăвĕ пур, анчах ĕҫĕ курăнмасть. Сăлтавне укҫа-тенкĕ ҫукки ҫине яраҫҫĕ. Эпĕ ун чух Чăнлă районĕнчи «Коммунизм ҫути» хаҫат редакторĕччĕ. Вара «Канаш» хаҫатăн 1-мĕш номерĕ валли хамăр патăмăрта материалсем хатĕрлерĕмĕр, верстка турăмăр, район типографийĕнче (директорĕ В.Салюкин) пичетлерĕмĕр. Ку 1989 ҫулхи декабрь уйăхĕн 30-мĕшĕнче пулса иртрĕ. Ун хыҫҫăн область администраци пуҫлăхĕ Ю.Ф.Горячев пичет секторĕн пуҫлăхĕпе А.М.Богатовпа тата И.Я.Яковлев ячĕллĕ ҫутĕҫ обществи пуҫлăхĕпе И.С.Кирюшкинпа тĕл пулса хаҫат шăпине татса парать – ăна администраци укҫи-тенкипе кăлармалла, редакцире ĕҫлеме ҫынсем пуҫтармалла. Мана кун хыҫҫăн редактора ҫирĕплетрĕҫ. Тĕрĕссипе, ку ĕҫе эпир 1989 ҫулхи март уйăхĕнчех пуҫланăччĕ, А.Ф. Юманпа иксĕмĕр КПСС

обкомне çыру çырнăччĕ. Пирĕн тăрăшулăх сая каймарĕ, Чĕмпĕр çĕрĕ çинче чăвашла хаçат тухма пуçларĕ.

**-Çапах та калăр-ха: хăвăр шанаттăрччĕ-и ĕç тухасса?**

-Эпир шанса ĕçленĕ, мĕншĕн тесен ун чух наци ыйтăвĕсен хумĕ ытла та вăйлă çĕкленнĕччĕ. Хамăр та пуçа усмарăмăр. Çавăнпа ĕç тухрĕ те. Кайран пичет управленийĕн пуçлăхĕ Н.Н.Липин редакцире кĕнекесем кăларма тата сутма ирĕк (лицензи) пачĕ. Вара эпир ура çине тăтăмăр темелле.

**-Валериан Федорович, халĕ редакцире пурте эсир ĕçе илнĕ журналистсемех вăй хураççĕ. Мĕнлерех суйласа илеттĕр эсир çынсене?**

-Паллах, çынна аван пăхаттăм, вăл мĕнлереххине сăнама тăрăшаттăм. Ку çыннăн редакцире малалла ĕçлеме чун хавалĕ çитнипе çитменнине хам ăшра виçеттĕм. Мана ку ĕçре шалти туйăм – интуици текенни – пулăшатчĕ. Эпĕ илнĕ çынсем халĕ унта вăй хураççĕ пулсан савăнатăп, апла эпĕ йăнăшман.

**-Пĕр вăхăтра хаçата хупма та пултаратчĕç вĕт, ун шăпи «çÿç çинче» çакăнса тăратчĕ.**

-Çапла, 2000-мĕш çулсенче администрацири хăшпĕр чиновник чăнах та «Канаша» уйрăм хаçат пек мар, «Народная газета» ăшĕнче 1 страницăллă вкладыш туса хăварасшăнччĕ. Ку ырăпа вĕçленместчĕ: пăртак вăхăт иртсен ăна унтан вăшт кăна кăларса ыватăтчĕç. Эпир «Канаша» пуçĕпех çухатма пултараттăмăр. Çавăнпа эпир хаçатшăн кар тăтăмăр, ун пек тума памарăмăр.

**-2002 çулхи октябрь уйăхĕнче эсир редакцирен кайнă хыççăн пире вулакансем час-часах ыйту параççĕ: пĕрремĕш редактор ăçта халь?**

-Халĕ тивĕçлĕ канура ĕнтĕ эпĕ, 2014 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен вара ниçта та ĕçлеместĕп. Редакцире 13 çул

ĕçлерĕм, унтан кайнă хыççăн Ульяновскри 28-мĕш шкулта истори вĕрентрĕм. Унтан экономикăпа менеджмент институтĕнче пай пуçлăхĕ пултăм, вăл вăхăтра Аслă Нагаткинта тата Чăваш Республикинчи Канаш хулинче филиалсем уçрăм. Усламçă çăкăрне те çисе пăхрăм, видео тата аудиодисксем сутрăм. 2008-2011 çулсенче Чăнлă районĕнчи Покровски шкулĕнче вырăс чĕлхипе литературине, истори вĕрентрĕм. Тата виçĕ çул çак районтах Норовка шкулĕнче вăй хутăм, малтан пуçламăш классене вĕрентрĕм, кайран – 5-9-мĕш классене. Ку ялта ман пӳрт пур, çакăнтах пурăнатăп. Ман педагогика ĕçĕн стажĕ – 26 çул.

**-Хăвăра, хаçата тата вулакансене мĕн суннă пулăттăр?**

-Чĕмпĕр çĕрĕ çинче чăваш хаçачĕ нихçан та тухма ан пăрахтăрччĕ, ăна вулакан çынсен шучĕ ӳссе пытăрччĕ. Чăваш халăх культури кунсерен çӳлелле хăпарса пытăр, «Канаш» хаçат пĕлтерĕшĕ çак ĕçре пысăк. Хаçатăн 25 çулхи юбилейĕ ячĕпе пурне те саламлатăп! Ун 50 çулне те палăртасчĕ-ха, çавăнччен пурăнасчĕ!

**- Валериан Федорович, эсир хаçат уçса, 13 çул ăна ертсе пырса Чĕмпĕр чăвашĕсен историне ырă ятпа кĕрсе юлтăр. Сире эпир пархатарлă ĕçшĕн тав тăватпăр, çирĕп сывлăх та вăрăм ĕмĕр сунатпăр! Эсир пуçарнă ĕçе малалла пĕтĕм вăя хурса илсе пыма шантаратпăр!**

«Канаш», 2015 ç., 5 №.

## Чăваш кĕнекисĕр чăвашла мĕнле вĕрентмелле?

Шупашкарта апрелĕн 16-17-мĕшĕсенче регионсен хушшинче «Хальхи вулакан, телевизор куракан тата радио итлекен – вĕсен ăс-тăнне йĕркелесси тата паха хыпарсемпе, литературăпа тивĕçтересси» ятпа пысăк пуху иртрĕ.

Ăна Чăваш Республикин Журналистсен союзĕ Литература çулталăкне тата К.В.Иванов çулталăкне халалласа йĕркеленĕ. Пухăва Раççейри çичĕ регион чăвашĕсем килнĕ: Пушкăрт, Тутарстан, Мари Эл Республикисенчен тата Оренбург, Самар, Тюмень, Ульяновск облаçĕсенчен.

**1-мĕш кун**

Инçетрен килнисене чи малтан Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялне экскурсие илсе кайрĕç. Кунта чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕн – Андриян Григорьевич Николаев космонавт летчикăн вилтăпри çинче пулчĕç вĕсем. Юлашки вăхăтра часавай хыçĕнчи пахчара паллă çынсем нумай йывăç лартнă иккен – вырăнĕ илемленнĕ.

Шупашкара таврăнсан Наци библиотекинче «Хальхи вăхăтра чăваш кĕнекине халăх хушшинче сарасси» ятпа çавра сĕтел иртрĕ. Пухăннисем умĕнче ЧР Журналистсен союзĕн пуçлăхĕ тата Чăваш кĕнеке издательствин директорĕ В.П.Комиссаров, ун çумĕ Н.Яхатина, ЧР вĕренӳ министерствин пай пуçлăхĕ В.Бычков, Наци библиотекинчи пай пуçлăхĕ Г.Соловьева, Тюмень чăвашĕсен «Тăван» пĕрлĕхĕн пуçлăхĕ тата çакăн ятлă хаçат редакторĕ И.Маслова, Ульяновск облаçĕнчи наука библиотекин – Кĕнеке керменĕн пай пуçлăхĕ Л.Утина тата ыттисем сăмах каларĕç.

Каçпа вара хăнасене Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче Ф.Павловăн «Ялта» спектакльне кăтартрĕç.

**2-мĕш кун**

Наци библиотекинче Чăваш кĕнеке издательстви «Чăваш халăхĕн çӳпçи» ятпа кĕнекесен куравĕ ирттерчĕ. Унтан пысăк залра семинар пуçланчĕ. Калаçма пуçличчен И.Я.Яковлева сума суса ун палăкĕ умне тĕрлĕ регионтан килнисем чечек карçинкки лартса хучĕç. Пухăва журналистсем, библиотекарьсем, педагогсем, литераторсем, критиксем, патшалăх влаçĕн çыннисем тата ыттисем хутшăнчĕç. Чăваш Республикин министрсен кабинечĕн председателĕн çумĕ – информаци политикин тата массăллă коммуникацин министрĕ А.Иванов хальхи тапхăрта телевидени, радио, хаçат, Интернет, литература халăхра хыпар сарас ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. В.Комиссаров вара обществăна аталантарас ĕçре вăхăтлă, паха та тĕрĕс хыпар кирлине пĕлтерчĕ. Çамрăксене воспитани панă çĕрте кирлĕ-кирлĕ мар хыпарсемпе усă курмалла марри çинчен калаçрĕ. Раççей регионĕсем чăваш кĕнекисене туянас ĕçри çитĕнӳсем çинче чарăнса тăчĕ. Шел, пирĕн область ку ĕçре кайра пырать, темиçе çул ĕнтĕ чăвашла кĕнекесем туянман. Кун пек лару-тăрура ачасене тăван чĕлхене мĕнле вĕрентмелле, епле юратма хăнăхтармалла? Журналистсемсĕр, çыравçăсемсĕр пуçне çамрăксен ăс-тăнне йĕркеленĕ çĕрте библиотекăсен, шкулсен, клубсен тӳпи пысăк. Çавăнпа та вĕсен ĕçне тивĕçлипе йĕркелемелле.

Çаплах ЧР гуманитари наукисен институчĕн директорĕ Ю.Исаев профессор, «Чувашия» патшалăх телерадиокомпани пуçлăхĕ А.Магарин, кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ В.Алексеев, журналистика

ветеранĕ Д.Семенов, «Хыпар» издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редактор В.Туркай, филологи наукисен докторĕ В.Родионов профессор, филологи наукисен докторĕ Ю.Артемьев профессор, А.Кибеч çыравçă, чăваш литературин шурсухалĕ В.Станьял, Тутарстан чăвашĕсен «Сувар» хаçачĕн редакторĕ К.Малышев, Пушкăрт чăвашĕсен «Урал сасси» хаçачĕн редакторĕ Ю.Михайлов, Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен «Еткер» телекăларăмĕн редакторĕ О.Мустаев тата ыттисем хăйсен ĕçĕ тата çитменлĕхсем пирки калаçрĕç. Чи çивĕччи – кашни çĕрте çамрăксем сахалли е пачах çукки. Аслă ăру йĕрĕпе пырса ун ĕçне алла илесшĕн çунса тăракансем çукпа пĕрех. 20-30 çултан чăваш литератури, журналистики мĕнле шайра пулĕ?

Кăнтăр апачĕ хыççăн вара «Çыравçă тата журналист сăмахĕ» ятпа литературăпа кĕвĕ уявĕ иртрĕ. В.Алексеев, Р.Сарпи, Н.Ишентей, Ю.Артемьев, М.Карягина, С.Гордеева, Л.Сарине, О.Туркай тата ытти çыравçăсемпе поэтсем хăйсен сăввисене вуларĕç, литература пуласлăхĕ пирки калаçрĕç. Çаплах чăваш эстрада артисчĕсем хăнасене юрăсем парнелерĕç.

Юлашкинчен Чăваш кĕнеке издательстви кашни делегацие сумлă кĕнекесен пуххи парнелесе ячĕ.

«Канаш», 2014 ç., 15 №.

# Вăрçăран малтан хăй, унтан çухалнă ашшĕ таврăннă



Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи ветеранĕ Ф.К.Дунаев мăшăрĕ çĕре кĕнĕренпе ялти пӳртне хăварса Аслă Нагаткинти кĕçĕн ывăлĕ патне пурăнма куçать. Федор Кириллович кăçалхи январĕн 30-мĕшĕнче 89 çул тултарнă.

Вăл Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче (Тутарстан) 1926 çулта çуралнă. 1934 çулта шкула 1-мĕш класа кайнă. Анчах икĕ класс пĕтернипех çырлахма тӳрĕ килнĕ. Килти йывăр лару-тăрăва пула вуннăри ача хире ĕçлеме тухнă, çемьере асли пулнă май килте кĕçĕннисене пăхмалла пулнă. Пĕчĕккĕллех выльăхсене тăрантарма та, ĕне сума та вĕреннĕ вăл.

1941 çулхи июнь вĕçĕнче ун ашшĕне – Кирилл Дмитриевича фронта илсе каяççĕ. 15 çулхи Федя колхозра та, килĕнче те ашшĕне улăштарать: лашапа çӳрет, утă çулать, ĕнесемпе сурăхсене тăрантарать...

-1941 çулта тырă лайăх çитĕнчĕ. Ялта арçынсем юлманпа пĕрех – бригадир та тимĕрçĕ çеç. Тухăçа хĕрарăмсем тата пирĕн пек ачасем пухрĕç. Жаткăсемпе, жнейкăсемпе ĕçлеттĕмĕр. Кăкарса ямалли комбайн пурччĕ, эпир, 14-15 çулхи ачасем, çавна пĕтĕм хир тăрăх сĕтĕрсе çӳреттĕмĕр. Уйăха икĕ пăт тырă парса пыратчĕç. Çулталăк вĕçĕнче вара мĕнле ĕçленине кура

пётёмпех пачёç. Тыррине Ульяновска 75 çухрăма илсе каяттăмăр. Çак çулхи кёркунне çумăрлă, çиллё килчё. Ял çыннисене фронта илсе кайнă чух митинг туни асра юлчё. Халăх ял варрине пуçтараннă. Çумăр, çил, пылчăк... Тухса калаçакансен сăмахёсене вăхăт-вăхăт хёрарăмсен, ачасен кăшкăрса йёнё сассисем хупласа хураççё. Вёсем ачисене, мăшăрёсене, ашшёсене вилме ăсатаççё вёт... – аса илет вăрçă ветеранё.

1942 çулта ашшё хыпарсăр çухални çинчен виçкёреслё çыру килет. Çемьере хуйхă...1943 çулхи октябрён 8-мёшёнче вара Федор Дунаева та çара кайма повестка параççё, ун чухне вăл 18 çулта тултарман-ха. Вёсене, ялти сакăр çынна, Мускав облаçёнчи Покровски ялё çывăхёнчи пехота стрелокёсен училищине илсе каяççё, пулеметчика вёрентме пуçлаççё. Анчах та пётёмпех вёренсе пётерме май пулмасть, вёсене васкасах Белоруссири Витебск хули патнелле ăсатаççё. Унта «Багратион» текен операцие хатёрленеççё иккен. Çамрăк салтаксене тўрех малти вырăнсене ямаççё, 1944 çулхи майăн 6-мёшёнче вара вута кёме тўрё килет.

-Питё хăрушăччё. Пуля çумăр пек çăвать, тăшман артиллерийё пёр чарăнми кёрёслеттерет. Çапах та пирён çарсем фашистсене çёмёрсе малалла кайрёç. Витебска унка илтёмёр. Унта юлнă тăшмансене пётерме пуçларăмăр. Нимёçсем колонни-колоннипе шурă ялав йăтса тухатчёç, техники-мёнёпе парăнма тытăнчёç. Гитлеровецсене хăваласа малалла кайрăмăр. Эпир пырса кёрсен хёрарăмсем, ачасем, ватă çынсем нўхрепрен тухатчёç. Ялё-ялёпех вут алхасать, вырăх-чёрлёх, тырă çунать... Анчах вёсене сўнтерме вăхăт çук: хăвăртрах тăшмана хăваласа çитсе тёп тумалла! Паллах, вёсем те çаврăнса пăхмасăр тармастчёç, пире перетчёç,- каласа парать Федор Кириллович.

Çапла пĕррехинче тырă хирĕ хĕрринче миномет çурăлать те Федор Дунаева вăйлă амантать. Осколоксем сапаланса кайса ун урине çапса хуçаççĕ, хырăмне шăтарса ишсе антараççĕ, янахне амантаççĕ. Юн юхтарса выртакан салтака санитарсем çыхса яраççĕ, унтан хир госпитальне операцие ăсатаççĕ. Темиçе кунран вара санитар пуйăсĕпе Мускав çывăхĕнчи Серпухов хулине 2997-мĕш номерлĕ госпитале çитереççĕ. Унта вăл июнь уйăхĕнчен пуçласа сентябрьччен сипленет, çапах та 2-мĕш ушкăнри сусăр (инвалид) пулса юлать.

Госпитальтен тухсан чăваш каччине Мытищи хулине фронт валли обмундировани çĕлекен фабрикăна хураллама яраççĕ. Вăл Çĕнтерӳ кунне çавăнта кĕтсе илет. Ун хыççăн та кунта ĕçлеме юлать-ха вăл. Тăван ялне вара 1946 çулта çеç таврăнать.

Чи тĕлĕнмелли вара – Федорăн çухалнă ашшĕ те яла сывă килсе кĕрет! Чăнах та, аманса, сывлăхне çухатса килет. Çавăнпа нумай пурăнаймасть, 1948 çулта вилет. Ун чухне вăл 48 çулта пулнă.

Федор Кириллович кăштă вăхăт иртсен ялта комбайнпа ĕçлекен Любовь Федотовна Мискинана качча илет. Вĕсем 8 ача çуратса ӳстереççĕ: çичĕ ывăл та пĕр хĕр. Ачисем тĕрлĕ çĕрте вăй хураççĕ: преподаватель те, священник та, тимĕр шăратакан та, водитель те, медицина ĕçченĕ те пур вĕсен хушшинче. Шел, мăшăрĕ сакăр çул каялла вилнĕ. Çавăнпа пĕччен юлнă ашшĕне Анатолий ывăлĕ хăй патне пурăнма илсе килнĕ.

Кил хуçи вырăнти колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ çĕрте нумай çул вăй хунă. 1975 çулта социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи те пулнă. Пĕр вăхăт пушар хуралĕнче те тăнă. Çапăçу хирĕнче паттăрлăх кăтартнăшăн тата мирлĕ вăхăтри тăрăшуллă ĕçĕшĕн Федор Дунаева нумай награда парса чысланă: СССР Хисеп палли, И.В.Сталин,

Г.К.Жуков тата ытти медальсем. Анчах вӗсенчен те хаклӑраххи – хӑйӗн ҫемйи.

-Пуян ҫын эпӗ, - тет Федор Кириллович. –Манӑн сакӑр ача, 19 мӑнук, 21 кӗҫӗн мӑнук. Вӗсен мӑшӑрӗсене шутласан пирӗн ҫемье 71 ҫынран тӑрать! Хам 90 ҫул тултарнӑ кун вӗсем пурте пӗрле пухӑнасса шанса пурӑнатӑп.

Хӑй калашле, пурнӑҫне ахаль пурӑнса ирттермен вӑл, йӗркеллӗ ача-пӑча ҫитӗнтернӗ, пӗтӗм вӑй-халне ҫынсене, тӑван ҫӗршыва панӑ.

Чӑнлӑ районӗ.

«Канаш», 2015 ç., 16 №.

## Упамсар шкулěнче – район Акатуйě

Упамсар ялне никěсленěренпе 305 çул çитнине палăртса шкул çумěнчи паркра район чăвашěсен Акатуйě иртрě. Ăна хатěрлеме тата ирттерме шкул коллективě нумай вăй хунă, ял халăхне явăçтарнă.

Чěннěхăнасене ятарласа хатěрленě сцена çинче сăрапа тата килте тунă сырпа кěтсе илчěç – кунта йăли çапларах. Пухăннисене Çěнě Малăкла район администраци пуçлăхěн тивěçěсене вăхăтлăха пурнăçлакан А.Д.Пуреськина, район пуçлăхě, депутатсен канашěн пуçлăхě С.В.Гришин, кěпěрнаттăрăн наци ыйтăвěсемпе ěçлекен канашлуçи (советник), УОЧНКА председателě В.И.Сваев, районти вěренӳ пайěн заведующийě, вырăнти чăвашсен наципе культура автономин пуçлăхě С.А.Сандрюков, Мелекесс район пуçлăхěн пěрремěш çумě С.В.Тойгильдин, Эрсел ял тăрăхěн пуçлăхě Г.Г.Карымов, вырăнти пěтěмěшле пěлӳ паракан шкул директорě А.В.Долгова саламларěç, чăваш йăли-йěрки ку тăрăхра сарăлса, аталанса пынишěн савăннине пěлтерчěç. В.И.Сваев вырăнти чăваш хастарěсене халăх йăлисене аталантарас ěçре тăрăшнăшăн Тав çырăвě парса чысларě, халăха «Канаш» хаçат çырăнмалли çинчен асăрхаттарчě. «Асран кайми...» юрă янăранă вăхăтра сцена умне Акатуй паллине – сухапуç — вырнаçтарса лартрěç, унтан ялти сумлă çын Н.Г.Илюнгин Турăран лайăх тухăç ыйтса кěлě каларě.

Кунта çěнěмалăкласемпе мелекессем туслă пурăннине палăртмалла. Пěрисем уяв тăваççě – теприсем унта çитеççех! Уявне хатěрлеме те, ирттерме те пулăшаççě. Çапла пěр çемьери пек пурăнаççě. Хальхинче те Упамсара Мелекесс тăрăхěнчен «Савăнăç» (Димитровград, ертӳçи И.Н.Иванюкова), «Телей» (Эврел, П.М.Улюкин) ушкăнсем килсе çитнě. Вěсем тата Тольяттирен килнě А.Долгов

халăха юрă-ташăпа савăнтарчĕç. Кӳршисем патне Çĕнĕ Малăкларан, Малаелĕнчен те артистсем килнĕччĕ. Вĕсем тата чăваш тумне тăхăннă шкул ачисем пĕр пысăк картана тăрса Упамсар ял гимнне – «Шур-шур тăрăх çӳрерĕм» юрра – чун çӳçенмелле юрларĕç. Ялти таврапĕлӳçĕ – В.П.Ванюкова вĕрентӳçĕ кунта пĕрремĕш çынсем килсе тĕпленнине, Упамсар мĕнлерех никĕсленнине каласа пачĕ.

Ку ялтан Аслă вăрçă фронтне 209 çын тухса кайнă, 108-ĕшĕ таврăнайман. Сăмахран, çапăçу хирĕнче Губернаторовсем вуннăн выртса юлнă. Тăван çĕршыва хӳтĕлесе пуç хунисене асăнса лартнă палăк умне тыл ĕçченĕ В.Алькеева тата кăçал шкул пĕтернĕ В.Елифанкина пурте пĕлекен «Журавли» юрра малаелсем юрланă вăхăтра чечек карçинкки пырса лартрĕç...

Пĕр-икĕ сăмах шкул çинчен каласа хăвармалла. Вĕçленнĕ вĕренӳ çулĕнче кунта 70 ача пулнă. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче вара пĕрремĕш хут парта хушшине 14 ача ларĕ. Ытти çулсенче 5-6 кăна пулнă. Кăçал ялта çур çулта 6 ача çуралнă. Пурĕ ялта 700 çын пурăнать. Шкул коллективĕ облаçри пултарулăх конкурсĕсене яланах хутшăнать, кăçал чăваш чĕлхи кабинечĕсен конкурсĕнче 3-мĕш вырăн йышăннă. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă ентешĕсен стенчĕ пур, музейра ĕлĕкхи япаласем чылай. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче вара шкулта чăваш чĕлхине предмет шайĕнче вĕрентесшĕн! Ку мухтава тивĕç.

«Канаш» хаçат редакцийĕ çак ĕçре пулăшас тесе упамсарсене Акатуй ячĕпе 50 яхăн кĕнеке, «Чувашский край в памятных датах и фотографиях» альбом, тĕрлĕ хаçат-журнал парнелерĕ. Сăмах май паян кунта пирĕн хаçата 15 çынна яхăн çырăнса илет. Вырăнти пуçлăхсем пире вĕсен шутне тата ӳстерме шантарчĕç.

Кунта çаплах нумай çул килĕштерсе пурăнакан

çемьесене, нумай ача çуратса ӳстернисене, тăрăшса ĕçлекенсене сцена çине чĕнсе илсе чысларĕç, парне пачĕç.

Уяв программи вĕçленсен те артистсем сцена çинчен час анмарĕç-ха, купăсçăсен тата такмакçăсен ăмăртăвĕ вăрах пычĕ, ял тăрăх нумайччен кĕвĕ-çемĕ юхрĕ. Кăмăл тăвакансен сцена çине хăпарса пултарулăхне кăтартма май пулчĕ.

Ялта тĕрлĕ наци çыннисем пурăннине шута илсе уява О.Н.Янкова тата М.В.Попова вĕрентӳçĕсем вырăсла-чăвашла ертсе пычĕç.

Çĕнĕ Малăкла районĕ.

«Канаш», 2015 ç., 23 №.

# Яковлев, Иванов ячĕллĕ библиотекăсем пулĕç-ши?

Пирĕн облаçра халь библиотекăсене паллă çынсен, çыравçăсен ячĕсене парас тапхăр пырать. Питĕ лайăх пуçаруку. Пушкин, Аксаков, Грибоедов ячĕсене аса илчĕç, нумаях пулмасть çĕре кĕнĕ Чĕмпĕр поэчĕн Благовăн ятне те пачĕç Ульяновскри 15-мĕш библиотекăна.

Чăвашсен вара хăйсен çинчен шутламалла. Облаçра миçе чăваш ялĕ! Унта библиотекăсем пур вĕт. Çавсене паллă чăваш çыравçисен тата поэчĕсен ятне парасси пирки шутламалла мар-и?

Кăçал чăваш халăхĕ «Нарспи» поэма авторĕн Константин Ивановăн çулталăкне паллă тăвать. Паллă поэтăмăр çуралнăранпа 125 çул çитрĕ. Пĕр-пĕр библиотекăна чăваш литературине никĕслекен çын ятне парсан питĕ лайăх пулассăн туйăнать. Иванов 10 çул Чĕмпĕрте пурăннă, хăйĕн чи пĕлтерĕшлĕ хайлавĕсене çакăнтах çырнă.

Ман шутпа, Ивановпа та чарăнмалла мар пирĕн. Вырăнти вĕрентӳçĕсем, библиотекарьсем, ытти хастарсем ялсенчи библиотекăсене паллă чăваш çыравçисен ятне парас енĕпе пуçарусем тумалла, пĕр-пĕринпе канашламалла, ял тăрăхне кайса пуçлăхсене хăйсен шухăшне каламалла.

Тĕрĕссипе, хамăр облаçра эпĕ И.Я.Яковлев ячĕллĕ библиотека пуррине те пĕлместĕп-ха. Тен, вăл пур та пуль, анчах пĕлместпĕр. Çак ĕçе вырăнтан тапратасчĕ. Пирĕн тивĕçлĕ çын нумай.

«Канаш», 2015 ç., 26 №.

# Ачаранах ӗҫпе пиҫӗхсе ӳсрӗмӗр



В.С.Шарайкин ӗмӗрне тӑван ялӗнче – Кивӗ Улхашра пурӑнса ирттерет. Кӑҫал вӑл мартӑн 28-мӗшӗнче 75 ҫул тултарнӑ. Унран 3 ҫул та пилӗк уйӑхне салтакра пулнӑ. Таврӑнсан вара Виталий Серафимович вырӑнти колхозра трактористра тата шоферта 37 ҫул вӑй хунӑ.

Ача пӗрре тултарсанах Аслӑ вӑрҫӑ пуҫланать, ашшӗне – ялти ӑста кӑҫатӑҫа Серафим Федоровича (1911 ҫулхи) фронта илсе каяҫҫӗ. Темиҫе уйӑх кӑна иртет – яла вӑл хыпарсӑр ҫухалнӑ хут килет. Вӑхӑчӗ ҫапла хӑрушӑ пулнӑ ун чух. Амӑшӗ Екатерина Герасимовна (1913 ҫулхи) икӗ ачапа юлать: Петр – тӑваттӑра, Виталий – ҫулталӑк ҫурра та ҫитмен...

-Анне пире тӑрантарас тесе колхозран килмен, мӗнле ӗҫ хушнӑ — ҫавна тунӑ. Эпӗ те 10 ҫулта аслисемпе

пёрле колхоз пахчинче аппаланма тытăнтăм. Унта çырла, купăста, хăяр, помидор ӳстеретчĕç. Çавсене çумлаттăмăр, шăвараттăмăр. Тата икĕ çултан вара «профессие» улăштартăм – колхоз сыснисене кĕтме тытăнтăм. Алăра – вăрăм пушă, куç умĕнче – ешĕл улăх-çырма тата сысна кĕтĕвĕ. 1952 çулта айлăмра ларакан сысна витине шыв кĕрсе кайрĕ – вите варрипе шарласа юхать! Нумай йĕкехӳре çав шывпа юхса кайрĕ. Темиçе сыснана та илсе кайнăччĕ вăйлă юхăм, çапах та вĕсем кайран таврăнчĕç,- аса илет ачалăхне Виталий Серафимович.

Ун хыççăн арçын ачан ĕне тата пăру кĕтĕвĕсене кĕтме тивет. Çулĕ тулсан вара ăна салтака илсе каяççĕ.

Çар хĕсметне Баскунчак кӳлли патĕнчеирттерет. Ĕçе ачаран хăнăхнă, тӳрĕ кăмăллă чăваш каччине кладовщик вырăнне шанса параççĕ. Виçĕ çултан ун хĕсмет вăхăчĕ тухать, анчах хăй вырăнне çын тупайманнипе тата пилĕк уйăх тытăнса тăма тивет унта. Килне вара 1962 çулхи декабрь уйăхĕнче таврăнать. Ĕнерхи салтак çар тумне хывса пăрахнă-пăрахман Аслă Нагаткина тракториста вĕренме каять, ун хыççăн ялти «Труд» колхозра гусеницăллă ДТ-54 трактор çине ларать.

Петя тетĕшĕ ку вăхăтра авланнă пулнă ĕнтĕ, шăллĕ салтакран таврăнсан тăван килĕнчен çемйипе уйрăлса тухать. 1966 çулта Виталий Серафимович та çемьеллĕ пулать, ялти чиперккене – Мария Николаевна Эльмукована (1941 çулхи) качча илет.

Вĕсем çур ĕмĕре яхăн килĕштерсе пурăнаççĕ ĕнтĕ. Тăватă хĕр те пĕр ывăл çуратса ӳстернĕ, çын çине кăларнă. Пурте ачаллах ĕçе хăнăхнăскерсем пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă, çĕршыва усăллă çынсем пулса тăнă. Людмила (хальхи хушамачĕ – Яргункина, 1967 çулхи) ялта воспитательте тăрăшать, Светлана Ванюшкина

(1969) тата Лариса Сулагаева (1978) – штукатур-маляр профессине алла илнĕ, хулара стройкăра тăрăшаççĕ. Николай (1972) Аслă Нагаткинта пурăнать, услам ĕçĕпе аппаланать. Екатерина Мисся (1985) суту-илӳ ĕçне сулăннă, хулара пурăнать, товаровед. Вĕсем ашшĕ-амăшне савăнтарма тăхăр мăнук çуратса панă, пĕр кĕçĕн мăнукĕ те пур ĕнтĕ. Мария Николаевна вара колхоз йĕтемĕ çинче нумай çул ĕçлесе пенсие тухнă, вăрлăх наркăмăшланă çĕрте – сывлăхшăн сиенлĕ вырăнта – тăрăшнă.

-12 çул тракторпа ĕçлерĕм, урапаллă «Беларуçпа» таçта та çитеттĕмĕр: Ульяновска та, Çинкĕл районĕнчи Силикатнăя та, Димитровграда та... Автомашинăсем ăçта кайнă – эпир те унта çитнĕ. Хăйăр, цемент тата ытти строительство материалĕсем турттарнă. 1975 çулта Украинăри Николаев облаçне икĕ уйăха улăм тюк тума кайрăмăр, кайран тюксене Чăнлă поселокне пуйăспа илсе килчĕç. Эпир вĕсене унтан яла турттартăмăр. Тете шоферччĕ, çавăнпа манăн та машинапа çӳрес килетчĕ. Çак ĕмĕтпе водителе вĕренсе тухрăм. Малтан ГАЗ-51 автомашина пачĕç, каярах ГАЗ-53 çине лартăм. 1982 çулта Краснодар крайне каллех улăм тюк тума ячĕç, унта пĕр уйăх пултăмăр. Белоруссири Гомель хулинчен ял хуçалăх техникине те турттарнă. Каярах membuatултă çул ЗИЛ машинапа (автокран) çӳрерĕм. Тивĕçлĕ канăва 2000 çулта кайрăм,- каласа парать кил хуçи.

Тăрăшуллă та хастар ĕçĕшĕн ăна патшалăх «Хисеп палли» (Знак почета) орден парса чысланă. «Коммунизмла ĕç ударникĕ» кăкăр палли те темиçе унăн.

Пурнăçĕнче Виталий Серафимовичăн виçĕ пӳрт лартма тивнĕ: 1956 çулта – амăшĕпе пĕрле, 1971 тата 1982 çулсенче – амăшĕпе тата мăшăрĕпе пĕрле. Екатерина Герасимовна 90 çула кăштă кăна çитеймест, 2003 çулта

çĕре кĕрет.

Паян Мария Николаевнапа Виталий Серафимович иккĕшĕ пурăнаççĕ, вĕсен 40 сотăй анкарти. Унта çĕрулми, кишĕр, чĕкĕнтĕр акса илеççĕ. Вĕсене пурнăçлама МТЗ-82 трактор, ун валли тележка, сажалка, копалка, косилка пур. Тата УАЗ-452 автомобильпе (кузовлă) çӳрет кил хуçи. Кил хуçалăхĕнче вара ĕне, пăру, сысна, чăх-чĕп, хур-кăвакал усраççĕ. Пахчара – теплица, унта 200 тĕм помидор ӳсет. Кирлĕ вăхăтра кӳршĕ-аршине те пулăшма хирĕç мар вĕсем.

-Пире хамăра ун чухлĕ кирлĕ мар ĕнтĕ, ачасене çăмăлтарах пултăр тесе тăрăшатпăр, вĕсене пулăшасшăн. Сывлăх пур чухне ĕçлес килет-ха, эпир ахаль ларма хăнăхман. Хамăр та пĕчĕккĕллех ĕçпе пиçĕхсе ӳсрĕмĕр. Ачасем ĕç çынни пулса ӳснĕшĕн савăнатпăр, эпир вĕсене пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарнă, çапла ăс пама тăрăшнă, - теççĕ Шарайкинсем.

Чăнлă районĕ.

«Канаш», 2015 ç., 25 №.

# Çул хĕрринчи хĕрессем

Ку темăна хускатма та çăмăл мар – пурпĕрех хамăн шухăша калас килет. Эпир пурте автотрассăпа çӳретпĕр: кам хăйĕн машинипе, кам автобуспа.

Çул айккине пăхăр-ха – хăш чухне масар тăрăх пынăнах туйăнать: икĕ енĕпе те палăксем, хĕрессем, асăну плитисем вырнаçнă. Автоаварире вилнисене асăнса лартнă-ха вĕсене, ăнланатпăр. Анчах та вилнĕ çынсене масар çине илсе кайса пытарнă вĕт ĕнтĕ, ӳчĕсем унта канлĕх тупнă, вĕсен вилтăпри пур, ун çине хĕрес (Христос тĕнне ĕненекенсем) е çурла уйăх палли (ислам тĕнне ĕненекенсем) те туса лартнă, ятне çырнă, сăнӳкерчĕкне вырнаçтарнă. Çывăх çыннисем унта пырса ăна асăнаççĕ, кĕлĕ вулаççĕ... Чунĕ тухнă, чыслă пытарнă çынна тата мĕн кирлĕ?

Ыйтусем иксе тухаççĕ: пĕр çыннах çул çинче, хирте тата тепĕр палăк ма лартмалла-ха, ма тавралăха илемсĕрлетмелле-ха? Икĕ вырăнта палăк лартнипе вилнĕ çын чĕрĕлсе тăрать-шим? Пирĕн çĕршывра машинапа çапăнса вилни пысăк паттăрлăх шутланать-шим вара? Апла ытти сăлтавсене пула вилнисене хирте мĕншĕн палăк лартмаççĕ?

Вилĕм саманчĕ çитсен çын таçта та йăванса кайма пултарать: пӳртре те, картишĕнче те, пахчара та, урам варринче те, хирте те, ĕç пӳлĕмĕнче те... Вара кашни вырăна палăк лартмалла-и? Сăмахран, çын шкул е клуб умĕнче йăванса кайса вилнĕ пулсан мĕн тумалла? Унта та палăк кирлĕ пулать-и?

Миçе ют çĕршывра пулнă эп – кун пеккине курман, Раççейре вара ку пулăм анлă сарăлнă. Пирĕн çĕршывра пĕр çулталăкра çул çинче автоаварисенче вăтамран 30 пин çын вилет. Кашнине çул хĕрринче палăк лартсан пирĕн автотрассăсем мĕне çаврăнаççĕ? Ку пулăма кам йĕркелесе тăрать-ши?

Ман шутпа, ку ыйту пирки обществăн, влаçăн, депутатсен шутласа пăхма вăхăт çитнĕ.

«Канаш», 2015 ç., 26 №.

## Тăрăшулăх ят-сума ӳстерет

Пĕчĕк Володя Остроумов ашшĕпе пĕрле выльăх-чĕрлĕх сыватма çӳренĕ чухнех тухтăр пулма шутланă. Ашшĕ Петр Алексеевич «Гигант» колхозра тĕп зоотехник пулнă, амăшĕ Раиса Николаевна – ялти фельдшер. Вĕсен ĕçне курса ӳссе Владимир медицина енне ачаранах туртăннă. Çавăнпа 1967 çулта Пӳркелĕнче вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн вăл документчĕсене Хусан медицина институтне кайса парать, унта вĕренме кĕрет.



Унта та вăл тӳрех хастарлăхпа палăрнă. Пĕрремĕш курсран пуçласа мĕн вĕренсе тухиччен факультетри профком председателĕ пулнă.1970 çулта вăрçă ветеранĕсен госпитальне фельдшера ĕçе кĕрет, каçхи дежурствăна çӳрет. Çапла вара кăнтăрла медицинăна кĕнеке тăрăх вĕренет, çĕрле хăйĕн пĕлĕвне чирлисене пăхса практикăра çирĕплетет.

– Лекцисем вĕçленсен 17 сехетре госпитальте пулмалла. Каçхи дежурствăран тухатăн та – института лекцисене васкатăн. Уйăха 80 тенкĕ укçа паратчĕç госпитальте, – аса илет вăл ку вăхăта.

1971 çулта, тăваттăмĕш курсра чухне, вĕсене – аван вĕренекен пилĕк студента – Волгоград облаçне яваплă задание яраççĕ. Ялсенче холера чирĕ пулкаланине асăрханипе çынсене йăлтах тĕрĕслеме тӳрĕ килет вĕсен. Виçĕ уйăхра мĕн чухлĕ яла çитсе миçе çынна тĕрĕсленши çак хăрушă чире тупас тесе? Çакăншăн чăваш каччине ДОСААФ Тĕп комитечĕн Хисеп паллине парса чысл аççĕ, ăна çирĕплетекен хут çине виçĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ А.И.Покрышкин алă пуснă.

1972 çулта Остроумов студента чир-чĕр шырама Çыр Чалли (Набережные Челны) хулине ăсатаççĕ.

– Ку хулана тума кăна тытăннăччĕ ун чухне. Халăх тĕрлĕ çĕртен пуçтаранна. Паллах, çынсем хăйсем пурăннă çĕртен темле чир те илсе килме, ыттисене ертме пултараççĕ. Ун пек ан пултăр тесе эпир вĕсене пурне те тĕрĕслеттĕмĕр, вар-хырăм чирĕсен вучахне шыраттăмăр. Ултă уйăх вакунта пурăнтăмăр. Питĕ нумайччĕ унта вакун – çавăнпа ăна поселок тетчĕç, – аса илет ку çулсене Владимир Петрович.

Кунта пулнăшăн вара ăна ВЛКСМ Тĕп комитечĕн «Молодой гвардеец» паллине параççĕ.

Практикăра пухнă материалсене пĕрлештерсе, тишкерсе вăл пысăк статьясем те çырнă, институтри наукăпа практика конференцийĕсенче тухса каласса хăйĕн ĕçĕпе паллаштарнă. Менингит чирĕ çинчен çырнă ĕçсем те пур унăн.

Çапах та наука çулĕпе кайма шутламасть вăл, çынна чĕртесси интереслĕрех ĕç тесе 1973 çулта диплом илсен Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи тĕп пульницана эпидемиологи тухтăрĕ пулса килет (сăмах май вăл

Пўркелёнчен тухнă пĕрремĕш тухтăр). Часах чăваш каччин пултарулăхне кура тĕп тухтăрăн çумĕ пулма шанаççĕ. Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи те пулать вăл. 1974-1985 çулсенче районти медицина ĕçченĕсен профсоюз комитетне ертсе пынă. Тăрăшуллă çамрăка район пуçлăхĕсем те асăрхаççĕ, халăх та лайăх пĕлет. Çавăнпа ăна шанса икĕ хут район канашĕн депутатне суйлаççĕ. 1983 çулта «Тутарстан Республикин сывлăх сыхлавĕн отличникĕ» хисеплĕ ят илме те тивĕçлĕ пулать. Çакăнтах Владимир Петрович авланса çемье çавăрать, пурнăçри юлташĕ пулма Ульяновск медицина училищине пĕтернĕ, пульницара операци медсестринче тăрăшакан чиперккене – Татьяна Петровна Сидорована (вăл Кивĕ Йĕлмел ялĕнчен) суйласа илет.

Вĕсем 16 çул Кивĕ Çĕпрелĕнче пурăннă хыççăн Аслă Нагаткина куçма шутлаççĕ. Çемье пуçĕ малтан Хусанти врачсен пĕлĕвне ӳстерекен институтра çур çул вĕренет, унтан Чăнлă районĕн тĕп пульницине клиника тата диагностика лабораторин пуçлăхне ĕçе вырнаçать. Мăшăрĕ валли те вырăн тупăнать кунти пульницара, инфекци уйрăмĕн медсестринче вăй хума пуçлать. Ку 1987 çулта пулса иртет.

В.П.Остроумов çĕнĕ вырăнта та тӳрех ят-сум çĕнсе илет. Ялан çын хушшинче, ялан çынсене пулăшмалла – ӳркенсе тăраканни мар вăл. «Çук», «пултараймастăп», «вăхăт çук» темест. Мĕнпе май пур – çавăнпа пулăшать çынна. Çакă çĕкленĕ те ĕнтĕ ун ятне. Тăрăшулăхне, ырă кăмăлне пула аслă категориллĕ врач Владимир Остроумов пурнăçра чылай çитĕнӳ тунă. Вăл 1988-1998 çулсенче каллех районти медицина ĕçченĕсен профсоюз комитетне ертсе пырать, çав вăхăтрах ăна облаçри профсоюз комитечĕн президиумне суйлаççĕ. 1997-2007 çулсенче районти Хĕрлĕ Хĕрес комитечĕн председателĕ пулать. 2005 çулта ăна «Чăнлă районĕн Хисеплĕ çынни»

ят панӑ. 2010 ҫулта Раҫҫей Федерацин сывлӑх сыхлавӗн министерствин Хисеп грамотине тивӗҫет. Ҫаплах вӑл «Хисеплӗ донор» ят та илнӗ – чирлисем валли нумай юн панӑ. Раҫҫей Федерацин тата Ульяновск облаҫӗн ӗҫ ветеранӗн стажӗ – 42 ҫул! Сӑмах май Татьяна Петровнан ӗҫ стажӗ те ҫавӑн евӗрлех – 40 ҫул. Иккӗшӗн пӗрле 82 ҫул пулать! Ҫак ҫулсене Остроумовсем йӑлтах сӑваплӑ та пархатарлӑ ӗҫе – ҫынсене сыватассине панӑ. Ун пек ҫемье нумаях мар пуль пирӗн хушӑра.

Унсӑр пуҫне Владимир Петрович ыркӑмӑллӑх тенине те манса каймасть. Тӑван ялӗнче Пӳркелӗнче (Тутарстан, Пӑва районӗ) чиркӳ тума шутласан вӑл тӳрех пысӑк сумма укҫа кӑларса панӑ, ҫаплах Аслӑ Нагаткинта часавай хӑпартма та пулӑшнӑ. Темиҫе ҫул каялла «Канаш» хаҫат редакцине укҫа парса пулӑшнӑшӑн  эпир ӑна паян та тав тӑватпӑр. Пирӗн хаҫата вӑл тахҫанах ҫырӑнса илет ӗнтӗ. Час-часах шӑнкӑравласа хӑйӗн кӑмӑлне кайнӑ материалсем ҫинчен калаҫать, ырӑ сӗнӳсем парать. «Чӑваш вӑл  чӑвашла тухакан хаҫата мӗнле ҫырӑнса илмелле мар ӗнтӗ! – тӗлӗнет вӑл.

Августӑн 13-мӗшӗнче В.П.Остроумов 65 ҫул тултарать. Паян та хӑй ӗҫӗнче-ха вӑл, вӑр-вар ҫӳрет, яланхи пекех ҫынсемшӗн тӑрӑшать.

– 60 ҫул тултарсан пенсие каятӑп та пахчара аппаланатӑп, канатӑп тенӗччӗ. Пуҫлӑхсем ыйтнипе кӑштах ӗҫлем-ха терӗм. Пилӗк ҫул иртсе кайрӗ – халӗ те ярасшӑн мар-ха мана, – шӳтлерех калать вӑл.

Паян Остроумовсен чи пысӑк савӑнӑҫӗ – Саша ывӑлӗпе (вӑл строитель) унӑн Алевтина мӑшӑрӗ (полици ӗҫченӗ, аслӑ лейтенант) тата вӗсен виҫӗ ҫул ҫурӑри Александра ятлӑ хӗрӗ. Вӗсем Кивӗ Ҫӗпрелӗнче пурӑнаҫҫӗ, час-часах хӑнана килсе ҫӳреҫҫӗ. Эпир ҫемье пуҫӗпе калаҫса ларнӑ вӑхӑтра Остроумовсен килне кӗтмен ҫӗртен шӑпах Саша килсе кӗчӗ, ашшӗпе амӑшне ыталаса илчӗ.

«Канаш», 2015 ҫ., 31 №.

# Туслăхăн тата нацийĕн чикки çук!

Августăн 19-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Шăмăршă ялĕнче пысăк уяв иртрĕ, ун ячĕ – «Туссен хушшинче». Ăна урăхларах «Ульяновск облаçĕн культура кунĕ – Чăваш Республикинче» теме пулать. Уява пуçараканĕ – область кĕпĕрнаттăрĕ тата правительство пуçлăхĕ Сергей Морозов.



Уяв ирттерме кӳршĕ региона С.Морозов ертсе пыракан пысăк делегаци тухса кайрĕ: ун шутĕнче Саккунсем кăларакан Пуху председателĕ Анатолий Бакаев, кĕпĕрнаттăрăн наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен советникĕ, УОЧНКА пуçлăхĕ Владимир Сваев, министрсем, депутатсем, усламçăсем, культура ĕçĕнче вăй хуракансем, спортсменсем...

Чикĕре – Виçпӳрт-Шăмăршă ялĕ хĕрринче – хăнасене

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха туса пыракан Михаил Игнатьев кĕтсе илчĕ, унпа пĕрлех – ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕ Юрий Попов, правительство çыннисем, депутатсем, усламçăсем тата ыттисем. Тухьяллă хĕрсем хаклă хăнасене çăкăр-тăвар тата чăваш сăрине тутанса пăхма сĕнчĕç. Артистсем чăваш юррине шăрантарчĕç. М.Игнатьев Чĕмпĕр хăнисене кĕтсе илме питĕ хавассине пĕлтерчĕ, С.Морозов вара Чăваш Республикипе Ульяновск облаçĕн халăхĕсен туслăхĕ тахçанах пынине, вăл регионсене аталанма пулăшнине палăртрĕ.

Уяв малалла Шăмăршăри район Культура çуртĕнче тăсăлчĕ, унта «Чувашско-Симбирское экономическое и поликультурное пространство: итоги и перспективы» ятпа çавра сĕтел иртрĕ. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха туса пыракан Михаил Игнатьев туслăхăн нацийĕ те, чикки те çуккине палăртрĕ, кун пек уявсем регионсен хушшинчи çыхăнусене çирĕплетме, пĕр-пĕрин культурине пуянлатма, пĕрлехи ĕçсене пуçарма пулăшнине пĕлтерчĕ, вĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк пулни пирки каларĕ.

«2011 çулта Ульяновскра Раççей чăвашĕсен Акатуйне иртттернĕ хыççăн пирĕн çыхăнусем татах та çирĕпленчĕç. Икĕ регион хушшинчи туслăх вара 1868 çултанпах пырать – халăха çутта кăларакан Иван Яковлевич Яковлев Чĕмпĕр чăваш шкулне уçнăранпах. Ульяновск облаçĕ нумаях пулмасть питĕ йывăр вăхăтсем тӳссе ирттерчĕ, анчах манăн тус Сергей Морозов çак региона тĕрĕс ертсе пынипе халь йывăрлăхсем хыçала юлчĕç ĕнтĕ. Эпир Раççей Президенчĕ ирттернĕ наци рейтингне пĕрле хутшăнтăмăр, Владимир Путин пире çĕршыври чи лайăх 10 регион шутне кĕртрĕ. Чăваш Республики

9-мӗш вырӑнта, Ульяновск облаҫӗ – 5-мӗшӗнче. Апла пулсан пирӗн сире ҫитме тата тӑрӑшмалла-ха. Малашне пирӗн ҫыхӑнусем сарӑлса, ҫывӑхланса кӑна пырӗҫ тесе шутлатӑп», – терӗ Михаил Васильевич.

Ульяновск область кӗпӗрнаттӑрӗ тата правительство пуҫлӑхӗ Сергей Морозов вара: «Туссен хушшинче» проект икӗ регион чиккинчен каҫса ытти республикӑсемпе облаҫсене те ҫиттӗр, вӗсене пӗрлештертӗр. Ҫакӑн пек тӗлпулусенче пӗрлехи ӗҫсене сӳтсе явма, пӗр-пӗрин опычӗпе паллашма, ҫӗнӗ тӗллевсене палӑртма май пур. Ҫакӑ халӑх пурнӑҫӗн шайне ӳстерме пулӑштӑр. Пире Раҫҫей Президенчӗ Владимир Путин лартнӑ задачӑсем пӗрлештереҫҫӗ. Вӗсене пирӗн пӗрле пурнӑҫламалла», – терӗ.

Кӗпӗрнаттӑр Раҫҫей тава тивӗҫлӗ культура ӗҫченне, Ульяновск облаҫӗн Хисеплӗ ҫыннине Валентина Таравата менелникпе саламласа парне тата чечек ҫыххи парнелерӗ. Ӑна ҫаплах М.Игнатьев та саламларӗ.

Калаҫӑва ЧР Патшалӑх Канашӗн председателӗ Юрий Попов, ЧР министрсен кабинечӗн пуҫлӑхӗ Иван Моторин, Ульяновск облаҫӗнчи Саккунсем кӑларакан Пуху председателӗ Анатолий Бакаев, Ульяновск облаҫӗн физкультурӑпа спорт министрӗ Сергей Кузьмин, наукӑпа вӗренӳ министрӗ Екатерина Уба, искусство тата культура министрӗ Татьяна Ившина, ялпа вӑрман хуҫалӑхӗсен тата ҫутҫанталӑк пуянлӑхӗсен министрӗ Александр Чепухин, Чӑваш наци конгресӗн президенчӗ Николай Угаслов, ҫаплах Чӑваш Республики правительствин министрӗсем, паллӑ усламҫӑсем, ӑсчахсем тӑсрӗҫ. Вӗсем «Туссен хушшинче» проект халӑхсене, муниципалитетсене ҫывӑхлатни, туризма, услама, экономика ҫыхӑнӑвӗсене аталантарни пирки каларӗҫ.

УОЧНКА пуҫлӑхӗ Владимир Сваев облаҫри наци

ыйтӑвӗсене мӗнлерех татса пани пирки калаҫрӗ. «Унӑн кӑтартӑвӗ – 120 ытла наци тата халӑх пурӑнакан регионта ҫынсем туслӑ пулса пӗр тӗллевпе ӗҫлени, наци ыйтӑвӗ енчен тавлашу-хирӗҫӳ ҫукки. Ҫакӑ кӗпӗрнаттӑр тата унӑн команди наци ыйтӑвӗсене пысӑк тимлӗх уйӑрнинчен килет»,– терӗ вӑл.

Владимир Ильич тахҫанах татса парайман ыйту ҫинче те чарӑнса тӑчӗ, ку ыйтупа темиҫе хут документсем хатӗрлесе панине, анчах усси пулманнине пӗлтерчӗ. Вӑл Ульяновск облаҫӗнче ӗҫлесе пурӑнакан Раҫҫей тава тивӗҫлӗ культура ӗҫченӗ, 60 яхӑн кӗнеке авторӗ, 70 ҫула яхӑн литературӑра тӑрӑшакан Анатолий Юмана Чӑваш халӑх поэчӗ ятне памалли ҫинчен каларӗ. Облаҫра ун пек ят илнӗ ҫын халиччен ҫук-ха, ҫакӑн пек сумлӑ ят пани поэзи шурсухалӗшӗн те, облаҫри литераторсемшӗн те пысӑк хавхалану пулӗччӗ. Облаҫшӑн та ку паллӑ пулӑм пулмалла. Икӗ регион пуҫлӑхӗ ку сӑмахсене тимлӗн итлесе ларчӗҫ. Тен, кун хыҫҫӑн ӗҫ вырӑнтан тапранӗ.

Ҫавра сӗтел вӗҫленес умӗн М.Игнатьев тата С.Морозов регионсен правительствисен хушшинчи 2016-2017 ҫулсенчи мероприятисене пурнӑҫа кӗртес пирки тунӑ килӗшӳ ҫине алӑ пусрӗҫ. Ӑна пурте алӑ ҫупса йышӑнчӗҫ.

Урама тухсан М.Игнатьев тата С.Морозов «Ҫынсене юрӑхсӑр ҫуртсенчен куҫарасси» республика программи тӑрӑх 24 хваттерлӗ ҫурта хута янӑ ҫӗре хутшӑнчӗҫ, ҫынсене ҫӗнӗ хваттерсен уҫҫисене пачӗҫ. Сӑмах май, пирӗн облаҫра та ку ыйтупа ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ, кӑҫал кӑна ҫак программа тӑрӑх пин ҫемье ҫӗнӗ хваттерлӗ пулӗ.

Ҫаплах регион пуҫлӑхӗсем Шӑмӑршӑра ватӑ ҫынсене тата инвалидсене пӑхакан 30 вырӑнлӑ социаллӑ центр уҫнӑ ҫӗре хутшӑнчӗҫ.

Унтан пурте Шăмăршă ипподромне куçрĕç. Кунта республика шайĕнчи пысăк уяв иртрĕ. Акатуйри пекех, кашни район хăйĕн кил-çуртне йĕркеленĕ, алă ĕçĕсене кăтартма хунă. Артистсем вара тĕрлĕ чĕлхепе хăйсен юррисене шăрантараççĕ, вĕсен сасси инçетех каять. Регионсен пуçлăхĕсем тата ытти хăнасем ретпе пырса пур çĕре те çитсе курчĕç. Вĕсене хăшĕсем сăрапа сăйларĕç, теприсем пуçлăхсемпе ташласа пăхас камăлĕ пуррине пытармарĕç. Михаил Игнатьев артистсемпе юнашар тăрса, алла-аллăн тытăнса чăваш кĕвви-çеммипе ташша çаптарчĕ.

Кайран сцена çинче тата ун умĕнче профессионал артистсем тата тĕрлĕ вырăнтан килнĕ пултарулăх ушкăнĕсем пысăк концерт кăтартрĕç. Унта пирĕн облаçри «Волга» (Ульяновск), Чăвашкассинчи, Кивĕ Улхашри, Аслă Нагаткинти «Шанăç» ушкăнсем тата ыттисем хутшăнчĕç. Кунта халăх питĕ нумай пуçтарăннăччĕ, вĕсене йĕпхӳ пĕрĕхсе тăни те хăратмарĕ.

Хăнасем лашасене чуптарнине, чăваш кĕрешĕвĕн ăмăртăвĕ иртни-не курма пултарчĕç. С.Морозовпа М.Игнатьев çĕнтерӳçĕсене кубоксем, парнесем пачĕç. Мускавран килнĕ хăна – Раççей спорт министрĕн çумĕ, фехтовани енĕпе Олимп чемпионĕ Павел Колобков Чăваш Республикипе Ульяновск облаçĕнче спорт ыйтăвĕсене пысăк тимлĕх уйăрнăшăн пуçлăхсене сцена çинчен тав сăмахĕ каларĕ.

«Канаш», 2015 ç., 33 №.

# И.Я.Яковлева сăваплă çынсен ретне кĕртмелле

2008 çулта Шупашкарта И.Я. Яковлев ятне сăваплă çынсен ретне тăратас пирки сăмах хускатнă. Пархатарлă ĕçе Шупашкар митрополийĕ пуçарнă, ку енĕпе Мускаври çынсем те вăй хураççĕ. Çак ĕç мĕнле шайра-ши? Кун пирки эпир Ульяновскри Çветтуй Сывлăш Апостолсем çине аннă ячĕллĕ чиркĕвĕн (ăна халăхра Чăваш чиркĕвĕ теççĕ) настоятелĕпе Владимир аттепе (Владимир Валерьевич Маняков) калаçрăмăр.

**-Владимир атте, эсир кунта ĕçлеме килсен хăвăр чунăрта мĕнле Яковлева уçрăр?**

- Маларах эпĕ И.Я. Яковлев чăваш алфавитне туса хатĕрленине, халăха çутта кăларнине пĕлеттĕм. Кунта вара тарăнрах пĕлме пуçларăм, Иван Яковлевич Турра чунтан ĕненекен çын пулнине ăнлантăм. Турă пирĕн халăх валли Яковлева хăех ярса панă пуль. Ку унăн чăваш халăхĕ валли çырса хăварнă Халалĕнче те уйрăм палăрса тăрать.

Акă мĕн çырать вăл унта: «Турра ĕненсе пурăнасси калама çук пысăк япала – пуринчен ытла эсир çавна хытă тытса тăрăр. Ĕненӳ этемĕн ăсне, кăмăлне çунатлăлантарса çăмăллатать, чун пурнăçне канăçлăх парать, лăплантарать; инкек-синкек, хуйхă-мĕн курнă вăхăтра чуна хăват парать; ĕçсем ăнса телейлĕ пурăннă чух ĕненӳ чуна тасатать, ăна çутатса тăрать. Турра ĕненсе пурăнсан пурнăç хытти этемшĕн хăрушă мар; Ăна ĕненсе тăмасан çĕр çинчи пирĕн пурнăç сивĕ пулать, тĕттĕм пулать. Тĕнчене пултарнă çӳлти Турра ĕненсе тăрăр. Ырă ĕçе те, усал ĕçе те чăн Аслă тӳрĕлĕх татĕ, – Турă суд тăвĕ, – вăл суд тӳрĕ, вăл суд питĕ хăрушă».

Çакна эпĕ тĕлĕнмелле тĕрĕс те ăслă сăмахсем тесе шутлатăп. Çакăн хыççăн И.Я.Яковлева питĕ хисеплеме

тытӑнтӑм, вӑл маншӑн тӗслӗх пулса тӑчӗ. Мӗншӗн тесен вӑл хӑйӗн пурнӑҫне чӑваш халӑхӗн ырлӑхӗ, пуласлӑхӗ валли панӑ. Тӗрӗссипе, килте ун хӑйӗн ачисене воспитани пама та вӑхӑчӗ сахал пулнӑ, вӗсене унӑн мӑшӑрӗ – вырӑс хӗрарӑмӗ Екатерина Алексеевна – ӑс панӑ, пӑхса ӳстернӗ. Иван Яковлевич вара пӗтӗм вӑй-хӑватне, чун-чӗрине чӑваш шкулне тытса тӑнӑ ҫӗре янӑ, ӑна влаҫрисем хупасран питӗ шикленнӗ. Ҫавӑнпа та кунӗн-ҫӗрӗн вӑл шкул ачисемпе аппаланнӑ. Тен, ҫавӑнпа та хӑйӗн ачисем чӑвашла калаҫман.

**- И.Я. Яковлева Раҫҫейре кампа танлаштарма пулать, унӑн ӗҫӗсем камӑнни евӗрлӗрех?**

-Ун пек ҫын тӗнчипе те сахал! Чылай халӑха ҫутта кӑларнӑ ҫын ҫак ӗҫпех сӑваплисен шутне кӗме тивӗҫлине пӗлтерет. Ун пеккисем 10 ҫынран ытла мар. Ҫитменнине, вӑл чӑвашсене Христос патне илсе пынӑ, сапаланса, ыттисемпе пӗрлешсе, ҫӗтсе каясран хӑтарса хӑварнӑ. Библие чӑвашла куҫарни мӗне тӑрать тата! Ӑна пула паян хамӑр чӗлхепе кӗлӗсем вулама пултаратпӑр. Хӑй чӗлхипе кӗлӗ вулама пултаракан халӑхсем, тӗрӗссипе, нумаях мар. Сӑмахран, марисен, мордвасен ҫук. Яковлев тӑрӑшнипе пула пирӗн чӗлхе паян хут ҫинче пур, хут ҫинче пуррисем вара – культурӑллӑ чӗлхесем! Вӗсем ҫухалмаҫҫӗ!

Яковлев пек ҫынсем нумаях мар. Кирилпа Мефодий вырӑс ҫырулӑхне йӗркеленӗ – вӗсем сӑваплӑ ҫынсен хушшинче. Тата пирӗн Яковлева – Иннокентий Иркутскийпе, Николай Японскийпе танлаштарма пулать.

**-Яковлев хӑйне Чӗмпӗр чӑваш шкулӗн ҫӗрӗнче пытарма каласа хӑварнӑ теҫҫӗ.**

-Ҫапла, вӑл хӑй валли чиркӳ ҫумӗнче шӑтӑк чавса хӑварнӑ тенине те илтнӗччӗ эпӗ. Анчах пирӗн Патриархӑмӑр кун-ҫулӗ начар вӗҫленнӗ. Ӑна революци

хыççăн Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен хăваласа кăлараççĕ, хăй йĕркеленĕ ĕçĕнчен хăтараççĕ. Мĕншĕн тесен вăл революци майлă пулман, хăйĕн шкулне хупасран сыхланнă. Ачисем вара ăна 1922 çулта хăйсем патне Мускава илсе каяççĕ. Тен, ун пек туман пулсан ăна тĕрмене хупма е персе пăрахма та пултарнă. Вăхăчĕ пăлхануллă, шанчăксăр пулнă вĕт – тем те сиксе тухма пултарнă! Ун чухне никама та шеллемен! Чиркӳçыннисене персе пăрахнă тĕслĕхсем сахал-им?

**-Халăхăмăра çутта кăларакан çынна сăваплисен шутне кĕртес тесен кашни çыннăн мĕн тумалла?**

- Иван Яковлевичăн пĕтĕм пурнăçĕ – сăваплă çынсен шутне кĕртме юрăхлисен тĕслĕхĕ. Çапах вăл вилнĕ хыççăнхи тĕлĕнтермĕшсем те кирлĕ ун пек тума. Ку ыйтăва Мускаври Патриархире çеç татса пама пултараççĕ. Пирĕн вара вĕсем валли ырă тĕслĕхсем, тĕлĕнтермĕшсем пулнине хут çине çырса чиркĕве е Ульяновск епархине памалла. Сăмахран, çын йывăр чирпе чирленĕ. Пульницаран çакна çирĕплетекен хут кирлĕ. Çак çын чиркӳре е Яковлевăн Мускаври Ваганьково масарĕнчи вилтăпри çинче унран пулăшу ыйтса кĕлĕсем вулать, ун хыççăн чĕрĕлет. Çакă тĕлĕнтермĕш пулать те ĕнтĕ. Урăхла каласан медицина пулăшайман чухне И.Я.Яковлевăн вăй-хăвачĕпе сывалнă тĕслĕхсем кирлĕ. Ун пеккисем темиçе пулмалла. Çапла вара ку ĕçе кашни çын хутшăнма пултарать. Ман шутпа, Яковлев сăваплă çынсен ретне тăма тивĕçлĕ çын, ку ĕçе пирĕн хастартарах хутшăнмалла.

Юлашкинчен çакна каласшăн. И.Я.Яковлевăн чăваш халăхне панă Халалне вуласах тăрăр, хамăра Христос патне илсе пынă çыншăн кĕлĕ тăвăр, унран пулăшу ыйтăр. Вăл каласа хăварнă пек – Турра ĕненсе пурăнăр, чиркĕ ве çӳрĕр!

«Канаш», 2015 ç., 51 №.

# Хаҫат ҫырӑн та – ырра вӗрен

Пирӗн хаҫата вуламан хӑш-пӗр чӑвашсен вӑхӑт-вӑхӑт хӑйсен «хастарлӑхне» кӑтартса халӑх ҫинче «Канаша» хурлас йӑли пур. Вӗсем ку статьяна вулӗҫ-и, вуламӗҫ-и – ҫапах та ентешсем умне хамӑрӑн шухӑшсене кӑларасшӑн. Тен, вӗсене кам-тӑр каласа парӗ кун пирки.

2014 ҫулхи январь уйӑхӗнчен пуҫласа «Канаш» хаҫатӑн 8 полоси те тӗрлӗ тӗспе тухать, халӗ ӑна ҫынна кӑтартма та намӑс мар. Пӗлтӗрхи 2-мӗш ҫурҫуллӑхра 12 страницӑпа та тухса тӑтӑмӑр, ҫапах та укҫа-тенкӗ сӑлтавне пула каллех малтанхи вариант патне таврӑнтӑмӑр. Пирӗн журналистсем тӑтӑшах ялсене тухса ҫӳреҫҫӗ, халӑхӑн кулленхи пурнӑҫне ҫырса кӑтартма тӑрӑшаҫҫӗ. Ялсенче пурӑнакан обществӑлла корреспондентсене те пире пысӑк пулӑшу панӑшӑн пысӑк тав сӑмахӗ калас килет. Вӗсем хаҫата туллирех те пуянрах тума пулӑшаҫҫӗ. Хамӑра пулӑшакансене ҫывӑх вӑхӑтра пӗрле пуҫтарса ҫавра сӗтел ирттересшӗн – хаҫата мӗнлерех аванлатмалла тата тиражне ӳстермелле? Сӑмах май, пӗлтӗрхипе танлаштарсан январьте тираж 122 процент ытла ӳснӗ. Февраль уйӑхӗнче вара тата 60 ҫын хушӑнчӗ. Вӗсене хавхалантарас шутпа кашни ҫурҫуллӑхра пӗрре лотерея вӑййине ирттеретпӗр, вулакансем хушшинче парнесем вылянтаратпӑр.

Интернетра «Канаш» хаҫатӑн сайчӗ те пур – kanach.su. Унта хаҫатра пичетленнӗ материалсене вулама пулать. Эпир Чӗмпӗр чӑвашӗсен ҫитӗнӗвӗсене, паллӑ пулӑмӗсене хамӑр хаҫат сайчӗсӗр пуҫне ҫаплах Чӑваш халӑх сайтне, Мускав чӑвашӗсен «Мосентеш» ятлӑ сайтне лартатпӑр. Вӗсене Ҫӗр чӑмӑрӗн хӑш кӗтесӗнче те вулама пулать.

Пирӗн журналистсем тӗрлӗ конкурса хутшӑнаҫҫӗ.

Елена Мустаева 2014 çулта пĕтĕм тĕнчери тĕрĕк культурин организацийĕ йĕркеленĕ Кашкăр Махмучĕ ячĕллĕ конкурса хутшăнса чăваш çыравçисем хушшинче 2-мĕш вырăн йышăнчĕ. Елена Алексеева пĕлтĕр Шупашкарта «Шан мана, Çĕр» ятлă Интернет-конкурсра çакăн пекех çитĕнӳ турĕ. Нина Еграшкина вара журналист та, художник та, çав вăхăтрах «Палнай» ансамбльте те юрлать. Ку ушкăн тĕрлĕ уявсене тухса çӳресе çынсене илемлĕ ташă-юрăпа савăнтарать, «Канаш» хаçат кунĕсене, çыравçăсен пултарулăх каçĕсене илем кӳрет.

Хаçат çумĕнче 1997 çултанпа чăваш çыравçисен «Шевле» литпĕрлешĕвĕ ĕçлет, унта халĕ 10-12 çын çӳрет. Эпир вăхăт-вăхăт редакцире е 17-мĕш библиотекăра пуçтарăнса ларусем ирттеретпĕр, çĕнĕ кĕнекесене, хайлавсене тишкеретпĕр. Пирĕн çитĕнӳсем те çук мар. Облаçри чăваш çыравçисен вĕрентекенĕ, литература шурсухалĕ Анатолий Юман пĕтĕмĕшле 57 кĕнеке кăларнă ĕнтĕ. Валентина Тарават вара – 26. Çакăн пек тухăçлă ĕçлекен çыравçăсене тĕслĕхе хурса малалла ăнтăлатпăр эпир. Анатолий Ырьят кĕнекисене те вулакансем ырласа йышăнаççĕ, Серте Мишшин те темиçе кĕнеки халăх хушшинче тахçанах сарăлнă. Вĕсене пăхса кĕçĕнтерех ăрурисем те çине тăрса ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра кăна «Канаш» журналисчĕсем – Елена Мустаева, Елена Алексеева, Валентина Ефимова хăйсен кĕнекисене пичетлесе кăларчĕç. Манăн та пĕлтĕр икĕ кĕнеке тухрĕ. Хаçат журналисчĕсем çаплах Дмитрий Кузьмина икĕ томлă энциклопеди кăларнă çĕрте те пысăк пулăшу пачĕç.

Эпир редакцире 20 çул ĕнтĕ чăваш авторĕсен кĕнекисене кăларас ĕçе илсе пыратпăр. Кунта яваплă секретарĕн — Валентина Ефимован тӳпи пысăк. Пурĕ «Канаш» хаçат пулăшнипе Чĕмпĕр чăваш çыравçисен

90 ытла кĕнеки пичетленсе кун ҫути курнă. 2013 ҫул пуҫламăшĕнче «Атăл юрри» журналăн 2-мĕш номерне те редакцире пичете обществăлла майпа хатĕрлесе кăлартăмăр.

Ялсенче журналистсем, ҫыравҫăсем вулакансемпе тĕлпулусем ирттересси те йăлана кĕнĕ. Анатолий Юманпа Анатолий Ырьят Ҫĕпрел районĕнчи Ҫĕнĕ Йĕлмелĕнчи ачасемпе тĕл пулчĕҫ. Василий Журавлевăн пултарулăх каҫне «Палнай» артисчĕсемпе пĕрле Ҫĕпрел районĕнчи Алешкин-Саплăкра, Анатолий Юман каҫне Ҫинкĕл районĕнчи Ялавăрта, Анатолий Ырьят каҫне Пăва районĕнчи Элшелĕнче ирттертĕмĕр. Эпир Валентина Тараватпа иксĕмĕр пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнче Ҫĕпрел районĕнчи Ҫĕнĕ Йĕлмел, Упи, Ҫĕнĕ Упи ялĕсенчи шкул ачисемпе тĕл пултăмăр, литература ҫинчен калаҫрăмăр, ачасене хамăрăн тата ытти авторсен кĕнекисене парнелерĕмĕр.

Ҫав вăхăтрах хамăрăн йывăрлăхсем, чун ыратăвĕ ҫинчен те каласа хăварас килет. Ҫыравҫăсен шучĕ чакса пыни пăшăрхантарать пире. Иртнĕ ҫул кăна пирĕнпе тачă ĕҫлекен ҫыравҫăсем – Василий Журавлев, Михаил Аляпкин, Алексей Ашкеров, Мария Селендеева пурнăҫран уйрăлса кайрĕҫ. Маларах вара Валентина Деменкова, Анатолий Чебанов вилчĕҫ. Питĕ тухăҫлă ĕҫлетчĕҫ вĕсем, «Канаша» тăтăшах хайлавсем ҫыратчĕҫ, кĕнеке ҫине кĕнеке кăларатчĕҫ, вулакансене савăнтаратчĕҫ. Ҫаплах хаҫатăн ҫывăх тусĕсем – Анна Никонорова тата Лаврентий Данилов Ульяновскран куҫса кайса тăван ялĕнче тĕпленчĕҫ. Ҫакăн хыҫҫăн, паллах, Чĕмпĕр чăваш ҫыравҫисен речĕ чылай сайралчĕ. Вĕсен вырăнне килекен ҫамрăк журналистсене, ҫыравҫăсене вара паян ниҫта та асăрхамастпăр. Кунта шкулсен витĕмлĕхне курасчĕ, эпир вĕсем чăваш чĕлхине юратакан, статьясемпе илемлĕ

хайлавсем çырма пултаракан çамрăксене шыраса тупас ĕçре хастартарах ĕçленине курасшăн. Ку енĕпе Чӳрекел ачисене (вĕрентекенĕ Л.Ф.Ярославская) палăртса хăварас килет, вĕсем «Канашра» тăтăшах пичетленеççĕ. Вĕсенчен ыттисем ырă тĕслĕх илесчĕ. Чăваш ялĕнче çуралса ӳсекен чăваш ачисем, шкулта чăваш чĕлхине предмет шайĕнче вĕренекенсем, нивушлĕ чăвашла çырма пĕлмеççĕ-ши вара? Ĕненес килмест! Вĕсем тĕрлĕ олимпиадăсене хутшăнаççĕ-çке. Ман шутпа, ку ĕçре учительсем ырă тĕслĕх кăтартмалла, пирĕн хаçатпа çыхăну тытма пуçламалла. Вара вĕсем хыççăн ачисем те туртăнĕç ку енне. Облаçра чăваш чĕлхине ачасем предмет шайĕнче 16 шкулта вĕренеççĕ вĕт! Çакăнта шырамалла пирĕн ыранхи журналистсене, çыравçăсене.

Ку темăна тăсса çакна каламалла: пĕлтĕр Литература çулĕ пулчĕ, анчах обществăна çыравçăсем чăннипех кирлине туймарăмăр эпир. Эпир кĕнекесене пушă вăхăтра çырса ытларах чухне хамăр укçапа кăларатпăр, пултарулăх каçĕсене хамăр пуçарулăхпа, хамăр укçапа ирттеретпĕр. Ачасемпе тĕл пулма ыйтса шкулсене чĕннĕ тĕслĕхсем вара çулталăк хушшинче Чӳрекел ялĕсĕр пуçне пĕрре те курмарăмăр. Пĕр шкул та, пĕр директор та, пĕр РОНО та ачасемпе тĕлпулу ирттерер-ха, пирĕн пата килĕр-ха тесе чĕнмерĕ пире. Кун пек тĕлпулусем çыравçăсене мар, ытларах çамрăк ăрăва кирлине манса каймалла мар пирĕн. Эпир ку енĕпе ырă тĕслĕх пĕлетпĕр. Чăваш Енре хăш-пĕр депутатсем, пуçлăхсем çыравçăсене хăйсен машинипе пĕр-пĕр шкула ачасемпе тĕлпулу ирттерме лартса каяççĕ, çийĕнчен тата укçа тӳлеççĕ тенине илтрĕмĕр. Эпир укçа ыйтмастпăр, çапах та ачасемпе тĕл пулма пулăшакан ырă çынсем тупăнсан тав сăмахĕ каланă пулăттăмăр.

Йывăрлăхсем çук мар пирĕн. Пĕлтĕр, сăмахран, редакци штатне чакарчĕç, 6 çынран 5 çын юлчĕ. Çапах та ĕçлес кăмăл пысăк, куллен малалла ăнтăлатпăр. Эпир тăрăшнине тăван халăх ăнланни, çынсем çулран-çул «Канаш» хаçата çырăнса илни, вулакансен шучĕ ўсни, пирĕн авторсен кĕнекисене вуласа ырă сăмахсем калани вара темле наградăран та хаклă. Çаксем пире çĕнĕ çитĕнўсем тума хавхалантараççĕ.

Чăваш халăхне çутта кăларакан И.Я.Яковлев: «Хаçат урлă ырра вĕрент»,- тенĕ. Эпир çакна астуса тăрса тăван халăх ăс-тăнĕнче кунран-кун ырăлăх вăррине акма тăрăшатпăр.

«Канаш», 2016 ç., 7 №.

# Çĕпĕртен хăтăлса юлнăскер

Покровски ялĕнче пурăнакан П.П.Рафикова (хĕр хушамачĕ – Маркова) кăçал августăн 17-мĕшĕнче 93 çул тултармалла. Пурнăçра унăн йӳççине тутанса пăхма чылай лекнĕ: ашшĕ хуçалăхне тустарнине те курнă, тăм пӳртре те пурăннă, окоп чавма та çӳренĕ, Чĕмпĕре те çуран килсе кайнă.



-Эпĕ Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмелĕнче çуралнă. Ултă пĕртăванран – пĕртен-пĕр хĕр. Аттепе аннен – Павел Маркович тата Мария Петровна – пĕр пӳлĕмлĕ çуртне 1932 çулта тустарса Пухтелне илсе кайрĕç. Сăлтавĕ – аттен аптиркка пурччĕ, унта вăл лаша вăйĕпе çаварттарса хуратул, вир кĕрпи тăватчĕ. Çавăнпа пире пуян тесе тăван кил-çуртран кăларса ячĕç. Çĕпĕре ăсатма тесе кил умне лаша илсе килчĕç, япаласене тиерĕç. Эпир илсе

каясса кĕтсе ларатпăр. Çак вăхăтра Миттюк (Дмитрий) тете лав çинчен ялт! сиксе анчĕ те пахчана кĕрсе кайрĕ, анкартисем урлă чупса таçта тарса çухалчĕ. Ачана хăйне кăна пĕччен хăварма юрамасть тесе пуçлăхсем пирĕн çемьене ялтан ямарĕç. Çапла тетен хăюлăхĕ пире Çĕпĕртен хăтарчĕ. Эпир вара пĕр пĕчĕк тăм пӳрте пурăнма куçрăмăр,- аса илет Пелагея Павловна.

Çитмен пурнăç темĕн те тутарать. Пăлюк та ачаллах хире çумлама, кĕлте çыхма, ясмăк çулма çӳренĕ. Каярах тăпачăпа горчица та çапнă, хире кĕреçепе юр тытма та кайнă. Çав вăхăтрах Çĕпрел районĕнчи Мучелей ялне (20 çухрăм ытла) кил-çурта ăшăтма вутта кайнă, пĕр-икĕ пукан çуна çине хурса туртса килнĕ. Пĕррехинче çапла кашта илме кайсан Шланка ялĕ патĕнче Миттюка власть çыннисем тытса юлнă.

Вăрçă вăхăтĕнче Пăлюк акка вара ялти 10-12 хĕрпе пĕрле Пăва районĕнчи Рунка ял çывăхне окоп чавма та кайнă.

1947 çулта хĕр ял йĕкĕтне Иван Рафикова (1928 çулхи) качча каять. Иван Петрович шавах колхоз ĕçĕнче тăрăшнă, ялан çын çинче пулнă: ферма заведующийĕ, бригадир... Çемьере вĕсем сакăр ача çуратса ӳстернĕ: Зоя, Людмила, Валентина, Николай, Василий, Иван, Петр, Мария. Ачисем тĕрлĕ çĕре кайса тĕпленнĕ. Шел, çемье пуçĕ – Иван Петрович 1983 çултах çĕре кĕнĕ. Ун чухне вăл 55 çулта кăна пулнă-ха.

Пелагея Павловна 13 çултах тетĕшĕпе – Дмитрий Павловичпа (лав çинчен сиксе анса тараканни!) колхоз вĕллисене пăхма пулăшнă, утарта вăй хунă, асли унта Николай Кадиров пулнă. Кайран ялта садикра ĕçленĕ, чĕкĕнтĕр çумланă, кăларнă...

Чĕмпĕре урапа туртса пыл сутма та çӳренĕ Пăлюк акка. Укçа шутла пĕлнĕ – 4 класс вĕреннĕ.

-Яра куна тачка (урапа) туртса утаттăмăр, ун çинче çӳпçере 1 центнер пыл, питĕ ывăнаттăмăр. Çитменнине, колхоз учетчикĕ утса ывăнтăм тесе урапа çине хăпарса ларатчĕ. Пĕррехинче Вĕрен ялне канма чарăнтăмăр, çăпатана типме кăмакана хутăм. Унта вĕри пулнă иккен — çăпата çунса кайрĕ. Темиçе çултан вара Чĕмпĕре лашапа çӳрекен пултăмăр,- каласа парать Пăлюк акка.

Пелагея Павловна 2002 çултанпа Ульяновск облаçĕнчи хĕрĕ – Валентина — патĕнче пурăнать. Малтан Чăнлă районĕнчи Карабаевкăра пурăннă, 2009 çулта вара Покровскине куçнă. Валентина Петровна Унеркина Карабаевкăра 21 çул ял тăрăхĕнче (ун чухне – сельсовет) тĕп бухгалтерта вăй хунă, халĕ тивĕçлĕ канура, Покровскинче чиркӳ ĕçĕсене хутшăнать. Вăл 46 çултах мăшăрсăр тăрса юлнă, Аркадий йывăр чире пула 48 çултах вилнĕ. Вĕсен ывăлпа хĕр пур.

Пăлюк акка – 1-мĕш ушкăн инваличĕ, ăна шалкăм çапнă пулнă. Анчах çине тăрса сыватнипе вăл паян чиперех çӳрет, ĕлĕкхисене аса илсе каласа парать, шӳтлет. Паян унăн 8 ача, 20 мăнук тата 31 кĕçĕн мăнук! Вĕсен нумайăшĕн тата упăшкисемпе арăмĕсем пур. Пурте харăс пĕр çĕре пуçтарăнсан пысăк пӳрте те вырнаçса пĕтеймĕн. Анчах ку йывăрлăх мар, савăнăç кăна! Вĕсем Пăлюк аккан пĕтĕм пуянлăхĕ!

Чăнлă районĕ.

«Канаш», 2016 ç., 15 №.

# «Симĕс пушарпа» кĕрешеççĕ

Çурхи ака вĕçленнĕ-вĕçленмен хресченĕн тепĕр хĕрӳ тапхăр тытăнчĕ – «симĕс пушарпа» кĕрешмелле. Тулли мар яваплăхлă «Алгашинское» обществăн пуçлăхĕ В.З.Ледюков калчасене ӳссе аталанма чăрмантаракан çумкурăк пирки çапла калать.



-Питĕ яваплă вăхăт халь, 1-2 кун кая юлсан та тыр-пула çăлса хăвараймастăн, вăл çумкурăк ăшне путать. Вăл çĕр сĕткенне хăй çине туртса илет, акнă тырра типпе хăварать, хăртать. Çумкурăк çинче сиенлĕ хурт-кăпшанкă аталанать те пулас тухăçа çисе ярать. Унтан пĕтĕм хирти калчасене кăкламалли кăна юлать, ку вара татах – тăкаксем. Çапла вара тухăç илес вырăнне шар курма пулать. Çавăнпа халь канма та вăхăт çук, юлашки пилĕк талăкра çывăрман тесен те юрать ĕнтĕ. Кăштă кабинăра выртса каннипех çырлахма тӳрĕ килет. Ахальтен каламаççĕ вĕт çурхи кун çулталăк тăрантарать тесе. Вăхăтлăха чăтмалла пулать ку йывăрлăха. Çумкурăка гербицидпа сапса пĕтерсен сывласа ярăпăр-ха. Паян валли 40 гектар кăна юлнă ĕнтĕ.

Ырантан хăтăлатпăр ку ĕçрен,- каласа парать Владимир Зиновьевич.

Хуçалăхăн лаптăкĕ – 1 пин те 500 гектар, унта 28 çын вăй хурать. Кунта тĕпрен илсен тыр-пул ÿстереççĕ, 400 гектарне кĕрхи тырă йышăнать. Çаплах 174 гектар хĕвелçаврăнăш та акнă. Выльăх-чĕрлĕх те ĕрчетеççĕ, çав шутра 80 пуç сăвакан ĕне, 50 сысна, 70 пăру. Утар та пур, пыл туса илеççĕ.

Владимир Зиновьевич мĕн ачаранах çĕр ĕçне кÿлĕннĕ, Аслă Нагаткинта СПТУ-27 пĕтернĕ хыççăн механизаторта тăрăшнă. 1992 çулта 26 çулхи каччă ним шикленмесĕр хăй ĕçне хута ярать, фермер пулса тăрать. Ăнăçлă ĕçлекен çĕр ĕçченне 2003 çулта Кивĕ Улхаш çыннисем вырăнти ялхуçалăха ертсе пыма суйлаççĕ. Паянччченех çак вырăнта вăл.

-Хамăр майпа ĕçлесе пурăнатпăр çапла. Техника ытла çĕнни – темиçе миллион тенкĕ тăраканни – çук, киввине йĕркеллĕ тытса тăратпăр. Ăста алăллă çынсем машина-трактора хăйсемех юсаса-çĕнетсе тăраççĕ. Паллах, çĕнĕ агрегатсем туянатпăр ĕнтĕ, вĕсемсĕр май çук. Ытла хаклă техника туянни тупăша та чакарать, эп ун вырăнне ĕçлекен çынсене укçа парса хавхалантаратăп. Çавăнпа эпир кредит укçи те илмен, парăмсем çук. Маларах çĕре темле майпа та çавăркаласа ĕçлесе пăхрăмăр ĕнтĕ, халĕ асаттесен мелĕ патнех таврăнтăмăр. Çĕре сухаламаллах, çавăрса пăрахмаллах тесе шутлатпăр – виçĕ çулта пĕрре те пулин! Унсăрăн тухăç памасть вăл,- тăсать пуçлăх калаçăва.

Хуçалăх тÿпи ялшăн социаллă ыйтусене татса панă çĕрте те пысăк. Пĕлтĕр, сăмахран, вăтам шкула тĕпрен юсанă вăхăтра сăрламалли хатĕрсем туянма укçа веçех «Алгашинское» общество панă. Вăрçăра вилнисене асăнса кăçал Кивĕ Улхаш ялĕн варринче танк палăкне

лартма та чылай укçа уйăрнă. Шкулта пушар сӳнтермелли хатĕр-хĕтĕре тытса тăрассине, ăна шывпа тивĕçтерессине, çӳп-çапа илсе кайса тăкассине те В.З.Ледюков хăй çине илнĕ. Ку ыйтусемпе Владимир Зиновьевичăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе, хăйĕн ывăлĕпе – З.В.Ледюковпа тачă çыхăнса ĕçлеме тӳрĕ килет. Сăмах май Зиновий Владимирович аслă шкул пĕтернĕ хыççăн облаçри ялхуçалăх министерствинче ĕçленĕ, анчах 27 çулхи яш ял пурнăçĕ çывăхрах пулнипе каялла таврăннă. Владимир Зиновьевичăн тепĕр ывăлĕ Алексей хăй патĕнче тăрăшать – бухгалтер.

-Ялта ĕçлесе пурăнса ял çыннисене мĕнле пулăшмастăн ĕнтĕ! Хам çакăнта çуралса ӳснĕ, шкулта пĕлӳ илнĕ. Мана та пулăшнă вĕт вăхăтĕнче. Халĕ хамăн пулăшма вăхăт çитнĕ. Ăçта çуралнă – çавăнта кирлĕ пулнă теççĕ халăхра. Ку мана тӳрремĕнех пырса тивет. Тăван çĕр çинче çăкăр туса илме пултарни, ывăлсем хам çумра пурăнса ялшăн усăллă пулни савăнтарать,- терĕ Владимир Зиновьевич сывпуллашса.

Унтан вăл тракторсем çумĕнче тем аппаланакан механизаторсем патнелле васкаса уттарчĕ. Хĕвел тӳперен хĕртсе пăхма пăрахнипе тата каçхи сулхăн çитсе пынипе усă курса агрегатсем хăйсен хыçĕнчен çăра тĕтĕм хăварса хирелле васкарĕç.

Чăнлă районĕ.

«Канаш», 2016 ç., 23 №.

# Петр Кашеев сăнĕ – пĕтĕм халăх умĕнче

Ульяновскри автозавод умĕнчен иртсе кайнă чухне пысăк баннер çакăнса тăнине курма май пур. Унта рабочи спецовкине тăхăннă арçын сăнӳкерчĕкĕ пур, айне вара «Петр Кашеев, токарь ремонтно-монтажного цеха ООО «УАЗ» тесе çырса хунă.

Петр Кашеев – чăваш, Чăнлă районĕнчи Кивĕ Улхаш ялĕнче çурласа ӳснĕ. Автозаводра 1977 çултанпа ĕçлет. Çак вăхăтра вăл пысăк шайлă специалиста тухнă. Темиçе хушма специальность алла илнĕ. 2012 çулта «Автозаводăн чи лайăх рационализаторĕ» ята тивĕçнĕ. Пурĕ ун 55 рационализаци сĕнĕвне производствăра хута янă, çаплах 600 ытла кайдзен сĕнĕвĕпе усă курнă. 2014 çулта Петр Иванович М.Лимасов ячĕллĕ область премине тивĕçнĕ. Çаплах ăна «Автозавод ветеранĕ» тата «Раççей Федерацин ĕç ветеранĕ» ятсене панă. Вăхăтĕнче П.Кашеев Ульяновск Хула Канашĕн депутачĕ те пулнă – 1987-1992 çулсенче. Обществăлла ĕçе те хастар хутшăннă, комсорг тивĕçĕсене те пурнăçланă. ВЛКСМ 70 çул тултарнă ятпа ăна кăкăр палли парса чысланă.

Çав вăхăтрах Петр Иванович хăйĕн савнă мăшăрĕпе Валентина Николаевнăпа икĕ хĕр çуратса çын çине кăларнă, вĕсене аслă пĕлӳ панă. Хĕрĕсем вара вĕсене икĕ ытарайми мăнук парнеленĕ.

Паян П.Кашеев юсавпа монтаж цехĕнче токарьте вăй хурать, ун пысăк разряд – 6-мĕш. Миçе рационализаци сĕнĕвĕ парса миçе пин укçа-тенкĕ перекетлемен-ши Петр Иванович! Анлă пĕлӳллĕ специалиста пĕтĕм завод пĕлет. Ахальтен мар ун сăнӳкерчĕкне çын курăнмалли вырăна çакса хунă ĕнтĕ. Малашне вара ун ятне пĕтĕм хула тата область пĕлĕç. Ку пирĕн çĕршывра ĕç çыннине

хисеплеме, вырӑна хума тытӑннин палли. Ҫак пулӑм савӑнтарать. Тӗрӗссипе, вӑл ялан ҫапла пулмалла-ха! Ҫӗршыв пуянлӑхне ӗҫ ҫынни тӑвать-ҫке! Ҫав вӑхӑтрах ку ҫамрӑксем валли ырӑ тӗслӗх, вӗсене ӗҫ ҫыннине хисеплеме вӗрентни.

Пирӗншӗн вара Петр Кашеев чӑваш ҫынни пулни паха. Ҫитменнине, вӑл «Канаш» хаҫатӑн штатра тӑман чи хастар корреспонденчӗсен пӗри! Юлашки вӑхӑтра вӑл хаҫат страницисенче сахал мар кулӑшла калав пичетлесе кӑларчӗ. «Канаш» хаҫат йӗркеленӗ пултарулӑх конкурсӗнчи «Прозаик-2015» номинацире пӗрремӗш хут хутшӑнса 3-мӗш вырӑн йышӑнчӗ. Пултаруллӑ ҫын пур енчен те пултаруллӑ тесе ахаль каламаҫҫӗ иккен.

«Канаш», 2016 ҫ., 27 №.

# Малтан ĕçлекен çын тупатпăр, унтан техника туянатпăр

Леонид Еленкин – Чăнлă районĕнчи çамрăк фермерсенчен пĕри. Паян унăн тăван ялĕн – Кунтикав – çывăхĕнче 1 пин те 200 гектар çĕр. Унта ытларах пĕрчĕллĕ культурăсене туса илет вăл.



Иртнĕ вырсарникун хуçалăхри механизаторсем базăраччĕ: кĕрхи тĕш-тырра пуçтарса кĕртнĕ хыççăн хиртен таврăннăччĕ, комбайнĕсене унтан-кунтан юсатчĕç, механизмĕсене сĕретчĕç. Хуçалăх пуçлăхĕ хĕрӳ вăхăт пулсан та пирĕнпе калаçма кăмăл турĕ.

-Маларах ку хуçалăх анне – Раиса Николаевна – çинчеччĕ, 2004 çултанпа эпир унпа пĕрле ĕçлерĕмĕр. 2011 çулта вара хам çине куçартăм. Халĕ те анне мана кирлĕ пулсан пулăшать-ха. Кăçалхи лару-тăру çинчен

калас пулсан – кĕрхи тулла пухса кĕртрĕмĕр ĕнтĕ. Тухăç савăнтарать – гектартан вăтамран 38 центнер. Тунтикун урпана тухатпăр, вăл 150 гектар. Ку культура та 30 центнертан кая памасть пулĕ тесе шутлатăп. Кĕркунне валли сахăр кăшманĕ юлать – 155 гектар. Вăл та япăх мар çитĕнет, лайăх тухăç пулмалла. Хуçалăхăн 35 гектар нумай çул ӳсекен курăк та пур. Унпа сурăхсем ĕрчетме усă куратпăр,- каласа парать Леонид Владимирович.

Сурăхĕсене вăл хăй хуçалăхĕ валли тытать, ĕçлекенсене çитерме, столовăйра апат хатĕрлеме усă курать. Механизаторсене килĕ валли ĕç укçи шучĕпе те парать.

Леонид Владимирович Еленкин ячĕллĕ хуçалăхра çулталăкĕпех 7 çын вăй хурать. Вĕсем хĕлле техникăна юсаççĕ, тыр-пул илме килекенсен машинисене тиесе яраççĕ, базăна йĕркере тытаççĕ. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче вара хуçалăх пуçлăхĕ тата 8-9 çынна ĕçе илет. Вăл каланă тăрăх, тата пĕр механизатор пулсан аван, мĕншĕн тесен халĕ кашнине 2-3 техника лекет. Сăмахран, Иван Казаков КамАЗпа ĕçлет. Александр Казаков ирхине бензовозпа мĕнпур техникăна заправка тăвать, кайран КамАЗ çине куçать.Тракторпа ĕçлеме те пултарать вăл. Алексей Куркин та çакăн пекех темиçе ĕç пурнăçлать. Ялхуçалăх техникине аван пĕлекен, ăна пăхса-юсаса тăракан çын та тем пек кирлĕ, ун пекки тупăнсан пуçлăх ăна паянах ĕçе илме хатĕр.

Çак йывăрлăх пирки Леонид Владимирович çапла калать:

-Халĕ укçа пулсан ытти ыйтусене татса пама пулать. Çĕр çинче ĕçлеме кăмăл тăвакан çын тупасси вара – питĕ йывăр. Унччен техника туянаттăмăрччĕ те унпа ĕçлекен çын шырама пуçлаттăмăр. Халĕ ĕç-пуç урăхланчĕ: малтан çыннине шыраса тупатпăр, кайран ун валли

техника туянатпăр. Мĕншĕн тесен хаклă техника туяннă хыççăн ăна хута ямалла, вăл пĕр вырăнта ларнин усси çук. Сăмахран, виçĕ çул каяллах эпир К-700 трактора ултă миллион тенкĕлле туяннăччĕ. «Полесье» комбайн та çавăн евĕрлех тăрать.

Л.В.Еленкин базăри кантур çуртне те кăтартрĕ, унта юсав ĕçĕсем пĕтсе пыраççĕ ĕнтĕ. Кунта пуçлăх пӳлĕмĕ те, столовăй та пулать.

Халĕ Леонид Еленкин хуçалăхĕнче тăватă комбайн (вĕсенчен иккĕшĕ – «Полесье»). Малашне тепĕр «Полесье» туянасшăн, унпа ĕçлекеннине тупса хунă ĕнтĕ пуçлăх. Вăл хулара пурăнать, çапах та тырçи вăхăтĕнче çак хуçалăхра комбайнпа ĕçлеме килĕшнĕ. Сăмах май çакна каламалла: комбайнер тырçи тапхăрĕнче – 3-4 эрнере – 50 пин тенкĕрен пуçласа 80 пине çити ĕçлесе илме пултарать.

Тепĕр йывăрлăх – пуçтарса илнĕ тырра сутасси.

-Çĕр ĕçченĕн ялан йывăрлăх: тырă ăнсан та, ăнмасан та. Тĕлĕнмелле: тырă пулмасан – укçа çук, тырă пулсан – ун хакĕ çук. Тырă туянакансем (перекупщик теççĕ вĕсене) хăйсем хушшинче калаçса татăлаççĕ те хака антарса лартаççĕ. Пирĕн ниçта та кайма çук – сутмаллах. Çĕр ĕçченĕн мĕнпур тыррине усрама кĕлечĕсем те çитмеççĕ, кредитне те вăхăтра тӳлемелле. Çавăнпа сутмах тивет. Сăмахран, пĕлтĕрхи тырă та пур-ха кăштах манăн. Хакланасса кĕтетпĕр. Халĕ, тырçи вăхăтĕнче, хакĕ чакрĕ – 3-мĕш класлă тыррăн пĕр килограмĕ 7 тенкĕ тăрать. Уйăх каялла кăна 10 тенкĕ пулнă. Çавăнпа çĕнĕ тырра кĕлете хуратпăр-ха. Паллах, унта пурте кĕмест, ыттине Чăнлă элеваторне турттарса упрама хумалла пулать ĕнтĕ. Хамăрăн икĕ КамАЗ пур, тата иккĕшне тара тытмалла пулать тырра унта турттарма. Пĕлтĕр перекупщиксем

хак паманнипе эпĕ çапла тунăччĕ. Элеватор хакĕсем те пысăк, паллах, пурпĕрех чуххăм сутса янинчен усăллăрах пулчĕ унта усрани. Тырă сутасси лотерея văййинех çаврăнчĕ. Паян мĕн тусан ыран мĕн пулнине малтан пĕлсе тăма çук,- тет фермер хуçалăхĕн пуçлăхĕ.

«Канаш», 2016 ç., 31 №.

## Чăваша чăваш пулма чĕнет!

РФ культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Ульяновск облаçĕн Хисеплĕ гражданĕ, Чăнлă районĕн Хисеплĕ гражданĕ Валентина Игнатьева-Тараватхăйĕн юбилейне тата пултарулăх çулĕ çине тăни 45 çул çитнине Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Упи ялĕн Культура çуртĕнче ирттерчĕ. Курма пынисем зала пĕтĕмпех тултарнăччĕ.

Уяв умĕн пĕр кун малтан Ульяновск область кĕпĕрнаттăрĕн тивĕçне вăхăтлăха туса пыракан Сергей Морозов В.Н.Игнатьева-Таравата хăй патне чĕнтерсе саламланă, алла çыхмалли ылтăн сехет парнеленĕ.

Чи малтан сцена çинчен Çĕпрел район пуçлăхĕн ятĕнчен ентешне культура пайĕн ĕçченĕ Валерий Самойлов саламларĕ, пысăк картина парнелерĕ, унпа çĕпрелсем мăнаçланнине пĕлтерчĕ.

Поэта, çыравçа, куçаруçа, композитора, юрă-ташă ушкăнĕн ертӳçине чыс тума Ульяновск облаçĕнчен те сумлă делегаци кайрĕ. Сцена çинчен Валентина Николаевнана кĕпĕрнаттăрăн наци ыйтăвĕсен канашлуçи, Ульяновск облаçĕн Хисеплĕ гражданĕ Владимир Сваев саламласа кĕпĕрнаттăрăн Хисеп грамотине пачĕ. Çаплах юбиляра саламлама сцена çине облаçри чăвашсен И.Я.Яковлев ячĕллĕ çутĕç обществин пуçлăхĕ Алексей Мордовкин, Чăнлă районĕн социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ Анатолий Узиков, Ульяновскри вĕренӳпе система çĕнĕлĕхĕсен центрĕнчи йĕркелӳпе меслетлĕх пайĕн тĕп специалисчĕ Вера Архипова тата унăн мăшăрĕ Виталий, Нацисен культурисене çĕнетсе аталантаракан центр пуçлăхĕн çумĕ Светлана Ковшенина, Чăваш культура центрĕн ертӳçи Ираида Гаврилова, пĕр ялта ӳснĕ Николай Мулендеев тата Василий Крлыков, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки Зоя Рейтер,



«Канаш» хаҫатӑн тӗп редакторӗ Николай Ларионов тухрӗҫ. Вӗсем В.Тараватӑн ӗҫне пысӑка хурса хакларӗҫ, ун шанчӑклӑхне, тӳрӗ кӑмӑлне палӑртрӗҫ, вӑл халӑхшӑн, чӑвашлӑха аталантарассишӑн ырми-канми тӑрӑшнине пӗлтерчӗҫ, малашне те ҫак ӗҫре ӑнӑҫусем сунчӗҫ.

Уява ертсе пыракан Галина Никитина ҫаплах Шупашкар хӑнисене те залран чӗнсе кӑларчӗ. «Хыпар» хаҫат генеральнӑй директорӗ-тӗп редакторӗн ҫумӗ, Чӑваш Республикинчи Профессионал писательсен союзӗн председателӗ Геннадий Максимов, Чӑваш Республикин искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ, Ульяновск облаҫӗн культура тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Светлана Асамат юрӑҫӑ тата поэт, Чӑваш Республикин искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Марина Карягина поэт, драматург

тата журналист хăйсен ĕçтешне ăшшăн саламласа Чăваш Республикин культура министерствин, Чăваш наци конгресĕн, Писательсен союзĕн, Композиторсен ассоциацийĕн Хисеп грамотисене, Тав хучĕсене пачĕç, асăнмалăх парнесем тыттарчĕç. С.Асамат вара вăрваррăн аллине баян тытрĕ, хăйĕн тантăшне халалласа темиçе илемлĕ юрă шăрантарчĕ, пурне те савăнтарчĕ. Шупашкарсен калаçăвĕн тĕп шухăшĕ – Валентина Тарават малта утса пырать, халăх чысне çĕклет, чăваша чăваш пулма чĕнет!

Çаплах Шупашкартан В.Тараватӑн шăллĕ Анатолий Музыкантов тата ун хĕрĕ Ирина килсе çитнĕ. Анатолий Николаевич та РФ культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, нумай çул «Сувар» ятлă ташă ушкăнне ертсе пырать. «Сувар» ушкăн куракансене вут-хĕмлĕ ташăсемпе савăнтарчĕ, Ирина Музыкантова вара В.Тарават çырнă юрăсене шăрантарчĕ.

Тутарстанри чăвашсен «Сувар» хаçачĕн редакторĕ Константин Малышев хăйсен патĕнче В.Тарават пек хастар та пултаруллă çынсем çитменнине, депутата çакăн пек халăхшăн тăрăшакан çынсене суйламаллине палăртрĕ.

Валентина Николаевнана мăшăрĕ Роберт Дмитриевич тата ывăлĕ Андрей та ăшă сăмахсемпе саламларĕç. Роберт Дмитриевич ăна «ылтăн кăшăл ăшĕнчи бриллиант» тесе хакларĕ! Упăшки арăмĕ пирки халăх çинче çакăн пек каланине сайра хутра илтме пулать. Апла пулсан вăл ун хакне пĕлет.

Упи ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Алексей Ярухин тата Çĕнĕ Упи шкулĕн директорĕ Сергей Молгачев ял-йыш ятĕнчен ентешне саламласа ырă сăмахсем шеллемерĕç. Унпа пĕрле ял тăрăхĕнче вăй хуракансем, Культура çурчĕн

ĕçченĕсем сцена çине тухса саламларĕç, юрă парни турĕç.

Паллах, çак кун Валентина Николаевнан тăванĕсем те килте ларса юлман ĕнтĕ. Мĕн чухлĕ ырă сăмах каларĕç вĕсем ун пирки! Вĕсем ăна юратнине, хисепленине ытала-ытала систерчĕç. Юбиляр чĕрĕ чечек çыххисен ăшне путрĕ!

Уявра саламсем юрă-ташăпа ылмашăнса тăчĕç. Шкул ачисем вара Тараватсăввисене вуларĕç. Сцена çинчен хăйсен пултарулăхне Аслă Нагаткинтан килсе çитнĕ «Шанăç» ансамбль (ертӳçи В.Тараватс), Тутарстан культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Людмила Сердцева, Культура çурчĕн ĕçченĕсем кăтартрĕç.

Тутарстан,
Çĕпрел районĕ.

«Канаш», 2016 ç., 34 №.

# Ĕпхĕве — Миронов ячĕллĕ шкула

Кăçалхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче чăваш халăхĕн паллă çынни, халăхăмăра çутта кăларас ĕçре нумай вăй хунă П.М.Миронов ăсчах çуралнăранпа 155 çул çитет (1861 çулта çуралнă). Пирĕн ялта – хальхи Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмелĕнче (малтан вăл Чĕмпĕр кĕпĕрнине кĕнĕ) — çуралса ӳссе Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче çунатланнă ентешĕмĕр хăйĕн пурнăçĕнчи çулĕсене ытларах Пушкăртра ирттернĕ, Ĕпхӳ кĕпĕрнин халăх училищисен инспекторĕ пулнă. Павел Миронович пурĕ те 60 çул çеç пурăннă, кăçалхи сентябрĕн 20-мĕшĕнче вăл вилни 95 çул çитет.

Çакна асра тытса июлĕн 15-мĕшĕнче юлташсемпе Пушкăрт Республикин тĕп хулине — Ĕпхĕве çитсе килме шутларăмăр. Унта Миронов ячĕллĕ вырсарни шкулĕ ăнăçлă ĕçлет. Çапла вара УАЗ «Патриот» автомобиле лартăмăр та çывăх мар çула тухрăмăр. Ман çулташсем: Аслă Нагаткинта пурăнакан Владимир Остроумов тата унпа пĕртăванĕн ачи – Владимир Юманов.

«Ульяновск-Пăлхар-Пасарлă Матак-Нурлат-Çарăмсан-Новошешминск-Шереметьевка» маршрутпа 400 ытла çухрăм иртнĕ хыççăн тата Заинск хулине çитсе куртăмăр-ха. Унти паллă тата илемлĕ вырăн – Зай шывĕ çинчи ГРЭС. Ун хыççăн Тутарстанри Анат Кама районĕнчи Шереметьевкăра палланă çынсем патĕнче çĕр каçрăмăр.

Тепĕр кун Камские Поляны текен поселока çитрĕмĕр, вăл Кама шывĕ хĕрринче вырнаçнă. Кунта хăçан-тăр ГЭС тума пуçланă, анчах вĕçне çитерейменн. СССР саланнă хыççăн унти япаласене те веçех салатса пĕтернĕ. Халĕ вара ГЭС тăвасси пирки тепĕр хут татăклăн калаçма тытăннă. Вăл кунта кирлех тесе шутлаççĕ.

Çаплах эпир Алапука хули урлă кайса çак района кĕрекен Морты ялне çитрĕмĕр, кунтан Удмурти Республикин чикки те 10 çухрăм кăна юлать. Ку ялта пирĕн пĕлĕш – Нуршат Губайдуллин фермер агротуризм комплексне йĕркелесе янă. Картара вăл пăлансем, ашаксем, кроликсем, тĕрлĕ ăратлă сурăх-качака, хур-кăвакал, чăх-чĕп усрать. Сăмахран, пĕр ăратлă сурăхĕ 220 пин тенкĕ тăни тĕлĕнтерчĕ пире! Качака йывăрăшĕ вара 180 килограма çитме пултарать. Эпир курнă качаки тăватă уйăхра кăначчĕ-ха, çапах та 120 кг таять! Пуçĕ кăна мĕн пысăкăш! Тенкел пысăкăш автан та куçа тĕлĕнтерет, ури те мамăклă. Çакăнти юханшывра тĕрлĕ пулă тытма май пур. Çаплах кунта вĕлле хурчĕсем çинче те çывăрма пулать. Йывăçран тунă ятарлă пĕчĕк пӳртре (вăл икĕ вырăнлă) кравать çине выртатăн та – аялта вĕлле хурчĕсем сĕрлесе çӳреççĕ. Паллах, пӳлĕме тухаймаççĕ вĕсем, сетка карнă. Пыл музейĕ те пур кунта. Экскурси вĕçленнĕ хыççăн хуçасем пире кролик ашĕнчен пĕçернĕ хашламапа сăйларĕç.

Хуçи каланă тăрăх, агротуризм комплексне курма килекенсем чылай, ушкăнĕ-ушкăнĕпе тĕрлĕ хуларан çӳреççĕ. Финляндире пурăнакан тутарсем те килсе кайнă кунта.

Пире çакăнта çĕр каçма хистерĕç, çапах та эпир кунта çывăрмарăмăр, çак кун Анат Кама, Çыр Чалли хулисем витĕр тухса Пушкăрт Республики енне сулăнтăмăр. Айккинче Мензелинск, Актанăш хулисем юлчĕç. Пушкăрта кĕрсен Дюртюли хĕррипе иртсе кайрăмăр, Кушнаренково та хыçа юлчĕ.

Унти вăхăтпа çур çĕр патнелле Ĕпхӳ хулине çитрĕмĕр. Ку вăхăтра çывăрмалли вырăн шыраса вăхăта сая ярас темерĕмĕр — каçĕ ăшă, çавăнпа автомобиль ăшĕнчех çĕр каçрăмăр.

Эпир П.М.Миронов шкулне курас шухăшпа килнĕ вĕтха. Çавăнпа ирхине тӳрех ун патне васкарăмăр.

П.М.Миронов ячĕллĕ чăваш вырсарни шкулĕ Ĕпхӳ хулинче 1992 çулта хута кайнă. Ăна пĕрремĕш кунранах хастар чăваш — Пушкăрт Республикин вĕренӳ тава тивĕçлĕ ĕçченĕ тата Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ – Иван Григорьевич Тарасов ертсе пырать. Паян кунта 150 ача пĕлӳ илет. Вĕсемпе пĕрлех ашшĕ-амăшĕ те çӳрет. Палăртса хăвармалла: ку хушма пĕлӳ паракан шкул.

Кунта чăваш чĕлхипе литературине, историне, акăлчан чĕлхине вĕренеççĕ, ӳкерме, тăмран е пластилинран кӳлепесем йăваласа тума, тĕрлеме хăнăхаççĕ. Пурте – тӳлевсĕр. Çаплах ачасем «Туслăх кĕперĕ» ятлă культурологи программипе экспедицисене çӳреççĕ, театра каяççĕ. Шкулта çакăн пек япаласем пур: «Термен» театр-студи, пукане театрĕ, «Хунав» ятлă ачасен фольклор ушкăнĕ, ЮНЕСКО клубĕ, ача-пăча телестудийĕ, ашшĕ-амăшĕ тата вĕрентӳçĕсем валли — халăх университечĕ. Çаплах кунта нумай тиражлă хаçат та тухса тăрать – «Вырсарни хыпарĕсем». Пушкăрт чăвашĕсен съезчĕ палăртнă тăрăх, ку шкул чăвашлăха тĕпчекен тата наци вĕренĕвĕн бази шутланать.

Шкул тĕрлĕ программăсене тата проектсене хутшăнать. Халĕ пĕтĕм тĕнчери ача-пăча юхăмĕ – «Добрые дети мира» пырать. 2013 çултанпа халăха çутта кăларакан çынсен пурнăçне тĕпчекен «77 ступенек для саморазвития» программăпа ĕçлеççĕ, вăл тепĕр çул вĕçленет. Шкул «Диалог – путь к пониманию» ятлă пĕтĕм тĕнчери вĕренӳ проекчĕн тата Раççейри «100 лучших школ России-2013» конкурсăн лауреачĕ.

Чăваш вырсарни шкулĕн çурчĕ Киров районĕнчи Пушкин урамĕнче110-мĕш çуртра вырнаçнă. Ку икĕ

хутлă здание 1839 çултах хăпартса хунă, вăл хулари кирпĕч çуртсенчен чи киввисенчен пĕри, культура тата истори палăкĕ шутланать. 19-20 –мĕш ĕмĕрсенче кунта Уес училищи ĕçленĕ. Каярахпа ăна пĕрремĕш хула училищи туса хунă: кунта 1892 çултанпа Чĕмпĕр чăваш шкулне пĕтернĕ çын, дворян, математик, музыкант, биолог, халăха çутта кăларас тесе нумай тăрăшнă Павел Миронович Миронов ĕçленĕ. 1918 çулта П.М.Миронов кунта чăваш учителĕсен семинарине йĕркелесе ярать. Унăн мăшăрĕ вара – Ольга Васильевна — хĕрарăмсен Мария гимназинче вĕрентнĕ. Вăл çаплах «География Уфимской губернии», «География Башкирии» кĕнекесен авторĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕн кавалерĕ.

20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче ку çурта И.Я.Яковлев пырса каять, хăйĕн шкулĕнчи чи лайăх вĕренекенĕсенчен пĕринпе – П.М.Мироновпа тĕл пулать. Çаплах кунта чăвашсен паллă çыннисем те тăтăшах килсе çӳренĕ: Гурий Комиссаров, Тимофей Николаев-Хури, Семен Николаев, Парижри Сарбонна университетне пĕтернĕ Степан Акимов, ашшĕпе ывăлĕ – Петров-Турингесем, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Пушкăртри ӳкерӳ ĕçне пуçарса яракан А.О.Тюлькин тата ыттисем.

Миронов шкулĕнче паллă общесто хастарĕсем ĕçленĕ: А.А.Кондратьев академик, истори наукисен кандидачĕ И.Г.Петров, Пушкăрт чăвашĕсен Канашĕн ĕçтăвкомĕн пуçлăхĕ Г.П.Шушпанов, Пушкăрт Республикинчи Чăваш культури обществин пуçлăхĕ В.Г.Никитин, хими наукисен докторĕ И.М.Борисов, РФ Писательсен союзĕн членĕ М.Е.Иванов (Михаил Сихун), «Урал паттăр» ятлă пушкăрт халăх эпосне чăвашла куçаракан çыравçă Н.В.Дмитриев (Ялтăр Мучи) тата ыттисем.

Шкул ачисем обществăлла пурнăçра питĕ хастар, 2005-2014 çулсенче 275 ача конкурссене хутшăнса тĕрлĕ

премисене тата дипломсене тивӗҫнӗ. Чи лайӑх вӗренекен 30 ача Чӑваш Республикин Президенчӗн путевкипе Чӑваш Енре кану лагерӗнче пулса курнӑ. В.М.Тарасова «Хунав» ушкӑн артисчӗсем валли хӑй аллипе 30 комплект костюм тӳлевсӗрех ҫӗлесе панӑ.

Ӗпхӳ хулине килекен пӗр ҫын та Шуратӑл юханшывӗ хӗрринчи ҫӳллӗ хысак ҫинче вырнаҫнӑ Салават Юлаев палӑкӗ патне пымасӑр каймасть пуль. Эпир те унта ҫитрӗмӗр. Палӑка 1967 ҫулта хӑпартса лартнӑ. Питӗ илемлӗ вырӑнта ларать палӑк, хӑй те капмар тата мӑнаҫлӑ.

Хула тӑрӑх ҫуран тата автомашинӑпа курса ҫӳренӗ хыҫҫӑн вара кӑнтӑр-хӗвеланӑҫалла ҫул тытрӑмӑр — Тутарстанӑн Павлӑ районӗ еннелле. Самар тата Оренбург облаҫӗсен ҫӗрӗсемпе иртсе Димитровград урлӑ Ульяновска таврӑнтӑмӑр. Пирӗн виҫӗ кунлӑх ҫулҫӳрев ҫапла вӗҫленчӗ. Пурӗ ҫак вӑхӑтра икӗ пин ҫухрӑм иртрӗмӗр.

Мӗнле ҫулҫӳреврен те халиччен курман япаласемпе паллашнӑ хыҫҫӑн ҫӗнӗ шухӑшсемпе, ҫӗнӗ ӗмӗтсемпе таврӑнатӑн. Ман шутпа, хамӑр регионта агротуризма чӗртсе ярса аталантарас тесен специалистсем Морты ялне ҫитсе курмалла. Унта вӗсем валли курмалли-шухӑшламалли пур. Питӗ интереслӗ япала вӑл.

Миронов ячӗллӗ шкул опычӗпе те ытти ҫӗрте пурӑнакан чӑвашсем анлӑн усӑ курмалла. Вуласа кӑна пӗлни ҫителӗксӗр, унта ҫитсе курмалла, вӗсен ӗҫӗпе тӗплӗн паллашмалла. Ку ачасен наци ӑс-тӑнне ӳстерес, вӗсене усӑллӑ ӗҫе явӑҫтарас, чӑваш культурине ҫӗклес ӗҫре питӗ пысӑк пулӑшу пулӗччӗ.

«Канаш», 2016 ҫ., 36 №.

# Яковлев музейĕ – чăвашсен Мекки!

Ульяновскри «Чĕмпĕр чăваш шкулĕ. И.Я.Яковлев хваттерĕ» музей 1991 çулта уçăлнă (вăл «В.И.Ленин тăван çĕршывĕ» ятлă музей-заповедника кĕрет). Музей çуртне 1883-1885 çулсенче хăпартса лартнă. Музейра 300 ытла экспонат, вĕсем пурте пире çутта кăларакан çыннăн пурнăçĕпе çыхăннă. Кунта – кĕнекесем, сăнӳкерчĕксем, документсем, тумтир, савăт-сапа...

Ку фонда пуянлатма И.Я.Яковлевăн тĕрлĕ çĕрте пурăнакан тăхăмĕсем те хутшăннă. 200 экспоначĕ Яковлевсен çемьи Чĕмпĕрте пурăннă вăхăта сăнласа парать. Тӳрех каламалла: чаплă япаласем курма тăрăшакансен кăмăлĕ сĕвĕрĕлме те пултарать пуль, мĕншĕн тесен ун пеккисем çукпа пĕрех. Анчах ку япаласем укçа-тенкĕ енчен мар, истори тĕлĕшĕнчен хаклă. Ку лару-тăрăва патриархăн мăнукĕ И.А.Яковлева çапла ăнлантарать: «Яковлевсен хваттерĕнче тĕрлĕ сĕтел-пукан хутăшĕ ларнă, нимĕнле ятарлă «стиль» те пулман. Мĕншĕн тесен çемьере ку ыйтăва ытла пысăк тимлĕх те уйăрман, укçи-тенки те çитсех кайман».

Кунта хĕрлĕ йывăçран туса хатĕрленĕ сĕтел-пукан уйрăм вырăн йышăнать, ăна хăй вăхăтĕнче И.Я.Яковлева С.Д.Раевский дворян парнеленĕ пулнă. Самсон Дмитриевич Иван Яковлевича кăмăл-сипет енчен те, укçа-тенкĕ енчен те пулăшнă, кайран хăйĕн хваттерĕнче ларакан хĕрлĕ йывăçран туса хатĕрленĕ креслине те ăна халалласа хăварнă. Ăна 19-мĕш ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче тунă. Апла пулсан вăл 200 çулта ĕнтĕ. Хĕрлĕ йывăçран тунă секретер-комода тата сĕтеле (19-мĕш ĕмĕр вĕçĕ) 2008 çулта И.Я.Яковлевăн кĕçĕн мăнукĕ В.В.Павлов парнеленĕ. Диван çумĕнчи ларакан сĕтеле (19-мĕш ĕмĕр варри) Е.А.Некрасова

(мăнукĕ) 1986 çулта панă. Алă ĕç тумалли сĕтелпе (19-мĕш ĕмĕр вĕçĕ – 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕ И.Я.Яковлевăн арăмĕ Екатерина Алексеевна усă курнă. Германире тунă çĕвĕ машини те (19-мĕш ĕмĕр вĕçĕ -20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕ) унăн пулнă. «Г.Мозер» фирма тунă стена çумне çакмалли сехет те – музей илемĕ. Барометр – 19-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче Германире туса хатĕрленĕскер. Вĕсене музее тĕрлĕ çулта В.В.Павлов çитерни. Сарă металран тунă çурта лартмалли (19-мĕш ĕмĕр вĕçĕ) вара Чăваш Республикин Таврапĕлӳ музейĕнчен 1987 çулта çитнĕ. Йĕсрен тунă çурта лартмаллине Н.Г.Краснов ăсчах 1992 çулта кӳрсе панă.

Иван Яковлевичпа Екатерина Алексеевнан харпăр япалисем те пур кунта: визит карточкисем, хĕрес çакса çӳремелли вăчăра (шурă металран). Иккĕшĕн шкатулкисем те пур (йывăçран). Арăмĕн шкатулкине Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренекенсем 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче столяр мастерскойĕнче хатĕрленĕ.

Савăт-сапаран Франциpе 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче тунă чей куркипе чей чашăкне курма пулать, унпа И.Я.Яковлев хăй усă курнă. Металпа çавăрса тухнă патнус вара (19-мĕш ĕмĕр вĕçĕ – 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕ) Дрезденран килнĕ. Иккĕшĕ те фаянсран. Богемирен килнĕ турилккесем (айккисене кĕмĕл тĕслĕ металпа çавăрса тухнă), çăкăр касакан çĕçĕ, хрусталь графин (И.Я.Яковлев хăй усă курнă), сок кăлармалли, кофе вĕретмелли (Хĕвеланăç Европăра металран туса хатĕрленĕскер), тăмран ăсталанă чӳлмек те пур музейра.

Çырмалли япаласене те курма пулать: И.Я.Яковлевăн кĕленче чернильници (хуппи бронзăран), хут касмалли çĕçĕсем (пĕрне Екатерина Алексеевна 1910-1911 çулсенче Ессентуки хулинчен илсе килсе упăшкине парнеленĕ пулнă). Металран тата чулран тунă хут хĕстермеллисен кӳлеписем те интереслĕ.

Харпăр библиотекинче упраннă кĕнекисем

И.Я.Яковлев вилсен Алексей ывӑлӗ патне куҫаҫҫӗ. Кайран – Иван Алексеевич тата Ольга Алексеевна мӑнукӗсем патне. «Великая дидактика» (авторӗ – Коменский Я.А., 1893, Мускав) кӗнеке те кунтах. Кӗнекен пӗрремӗш страницинче Ольга Алексеевна хӑй аллипе ҫапла ҫырса хунӑ: «Эта книга принадлежала просветителю чувашского народа Ивану Яковлеву». Тепӗр кӗнекине – «Новый завет на чувашском языке» – 1911 ҫулта Чӗмпӗрте пичетлесе кӑларнӑ. Ӑна музее Ульяновскра пурӑнакан А.Г.Пешне 2010 ҫулта пырса панӑ.

Паллӑ ӗнтӗ, И.Я.Яковлев кӗнеке кӑларас тата куҫарас ӗҫре нумай тӑрӑшнӑ. Вӑл Лондонра вырнаҫнӑ Британи тата Ют ҫӗршывсенчи Библи Обществипе (БИБО) тачӑ ҫыхӑнура тӑнӑ. Ҫав общество укҫа-тенкӗ уйӑрнипе вӑл чӑваш чӗлхипе тӗн кӗнекисем пичетлесе кӑларнӑ. Ҫак кӗнеке пӗрремӗш хут ют ҫӗршывра мар, Чӗмпӗрте пичетленнӗ (тиражӗ – 20 пин экземпляр). БИБО вӗсене хӑй ятӗнчен салатнӑ. Яковлев аллинче ун пек кӗнеке темиҫе кӑна пулнӑ, музейри – ҫавсенчен пӗри.

Тӗрлӗ сувенир-парне те нумай кунта. Лаша хӳринчен явса тунӑ вӑчӑра, паллах, ҫынсене кӑсӑклантарать. Вӑчӑрана (15 см тӑршшӗ) А.Я.Гречкин явнӑ. Ун историйӗ ҫапларах. А.Я.Гречкин Чӗмпӗр гимназинче И.Я.Яковлев ывӑлӗпе – Алексейпа – пӗрле вӗреннӗ. Вӑл 1905 ҫулта Сочи хулинче пӑлхава ертсе пынӑ. Уншӑн ӑна каторгӑна яраҫҫӗ, икӗ хутчен вӗлерме приговор ҫыраҫҫӗ. Вӑчӑрана Александр Яковлевич Саратов хулинчи тӗрмере ларнӑ чух туса хатӗрленӗ. Кайран вӑл ҫак вӑчӑрана адвокат тытма тата укҫа-тенкӗ парса пулӑшнӑшӑн И.Я.Яковлева парнелет.

Тӗрлӗ скульптура япалисене, Италире тунӑ хӗрарӑм капӑрлӑхне курсан та тӗлӗнетӗн: ӑста алӑ темӗн те туса хатӗрлеме пултарать иккен.

Е.А.Яковлева алӑ ӑсти пулни пирки мӑшӑрӗ ҫапла

çырса хăварнă: «Екатерина Алексеевна алли тĕлĕнмелле ăста. Ун уйрăмĕнче темĕн те пурччĕ. Вĕсем тĕрлĕ куравра наградăсене те тивĕçнĕ. Уйрăмах унăн çыхасси, çĕлесси, эрешлесси лайăх пулса тухатчĕ». Çавăнпа та музейра Е.А.Яковлева хăй аллипе çĕлесе тунă япаласем те, ăна хăйĕн вĕренекенĕсем парнеленисем те пур: сĕтел çитти, салфетка, парне хутаççи, çырусем упрамалли хутаç-конверт...

Музейра чăвашсен авалхи пурнăçне кăтартакан уйрăм та пур. Унта иртнĕ ĕмĕрсенче пирĕн несĕлсем мĕнлерех условисенче пурăннине, мĕн ĕçленине курса паллашма пулать.

Иккĕмĕш хутра вара хальхи саманапа çыхăнса тăракан интерактивлă курав пур.

Çĕр хут илтиччен пĕрре курмалла теççĕ халăхра. Çавăнпа та кашни чăваш кунта килсе хăйĕн куçĕпе хăй çаксене веçех курмалла, уйрăмах ача-пăчана, çамрăк ăрăва кирлĕ ку. Мĕншĕн тесен ку пирĕн халăхăн историйĕ, иртнĕ кун-çулĕ, халăха çутта кăларнă тапхăр. И.Я.Яковлев çинчен пирĕн нумайрах пĕлмелле, ун пурнăçĕпе çывăхрах паллашмалла. Вăл чăваш халăхĕ валли алфавит туса хатĕрленĕ, çĕнĕ çырулăх пуçарса янă, пĕрремĕш кĕнекесем пичетленĕ, вырăсларан чăвашла кĕнекесем куçарса пирĕн несĕлсене ытти халăхсен культурипе паллаштарнă, чăвашсене ытти халăхсемпе пĕртан тăвасшăн çуннă. Çак ĕçре вăл 54 çул вăй хунă! Ун ятне Раççейре кăна мар, тĕнчере те лайăх пĕлеççĕ. Вăл тĕнчери чи лайăх педагогсен шутĕнче.

Музей Ульяновск хулинче Чĕмпĕр чăваш шкулĕн çĕрĕнче вырнаçнă. Адресĕ: Воробьев урамĕ, 12-мĕш çурт. Кунта çемйи-çемйипе, класĕ-класĕпе, шкулĕ-шкулĕпе килмелле! Чĕмпĕр чăваш шкулĕ пирĕн халăхшăн Мекка пекех пулмалла!

«Канаш», 2016 ç., 38 №.

# Дементьев министр Алешкин-Саплӑкра ҫуралнӑ



П.В.Дементьев 1929 ҫулта.

Чӗмпӗр кӗпӗрнинче ҫуралса ӳснӗ паллӑ ҫын – Петр Васильевич Дементьев ҫинчен тӗрлӗ хаҫат-журналта, кӗнекесенче халиччен сахал мар ҫырнӑ ӗнтӗ. Вӑл генерал-полковник-инженер ятне илнӗ, нумай ҫул СССР авиаци промышленноҫӗн министрӗ пулнӑ, ӑна икӗ хут СССР Социализмла Ӗҫ Геройӗн ятне панӑ. Ҫаплах ӑна тӑхӑр хутчен Ленин орденӗпе наградӑланӑ, унсӑр пуҫне вӑл Ленин тата Патшалӑх премийӗсене те тивӗҫнӗ. Ытти наградӑсем те пур унӑн: Хӗрлӗ Ялав орденӗ, икӗ Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ, Суворовӑн 2-мӗш пусӑмлӑ тата Кутузовӑн 1-мӗш пусӑмлӑ орденӗсем, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗ тата нумай медаль.

Паян эпир ҫак паллӑ ҫыннӑн йӑх-тымарӗ пирки калаҫасшӑн, ун биографийӗнчи халиччен паллӑ пулман фактсене пӗлтересшӗн. Вӗсене архив докуменчӗсемпе ҫирӗплетӗпӗр.

Халиччен пур ҫӗрте те П.В.Дементьев Тутарстанри Ҫӗпрел районӗнчи  Упи ялӗнче (малтан вӑл Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи Пӑва уесне кӗнӗ) ҫуралнӑ тесе ҫыраҫҫӗ. Анчах Ульяновск облаҫӗн патшалӑх архивӗнче упрӑхларах документ тупӑнчӗ. 1907 ҫулхи метрика кӗнекинчен ҫакӑ паллӑ.



**В.С.Дементьев.**



**Е.Г.Дементьева-Герасимова.**

Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи Пӑва уесне кӗрекен Упи вулӑсӗнчи Алешкин-Саплӑк ялӗнче чиркӳ прихучӗн шкулӗнче учительте ӗҫлесе пурӑнакан Василий Степанович Дементьевӑн (вӑл Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи Чӗмпӗр уесӗнчи Петровка ялӗнче ҫуралнӑ) тата унӑн саккунлӑ арӑмӗн Елена Герасимовнан (Упи вулӑсӗнчи Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнче ҫуралнӑ) 1907 ҫулхи январӗн 24-мӗшӗнче (кивӗ стильпе – январӗн 11-мӗшӗнче) пӗрремӗш ачи – Петр кун ҫути курнӑ. Ачана Упи ялӗнчи чиркӳре шыва кӗртнӗ. Хреснашшӗ Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчен тухнӑ Федор Герасимов (Елена Герасимовнапа пӗртӑван) пулать, ку вӑхӑтра вӑл Хусан кӗпӗрнинчи Козьмодемьянск хулин мещанӗ пулнӑ. Хреснамӑшне вара Упи хӗрне Анна Степановна Дементьевана тӑваҫҫӗ, вӑл Василий Степановичпа пӗртӑван. Петра январӗн 28-мӗшӗнче (кивӗ стильпе) Николай Фиалков священник тата Кузьма Егоров псаломщик шыва кӗртни паллӑ. (Ульяновск облаҫӗнчи

патшалăх архивĕ – УОПА, 4-мĕш фонд, 11-мĕш хушма опись, 152-мĕш ĕç. «Упи ялĕн 1901-1908 çулсенчи метрика кĕнеки».)

Кăштах Упи ялĕ тата Дементьевсен çемйи çинчен калаçар-ха. Историксем палăртнă тăрăх, Упие 1658 çулта никĕсленĕ. 1843 çулта кунта прихут шкулĕ уçăлнă, 1847 çулта вара çулла кĕлтумалли чиркӳ хăпартса лартнă (1881 çулта иккĕмĕш чиркӳ уçнă, анчах вăл чансăр пулнă, унта хĕлле кĕлтунă). Çак çулах ялта пасар ĕçлеме пуçланă, трактир хута кайнă. Упи ялĕ вулăс центрĕ пулса тăрать, унта удел хресченĕсем пурăннă. Кунта чăвашсем, тутарсем, вырăссем пурăннă, темиçе теçетке çемье мордва та пулнă. Упи вулăс центрĕ пулса тăнине кура ку яла Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи ытти уессенчен те халăх пурăнма килме пуçланă. Ытларах пĕчĕк те пĕтсе пыракан ялсенче пурăнакан вырăссем килнĕ.

Степан Игнатьевич Дементьев (министрăн аслашшĕ) çемйи те Чĕмпĕр уесĕнчи Петровка ялĕнчен Упие çапла пырса лекет. Петровка хальхи Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районне кĕрекен Типĕ тата Йĕпе Пăкăрлă ялĕсем таврашĕнче ларнă. Степан Игнатьевичпа арăмĕн ултă ача пулнă: виçĕ ывăл (Михаил, Федор, Василий) тата виçĕ хĕр (Анна, Мария, Варвара). Упире вĕсене çĕр уйăрса панă, вĕсем ир тытăнса каçчен унта тар тăкнă.

Çапла майпа Упие 1885-1890 çулсенче 40 ытла çемье куçса килсе тĕпленнĕ, çĕр илнĕ. Каярах килекенсене вара çĕр паман, вĕсем тĕрлĕ ремеслапа аппаланнă: атă çĕленĕ, кăмака купаланă, пичке тавраш ăсталанă...

Дементьевсен ачисенчен чи хастарри Василий (20.03.1885 – 5.03.1953) пулнă, вăл ялан пĕлӳ илме ăнтăлнă. Вăл 1903 çулта Хурăнвар-Шăхалĕнчи чиркӳ прихут шкулĕнчен икĕ класс пĕтерсе тухать. Çак çулах 18 çулхи çамрăка Алешкин-Саплăк ялне тин çеç уçăлнă шкула

вĕрентме яраççĕ. Ку шкулта Василий Степанович 17 çул вĕрентет, çак хушăра вĕсен çемйи Алешкин-Саплăкрах пурăнать. Малтан (1903-1905 çулсенче) Дементьевсем Андрей Бабайкин хресчен патне хваттере кĕреççĕ. 1905 çулта вара шкул çуртне туса пĕтереççĕ, унта учитель валли хваттер те пулать. Дементьевсем çав хваттере 1905 çулта куçаççĕ, унта 1920 çулччен пурăнаççĕ.

Василий Степанович 1914-1915 çулсенче патша çарĕн ретне тăрса Пĕрремĕш тĕнче вăрçине хутшăнать. Унтан каллех Алешкин-Саплăка таврăнать.

Василий Степановичăн арăмĕ Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи хресчен хĕрĕ – Елена Герасимовна Герасимова пулнă терĕмĕр. Çапла вара Василий Степановичпа Елена Герасимовнан ачисем пурте Алешкин-Саплăк ялĕнче çуралаççĕ: Петр (1907), Евгений (1909), Лев (1912), Людмила (1914), Нина (1917).

Дементьевсенчен пĕри те Упире çуралман: Степан Игнатьевич тата унăн ывăлĕ Василий Степанович Петровка ялĕнче кун çути курнă, Петр Васильевич тата унăн пĕртăванĕсем Алешкин-Саплăкра тĕнчене килнĕ.

Ача чухне Петр çулĕ çитмен пулсан та хăйсен хваттер хуçин ывăлĕпе – Митрофан Бабайкинпа (1905 çулхи) шкула кайкаланă, унпа пĕрле парта хушшинче ларса учитель каласа панине итленĕ.

Çулĕ çитсен вара Петра Упи шкулне вĕренме янă, ку ялта ун аслашшĕпе асламăшĕ пурăннă. Петрăн пĕрремĕш вĕрентекенĕ Александра Афанасьевна пулнă.

Упире 1922 çулта 1-мĕш пусăмлă шкул пĕтерсен Петр Чĕмпĕрти Карл Либкхнет ячĕллĕ профессипе техника училищине вĕренме кĕнĕ (халĕ Сĕве хĕрринчи ку çуртра автомеханика техникумĕ вырнаçнă). Ун адресĕ – Сĕве хĕрри урамĕ (Набережная Свияги), 1/52-мĕш çурт. Вăл Владимир Владимирович Орлов-Давыдов графăн

ремесла училищин тĕп корпусĕ пулнă. Здание 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Роберт Гедике архитектор тата Эрнест Спаннер инженер проекчĕпе революциччен хĕрлĕ кирпĕчрен хăпартса лартнă. Вăл паян та хула илемĕ, хăйнееверлĕхĕпе палăрса тăрать.

1927 çулта Петр Васильевич Чĕмпĕртен тухса каять, Мускаври М. Ломоносов ячĕллĕ механика институчĕн студенчĕ пулса тăрать. Тата икĕ çултан ăна Н.Е.Жуковский ячĕллĕ сывлăш çарĕн инженери академине куçараççĕ. Ăна вăл 1931 çулта ăнăçлă пĕтерет, ун хыççăн пирĕн ентеше граждан сывлăш флочĕн наукăпа тĕпчев институтне ĕçлеме яраççĕ. 1934 çултанпа вăл Хусанти авиаци тата Мускаври самолет тăвакан заводсенче директор пулать. 1941 çулта П.В.Дементьева СССР авиаци промышленность наркомĕн пĕрремĕш çумĕ туса хураççĕ. Çак çулах ăна пĕрремĕш хут СССР Социализмла Ĕç Геройĕн ятне параççĕ. 1946 çултанпа вăл – министр çумĕ. 1953 çултан тытăнса мĕн виличчен вара вăл СССР авиаци промышленноçĕн министрĕ вырăнне йышăннă. 1957-1965 çулсенче авиаци техникин Патшалăх комитетне ертсе пырать. 1938 çултанпа – КПСС членĕ. 1954 çултанпа ăна кашни созывра СССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйлаççĕ. КПСС 19-мĕш съездĕнче вара ЦК КПСС членĕн кандидачĕ пулса тăрать. 20, 22, 23,24,25-мĕш съездсенче Петр Васильевича ЦК КПСС членне суйлаççĕ.

Паян Упи те, Алешкин-Саплăк та, Çĕнĕ Йĕлмел те Тутарстанри Çĕпрел районне кĕреççĕ. Маларах вара пурте Чĕмпĕр кĕпĕрнине кĕнĕ.

Çĕпрел районĕнчен паллă çын сахал мар тухнă. Сăмахран, 1941-1945 çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче паттăрлăх кăтартнăшăн пилĕк çынна Совет Союзĕн Геройĕн ятне панă, икĕ çын – Мухтав орденĕн

тулли кавалерĕ. Мирлĕ вăхăтра Афганистанри талибсен аллине тыткăна лекнĕ хыççăн хăйсен самолетне Раççее хăвса кайма пултарнăшăн Г.Т.Хайруллин Раççей Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ку районта 60 ытла наука докторĕ тата 90 ытла наука кандидачĕ çуралса ӳснĕ. Тĕрлĕ хисеплĕ ят илнисем те нумай. П.В.Дементьев ячĕ вĕсен хушшинче çăлтăр пек çутатса тăрать, уйрăм вырăн йышăнать.

Çĕпрел районĕн хальхи пуçлăхĕ А.В.Шадриков (хăй те Алешкин-Саплăкра çуралса ӳснĕскер) Ульяновск облаçĕнчи патшалăх архивне П.В.Дементьевăн Чĕмпĕрти училищĕре вĕреннĕ тапхăрне пĕлесшĕн пулса ыйтса çыру çырать. Ун ячĕпе 2016 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче патшалăх архивĕ справка (номерĕ – 04-14/259) ярса панă.

Ку справка тăрăх çапла тухать. П.В.Дементьев Чĕмпĕрти Карл Либкнехт ячĕллĕ трактор уйрăмĕллĕ индустри профессипе техника шкулĕнче пĕлӳ илнĕ. Акă 1924 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне хатĕрленĕ вĕренекенсен списокне пăхатпăр. «Список воспитанников Ульяновского профучилища мастеров-техников по состоянию на 15 декабря 1924 года» тенĕ унта. Списокра 126-мĕш номерпе «Дементьев Петр Васильевич» тесе çырнă. Анкетăра ун пирки 1907 çулхи, 1-мĕш пусăмлă шкул пĕтернĕ, РЛКСМ членĕ, хресчен йăхĕнчен тухнă тенĕ. Ăçта пурăннине «интернатик» тесе палăртнă. 2-мĕш Б ушкăнра пурĕ 262 ача вĕренни паллă.

1927 çулхи январĕн 24-мĕшĕнче çырнă списокра Петр Васильевич Дементьев 79-мĕш номерпе тăрать. Унта «национальность» графара «не указан» тенĕ, ашшĕ-амăшне учитель тесе палăртнă.

Çак çулхи апрелĕн 27-мĕшĕнче «В приемную комиссию по отсрочкам. Именной список учащихся Ульяновской

профшколы имени Карла Либкнехта» документра Петр Васильевич Дементьев 172-мĕш номерпе тăрать.

1927 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕнчи документран çакă паллă: кунта ултă ача стипенди илсе тăнă, вĕсем хушшинче Дементьев хушамачĕ те пур. Çакна тепĕр документ та çирĕплетет, акă вăл:

«Удостоверение

Дана настоящая тов. Дементьеву Петру Васильевичу в том, что он действительно за время своего обучения с 1922 г. по 1927 год в Ульяновской Проф-школе имени Карла Либкнехта был все время на Гос-стипендии, как сильно нуждающийся в материальной поддержке и жил в общежитии школы, что и удостоверяется.

Зав. школой

Делопроизводитель».

Ку документа 1927 çулхи августăн 27-мĕшĕнче çырнă. (УОПА, Р-512 фонд, 2-мĕш опись, 4-мĕш ĕç, 322-мĕш лист.)

Тепĕр справка.

«Настоящая справка дана Дементьеву Петру Вас. в том, что он действительно в 1926-27 уч. году окончил Ульяновскую Индустриально-проф-техническую школу, по механическому отделению и после представления отчета трех месячной практике получает звание техника механика в проработке учебного материала. Дементьев был активным.

Школа по общеобразовательным предметам дает знания наравне со школой 2- ступени.

Выдана настоящая для представления в ВЗ.

ВРИД зав. школой

Делопроизводитель».

(УОПА, Р-512 фонд, 2-мĕш опись, 4-мĕш ĕç, 123-мĕш лист.)

Паян Ульяновскра самолетсем тăвакан пысăк завод пур – «Авиастар-СП». Ун çумĕнче 100 пин çын пурăнакан микрорайон ӳссе ларчĕ, эпир ăна Çĕнĕ хула тетпĕр. Анчах нумайăшĕ халĕ те пĕлмест: çак завода тума тытăнма пирĕн ентеш, ун чухнехи авиаци промышленноçĕн министрĕ П.В.Дементьев алă пусса çирĕплетнĕ. СССР Министрсен Совечĕн Распоряженийĕ тăрăх 1975 çулта Дементьев министр «Ульяновскра авиаци промышленноçĕн комплексне тăвасси çинчен» ятлă приказа алă пусать. Пирĕн шутпа, çак завода Ульяновскра туса лартас ĕçре Петр Васильевич сăмахĕ витĕмлĕ пулнă пулмалла. Вăл хăй пилĕк çул вĕренсе пĕлӳ илнĕ, çитĕнсе çын пулнă хулана çапла майпа тав тăвасшăн пулнă пек туйăнать.

Дементьев Хусанти авиазавод директорĕ пулнă вăхăтра та пĕчĕк тăван çĕршывĕ пирки манман, çавăнпа Çĕпрел районĕнче завод филиалĕ туса лартма шухăшлать. Тăван районне геологсене ярать. Анчах лешсем вырăна килсе тĕпченĕ хыççăн унта пысăк юханшыв çуккине, пĕр-пĕр производсто хута яма май килменнине палăртаççĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче совет авиаци техникине аталантарнă, çĕнетнĕ çĕрте Петр Васильевичăн тӳпи питĕ пысăк. Вăрçăн юлашки виçĕ çулĕнче пирĕн çĕршывра кашнинче 40 пин самолет туса кăларнă. Вĕсем нимĕçсен авиацине фронтра тивĕçлипе хирĕç тăнă. Германи вăрçăн юлашки виçĕ çулĕнче 80 пин самолет туса кăларнă, вĕсенчен 75 пинне пирĕн авиаци фронтра аркатнă, çапса антарнă. Вăрçă хыççăн Дементьев вертолетсем тăвассине, сасăран хăвăртрах вĕçекен реактивлă самолетсене хута ярассине пысăк тимлĕх уйăрнă. Шăпах Дементьев ертсе пынипе, пысăк тăрăшулăх хунипе 1960-1970 çулсенче авиаци промышленноçĕ пирĕн çĕршывра малтисен ретне тăрать.

1950-мĕш çулсен вĕçĕнче пирĕн çĕршывра космонавтсен отрядне пуçтарма пуçласан унта Андриян Николаев чăваша кĕртни те ăнсăртран мар ĕнтĕ, кунта авиаци министрĕн сăмахĕ сулмаклă пулни курăнать. Хăй хăш халăхран тухнине манса кайман вăл, чăвашсене пулăшма тăрăшнă. Апла пулсан чăваш тĕнче уçлăхне вĕçсе хăпарнинче те Петр Васильевичăн тӳпи пур.

Пĕрле ĕçлесе курнисем кĕнекесенче çакна палăртаççĕ: П.В.Дементьев питĕ çирĕп кăмăллă çын пулнă, хăй шухăшне хуть кама та калама пултарнă. Ун сăмахне хирĕçлекенсем вара сахаллăн пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем пĕлнĕ: вăл хăй шухăшланине тăватех. Ĕçтешĕсем ăна хăйсем хушшинче ахальтен мар «Петр Великий» тесе ят панă.

Каларăмăр ĕнтĕ, Петр Васильевичăн ашшĕ – Василий Степанович Алешкин-Саплăк ялĕнче пĕрремĕш учитель пулнă. Çавăнпа 1970-мĕш çулсенче çынсем ку ялти шкула В.С.Дементьев ятне парас тесе ĕç пуçарнă, документсем хатĕрлесе районти влаçсене леçсе панă. Митрофан Бабайкин Мускава кайсан хăйĕн ачалăхри юлташĕ – Петр Васильевич Дементьев патне кĕрсе ăна çак ырă хыпара пĕлтерет. Министр ку шухăшпа килĕшет. «Шкула атте ятне парсан патшалăх шучĕпе çĕнĕ çурт тутарма пулăшатăп»,- тет вăл. Анчах районти пуçлăхсем ку пуçаруран шикленсе ӳкеççĕ, ун пек тусан района пысăк çынсем, министрсем килме тытăнаççĕ теççĕ. Вĕсене вара тивĕçлĕ кĕтсе илмелле, пăхмалла, ăсатса ямалла... Вĕсем ку япаларан хăраса ӳкеççĕ, çавăнпа документсене пăрахăçлаççĕ.

Петр Васильевичăн амăшĕ ракпа чирлесе ӳксен вăл ăна сыватма тесе Мускава илсе каять. Анчах чир шала кайнипе врачсем нимĕн те тăваймаççĕ. Вара ывăлĕ амăшне ятарлă самолетпа килне леçме ярать. Сывлăшра

Елена Герасимовна йывăр аптраса ӳкет, çавăнпа самолет Чулхулана васкавлăн анса ларать. Ку хулара Елена Герасимовнан хĕрĕ пурăннă. Амăшĕ çакăнтах вилет, ăна Чулхулара пытараççĕ.

Петр Васильевич Дементьевăн чĕри вара йывăр чире пула 1977 çулхи майăн 14-мĕшĕнче тапма чарăнать. Ăна Мускаври Новодевичье масарне пытарнă.

1977 çулта хăй вилсен ун ятне Мускаври авиаци производство пĕрлешĕвне (малтанхи «Знамя труда» завод) параççĕ. Хусанта тата Кивĕ Çĕпрелĕнче ăна асăнса бронзăран бюст туса лартнă. Хусанта тата Шупашкарта Дементьев урамĕсем пур.

**Валентин МАКАРОВ,**
**Николай ЛАРИОНОВ.**

«Канаш», 2016 ç., 44 №.

# Павел Миронова халалласа – конференци

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче Павел Миронович Миронов математик çуралнăранпа 155 çул çитрĕ. Паллă ентешĕмĕр ячĕпе ноябрĕн 18-мĕшĕнче Тутарстанри Кивĕ Çĕпрелĕнчи таврапĕлӳ музейĕнче конференци иртрĕ. Унта районти вĕрентӳçĕсем, вулавăш ĕçченĕсем, таврапĕлӳçĕсем хутшăнчĕç. Мероприятире çаплах Çĕпрел район администрацинчи культура пайĕн пуçлăхĕ Зульфат Сагдеев тата районти ветерансен канашĕн çыннисем те пурччĕ. Кунта Ульяновск облаçĕнчен те делегаци килсе çитрĕ.

Пухăннисене Çĕпрел район пуçлăхĕн çумĕ Айрат Залялов тата таврапĕлӳ музейĕн директорĕ Радиф Субаев саламларĕç, П.М.Миронов район чапĕ, мухтавĕ пулнине палăртрĕç, ун ĕçĕсем çинче кăштах чарăнса тăчĕç, конференцие йĕркелекенсене тав турĕç.

Çĕпрел районĕн историне çырса 1000 яхăн страницăллă кĕнеке кăларнă таврапĕлӳçĕ, çыравçă – Рафаэль Субаев П.М.Миронов пек çынсем çинчен çамрăксене нумай каласа памаллине палăртрĕ, вăл Тăван çĕршыввăн 40 çул вăй хурса нумай тивĕçлĕ ĕç тунине каларĕ. Ветеран çакăн пек тĕлпулусем çамрăк ăрăва патриотла воспитани пама пулăшаççĕ терĕ. Сăмах май район музейĕнче П.М.Мироновăн пир çине çуллă сăрăпа ӳкернĕ портречĕ упранать, ăна 20 çул ытла каялла Хусанта пурăнакан художник ӳкернĕ.

П.М.Миронов пурнăçĕ тата ĕçĕ-хĕлĕ пирки вара Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи вăтам шкулăн истори тата обществоведени вĕрентӳçи, шкулти таврапĕлӳ музейĕн ертӳçи Геннадий Карсаков тĕплĕн каласа пачĕ, электрон хăтлавĕ ирттерчĕ. Çакна уйрăмах палăртмалла: Геннадий Николаевич çак конференцие хатĕрлесе йĕркелекенĕ тата

ертсе пыраканĕ пулчĕ. Çакăншăн ăна пысăк тав сăмахĕ каламалла. Вăл çак конференци умĕн Павел Мироновичăн паян Çĕнĕ Йĕлмелĕнче пурăнакан пĕртен-пĕр инçетри тăванĕпе – Александра Петровна Мироновапа (1940 çулта çуралнă, ялта ăна Шура акка теççĕ) курса калаçнă, ăна сăн ӳкерттерсе илнĕ. Çаплах ун ашшĕн, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕн – Петр Николаевич Мироновăн (1913-1961) портретне те çынсене кăтартма конференцие илсе пынă. Хăтлавран çакă та паллă: Çĕнĕ Йĕлмелне Ĕпхӳ хулинчен П.М.Миронов ячĕллĕ чăваш вырсарни шкулĕн директорĕ И.Г.Тарасов пуçарнипе икĕ хутчен ушкăнсем килсе кайнă, Павел Миронович çуралнă тăрăхпа паллашнă.

П.М.Миронов ячĕ халăх хушшинче икĕ-виçĕ теçетке ытларах çул каялла кăна сарăлчĕ-ха. Ку ĕçре Ульяновскра 1989 çултанпа тухса тăракан «Канаш» хаçат нумай пулăшрĕ. Тĕрĕсрех каласан – «Канаш» хаçат чухлĕ П.М.Миронов çинчен нимĕнле издани те çырман! Паллă чăваш çинчен çырнă тĕрлĕ статьясене вăл çулсерен пичетлесе пычĕ. Хаçатăн хальхи тĕп редакторĕ Николай Ларионов хăйĕн сăмахĕнче çакăн пирки каларĕ, малашне те ентешĕ пирки çĕнĕ материалсем тупсан вулакансене вĕсемпе паллаштарма шантарчĕ. Çакăнпа пĕрлех Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи шкула П.М.Миронов ятне пама сĕнчĕ. Вăл çаплах Çĕпрел район библиотекине чăваш ялĕнчи шкулсене салатма хăйĕн «Вутхӳре» кĕнекин пĕр пачкине (40 экземпляр) тата ытти сумлă кĕнекесем парнелесе хăварчĕ.

Ульяновск облаçĕнчи чăваш таврапĕлӳçисен ертӳçи Николай Казаков пĕр ялтан тухнă П.М.Миронов кунçулне чылай çул ĕнтĕ çине тăрсах тĕпчет, çак вăхăтра питĕ нумай материал тупнă вăл, вĕсене «Канаш», «Ульяновская правда» хаçатсенче тата «Мономах» журналта пичетленĕ. Çак ĕç малалла пырать. Нумаях пулмасть Николай Александрович патне Казахстанри Павлодар хулинче пурăнакан 81 çулти Людмила Виноградова (ун

амăшĕ Мироновсен йăхĕнчен) çыру çырнă, кунта вăл Павел Мироновича мĕнлерех тăван лекнине ăнлантарнă. Ку çыру пичетленнĕ «Канаш» хаçат номерне пухăннисем интересленсе вуларĕç, темиçе хаçата килне илсе кайрĕç.

Николай Кондрашкин скульптор (Ульяновск) вара конференци тĕлне Çĕнĕ Йĕлмел шкулĕ валли П.М.Миронов барельефне туса хатĕрленĕ. Вăл ăна халăх умĕнче Геннадий Карсакова парнелерĕ. Сăмах май Николай Григорьевич çакăн пек барельефа Ĕпхӳри П.М.Миронов ячĕллĕ вырсарни шкулне парнеленĕ, Ульяновскри 17-мĕш библиотекăна та бюст парнеленĕ.

Çул çӳреме юратакан таврапĕлӳçĕ – Николай Кирюшин та конференцие Ульяновскран пынă. Вăл кунта килнисене хăйĕн çулçӳревĕсем, Ĕпхӳре П.М.Миронов ячĕллĕ вырсарни шкулĕнче пулнă пирки каласа пачĕ, çаплах Раççей империйĕ тата СССР вăхăтĕнчи орденсемпе, медальсемпе паллаштарчĕ. Вăл наградăсене çур зал сарса хунăччĕ, ку та конференцие хăйнеевĕрлĕ тĕс кĕртрĕ.

Çамрăк таврапĕлӳçĕ Любовь Сультеева вара кунта Аслă Нагаткинтан (Ульяновск облаçĕ,Чăнлă районĕ) амăшĕпе пĕрле килнĕ. 6-мĕш класс хĕрачи хăйĕн вăйĕпе математика енĕпе хатĕрленĕ «Калакан цифрăсем» ятлă электрон хăтлавĕ ирттерчĕ, кулленхи пурнăçра математика мĕнле вырăн йышăннине каласа пачĕ. Конференцие çамрăксем хутшăнни ытла та паха, малалла таврапĕлӳ ĕçне шăпах вĕсен илсе пымалла пулĕ.

Алешкин-Саплăк ялĕнчен килнĕ ветеран вĕрентӳçĕ, хисеплĕ таврапĕлӳçĕ, темиçе кĕнеке авторĕ – Валентин Макаров шăпах çакăн пирки калаçрĕ. Хăй паян туса пыракан ĕçсене малашне çамрăксем алла илсен питĕ аван пулĕччĕ терĕ, конференцие йĕркелекенсене, унта хастар хутшăнакансене тав сăмахĕ каларĕ.

«Канаш», 2016 ç., 48 №.

# Афанасьев вӑкӑрсем ӗрчетме тытӑннӑ



Н.В.Афанасьев – 2009 çултанпа хресчен (фермер) хуçалӑхӗн пуçлӑхӗ. Паян вӑл тара илнӗ 700 гектарпа усӑ курать.Унсӑр пуçне 5 гектар ытла хӑйӗн çӗрӗ пур, унта база вырнаçнӑ. Инçех мар – йӗтем. Пӗтӗм çӗрӗн 65 проценчӗ çинче фермер пӗрчӗллӗ культурӑсене ӳстерет, çаплах Сӗве юханшывӗ хӗрринчи хирте курӑк нумай акать, чӗкӗнтӗр туса илет.

Николай Васильевич маларах «Цильнинский» ялхуçалӑх производство кооперативӗнче вӑй хунӑ, председатель çумӗ, агроном тивӗçӗсене пурнӑçланӑ. Каярах çак хуçалӑха хӑй ертсе пынӑ, ӑна чылай çӗкленӗ. Ун тӑ-

рӑшуллӑ ӗҫне Раҫҫей ялхуҫалӑх министерствин Хисеп грамотине парса хакланӑ.

-Услам ҫулӗ ҫине эпӗ 2006 ҫулта тӑтӑм, 2009 ҫултанпа фермер хуҫалӑхне ертсе пыратӑп. Мӗн акса илсен усӑллӑрах пулнине пурнӑҫ кӑтартса пачӗ, ҫавӑнпа ытти культурӑсене акман эпӗ. Утӑ пур, фураж пур – мӗншӗн выльӑх ӗрчетес мар терӗм. Область правительствине выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли бизнес-план хатӗрлесе тӑратрӑм. Кӑҫал мана грант пачӗҫ – 3,5 миллион тенкӗ. Ку укҫапа август уйӑхӗнче Тутарстан Республикине кайса 230-250 кг таякан 30 вӑкӑр туянтӑм, ҫаплах вӗсене хӗлле усрамалли вите тӑррине, утӑ упрамалли ангар тӑррине тимӗрпе витрӗм. Хӗллеччен тата 30 вӑкӑр туянасшӑн, мӗншӗн тесен 60 пуҫран кая пулсан вӗсем хӗлле хӑйсене сывласа ӑшӑтаймаҫҫӗ. Малашне аш-какай туса илес шухӑш пур,- каласа парать Николай Васильевич.

Продукцие сутма вӑл Чӑнлӑ поселокӗнче лавкка тӑвать. Малашне унта яланах аш туянма пулӗ. Ку ял ҫыннишӗн питӗ меллӗ.

Грант илме ҫӑмӑлах пулман, ӑна мӗнпурӗ те облаҫри 7 фермера ҫеҫ панӑ, Чӑнлӑ районӗнчен вара Н.В.Афанасьев – ун пекки пӗччен.

Н.В.Афанасьев хальхи саманара производствӑна тытса тӑма, аталантарма нумай пӗлӳ кирлине лайӑх ӑнланать. Ҫавӑнпа вӑл 1991 ҫулта Ульяновскри ялхуҫалӑх институчӗн агрономи факультетне пӗтернипе ҫырлахман, ун хыҫҫӑн Санкт-Петербург политехника университечӗн дипломне илнӗ. Хусанта ялхуҫалӑх институтӗнче аспирантурӑра вӗреннӗ, 2004 ҫулта наука кандидачӗ пулса тӑнӑ. Район пурнӑҫне те вӑл хастар хутшӑнать, ӑна ҫавӑнпа район совечӗн депутатне суйланӑ.

Хӑйӗн ӗҫченӗсем пирки Николай Васильевич мухтаса ҫеҫ калаҫать, тӑрӑшулӑхӗшӗн мухтать. Зинаида Бакирова, Галина Ендиярова, Оксана Целовальникова, Влади-

мир Семенов, Иван Верхеев, Федор Раимов, Николай, Вячеслав тата Дмитрий Новиковсем хуть мĕнле ĕçе те пурнăçлама хатĕр, нимĕн те уйăрса тăмаççĕ. Утăçи тата тырçи тапхăрĕсенче вăхăтлăха тата 5 çын хутшăнать. Н.В.Афанасьевăн пĕрремĕш пулăшаканĕ вара – Александр ывăлĕ. Вăл кăçал ялхуçалăх академинчен вĕренсе тухнă, унăн специальноçĕ те – ялхуçалăх продукцине ĕçе кĕртесси. Иккĕмĕш ывăлĕ вара – Алексей – 3-мĕш курсра вĕренет, экономика хăрушсăрлăхĕн специалисчĕ пулать. Вăл кăçал утă пуçтарнă çĕрте хăйĕн бригадипе вăй хунă: çынсем тупнă, уттине хиртен турттарнă, шута илсе пынă. Халăха 3 пин те 310 тюк утă сутнă, выльăхсем валли хĕллене 6 пин тюк хатĕрлесе хунă.

Хуçалăх юлашки çулсенче пĕр харăс виçĕ ĕç тăвакан агрегатпа, дискаторпа, культиваторпа, преспа пуянланнă. Кăçал «Беларусь-1221» трактор туянасшăн – техникăна çĕнетмесĕр аталанма çук.

Н.В.Афанасьев ăнăçлă усламçă пулнипе пĕрлех ыттисене пулăшу аллине тăсма та манса каймасть. Ун патне нушапа пынă çынна вăл ăнланать, каялла кăларса яраймасть – кăмăлĕ çапларах унăн. Ялти шкула яланах пулăшу парса тăрать, «Канаш» хаçата халăх хушшинче сарассишĕн тăрăшать. Д.В.Кузьмина 2 томлă чăваш энциклопеди кăларма та укçа-тенкĕ уйăрнă вăл. Тӳрех каламалла, кашни пуçлăх, усламçă ун пек мар. Николай Васильевичран тĕслĕх илмелли пур.

-Патшалăх ял çыннине пулăшма тытăнни – ырă пулăм, грантăн усси пултăр. Йышпа килĕштерсе ĕçлесчĕ. Ывăлăмсем мана ăнланни, хам çумра пулни пысăк шанчăк парать. Вĕсем манăн тĕрек,- тет Николай Васильевич.

Чăнлă районĕ,
Телешовка ялĕ.

«Канаш», 2013 ç., 39№, октябрĕн 3-мĕшĕ.

# Вăкăрсене электрокĕтӳçĕ сыхлать



Н.Салюкин – районта фермер ĕçĕпе аппаланма тытăннă малтанхи çынсенчен пĕри. Вăл хăйĕн хуçалăхне 1992 çултах йĕркеленĕ.

-1990 çулта пирĕн çĕршывра мĕн те пулин тара илсе (аренда) ĕçлеме ирĕк паракан саккун тухрĕ. Эпĕ ун чухне вырăнти колхозра спорт методистĕнче ĕçлеттĕм, маларах икĕ çул клуб заведующинче вăй хутăм. Çапла вара юлташсемпе сысна витине тара илме шутларăмăр. Пирĕн 67 амаччĕ. Пĕрремĕш çулах виçĕ пин тенкĕ тупăш илтĕмĕр – ун чухне хозрасчетпа ĕçлеттĕмĕрччĕ. 1991 çулта вара фермерсем çинчен саккун тухрĕ. Ман хамăн çĕр çинче ĕçлес килетчĕ. Çавăнпа эпĕ тепĕр çултан колхозран заявлени парса тухрăм, хама тивĕçекен çĕр пайне – 3 гектар та 69 сотăй – илтĕм, «единоличник» пулса тăтăм. Хамла паттăрла ĕç тунă пек туйăнатчĕ. Ман çине вара колхозниксем тĕнчен тепĕр вĕçĕнчен килнĕ çын çине пăхнă пек пăхатчĕç. Çĕрне илтĕм-ха, ĕçлеме вара

нимӗнле техника та çук, лаша кӑна. Ял çыннисем те: «Ун патне тарçа каймастпӑр»,-тетчӗç. Мӗн тумалла? Колхозран пай вырӑнне илнӗ вӑрлӑха ĕлӗкхи пек алӑпа сапса акрӑмӑр вӗт. Мӑшӑрӑм, аннепе апай, тӑвансем, ялти пенсионеркӑсем пулӑшма пычӗç. Çапла фермер ӗçне пуçарса ятӑмӑр. Тӗлӗнекенсем те, йӗкӗлтешекенсем те тупӑнчӗç. Ман чунра вара савӑнӑç: эпӗ хам çӗр çинче ӗçлетӗп, хам çӗре – хам хуçа! - каласа парать Николай Иванович.

Çитӗннӗ тыр-пула колхоз комбайнӗсемпе пуçтарса кӗртнӗ. Тухӑçӗ аптраман. Урпа 40 центнер панӑ, пӑрçапа тулӑ та ӑнса пулнӑ. Иккӗмӗш çул фермер çӗр лаптӑкне 19 гектара çитерет. Кредит илсе икӗ трактор туянать.

«Икӗ ывӑл пур-ха, вӗсем хӑçан та пулин ӗçлесе татӗç тесе шутларӑм ун чух. Анчах çулталӑкранах тӳлесе татма пултартӑмӑр»,- тет халь ун пирки кил хуçи.

Тыр-пул сутнӑ укçапа Салюкинсем кашни çул çийӗнчех усӑ курнӑ: ангар, нӳхреп тата ыттине тунӑ. Укçине йӑлтах вӑхӑтлӑ вырнаçтарса пынӑ. Хӑй калашле, çавӑнпа инфляци текен япала (укçа йӳнелсе кайни) çемьене пырса тивмен. Салюкинсем укçа тунӑ та -- çав куннех е тепӗр кун кирлӗ япала туяннӑ.

Кун пирки çемье пуçлӑхӗ çапла калать: «Пуйни мӗнле пулать-ши? Арчара нумай укçа пухни-и е çав укçапа кирлине туса хуни-и? Эпир ятарласа укçа пуçтарассишӗн çеç ӗçлемен».

Пӗлтӗр Салюкинсен аслӑ ывӑлӗ те – 27 çулхи Павел – фермер хуçалӑхӗн пуçлӑхӗ пулса тӑнӑ. Салюкинсем çӗр лаптӑкне 150 гектара çитереççӗ. Кӑçал Павел Николаевича хӑй хуçалӑхне аталантарма облаçран 1 миллион та 200 пин тенкӗ грант панӑ. Унпа çӗнӗ трактор, Саратов облаçне кайса 15 пуç вӑкӑр туяннӑ. Килти вӑкӑрӗ те пур. Вӗсене хӗл каçарасшӑн, кашнине 400 килограма

çитересшĕн – унтан аша пама пулать. Халĕ вăкăрсем хирте. Пĕрре пăхсан – вĕсем ирĕклĕн çӳреççĕ пек туйăнать. Çывăха пырсан куратăн: выльăхсене электрокĕтӳçĕ сыхлать. Çапла, хальхи саманара ун пекки те пур. Тăватă гектар çарана чĕркуççи çӳллĕшĕнче хурçă пралукпа карса илнĕ те ун тăрăх аккумулятортан ток янă. Пралукне çырмари шыв таранах тăснă, унта анса шыв ĕçме пулать. Пĕр вырăнти курăкне çисе ярсан пралукне тепĕр çĕре карса хураççĕ.

-Аккумулятор вăйĕ икĕ эрнене çитет. Вăкăрсене пĕр-ик хут ток çапрĕ те – халь пралука курсанах каялла чакаççĕ. Йытăсем те пыраймаççĕ выльăхсем патне. Питĕ меллĕ, 16 пуçшăн кĕтӳçĕ тытаймастăн вĕт. Тупаймастăн та вĕсене халь,- тет Николай Иванович.

Акă Павел Николаевич ялтан урапаллă тракторĕпе çăнăх, çĕрулми илсе килет. Вăкăрсем трактора курсанах хирĕç каяççĕ, çырмана анса кĕтсе тăраççĕ. Хуçисем выльăхсене хӳтлĕхе апат хурса параççĕ.

-Кунта сементалка тата шурă пуçлă казах ăрачĕсем. Куратăр-и, çăмланса кайрĕç ĕнтĕ. Вĕсене хĕлле те вите кирлĕ мар, хӳтĕ вырăн пулни те çителĕклĕ. Вăкăрсене лайăх ӳсме протеин кирлĕ, вăл пăрçа йышши культурăсенче нумай. Тепĕр çул пăрçапа хутăш урпа акма шутлатпăр, ун пек тусан пăрçа выртмасть, пуçтарма меллĕ,- ăнлантарать Николай Иванович.

Хальлĕхе вара Салюкинсем ытларах ир пулакан çĕрулми акса тупăш кураççĕ. Тăватă гектар çинчи сĕлĕ те 30 центнершар панă. Тракторĕсемпе, комбайнĕсемпе Салюкинсем хăйсемех ĕçлеççĕ -- çынсене тара тытма йывăр теççĕ.

-Кунне пин тенкĕ тӳлетпĕр, укçине кашни кун паратпăр. Анчах 1-2 кун ĕçлесе пăхаççĕ те – виççĕмĕш кунне килмеççĕ, лавкка умне сăра ĕçме каяççĕ. Укçа

сахал тӳлетĕн тесе те каламаççĕ -- ĕçлес килмест. Çавăн пек çынсемех районти социаллă хӳтлĕх комитетне, район пуçлăхĕ патне пулăшу ыйтма çӳреççĕ,- тет çемье пуçлăхĕ.

Кăçал Николай Иванович хăй хуçалăхне хут çинче пĕтересшĕн те пĕтĕм çĕрне ывăлĕ çине куçарасшăн.

-Икĕ хуçалăх валли икĕ бухгалтери илсе пыма йывăр. Мĕн тума нушаланмалла-ха ун пек? Эпир пурĕпĕр пĕрле вăй хуратпăр вĕт, пĕр ĕç тăватпăр,- тет вăл.

Чăнлă районĕ,
Пухтел ялĕ.

«Канаш», 2013 çул, 48№.

# Икĕ сехетре тăрсах пăрусем патне васканă



З.Н.Амосова сакăр класс пĕтерсенех колхоз фермине пăру пăхма кайнă. Ку 1969 çулта пулнă. Пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ вара ун 40 çул.

-Марье акка сысна ферминче ĕçлетчĕ, шкулта вĕреннĕ чухнех ăна пулăшма çӳреттĕм, вите урайĕсене çăваттăм,- аса илет Зинаида Николаевна. –Выльăхсене юрататтăм. Çавăнпа шкул хыççăн тӳрех фермăна килтĕм. Çамрăксем нумайăн ĕçлетчĕç кунта, ларутăру хаваслăччĕ. Пĕр-пĕринпе ăмăртмалла ĕçлеттĕмĕрччĕ. Ирхине икĕ сехетре тăрса колхоза васкаттăмăрччĕ, каçпа хатĕрлесе хăварнă апата валеçеттĕмĕр. 6-7 сехетре киле таврăнаттăмăр – хăш-пĕри вăранман та-ха. 8-9 сехетре тепре каймалла. Хиртен лашапа улăм, утă илсе килмелле. Лаша лавĕсем урам тăршшĕпех тăсăлатчĕç. Пăрусем валли апат илме пысăк черет тăраттăмăрччĕ. Шăннă чĕкĕнтĕре лашапа запарника тиесе килеттĕмĕр, чана пушататтăмăр. Унтан çăра апата лаша лавĕ çинчи пичкене витрепе тултараттăмăр, витене кайса каллех витрепе валеçсе параттăмăр. 12 сехетре киле килеттĕмĕр, 14 сехетре – татах колхоза. 17-18 сехетре ĕç кунĕ вĕçленетчĕ.Ун чухне мĕнпур ĕçе алăпа тунă. Ураран ată кайман — çулла та, хĕлле те.

Мĕнле йывăр ĕçлесен те хĕрсем клуба тухмасăр юл-

ман – пурте çамрăк-çке. Урам тăрăх алла-аллăн тытăнса юрăсем шăрантарнă. Киле килсе 2-3 сехет кăт пулса илнĕ хыççăн каллех колхоза васканă.

1973-76 çулсенче Зинаида Николаевна сыснасем патĕнче вăй хурать.

-Ача çуратнă кун та ĕçе кайрăм-ха, отпускра ларман. Çăнăх миххисене хырăм çине хурса йăтса лав çине тиеме тытăнтăм. Н.Выселкин кладовщик чăтса тăраймарĕ – алăри миххе туртса илчĕ те веçех хăй тиесе пачĕ. Çав каçах мана пульницана илсе кайрĕç. Тăвата кунран çуратса килтĕм те çав кунах каллех ĕçе кайрăм, -каласа парать З.Н.Амосова.

Тăрăшуллă ĕçе пуçлăхсем асăрханă ĕнтĕ: çамрăк хĕрарăма 1984 çулта коммунистсен ретне илеççĕ. Районти конференци ĕçне те хутшăннă вăл. 1989 çулта «Социализмла ĕç ударникĕ» ят илме те тивĕçлĕ пулнă.

Чăнлă районĕнчи Çĕнĕ Улхаш каччипе Анатолий Французовпа пĕрлешсен ку ялта виçĕ çул пурăнаççĕ вĕсем. Унта Зинаида Николаевна (вăл ЗАГСра хут пĕтернĕ хыççăн та хĕр хушаматнех хăварнă) бригадăри тĕрлĕ ĕçсене хутшăнать. Кайран вĕсем Çĕнĕ Йĕлмелне пурăнма куçаççĕ. Иккĕшĕ те каллех фермăна пĕчĕк пăрусем патне ĕçлеме каяççĕ. Зинаида Николаевна темиçе çултан сăвакан ĕнесем патне куçать, вунă çул учетчица-лаборанткăра вăй хурать. 2009 çулччен тăрăшать кунта вăл, анчах чире пула пăрахма тӳрĕ килет. Анатолий Николаевич вара лашапа çӳретчĕ юлашки вăхăтра. Шел, пĕлтĕрхи август уйăхĕнче сарăмсăр вилсе кайрĕ. Пурăнмаллаччĕ-ха, пенсие те кайманччĕ... Вĕсем пĕрле пулни 35 çулччĕ.

Зинаида Николаевна паян Марье аккăшĕпе тата Анатолий ывăлĕпе (вăл вырăнти хуçалăхри ĕне витинче операторта тăрăшать) пĕрле пурăнать. Çын татăлмасть

вĕсен килĕнчен, тăванĕсем, вĕсен ачисем тăтăшах пырса çӳреççĕ, ял-йыш та час-час кĕрсе тухать. Амосовсем пурне те тараватъ. Чун ăшшине çынсене парнелеççĕ вĕсем, кашнине мĕнпе те пулин пулăшма тăрăшаççĕ.

Вĕсене эпĕ хамран та тав сăмахĕ каласшăн. Пирĕн ырă кӳршĕсем вĕсем. Анне ялта пĕччен пурăннă чух ун патне тăтăшах пырса çӳретчĕç, пулăшатчĕç. Вилсе кайсан вара 40 кунччен пирĕн çурт пушă ан лартăр тесе улшăнкаласа унтах выртса тăчĕç. Çур çулне асăнма та хăйсем патĕнчех хатĕрленсе çынсене пуçтарчĕç. Мĕнпур ĕçе хăйсем çине илчĕç. Ун чухне урамра шартлама сивĕччĕ, хамăр килте хатĕрленме май çукчĕ. Ырă ĕçшĕн тавах вĕсене! Пурне те çакăн пек лайăх кӳршĕсемпе пурăнма сунатăп!

Зинаида Николаевна февралĕн 10-мĕшĕнче 60 çул тултарать, ăна çак ятпа саламласа ырлăх-сывлăх сунас килет. Чун ăшши нихçан та ан иксĕлтĕр!

Çĕпрел районĕ.
Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ.

«Канаш», 2014 ç., 5 №.

# Ачасем савăннине курсан хамăр та савăнатпăр

Пĕртăван Майрабеевсен ячĕсем юлашки çулсенче пĕтĕм чăваш тĕнчине сарăлчĕç темелле. Георгийпа Петр Васильевич тăван ялĕнче – Кивĕ Улхашраултă хут ачасем валли кĕрешӳ турнирĕ ирттерчĕç ĕнтĕ. Унта кашни çул Раççейĕн тĕрлĕ регионĕсенчен нумай çамрăк килет.



Мĕн хистет-ха пĕртăвансене çакăн пек пысăк тăкак курма? Вĕсен хăйсен çемйисем те, ачи-пăчи те пур вĕт. Ытлашши укçа никамăн та çук ĕнтĕ. Вĕсем вара пысăк тăкак кура-кура пурпĕрех тытăннă ĕçе малалла тăсаççĕ.

-Эпир ялта сакăр ачаллă çемьере ĕçпе пиçĕхсе ӳснĕ. Пĕчĕк чухне ачана тĕрлĕ енчен пулăшу кирлине лайăх ăнланатпăр. Хамăр çакăн урлă тухрăмăр. Шкултах кĕрешӳпе аппаланма пуçларăмăр, каярах Раççей шайĕнчи ăмăртусене те çӳрерĕмĕр. Халĕ эпир çителĕклĕ

пурнăçпа пурăнатпăр ĕнтĕ, çавăнпа спортра пĕрремĕш утăмсем тăвакан ачасене май çитнĕ таран пулăшас кăмăл пур. Хамăр нацие малашне мăнаçлă та вăйлă курас килет. Çынна панипе çука юлмастăн, çынна пани сая каймасть вăл. Усă пултăр тесе тăрăшатпăр. Ачасем ку пурнăçра йăнăш çулпа ан кайччăр, тĕрĕссине тупчăр тетпĕр. Вĕсем халех ăнланччăр: тăрăшсан, тар юхтарсан çеç пысăк çитĕнӳсем тума пулать. Хăйпе хăй çӳлтен нимĕн те ӳкмест. Çавăнпа çамрăксене парнесем, медальсем парса хавхалантаратпăр. Вĕсен савăнăçне курсан хамăр та савăнатпăр. Хамăр ачасене хамăр пулăшмалла ĕнтĕ. Çамрăк ăру спортпа çывăх та сывлăхлă пултăр, чăваш наци культурине аталантартăр, - каласа парать Георгий Васильевич.

Вăл халĕ Ульяновскра «Авто-Форум» обществăн пуçлăхĕ, кунта строительство ĕçĕсем илсе пыраççĕ. Петр Васильевич вара çакăнтах маçтăрта вăй хурать.

Ку обществăра 50 çын ытла ĕçлет, паян вĕсенчен 28-шĕ Йошкар-Ола (Мари Эл Республики) хулинче нумай хутлă çурт хăпартаççĕ.

-Малтан ĕç калăпăшĕ пысăках марччĕ, яланах хам шыраттăмччĕ. Халĕ хама тупакан та пулчĕç, хăйсем килеççĕ, мĕншĕн тесен пĕр-пĕринчен ыйтса пĕлеççĕ, ĕç пахалăхĕпе интересленеççĕ. Пĕр çĕрте начар ĕçлесе хăварсан сана тепрехинче никам та шырамасть. Çавăнпа та хамăр «маркăна» тытма тăрăшатпăр, - тет ертӳçĕ.

Хăйĕн пĕрремĕш фирмине Георгий Васильевич 1997 çултах уçнă, алăксем, чӳрече хашакĕсем (рамăсем) туса кăларнă. Каярах вăл Тольяттире «Риф» фирмăна ертсе пырать. Çемьерен уйрăлса сакăр çул хушши эрниэрнипех кӳршĕ облаçра пурăнма тивет. Паллах, тăтăш çывăх çынсенчен уйрăм пурăнма йывăр ĕнтĕ. Çавăнпа вара 2009 çулта Георгий Васильевич Ульяновска пуçĕпех таврăнать.

1996 çулта Георгий Васильевич Патăрьел районĕнчи Анат Тăрмăш ялĕнче çуралса ӳснĕ Раисăпа паллашать, 1997 çул пуçламăшĕнче вĕсем туй тăваççĕ. Раиса Семеновна пилĕк ачаллă çемьерен, чи кĕçĕнни. Кӳкеçри «Паха тĕрĕ» фабрикăра 4 çул çĕвĕçĕре ĕçленĕ хыççăн 1995 çулта пирĕн тăрăха килет, садикра вăй хума пуçлать. Вăл 19 çул çак ĕçре ĕнтĕ.

Вĕсен икĕ ача ӳсет: хĕрĕ 9-мĕш класа каять, ывăлĕ 5 çулта. Алена шкултa лайăх вĕреннисĕр пуçне обществăлла пурнăçа та хастар хутшăнать. Вăл 2012 çулта облаçри «Чăваш ачи, сассуна пар» конкурса хутшăннă, пĕлтĕр вара облаçри «Сарпике» конкурсра «Çепĕç пике» номинацире çĕнтернĕ. Чăваш чĕлхи олимпиадине хутшăнса 2-мĕш вырăн йышăннă. Çаплах вăл 5-мĕш ача-пăча пултарулăхĕн центрĕнче «Звонница» ушкăнра юрлать. Пушă вăхăтра конькипе ярăнма юратать. Артем вара чăваш юрăçин А.Шадриковăн «Ах, чĕрем, чĕрем» юррине пĕлет, ыйтсан тӳрех юрласа кăтартать. Тăван чĕлхе ку çемьере хисепре, килĕнче те чăвашла калаçаççĕ.

Майрабеевсем — меценатсем: кама кăна пулăшмаççĕ вĕсем! Вĕсен парнисемшĕн иртекен турнир кăна мĕне тăрать! Чăваш тĕнчинче ун пекки урăх çук-ха! Мускавра пĕртăван Знаменскийсен çăмăл атлетика ăмăртăвĕ пур, чăвашсен – Майрабеевсем ирттерекенни. Кашни çул унта Атăлçи тăрăхĕнчи ял-хуларан 200 ытла ача килет. Вĕсене тата тренерсене, хăнасене — 250 çын – пурне те апатлантараççĕ унта, мĕн чухлĕ парне параççĕ тата! Тăван шкулне кашни çул мĕн те пулин парнелеççĕ, кăçал – велотренажер. Турнир ирттерме мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ кайнине хăйсем кăна пĕлеççĕ. Çулсерен çак куна пĕтĕм ял халăхĕ кĕтсе тăрать, мĕншĕн тесен каç енне Шупашкар артисчĕсем Кивĕ Улхаша килсе тӳлевсĕр концерт кăтартаççĕ. Паллах, тăкакне Майрабеевсем хăйсем çине илеççĕ.

УОЧНКА ирттерекен уявсем, конкурссем те Майрабеевсем пулăшмасăр пулмаççĕ. Вырăнти çыравçăсене чăваш кĕнекисем кăларма та пулăшаççĕ вĕсем.

Майрабеевсем пек пултаруллă, ăслă, ырă кăмăллă çынсем чăвашсен хушшинче нумайрах пулсан эпир чылай малалла кайма пултарăттăмăр. Вĕсенчен тĕслĕх илекенсем ытларах пулччăр!

«Канаш», 2014 ç., 17 №.

# Водительсене çӳреме вӗрентет



А.Ф. Дунаев Аслӑ Нагаткинти технологипе сервис техникумӗнче (маларах вӑл СПТУ пулнӑ) 28 çул вӑй хурать ӗнтӗ. 52 çулта кӑна пулин те вӑл икӗ çул каялла стажпа тивӗçлӗ канӑва тухнӑ. Çаплах Раççей Федерацийӗн ӗç ветеранӗ ятне илнӗ.

Ӗçӗ вара ун çӑмӑл мар – производство вӗрентӗвӗн маçтӑрӗ. Урӑхла каласан автомобиль водителӗсене çул çинче пӗрремӗш утӑмсем тума, çӳреме, юсама вӗрентет вӑл, практика ирттерет.

-Эпир кунта В тата С категориллӗ шоферсене хатӗрлетпӗр. Машинӑпа ху çӳресси – пӗр япала, çӳреме вӗренекенсем çумӗнче хӑраса ларса пырасси – пачах урӑхла. Çӳç вирелле тӑрать хӑш чухне – тем хӑтланакансем те пур. Çамка çине шултра тар пӗрчисене кӑлараççӗ. Кювета та сиктернӗ мана, юпа çумне те пырса çаптарнӑ… Мыскарасем кӑтарткаланӑ. Ахальтен çӳç кӑвакарма тытӑнман ӗнтӗ, - тет Анатолий Федорович шӳтлерех хӑй ӗçӗ пирки.

Нумай ачаллӑ çемьере çуралса ӳснӗ вӑл, çамрӑклах колхоз ӗçне хӑнӑхнӑ, техника çумне çыпӑçнӑ. Салтакра Оренбург облаçӗнче автомашинӑпа çӳренӗ, хӑйне пур енчен те лайӑх кӑтартнӑшӑн çакӑнта «Отличник Советской армии» кӑкӑр паллине тивӗçнӗ. Каярах ӑна шӑпах

çакă Раççей шайĕнчи ĕç ветеранĕн ятне илме пулăшнă – вăл патшалăх награди шутланать.

Салтакран тăван ялне – Çĕнĕ Йĕлмелне таврăнсан А.Ф.Дунаев Тутарстанри Кивĕ Çĕпрелĕнче кислород баллонĕсен операторĕнче (ку специальноçа вĕренме ăна хăй вăхăтĕнче ятарласа Одессăна яраççĕ) тăвата çул ĕçлет. 1987 çулта вара вĕсем мăшăрĕпе Аслă Нагаткина куçса килеççĕ. Иккĕшĕ те 24-мĕш номерлĕ СПТУна ĕçе кĕреççĕ.

Техникăпа çӳреме, ăна юсама вĕрентнисĕр пуçне Анатолий Федоровичăн тепĕр тивĕçĕ – вĕренекенсем хушшинче пултаруллăраххисене тупса палăртасси, вĕсене тĕрлĕ конкурссене хутшăнма хатĕрлесси. Вăл хатĕрленĕ çамрăксем Раççей шайĕнчи ăмăртусенче те пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Сăмахран, 2007 çулта ун водителĕ конкурсра мала тухнă. 2013 çулта вара Саранскра иртнĕ сухалакансен конкурсĕнче вăл хатĕрленĕ çамрăк тракторист 2-мĕш вырăн йышăннă. Уншăн вĕрентекенĕ Мордови Республикин ялхуçалăх министерствин Тав çырăвне тивĕçнĕ. А.Дунаев хăй те конкурссенчен пăрăнса тăмасть, ун ĕçĕ çапларах – çынсене вĕрентес тесен хăвăн ăсталăхна ялан ӳстермелле. 2011 çулта вăл «Мастер – золотые руки» конкурсра çĕнтернĕ. Ун сăнӳкерчĕкĕ Хисеп хăми çинче 4-5 çул çакăнса тăнă. Ульяновск облаçĕнчи вĕренӳ министерствин Тав çырăвĕ те пур унăн.

Анатолий Федорович – тĕслĕхлĕ çемье пуçĕ. Мăшăрĕ Вера Николаевна техникума килнĕренпех бухгалтерта ĕçлет – ертсе пыракан специалист. Вĕсем икĕ ывăл çуратса тивĕçлипе çын çине кăларнă. Асли – Андрей ачаранпах кĕрешӳ турнирĕсене хутшăнса çĕнтеретчĕ. Вăл кĕрешнине эпир пĕрре мар курнă. Профессине те спортпа çыхăннинех илнĕ,召 пединститутра физкультура

факультетне пĕтернĕ. Суд приставĕнче ĕçлет пулин те юратнă ĕçне пăрахмасть, ачасене кĕрешме вĕрентет. Хăй ку енĕпе спорт маçтăрĕн кандидачĕ. Алексей вара Мускавра пурăнать, полици ĕçченĕ, лейтенант.

Дунаевсем ваттисене хисеплени те мухтава тивĕçлĕ. Амăшĕ вилнĕ хыççăн вĕсем пĕччен юлнă ашшĕне – Аслă вăрçăн 2-мĕш ушкăнри инвалидне – ялтан илсе килеççĕ. 89 çулхи Федор Кириллович 10 çула яхăн ĕнтĕ кĕçĕн ывăлĕпе кинĕ килĕнче лăпкă та канлĕ пурнăçпа пурăнать. Ун пысăк çуртра хăйĕн уйрăм пӳлĕмĕ. Мĕн кирлĕ – веçех пур. Чăвашсен авалхи йăлипе вăл кĕçĕн ывăлĕпе пĕрле кун кунлать.

Çимĕк умĕн вара Дунаевсем Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи масара илем кӳчĕç, ял халăхне тĕлĕнтерчĕç: амăшĕн вилтăпри çине 10 метр çӳллĕш часавай лартса хучĕç. Ун пекки ку масар çинче никамăн та çук-ха. Ку ĕçре те Анатолий Федорович хăйĕн пысăк тӳпине хывнă.

Чăнлă районĕ.

«Канаш», 2015, 22 №.

# Турă çулне суйласа илнĕ

Николай Дунаев Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмелĕнче (Тутарстан) пысăк çемьере çуралса ӳснĕ, вĕсен 7 ывăл та пĕр хĕр.



Ашшĕ – Федор Кириллович – 1926 çулхи, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕ, 2-мĕш ушкăн инваличĕ. Ĕмĕрне тăван колхозра ĕçлесе ирттернĕ. Халĕ Аслă Нагаткинта пурăнать. Амăшĕ – Любовь Федотовна – 1923 çулхи, вăл çамрăк чухне Кивĕ Чукалти МТСра трактористсемпе комбайнерсен звеньевойĕнче ĕçленĕ, кайран – вырăнти колхозра. 85 çулта çĕре кĕнĕ.

Николай çемьере тăваттăмĕш ача, 1956 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче çуралнă. Вăл 6-7 çултах Раштав уявĕсенче кӳршисем тата тăванĕсем патне пырса тропарь, кондак юрланă, аслисене савăнтарнă. Ăна тĕн енĕпе кукашшĕ – Мискин Эття (Федот) вĕрентсе пынă. Вăл хăй те çамрăк

чухне чиркӳре юрланӑ пулнӑ.

Пӗчӗк Кольӑна мӑнаккӑшсем пысӑк уявсенче – Раштавра, Крещенкере чиркӗве илсе ҫӳрекеленӗ. Ҫапла ача тӗн йӗркине хӑнӑхса пынӑ.

-7-мӗш класран пуҫласа вара эпӗ мӑнаккасемпе пӗрле Чӑваш Енри Патӑрьел районӗнчи Тӑрӑн ялӗн чиркӗвне ҫӳреме пуҫларӑм. Пирӗн ялтан унта ҫитме – 60 ҫухрӑмран кая мар. Ирхине 3-4 сехетре вӑранса ҫула тухаттӑмӑрччӗ, ҫуран утса 17 сехете каҫхи кӗлле ӗлкӗреттӗмӗрччӗ. Мӑнкун каҫӗсенче эпӗ Евангели вулаттӑмччӗ, Христос нушисене чӗре витӗр кӑлараттӑмччӗ. Куҫран куҫҫуль тухатчӗ вара. Ман анне енчи тӑвансем – Турра хытӑ ӗненекен ҫынсем. Вӗсем мана кивӗ кӗнеке – Евангели пачӗҫ, ӑна эпӗ паян та упратӑп. Кукамай – Евдокия Тихоновна (ялта ӑна Алтатти тенӗ) – мана священника вӗренме ярасшӑн пулчӗ, ун пирки темиҫе хут та каларӗ. Ку вӑхӑта вӑл, шел, кӗтсе илеймерӗ, 90 ҫула ҫитсен вилчӗ,- каласа парать Николай атте.

Николай – священник пулса тӑриччен салтака кайса килет, Госстрах тытӑмӗнче вӑй хурать, Хусанти финанс техникумӗнче пӗлӳ илет. Ҫак вӑхӑтра авланать. Кайран 1983-85 ҫулсенче тӑван колхозра заправщикра, ферма заведующинче, склад заведующинче ӗҫлет. Мӑшӑрӗпе – Галина Николаевнапа – хӗрпе ывӑл ҫуратаҫҫӗ вӗсем.

1985 ҫулта Дунаевсен ҫемйи Ульяновска куҫса килет, иккӗшӗ те Баратаевкӑри «Тепличный» хуҫалӑха ӗҫлеме кӗреҫҫӗ. Часах вӗсене общежитире икӗ пӳлӗм параҫҫӗ.

-Ульяновскри Мостовая поселокӗнчи чиркӳ настоятелӗ – Владимир атте (Владимир Быков) – ман виҫҫӗмӗш сыпӑкри тӑван. Вӑл манран ҫулпа кӗҫӗн пулсан та ку ӗҫе ҫамрӑклах тытӑннӑ. Эпӗ ун патне чиркӗве кӗлле ҫӳреме пуҫларӑм, вӑл мана нумай япала вӗрентрӗ. Мӑнаккасем

мана Библи тата часослов кĕнекисене пачĕç. Çапла хуллен вĕсене вулама тытăнтăм.

1990 çулта эпĕ инкеке лекрĕм, хырăма хытă ыраттартăм. Ульяновскри пульницара мана операци турĕç – анчах эп ниепле те ура çине тăраймастăп. Тепĕр операци тăвасран шикленсе эпĕ Турăран пулăшу ыйтма пуçларăм. «Эпĕ Сан çулупа пыратăп, мана сывалма пулăш, инкекрен хăтар,тархасшăн, Турăçăм! Сывă юлсан пĕтĕм укçана ялти чиркĕве тунă çĕре панă пулăттăм»,-тесе калаттăмччĕ. Мăшăра тата йăмăк упăшкине Георгие ман кравать умĕнче Евангели вулама ыйтрăм. Вĕсем çĕрĕпе выларĕç. Ир енне вара мана çăмăлрах пулчĕ.

Кăштах вăхăт иртнĕ хыççăн чĕрĕлтĕм темелле, вара ĕçрен хам ирĕкпе тухрăм та яла кайса чиркӳ валли темиçе пин укçа патăм. Турă умĕнче панă сăмаха тытрăм,- аса илет вăл йывăр вăхăтсене.

Çакăнтанпа вăл пурнăçне йăлтах улăштарма шутлать, кукамăшĕ каланă пек, священник пулма тĕв тăвать,Турă çулне суйласа илет. Николай амăшĕ пил панипе Шупашкарти епархие çул тытать. Варнава владыка унпа тĕплĕн калаçать те çамрăк çынна Çĕмĕрле хулине ярать – Серафим Соровский храмĕн настоятелĕ патне. Кунта ăна Силуан игумен тĕн тата кĕлĕ йĕркисене нумай вĕрентет. Николай алтарьте хорта юрлать.

1992 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче вара, Варфоломейпа Варнава апостолсен кунĕнче, Николай диакон санне илет. Тепĕр эрнерен священнослужитель санне те параççĕ. Вара ăна 1992 çулхи августăн 1-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Пăлапуç-Пашьелĕнчи чиркӳ прихутне ĕçлеме яраççĕ.

Кунта çамрăк священник 1993 çулхи августра çĕнĕ пысăк храм туса лартать – çичĕ куполпа. Чиркĕве уçма Варнава владыка та килет, унпа пĕрле – нумай священ-

ник. Ялта ун чухнехи пек нумай ҫын пуҫтаръннине никам та астумасть. Николай атте кунти пахчара улма-ҫырла, нумай чечек ӗрчетсе ярать. Ҫакна курма ачасем шкулсенчен экскурсие килме тытӑнаҫҫӗ. Вӑл уҫнӑ вырсарни шкулӗнче 20 ача вӗренме пуҫлать. Вӗсене Николай атте сӑваплӑ вырӑнсене илсе ҫӳрет: Сергиев Посад, Дивеево, Шупашкар...

1997 ҫулта ватӑ тата вӑйсӑр ҫынсем валли чиркӳ ҫумӗнче кирпӗчрен 24 вырӑнлӑ Ырӑлӑх ҫурчӗ туса хураҫҫӗ. Унта 12 пӳлӗм, туалет, ваннӑй. Ӑна уҫма та Варнава владыка килсе ҫитет. Кунта ватӑсем тата икӗ хӗрарӑм хӑйсен ачисемпе пурӑнма тытӑнаҫҫӗ – пурӗ 17 ҫын. Вӗсем валли апат кирлӗ, ҫавӑнпа чиркӳ ҫумӗнчи 25 сотӑй ҫӗр ҫинче пахча ҫимӗҫ туса илеҫҫӗ, ҫаплах икӗ ӗне, сыснасем, чӑх-чӗп усраҫҫӗ.

2008 ҫулта вара Николай аттене Комсомольски районӗнчи Шурут ялне куҫараҫҫӗ, Варнава владыка ӑна хӗрарӑмсен мӑнастирне хӑвӑртрах туса пӗтерме ыйтать. Кунта вӑл строительство валли тӗрлӗ хуласенчен питӗ нумай материал кӳрсе тултарать, тӗп хапха туса лартать, территорие хӳмепе пӳлсе илет.

Ҫак ҫулхи ноябрӗн 20-мӗшӗнче вара Николай аттене Канаш районӗнчи Кӗҫӗн Кипеч ялӗнчи чиркӗве ӗҫлеме яраҫҫӗ. Кунти ылтӑн тӗслӗ куполлӑ илемлӗ храма Мускавра пурӑнакан Ю.Н.Петров подполковник (ҫак ялта ҫуралса ӳснӗскер) тӑрӑшнипе хӗрлӗ кирпӗчрен туса лартнӑ.

-Йӗри-тавраri ӗҫсене вӗҫлерӗмӗр, 1000 тӑваткал метр брусчатка хутӑмӑр, 100 туя йывӑҫҫи тата нумай улма йывӑҫҫи лартрӑмӑр. Вырсарни шкулӗ уҫрӑмӑр. Тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн 2013 ҫулта пире, пилӗк ҫынна (ҫав шутра хамӑн ывӑл Петр та), Ю.Н.Петров Иерусалим хулине кайма тӳлевсӗр путевка пачӗ. Халӗ кунта храм ҫӗрне

тата 25 сотăй ӳстертĕмĕр, йывăç çурт туса лартрăмăр. Малашне унта ăшă теплица ăсталаса хурас шухăш пур. Халĕ эпир храм çумне тепĕр чиркӳ çĕклеме тытăнтăмăр – çыпăçтарса тунă брусран. Вăл Мускав Матрони ячĕпе пулĕ. Çитес çулхи майăн 2-мĕшĕнче чиркĕве уçма палăртатпăр. Малтан кунта чиркĕве çӳрекен халăх сахалччĕ, халĕ нумайланса пырать. Шупашкар, Чĕмпĕр, Канаш хулисенчен те, ытти çĕртен те килеççĕ. Храмра 27 сăваплă çыннăн çĕрмен ӳчĕн пайĕсем упранаççĕ, вĕсем çынна вăй-хăват параççĕ, чирлисене пулăшаççĕ. Çаплах кунта православи библиотеки пур, унта 900 кĕнеке ытла. Пирĕн храм алăкĕсем яланах уçă. Килĕр.Турăпа пĕрле пулăр, тĕн йăли-йĕркине тытса пыма вĕренĕр. Эпĕ Чĕмпĕрти чиркӳсене та пыркаласа çӳретĕп, кĕлĕсене хутшăнатăп.

Халĕ Раштав типпи пырать, çавăнпа та типĕ тытма тăрăшăр, çылăхсенчен сыхланăр, чунăрсене усал-тĕселтен тасатăр. Сирĕн чунăрта яланах Турă пултăр!- терĕ Николай протоиерей.

**Анатолий ДУНАЕВ.**
**Николай ЛАРИОНОВ.**

**А.Дунаев сăнӳкерчĕкĕ.**

«Канаш», 2016 ç. 50 №.

# Чăвашсем мĕншĕн сахалланнă

Г.И.Комиссаров, С.А.Токарев, В.Ф. Каховский тĕпчевçĕсем çирĕплетнĕ тăрăх,1826 çулта Хусан кĕпĕрнинче тутарсен шучĕ 136 пин те 470 çын пулнă, чăвашсем вара – 371 пин те 758. Тепĕр 71 çултан пачах урăхла пулса тухнă. 1897 çулхи çырав тăрăх, тутарсем 744 пин те 267 çынна çитнĕ, чăвашсем вара 513 пин те 44 çынна çеç. Ку çакна кăтартать: чăвашсен шучĕ 1,4 хут ӳснĕ, тутарсен – 5,5 хут. Чăвашсемпе тутарсен пĕтĕмĕшле шучĕ вăтамран 2,5 хут ӳснĕ. Икĕ халăх шучĕ пĕр тикĕс ӳссе пынă пулсан чăвашсен шучĕ вăтамран 929 пин çын пулатчĕ, тутарсен шучĕ вара – 341 пин.

Апла пулсан çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пулать: 71 çулта Хусан кĕпĕрнинчи 400 пин чăваш тутара тухнă. Ун пеккисем ытти çĕрте те пулнă.

Вăтам Атăл тăрăхне илсен вара картина çапларах. Хусан, Чĕмпĕр, Самар кĕпĕрнисенче 1834 çулта 414 пин те 700 пин чăваш, 616 пин те 200 тутар пулнă. 1897 çулта чăвашсен шучĕ 753 пин çынна çитнĕ, тутарсен вара – 1 миллион та 69 пин те 200 çынна. Историксемпе демографсем (В.Д. Димитриев, В.М.Кабузан тата ыттисем) тутарсен шучĕ вĕсен енне чăвашсем куçнипе хăвăртрах ӳснĕ теççĕ.

# Сӑнӳкерчӗксен галерейи



**«Канаш» хаҫат коллективӗ С.И.Морозов кӗпӗрнаттӑрпа.**
2015, Аслӑ Нагаткин.



**Н.Ларионов, Н.Угаслов, П.Афанасьев, В.Мартынов (Туктар).**
Шупашкар.



**Тăван чěлхе вěрентӳçисен конкурсě.**
Ульяновск.



**Чăваш наци конгресě хыççăн.** Шупашкар.




**Ю.Михайлов, К.Малышев, Н.Ларионов.**
Пушкăрт Республики, Слакпуç ялĕ, 2007.



**Пăлхар.** 2000.




**К. Иванов палăкĕ.** Слакпуç ялĕ, 2007.



**Итали артисчĕсемпе.** Акатуй, Шăмăршă, 2003.



**Уяв.** Тутарстан, Нурлат, 2008.



**В.Мискин, А.Юман, А.Ырьят, Г.Карсаков, Н.Ларионов.**
Çĕпрел районĕ, Çĕнĕ Йĕлмел.



**Çăлкуç шывĕ тутлă-çке!**
Чăваш Ен, Тăвай районĕ, Сăхăтпуç ялĕ.



**В.Симаков, В.Левуков, Н.Ларионов.**
Самар облаçĕ, Шунтал, Акатуй.



**А.Г.Николаев космонавтпа пĕрле.**
Мускав. Акатуй. 2004.



**Г.Н.Волков академикпа пӗрле.** Ульяновск, 2008.



**Массӑллӑ информаци хатӗрӗсен ӗҫченӗсен ҫавра сӗтелӗ.** Хусан.

ТУПМАЛЛИ

Мăн асаттесен çĕршывне çулçÿреве ....................................3
Сăваплă вырăна пуç тайма ....................................7
Петĕр Хусанкай лартнă улмуççи ....................................9
«Канаш» хаçат ĕçченĕсем – Салмановкăра ....................................12
Ку ялăн ячĕ çухалнă. Халĕ чĕлхи пĕтсе пырать ....................................13
Пăлхар Авраамĕ – чăвашсен пĕрремĕш çветтуй çынни ....................................15
Патуел – вырăсланакан чăваш ялĕ ....................................18
Кăнна Кушкинче – халăх уявĕ ....................................19
Чăваш ятне çĕклекенни – тăван чĕлхе ....................................24
Çинкĕл тăрăхĕнче чăваш культури чĕрĕлет ....................................26
Чĕлхе пулсан пĕтместпĕр ĕмĕрте ....................................30
Ырă ĕç çынна çĕклет ....................................34
ЧОКЦ – наци юхăмĕн йĕркелÿçи ....................................36
Виçĕ кун – Мелекесс районĕнче ....................................38
Сăмах ирĕклĕхĕн хуралĕнче ....................................52
Тăван чĕлхене хам тĕллĕн вĕрентĕм ....................................54
Чечня вăрçин геройне асăнса ....................................56
Раççей шăпи – вĕрентÿçĕ аллинче ....................................58
Сан ăшă кăмăлу туссен чунне тиверттĕр-и? ....................................61
Йăхăмăра упрама ăнтăлар ....................................63
15 çул – вĕçев йĕркеллĕ ....................................66
Каргин – авалхи чăваш ялĕ ....................................68
Кашни ялах поэт ятне памаççĕ ....................................70
Кирова – хоккей курма ....................................72
Пуррине пĕтерме çăмăл ....................................75
«Сувар» тусăмăр вуннă тултарчĕ ....................................76
Çын хуйхи пĕлĕтрен курăнмасть ....................................78
Ыранхи вулакана паян шырамалла ....................................81
Эсĕ халăх чĕринче пурăнăн, пирĕн Андриян ....................................83
Раççей пресси – юплă çул умĕнче ....................................86
Сумлă çынăмăр вилтăпри çинче ....................................93
Минтимир Шаймиев:
«Тăван чĕлхен пуласлăхĕ хамăртан килет» ....................................94
Мускавра Реççейри чăвашсен съезчĕ иртрĕ ....................................98
Никам та выляса ямарĕ ....................................102
Тимĕрçен тăрăхĕ пĕттĕр теççĕ-и? ....................................104
Барăш чăвашĕсем патĕнче – виçĕ кун ....................................106
Чăваш ялĕсене упраса хăварайсан – халăх пĕтмест ....................................117
Иван Ильгачев – çĕршыв мăнаçлăхĕ ....................................121
Чĕмпĕрпе Шупашкар çывăхланчĕç ....................................124
Вуннăрах хăр тăлăха юлнă ....................................127
Ял пĕтет, чăваш чĕлхи сÿнет ....................................130
Николай Розов: «Çынсене пулăшсан ман кăмăл çĕкленет» ....................................132
Юрий Попов: «Ульяновск облаçĕнче наци политикине

тĕрĕс илсе пыраççĕ» ....................................................137
«Сувар» хаçат çирĕм çул тултарчĕ ........................................141
Крыма çуран утса тухнă ....................................................144
Наци ыйтăвĕсем пире савăнтарччăр çеç ..................................148
Ашшĕ патне – Луганск облаçне ...........................................151
Ĕçле, ачам, çын пулăн! ....................................................156
Тĕнче кĕрлевĕнче чăваш хаçачĕсен сасси ан çĕттĕрччĕ ...........159
«Канаш» хаçатăн 50 çулне те паллă тăвасчĕ-ха! .......................161
Чăваш кĕнекисер чăвашла мĕнле вĕрентмелле? ........................164
Вăрçăран малтан хăй, унтан çухалнă ашшĕ таврăннă ...............167
Упамсар шкулĕнче – район Акатуйĕ .......................................171
Яковлев, Иванов ячĕллĕ библиотекăсем пулĕç-ши? ...................174
Ачаранах ĕçпе пиçĕхсе ӳсрĕмĕр ...........................................175
Çул хĕрринчи хĕрессем .....................................................179
Тăрăшулăх ят-сума ӳстерет ................................................180
Туслăхăн тата нацийĕн чикки çук! ........................................184
И.Я.Яковлева сăваплă çынсен ретне кĕртмелле ........................189
Хаçат çырăн та – ырра вĕрен! ............................................192
Çĕпĕртен хăтăлса юлтăмăр .................................................197
«Симĕс пушарпа» кĕрешеççĕ ...............................................200
Петр Кашеев сăнĕ – пĕтĕм халăх умĕнче ................................203
Малтан ĕçлекен çын тупатпăр, унтан техника туянатпăр ..........205
Чăваша чăваш пулма чĕнет! ................................................209
Ĕпхĕве – Миронов ячĕллĕ шкула ..........................................213
Яковлев музейĕ – чăвашсен Мекки! ......................................218
Дементьев министр Алешкин-Саплăкра çуралнă ......................222
Павел Миронова халалласа конференци ..................................232
Афнасьев вăкăрсене ĕрчетме тытăннă .....................................235
Вăкăрсене электрокĕтӳçĕ сыхлать .........................................238
Икĕ сехетре тăрсах пăрусем патне васканă ..............................242
Ачасем савăннине курсан хамăр та савăнатпăр .........................245
Водительсене çӳреме вĕрентет ............................................249
Турă çулне суйласа илнĕ ...................................................252
Чăвашсем мĕншĕн сахалланнă? ............................................257
Сăнӳкерчĕксен галерейи .....................................................258

Николай Ларионов

(Николай Николаевич Ларионов)

**Чӗлхе пулсан пӗтместпӗр ӗмӗрте!**

**Будет родной язык – будем и мы!**

На чувашском языке

В авторской редакции.

Компьютерная верстка – В.А.Ефимова.

Подписано в печать – 20.01.2017. Формат 60х84 1/16. Тираж 170.
Отпечатано с готового оригинал-макета в типографии “Зебра”.
г.Ульяновск, ул.Ленинского Комсомола, 49.

250.–



## ЛАРИОНОВ НИКОЛАЙ НИКОЛАЕВИЧ

1961çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче Тутарстан Республикинчи Çĕпрел районне кĕрекен Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралнă.

2003 çулта Чăваш патшалăх университетĕнчен (чаваш филологийĕпе культура тата журналистика факультечĕсем) хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухнă. Чĕмпĕрте чăвашла тухса тăракан «Канаш» хаçатра 1996 çултанпа ĕçлет. 2002 çултанпа – тĕп редактор.

Ултă кĕнеке авторĕ: «Чĕре тапнă чух» (1998 çул), «Чĕмпĕр тăрăхĕнчи «Канаш» хаçатăн малтанхи тата хальхи утăмĕсем» (2003 çул), «Чун хушнипе пурăнсан» (2009 çул), «Чăваш тĕнчи аслă» (2013), «Чĕмпĕрти «Канаш» хаçат – 25 çулта» (2015), «Вутхӳре» (2016).

1995 çултанпа Раççей Писательсен союзĕн членĕ.

1997 çултанпа Раççей Журналистсен союзен членĕ.

Алексей Талвир ячĕллĕ преми лауреачĕ (1994).

Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (2011).

* * *

Родился в селе Новое Ильмово Дрожжановского района Республики Татарстан 25 апреля 1961 года.

В 2003 году с красным дипломом окончил Чувашский государственный университет (факультеты чувашской филологии и культуры, журналистики).

В редакции ульяновской областной чувашской газеты «Канаш» работает с 1996 года, с 2002 года – главный редактор.

Автор шести книг: «Пока бьется сердце» (1998 год), «Первые шаги и нынешняя деятельность ульяновской чувашской газеты «Канаш» (2003), «Жить по совести» (2009), «Бескрайний чувашский мир» (2013), «Ульяновской газете «Канаш» – 25 лет» (2015), «Рыжий хвост» (2016).

Член Союза писателей Чувашской Республики (1995).

Член Союза журналистов России (1997).

Лауреат премии имени Алексея Талвира (1994).

Заслуженный работник культуры Чувашской Республики (2011).